ЧӐВАШСЕН ЧЕЛХЕ, ЛИТЕРАТУРА ТАТА ИСТОРИН НАУКӐПА
ТӖПЧЕВ ИНСТИТУЧӖ

# ЧӐВАШ ФОЛЬКЛОРӖ

★

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

# ÇАМРĂКСЕМ

*(Утарта)*

ИКĔ ПАЙЛĂ КОМЕДИ

Национальная библиотека ЧР
4-002915

ЧӐВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО
ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

ЧУВАШСКИЙ НАУЧНО-ИССЛЕДОВАТЕЛЬСКИЙ ИНСТИТУТ ЯЗЫКА,
ЛИТЕРАТУРЫ и ИСТОРИИ

# ЧУВАШСКИЙ ФОЛЬКЛОР

СОСТАВИЛ
И. С. ТУКТАШ

*

ПОД ОБЩЕЙ
РЕДАКЦИЕЙ
И. Я. ЯКОВЛЕВА

2

ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО ЧУВАШСКОЙ АССР
ЧЕБОКСАРЫ ◆ 1941

ЧĂВАШСЕН ЧĔЛХЕ, ЛИТЕРАТУРА ТАТА ИСТОРИН НАУКĂПА
ТĔПЧЕВ ИНСТИТУЧĔ

8(с)
Ч-12

# ЧĂВАШ ФОЛЬКЛОРĔ

**И. С. ТУКТАШ**
ХАТЕРЛЕНĔ

*

ПĔТĔМĔШЛЕ
**И. Я. ЯКОВЛЕВ**
РЕДАКЦИЛЕНĔ

Библиотека Парткабинета
№ 10783
Чебоксарского ГК ВКП(б)

Центрального дома партийного просвещения
Библиотека
18996

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

Чăваш халăхĕн иксĕлми пуянлăхĕ—фольклор—ытти халăхсенни пекех çавтери вăйлă пулсан та, пирĕн ку таранччен ăна пĕтĕмĕшпе пĕтĕçтерсе уйрăм кĕнеке туса кăларни пулман. Тĕрлĕрен хаçат-журналсенче кăна уйрăм юмах-халлапсемпе сăвă-юрăсем пичетленкеленĕ. Анчах çав пичетленнĕ материала та ку таранччен никам та кирлĕ таран пĕтĕçтерсе паман, наука кăтартнă пек тĕпчесе тухса хакламан.

Çак енчен илсен, И. С. Тукташ хатĕрленĕ сборник пĕрремĕш опыт пулса тăрать. Çавăн пирки кĕнекере, уйрăмăнах илсен, унăн умстатьинче хăшпĕр çитменлĕхсемпе тĕппипех пиçсе çитмен формулировкăсем те пулма пултараççĕ. Çапах та ку кĕнеке вăтам шкулсемпе аслă шкулсенче вĕренекенсемшĕн, преподавательсемшĕн, писательсемпе поэтсемшĕн, тăван халăхăн искусствипе интересленекенсемшĕн усăллă пулассăн туйăнать. Халăх творчествипе интересленекен кашни çынах çак кĕнекепе паллашĕ тесе ĕмĕтленес килет.

*Редактор.*

2915-чув.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

21 МАР 2017

# ЧӐВАШ ФОЛЬКЛОРӖПЕ УНӐН ИСТОРИЙӖ ÇИНЧЕН

I.

„Фольклор“ тесе халӑх хушшинче сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен произведенисене калаҫҫӗ. Вӑл произведенисен шутне пайтах япаласем кӗреҫҫӗ: юмах-халлапсем, юрӑсем, ваттисем каланисем, сутмалли (тупмалли) юмахсем, легендӑсем, преданисем, курни-илтнисем ҫинчен каласа панисем т. ыт. те.

Фольклор тени англичансен сӑмахӗнчен пулса кайнӑ. Чӑвашла куҫарсан, вӑл (folk-lore) халӑх ӑслӑлӑхӗ, халӑх пӗлӗвӗ тени пулать. Вӑл термина наукӑна 1846 ҫулта англичанин Вильям Томс кӗртсе янӑ. Вӑл терминпа ытти патшалӑхсенчи ученӑйсем те хӑвӑрт усӑ курма тытӑннӑ, каярахпа вӑл интернационаллӑ термин пулса тӑнӑ.

Фольклор сӗм-авалхи вӑхӑтсенчех пуҫланса кайнӑ. Общество уйрӑм классем ҫине пайланма ӗлкӗреймен тапхӑрта вӑл этемсен ушкӑнӗн коллективлӑ ӗҫ процесӗсене пула, этемсем ҫутҫанталӑк вӑйӗсене хирӗҫ кӗрешнине пула ҫуралса тухнӑ, малтанхи ҫынсен ӗҫне, кӗрешӳне ҫӑмӑллатмалли меслет вырӑнӗнче пулнӑ. Общество классем ҫине пайланнӑ хыҫҫӑн фольклор диференциленсе пырса, класла характер йышӑннӑ.

Фольклор произведенийӗсен тӗп шухӑшӗсене тарӑнраххӑн ӑнланса илме кирли ҫинчен А. М. Горький ҫапла каланӑ:

„Древние сказки, мифы, легенды известны вам, но очень хотелось бы, чтобы основной их смысл был понят более глубоко. Смысл этот сводится к стремлению древних рабочих людей облегчить свой труд, усилить его продуктивность, вооружиться против четвероногих и двуногих врагов, а также силою слова, приемов „заговоров“, „заклинаний“ повлиять на стихийные, враждебные людям явления природы. Последнее особенно важно, ибо знаменует, как глубоко люди верили в силу своего слова, а вера эта объясняется явной и вполне реальной пользой речи, организующей социальные взаимоотношения и трудовые процессы людей“. *(Речь на Первом Всесоюзном съезде советских писателей. Стенографический отчет, стр. 6).*

Чăваш фольклорĕ, ытти халăхсен фольклорĕ пекех, питĕ авалах пулнă, анчах та XIX ĕмĕрччен ăна никам та пуçтарман, никам та тĕпчекен пулман. Тĕрĕссипе каласан, XVIII ĕмĕрччен чăваш фольклорĕ çинчен çеç мар, чăваш халăхĕ çинчен те сахал пĕлнĕ. XVIII ĕмĕр вĕçĕнче кăна чăвашсем çинчен çырнисем тĕллĕн-тĕллĕн пичетленме пуçланнă. Чи малтан чăвашсем çинчен Миллер „Описание живущих в Казанской губернии языческих народов" ятлă кĕнекере кĕскен çырса кăларнă. Унччен малтан чăваш халăхĕ çинчен Штраленберг „Историческое описание северной и восточной части Европы и Азии" ятлă кĕнекере çырнă пулнă, анчах вăл тĕплĕ сведенисемех парайман. Каярахпа чăвашсем çинчен çырнисем П. И. Рычков, И. П. Рычков, Лепехин, Паллас, Фольк, Георги т. ыт. кĕнекисенче тĕл пулаççĕ.

Анчах та кунта çакна палăртса хăвармалла: чăвашсем çинчен çыракан авторсем нимĕнрен малтан вĕсене этнографи тĕлĕшĕнчен çутатса пама тăрăшнă. Халăхăн духовнăй культури вĕсене сахал интереслентернĕ, çавăнпа чăваш фольклорĕ те вăл вăхăтри литературăра хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнайман.

Чăваш фольклорĕн тĕслĕхĕсем чи малтан А. А. Фукс кĕнекинче („Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии". Казань, 1840) пичетленсе тухнă. Фукс хăй чăвашла пачах та пĕлмен, çавăнпа та халăх поэзийĕн лайăх тĕслĕхĕсене те суйласа илме пултарайман. Вăл хăй кĕнекинче илсе кăтартнă 2—3 чăваш юррине нихăш енчен те чăваш фольклорĕн чи лайăх тĕслĕхĕ вырăнне шутлама çук. Унтан та ытларах: Фукс хăй чăваш чĕлхине питĕ чухăн чĕлхе тесе шутланă. Кун пирки вăл хăйĕн кĕнекинче акă мĕн çырнă пулнă: „Язык чувашский очень беден, в словаре его находится только 1646 слов. В чувашском языке много описательных слов: Адыл-кось, игге-хюре, нимеч-пурзы, и много таких слов, которые изображают звуки природы: чаггак, муггыр, чан, курак и др.".

Ĕлĕкхи саманара чăваш чĕлхи çинчен çапла шухăшлакансем чĕр Фукс кăна пулман. Шăп та шай çав шухăшах тата 15 çул иртнĕ хыççăн чăвашсем çинчен тĕрлĕ „заметкăсем" пухнă генеральнăй штаб офицерĕсем каласа панă. Вĕсем Россия патшалăхĕн статистики валли материалсем пухса çӳренĕ пулнă та, çав майпа чăвашсем çинчен те хăшпĕр сведенисем тăратнă. Каярахпа вăл сведенисем М. Лаптев çырнă „Материалы для географии и статистики России, собранные офицерами генерального штаба; Казанская губерния" (1861 ç.) ятлă кĕнекере пичетленсе тухнă. Акă мĕн каланă çав кĕнекере чăваш халăхĕн чĕлхипе культура пуянлăхĕ çинчен:

„О развитии чувашского народа вообще можно сказать, что оно стоит пока очень низко; лучшим доказательством этого служит их язык,—язык бедный, скудный, особенно в выражении отвлеченных понятий. В нем всего полторы тысячи слов. Когда приходится Чувашенину сказать о том, что выходит из круга его понятий, он прибегает не к голове, а

к горлу и жестам. Скудость воображения, чувств, понятий яснее всего высказывается в их песнях (*стр. 246*).

Çак шухăша çирĕплетес майпа кĕнекере пĕр 2—3 ĕçкĕ юрри тата тепĕр ик салтак юрри илсе кăтартнă (вырăсла куçарса). Кунсăр пуçне çав кĕнекере тата тепĕр юрă пичетленĕ,—автор калана тăрăх, вăл юрра „вырăса тухнă пĕр-пĕр писăр çырнă" имĕш. Вăл юррăн текстне пĕтĕмĕшпех илсе кăтартатпăр. Акă вăл:

„Мы, Чуваши, родились
И у Волги поселились.
А живем при ней давным-давно.
А ученые хлопочут,
Откуда мы происходим?
Мы Чуваши—так Чуваши,
Нам приятели Татары
И язык у нас чувашский.
В грусти, в горе и несчастьи
Мы бежим скорее к Торе.
В Киремети закалаем
Молодых телят, коров,
Чтобы Тора дал здоровья,
Чтобы Тора дал нам счастья.
Мы не знаем ни писать,
Не умеем и читать.
Мы к священнику бежим,
Что нам делать при несчастьи?..
Так живем мы и доселе,
И видим всетаки свое счастье
Да понюхиваем и табак.
У нас есть домашний скот:
Кони, свиньи, куры, пчелы,
Овцы, гуси и быки,
Утки, яйца и молоко,
А домашний скот мы продаем,
Чтобы скопить побольше денег".

(*Çавăнтах, стр. 248*).

Паллах, ку сăвва нихăш енчен те фольклор произведенийĕ теме май çук. Ăна чăнахах та „вырăса тухнă пĕр-пĕр писăр" е тиек, е хăйĕн халăхĕнчен уйăрăлса кайнă чиновник çырнă теме пулать. Пĕлнĕ-и ун çинчен кĕнекен авторĕ е пĕлмен-и,—ăна эпир калама пултараймастпăр, анчах пирĕншĕн çакă кăна паллă: ăна „чăваш халăхĕн нимĕнле культура та çук" тенĕ шухăша çирĕплетме кĕртсе янă...

Малалла çак кĕнекерех тепĕр салтак юрри илсе кăтартнă („Çăлтăр витĕр, ай, çул курнать" ятлă юрра). Чăваш чĕлхинче пин çурă сăмах кăна, вăл чĕлхепе этемĕн чĕрипе кăмăлне уçса пама çук, тесе супăльтетнĕ пулин те, Лаптев хăех ку юррăн чуна кайса тивекен илемĕ çинчен каласа хăварать. „Она (эта песня) не лишена некоторого поэтического колорита",—тет вăл (*стр. 248*).

Чăваш халăхĕ çинчен çапла шухăшсем сарни, паллах, унăн пурнăçĕпе, чĕлхипе, культурипе тата искусствипе анлăн интересленме чăрмантарса тăнă. Кăна эпир чăвашсем çинчен çырнă литературăна шутласа тухнипех те питĕ лайăх курма пултаратпăр.

Чăваш этнографийĕпе фольклорĕ çинчен çырнă статьясем 1846—1877 çулсем хушшинче Хусанти Императорски Университет çумĕнче тухса тăракан „Известия об-ва археологии, истории и этнографии" ятлă журналра пичетленкеленĕ. Вĕсенчен уйрăмăнах Спиридон Михайлов çырнă „Чувашская свадьба" (1852 ç.) тата „Чувашские разговоры и сказки" (1853 ç.) ятлă статьясем паха вырăнта тăраççĕ. Спиридон Михайлов, чăваш хушшинченех тухнăскер, Чикме хулинчи земски суд çумĕнче переводчик пулса пурăннă тата исправник патĕнче письмоводительре ĕçленĕ. Çав вăхăтрах вăл Хусан кĕпĕрниччи статисти-

чески комитетӑн член-сотрудникӗнче тӑнӑ. Спиридон Михайлов хӑйӗн ӗмӗрӗ тӑршшӗнче чӑвашсем ҫинчен пайтах статьясем ҫырса пичетлесе кӑларнӑ. Ҫав паха ӗҫсемшӗн ӑна Императорское географическое об-во кӗмӗл медаль парса парнеленӗ.[1]

Малалла чӑваш фольклорӗ енӗпе ҫакӑн пек кӗнекесем кӑтартса пама пулать: Риттих А. Ф. „Материалы для этнографии России; Казанская губерния, часть I и II“ (1870 ҫ.), Мальхов „Симбирские чуваши и поэзия их“ (1877 ҫ.). Ҫак вӑхӑтсенчех чӑваш хушшинче пулса курнӑ Венгри ученӑйӗ Регули (Reguly) икӗ юмах ҫырса илнӗ пулнӑ: пӗр юмахӗ—„Ама ҫури“, тепри—„Вилме каякан пуйса килнӗ, тет“. Вӑл юмахсене 1880 ҫулта Буденц ятлӑ ученӑй хӑйӗн сборникӗнче пичетлесе кӑларнӑ (Budenz J. „Kèt csuvas mese“. Nyk XVI, 1880).

Ҫапла ӗнтӗ, чӑваш фольклорӗн тӗслӗхӗсене чи малтан ҫак асӑннӑ кӗнекесенче пичетленӗ пулнӑ. Анчах та ҫав авторсенчен пӗри те вӑл фольклора наука кӑтартнӑ пек тӗпчесе сӑнаман, унӑн художествӑллӑ пуянлӑхӗсене тарӑннӑн уҫса кӑтартман. Фольклор произведенийӗсене вӗсем е иллюстраци материалӗ вырӑнне, е тата халӑх поэзийӗн тӗслӗхӗсем вырӑнне ҫеҫ паркаланӑ.

Ҫак тапхӑрти фольклористсен ӗҫне илсе пӑхсан, вӗсен хушшинче икӗ юхӑм пуҫланса кайнине палӑртма пулать. Пӗр енчен, халӑх творчествин пӗтӗм социаллӑ тӗп шухӑшне пытарма е сирсе яма тӑрӑшакан дворянла фольклористикӑн туртӑмӗсем сисӗнме пуҫлаҫҫӗ, тепӗр енчен—миссионерсемпе пуп таврашӗсем пуҫӗсене ҫӗклеҫҫӗ. Малтанхи юхӑмӑн представителӗсем фольклорта нимӗнле класлӑх та ҫук, фольклор хура пурнӑҫпа пурӑнакан тӗттӗм халӑх чунне йӑпатмалли продукци кӑна тесе ӗнентнӗ пулсан, иккӗмӗш юхӑмра тӑраканнисем фольклор произведенийӗсем урлӑ халӑх хушшине тӗн шухӑшӗсем сарса, чиркӳ авторитетне ытларах ҫирӗплетсе пыма тӑрӑшнӑ. Ҫак шухӑшпа чӑваш фольклорне пухас ӗҫе миссионерсем, пуп таврашӗсем хутшӑнаҫҫӗ, турӑ ҫырни ҫинчен, Христос тӗнӗ ҫинчен калакан юмахсем „тупса“ пичетлеме тытӑнаҫҫӗ. Авалхи тӗне пӑрахасшӑн мар пулнӑ чӑвашсем хушшине вӗсем пур майсемпе те ҫав шухӑшсене ытларах сарма тӗрмешеҫҫӗ.

Анчах та ӗҫхалӑхӗн сарлака массисем миссионерсен шухӑшӗсене ирӗккӗн йышӑнман, вӑл шухӑшсем питӗ тӑкӑскӑн кӑна сарӑлма пултарнӑ. Халӑх пупсемпе миссионерсене хирӗҫ хӑйӗн сӑмахлӑхӗпе кӗрешме тытӑннӑ. Юмахсенче, юрӑсенче, ваттисем каланисенче пупсене темӗн тӗрлӗ вӑйлӑ та ҫивӗч сӑмахсемпе питленӗ, вӗсенчен тем пек вӑйлӑн мӑшкӑласа кулнӑ. Кӑна эпир уйрӑмӑнах юмахсемпе ваттисем каланисенче питӗ аван курса тӑратпӑр.

Сӑмахран:

„Пуп куҫӗ—нӳхреп куҫ“.
„Турруна пуҫҫапиччен пупна пуҫҫап“.
„Тӗпсӗре тӗмен ҫитмен, ӗмӗтсӗр пупа прихут ҫитмен“.

---

[1] С. Михайловӑн биографийӗ „Известия об-ва археологии, истории и этнографии“ ятлӑ кӗнекере пичетленсе тухнӑ (том XVII, вып. I, стр. 75—78).

„Пуп пăтавккин тĕпĕ çук".
„Пупăн кушакки те тил тытать".
„Пуппа тияккăнăн пурнăçĕ хăяккăн", т. ыт. те.

Çакăн пек пословицăсем чăвашсене тĕне кĕртме тытăннă тапхăрта пуçланса кайса, юлашки вăхăтсенче тата ытларах аталанса пынă.

Чăваш фольклорне пухса тĕпчес ĕçĕн тепĕр тапхăрĕ В. Сбоевăн „Исследования об инородцах Казанской губернии. Заметки о чувашах" ятлă кĕнеки тухнă хыççăн пуçланса кайна[1]. Тĕрĕссипе каласан, В. Сбоев чăваш фольклорне таранрах сăнаса тĕпчес ĕçĕн никĕсне хуракансенчен пĕри пулнă тесе шутламалла. Сбоев умĕнхи исследовательсем пурте тенĕ пекех чăвашсен пурнăçра çирĕп тытăнса пыракан юрă тексчĕсем çук, чăваш юрри халăхăн пуçĕнче кăна пытанса пурăнать тесе шутланă. В. Сбоев çакăн пек шухăша хирĕç никамран малтан кĕрешӳ пуçласа янă. Чăваш юрисене пуренчен те сăнаса тĕпчесе тухса, вăл çав юрăсем халăх хушшинче пайтах саралнине, хăйсен тулли те пуян пурнăçĕпе пурăннине кăтартса панă.

1877—1900 çулсем хушшинче чăваш фольклорне пухассипе тĕпчес енчен Н. М. Мальхов, Н. И. Ашмарин тата В. А. Мошков паллă ĕçсем тунă. Мальхов „Симбирские чуваши и поэзия их" ятлă кĕнеке çырса кăларнă (Казань, 1877), Н. И. Ашмарин ятарласах „Очерк народной поэзии у чуваш" ятлă исследовани çырнă („Этнографическое обозрение" № 2-3, 1892), вăлах тата 1900 çулта „Сборник чувашских песен, собранных в губерниях: Казанской, Симбирской и Уфимской" ятлă кĕнеке пичетлесе кăларнă. Мошкован Археологипе этнографи тата истори обществи кăларса тăнă „Известире" чăваш юррисен мелодийĕсемпе тексчĕсем çинчен пысăк статья пичетленсе тухнă.

Н. И. Ашмарин ĕçĕсем çинчен уйрăмăнах пĕр ик-виç сăмах каласа хăварма тивĕçлĕ. XIX ĕмĕрĕн юлашки çулĕсенче чăваш чĕлхипе питĕ хытă интересленме тытăннă пирки, Н. И. Ашмарин халăх поэзине те тĕплĕн пухса сăнаса пынă. Кунта асăннă малтанхи кĕнекинче вăл чăваш юррисен тексчĕсене анализлесе панă. Иккĕмĕш кĕнекинче 198 юрă пичетленнĕ. Вĕсене, чăвашла текстпа юнашарах, вырăсла та куçарса панă тата чĕлхе енчен анатрипе тури (виръял) диалектсемпе парса пынă. Çапла тунă пирки ку кĕнекене кĕнĕ халăх юррисем фольклористсемшĕн çеç мар, чĕлхене тĕпчекенсемшĕн те питĕ паха материалсем шутланаççĕ.

Мошков хăйĕн статьинче нимĕнрен ытларах чăваш юррисен мелодийĕ (кĕвви) çинче чарăнса тăнă. Юрă кĕввисен тĕслĕхĕсемпе пĕрлех юррăн сăмаххисене те парса пынă. Чăваш юррисене вăл чăваш салтакĕсенчен çырса илнĕ пулнă. Чăваш халăхĕн музыкăллă таланчĕ çинчен Мошков акă мĕн çырать:

---

[1] Малтан вăл заметкăсем 1848—52 çулсенче „Казанские губернские ведомости" ятлă хаçатра пичетленсе пынă. 1851 ç. пĕрремĕш хут уйрăм изданипе тухнă. 1856 ç. иккĕмĕш издани, 1865 çулта виççĕмĕш издани тухнă.

„Чăвашсем музыка тĕлĕшĕнчен питĕ талантлă халăх. Сахалран та 3—4 юрă та пулин пĕлмен çын çук та вĕсем хушшинче“, тет. Анчах Мошков пухнă мелодисем çумне панă текстсене чăваш халăхĕн чи лайăх юррисем шутне кĕртме май çук, мĕншĕн тесен вĕсен содержанийĕпе художествăлла пахалăхĕ те пысăках мар, çырса илессе те вĕсене нумай йăнăшсем туса çырса илнĕ. Çапах та Мошков статьи чăваш фольклорне тĕпчес ĕçре (уйрăмăнах музыкăлла фольклора тĕпчес ĕçре) халĕ те хăйĕн хакне çухатман-ха.

Археологипе этнографи тата истори обществи фольклор пухмалли программа пичетлесе кăларнă хыççăн чăваш фольклорне пухас ĕçе тата çĕнĕ вăйсем хутшăнаççĕ. Вĕсем хушшинче эпир чăваш учителĕсен, тĕрлĕ шкулсенче вĕренекенсен, тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлекенсен ячĕсене тĕл пулатпăр. Кунта раснах И. Н. Юркин ятне палăртса хăварма пулать. Юркин иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенчех чăваш фольклорне пухма тытăннă. Хăйĕн ĕмĕрĕ тăршшĕнче вăл 60 пин йĕркене яхăн тĕрлĕ юрăсем, çĕре яхăн юмахсем, темĕн чухлĕ пословицăсемпе поговоркăсем т. ыт. фольклор произведенийĕсем пуçтарнă. Ку хисеплĕ ĕçе И. Н. Юркин паян кунччене туса пырать. Анчах та унăн ĕçĕнче пĕр пысăк çитменлĕх пур. Вăл—фольклор произведенийĕсене тĕрĕс çырса илменни. Юркин хăй пухнă юрăсенче тăтăшах уйрăм сăмахсене пăсса, урăхлатса, хăй калаçнă диалект çине куçарса çырнисем тĕл пулаççĕ. Кунсар пуçне унăн материалĕсенче националистла туртăмсем те палăркалаççĕ. Çаксене пула вăл пухнă материалсем хăйсен пахалăхне чылаях çухатаççĕ.

Чăваш этнографийĕпе фольклор материалĕсене проф. Н. И. Ашмаринпа Н. В. Никольский хăйсен вĕренекенĕсем урлă питĕ нумай пуçтарнă. Çакăнта шутласа тухнă материалсенчен хăшĕ-пĕрисем хальхи вăхăтра Чăвашсен чĕлхепе литературăн тата историн ăслăлăхпа тĕпчев институтне куçнă.

1905-мĕш çулхи революципе империалистла вăрçă умĕнхи тапхăрта чăваш фольклорне тĕпчес ĕçре икĕ хире-хирĕçле вăй кĕрешнине курма пулать. Пĕр енчен революцилле-демократилле элементсем вăй илсе пыраççĕ, тепĕр енчен хура реакцин представителĕсем, кадетла буржуази хӳтлевçисем пуçĕсене çĕклеççĕ. Мĕн кăтартса пачĕ-ха 1905-мĕш çулхи буржуаллă-демократиллĕ революцин опычĕ? Ун çинчен ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнче акă çапла калана:

„Революци çакна уçса кăтартрĕ: царизм—халăхăн чи усал тăшманĕ, царизм—виле шăтăкĕ çеç тӳрлетме пултаракан курпун пулса тăнине уçса кăтартрĕ.

Революци çакна кăтартса пачĕ: либеральнăй буржуази халăхпа мар, патшапа союз шыранине, вăл контрреволюциллĕ вăй пулса тăнине, унпа килĕшни халăха сутнипе пĕрех пулнине кăтартса пачĕ.

Революци çакна кăтартса пачĕ: рабочи класс çеç буржуаллă-демократилле революцин çулпуçĕ пулма пултарнине, вăл кăна

кадетла либеральнӑй буржуазие хӗссе кӑларма, хресченсене унӑн влиянийӗнчен хӑтарма, помещиксене ҫӗмӗрсе тӑкма, революцие вӗҫнех ҫитерме тата социализм валли ҫул уҫса хума пултарнине кӑтартса панӗ" (*„ВКП(б) историйӗн кӗске курсӗ", чӑвашла издани, стр. 113; Шупашкар, 1939 ҫ.*).

Ку тапхӑрта большевиксен партийӗ „революцие сарса ярасси ҫине, царизма хӗҫпӑшаллӑ восстанипе сирпӗтсе антарасси ҫине, рабочи класс гегемонийӗ ҫине, кадетла буржуазине тӑр пӗччен тӑратса хӑварасси ҫине, хресченсемпе союз тӑвасси ҫине, рабочисемпе хресченсен представителӗсенчен революциллӗ вӑхӑтлӑх правительство тӑвасси ҫине, революцие ҫӗнтерӳллӗн вӗҫлесси ҫине курс тытса пынӑ" пулсан, меньшевиксем пачах урӑхла, халӑхпа мар, революцие пӗтерсе лартасси патне курс тытса пынӑ. „Восстани туса царизма сирпӗтсе антарасси вырӑнне вӗсем ӑна реформа тума тата „лайӑхлатма" сӗннӗ, пролетариат гегемонийӗ вырӑнне—либеральнӑй буржуази гегемонине, хресченсемпе союз тӑвасси вырӑнне—кадетла буржуазипе союз тӑвассине, революциллӗ вӑхӑтлӑх правительство вырӑнне—Государственнӑй думӑна, вӑл ҫӗршыври „революциллӗ вӑйсен" центрӗ пулать тесе шутласа сӗннӗ" (*ҫавӑнтах, стр. 115*).

1905—07 ҫулсенчи историлле событисем чӑваш фольклорӗн исследователӗсем ҫине те хӑйсен влиянине хӑвармасӑр иртсе кайма пултарайман. Кадетла буржуази майлӑ ҫаптаракансем хӑйсен пичӗсем ҫинчи „демократилле" маскисене ытларан та ытларах сирсе пӑрахса пынӑ, ытларан та ытларах патша майлӑ кайса ӳксе, юлашкинчен унӑн чи шанчӑклӑ хӳтлевҫисем пулса тӑнӑ. Ҫак реакцилле вӑй фольклорта епле палӑрса тухнине эпир Н. В. Никольскийӗн 1905 ҫулта пичетленнӗ „Взгляд чуваш на воинскую повинность" ятлӑ кӗнекинчен питӗ лайӑх курма пултаратпӑр. Ҫак кӗнекене Никольский малтанхи страницинчен пуҫласа мӗн вӗҫне ҫитичченех пӗртен-пӗр ӗмӗтпе—патша правительствине хӳтӗлес шухӑшпа ҫырнӑ.

„Чӑвашсем патшана служить тӑваҫҫӗ, а патша вӗсене хӳтӗлет, тӑрантарать, сыхласа усрать. Вӗсем хушшинчи хутшӑну чӑн-чӑн чӗререн тухакан тарӑн юрату ҫинче тытӑнса тӑрать",—тесе ҫырать вӑл ҫав кӗнекен чи малтанхи страницинчех. Кунта авторӑн шухӑшне ӑнлантарса пама та кирлӗ мар,—вӑл ахалех те витӗр курӑнса тӑрать: патша чӑвашсене „хутӗлет, тарантарать, сыхласа усрать пулсан, мӗншӗн юратас мар ун пек патшана?" Ҫак шухӑша ӗнентересшӗн те ӗнтӗ Никольский хӑйӗн кӗнекинче. Ҫак шухӑша витӗмлӗрех туса кӑтартас тесе, вал малалла чӑваш ҫамрӑкӗсем патша службине (салтака) кайма епле ниҫта кайса кӗрейми кӗтни ҫинчен, вӗсене епле савӑнаҫлӑн ӑсатса яни ҫинчен, салтака илнӗ ачасен ашшӗ-амӑшӗсем епле тулли кӑмӑллӑн савӑнса юлни ҫинчен, унтан ҫав салтак ачисем хӑйсен службине пӗтерсе, ӑслӑ та паттӑр этемсем пулса килӗсене таврӑнни ҫинчен ҫырса кайнӑ. Автор хӑйӗн кӗнекине халӑх сӑмахлӑхӗсемпе, салтак юррисемпе, тӗрлӗ йӑласемпе иллюстрацилесе пынӑ. Анчах та калас пулать, ку ӗҫе вал чӑваш фоль-

клорĕн пуянлăхĕпе илемне кăтартса парас шутпа мар, унăн чăнчан содержанине уçса парас шутпа та мар, маларах асăннă тезисне çирĕплетес шутпа çеç тунă. Çавăнпа та кĕнекери юрăсенчен нумайăшĕсем кулакла характерлă.

Хура реакци сарăлса кайнă вăхăтра наукăра мĕнле те пулин прогрессивлă шухăшсем аталантарма питĕ хĕн пулнă. Кăна эпир çав вăхăтра чăваш фольклорне тĕпчес ĕç епле пынинчен те туйса илетпĕр. Чăваш фольклорне тĕпчес майпа çырнă çĕнĕ статьясем çав çулсенче пачах та тухман теме пулать, вал вăхăтчен пухнă материалсем те пичетленмесĕрех нимĕн усăсăр выртнă. Фольклор пухаканĕсем хăйсен материалĕсене пичетлеттерме пикеннисем пулна пулин те, вĕсен япалисене никам та кăларса паракан пулман. Прогрессивлă япаласем вырăнне чиркӳпе-миссионерла литература кăна нумай пичетленсе пынă. Миссионерсем хăйсем кăларса пыракан литературăн реакцилле рольне çĕклентерес тĕлĕшпе фольклорпа та вăйлăн усă курма тăрăшнă. Çак майпа вĕсем тĕн çинчен, турă çинчен, тĕрлĕрен тĕшмĕшсем çинчен калакан фольклор произведенийĕсене ытларах хапăл туса пичетлесе пынă.

Çапах та чăваш интеллигенцийĕн прогрессивла представителĕсем миссионерсем енче мар, халăх енче, халăхпа пĕрле пулна. Хăйсем çине реакцилле вăйсем тапăнса пынине парăнмасăр, весем халăхăн чунне, ĕмĕтне, шухăшĕсене уçса кăтартакан фольклор тĕслĕхĕсене пичетлесе кăларма майсем тупса пынă. 1908 çулта Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче „Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним“ятла кĕнеке пичетленсе тухать. Çав çултах вырăс писателĕн Т. А. Аксаковăн „Аленький цветочек“ ятлă юмахĕпе Андерсенăн „Дикие лебеди“ ятлă юмахне чăвашла куçарса уйрăм кĕнекен кăларса яраççĕ. 1914 çулта Элĕкри двухкласснăй училищĕре вĕрентекен учитель П. В. Пазухин[1] чăваш юррисен тата тепĕр сборн икĕ туса пичетлесе кăларнă. Кунсăр пуçне чăваш фольклорне пухса пичетлес тĕлĕшпе Венгрири Академия Наук чылай ĕçсем тунă: 1909—1912 çулсенче вăл чăваш фольклорĕн икĕ пысăк сборникне кăларса янă (Mèssaros G. „Csuvas nepkoltesi gyüjtemeny I A csuvas ojvallas emlekèt. Budapest, 1909“ тата „Kozmondasok, talalasmondasok, dalok mesek“, II, 1912).

Пачах урăхла, буржуаллă-идеалистла позици йышăннă çак вăхăтра хăйĕн ĕçне анчах сарăмлантарма пуçланă чăваш историкĕ-этнографĕ Г. И. Комиссаров. Вăл чăваш фольклорне пухакансемпе тĕпчевçисен нихăш ушкăнĕпе те пĕрлешмесĕрех, фольклор епле пуçланса кайни çинчен хăйне расна, идеалистла теори кăларса таратма пикеннĕ. Фольклорти мĕнпур явленисене, унăн аталанăвĕнчи мĕнпур процессене Комиссаров нимĕнле ĕç процесĕсемпе те çыхăнтармасăрах, фольклор халăх ирĕклĕн шухăшланипе пулса пыракан процесс тесе ăнлантарса панă, çапла майпа фольклорăн историлле тымарĕсемпе материальнăй

[1] П. В. Пазухин империалистла пĕрремĕш вăрçăра вилнĕ.

никĕсĕсене пачах та шута илмен. Акă мĕн вулатпăр эпир унăн кĕнекинче:

„В словесную оболочку народ облек свои мысли и мнения, создавшиеся у него под влиянием долголетнего опыта (пословицы и поговорки); словами же выразил он религиозные чувства благодарности и мольбы (молитвы). Порой давило грудь чувашенина чувство тоски и грусти, и он выражал это в лирических песнях. Вера в существование духовного мира и возможность подчинения духов воле человека (при известных условиях) создало заговоры. Фантазия чувашенина работала в создании сказок. Давно минувшие события оставили отголоски в памяти народа в виде смутных представлений, которые впоследствии обратились в легенды и предания. Часы безделья, посиделки и общественные игры дали возможность развернуться народному остроумию: появились шутки, прибаутки, шуточные диалоги, импровизированные песни шуточного и юмористического содержания. Свадьбы и попойки создали свои песни" („Чуваши Казанского заволжья". ИОАЭИ, том XXVII, вып. 1—6, стр. 396). Çапла вара, М. Горький каланин, „авалхи этемсен пуçĕнче социальнăй пурнăçăн мĕнпур явленийĕсене пула епле пулсан та материалистла шухăшласси çуралса тухнă" тенине Г. Комиссаров пачах та урăхла шухăшсемпе витĕнтерсе хурса, пачах тепĕр майлă çавăрăнтарса лартнă.

Çакăн пек, кĕскен каласассăн, революцичченхи чăваш фольклорĕн историографийĕ. Ăна пăхса тухнă хыççăн чăваш фольклорĕн иксĕлми пуянлăхĕсене революциччен кирлĕ таран пухманни, тарăнăн сăнаса тĕпчеменни уйрăмăнах курăнса тăрать. Революциччен чăваш фольклорĕпе нимĕнрен ытларах пуç пулса тăракан классен интересĕсемшĕн усă курса пынă пулсан, совет фольклорисчĕсен задачи—ăна хăвăртрах пĕтĕçтерсе, наука кăтартса панă пек, йĕркене кӳрсе çитересси, унăн малашнехи, нихăçан пулман пек ӳсĕмĕсемшĕн, унăн чечекленĕвĕшĕн çул уçса парасси, вăл мĕнле майпала тата мĕнле çулсемпе аталанса пымаллине палăртса хăварасси.

## II.

Чăваш фольклорне тĕпчес ĕçре пирĕн умма чылай пысăк йывăрлăхсем тухса тăраççĕ. Вăл йывăрлăхсем пĕр енчен фольклор спецификинчен хăйĕнчен, тепĕр енчен материалсем çителĕксĕррипе историлле-документла сведенисем çукраххинчен килеççĕ. Чăнахах та, мĕн калама пулать-ха чи авалхи вăхăтсенчех çуралса тухнă фольклор произведенийĕсем çинчен? Хăш вăхăтра вĕсем çуралса тухнă, мĕнле аталанса пынă, хăйсен аталанăвĕ процесĕнче мĕнле улшăнусем тӳссе ирттернĕ? „Сĕм авалтан килнĕ" текен произведенисен малтанхи пуçламăш форми епле пулнă, вĕсем çумне хăш ĕмĕрте мĕнле элементсем хутшăнса пынă, вĕсен чĕлхи, стилĕ, художествăллă меслечĕсем епле трансформациленнĕ? Çакăн пек ыйтусем темĕн чухлĕ туха-

туха тăраççĕ кашни исследователь умнех, фольклорăн историне тĕпчеме тытăннă-тытăнманах. Тепĕр чух татах та çивĕчрех ыйту тухса тăрать: пултаратпăр-и-ха эпир çавтери пысăк чăрмавсем пур çинчех фольклор историйĕ çинчен калаçма?

Чăваш фольклорне илсен, кунта шутласа тухнă йывăрлăхсем татах та ытларах пысăкланаççĕ.

Çакă паллă: халăх искусствине тĕпчесе йĕрлеме унăн (халăхăн) историне пĕлни кирлĕ. Анчах та пирĕн ку таранччен те чăваш халăхĕн историне тĕрĕс те тĕплĕн кăтартса паракан кĕнекесем çук. Эпир хамăр халăх историн уйрăм тапхăрĕсенче, тĕрлĕ ĕмĕрсенче мĕнле пурăнни çинчен начар пĕлетпĕр. Çавăнпа та çав тапхăрсенче унăн искусстви, уйрăмăн илсен сăмах искусстви, еплерех пулни çинчен калаçма питĕ хĕн. Авалхи чăвашсен сăмах вĕççĕн çӳренĕ произведенийĕсем хăйсен малтанхи формипе пирĕн пата çитмен, вăл произведенисенчи хăшпĕр элементсем сĕм-авалранах сыпăнса килнĕ, хăшĕ-пĕрисем каярахри саманасенче купаланса пынă. Тепĕр енчен, çырса илнĕ фольклор произведенийĕсем те çителĕклĕ мар. Сăмахран, историри паллă событисемпе чаплă çынсем çинчен хунă юрăсемпе халлапсем питех те сахал. Вĕсене ĕлĕкхи (революцичченхи) фольклористсем пĕлетăркачах пухман. Çырнă материалсен качестви те нумай чухне шиклентерет: вĕсенчен нумайăшне хăçан, хăш вырăнта, епле çынран çырса илнине кăтартса паман. Чăваш фольклорĕ авалхи вăхăтра еплерех пулни çинчен каласа пама пултаракан историлле документсем пирĕн пачах та çук-ха. Çаксене пурне те пĕрлештерсен, фольклорăн историйĕ çинчен, унăн аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕсем çинчен калама татах та хĕнленсе çитет.

Çапах та, чылай ученăйсем темиçешер çулсем хушши сăнаса пынисем, фольклор материалне хăйне тĕплĕн те тарăнăн анализласа пăхни, тĕрлĕ халăхсен фольклорĕсене пĕр пĕринпе танаштарса пăхни, тата ытти пулăшакан материалсемпе усă курни пире фольклорăн историлле аталанăвĕпе ӳсĕмĕ çинчен хăшпĕр выводсем тума май параççĕ. Хальхи вăхăтра, вырăс фольклорне илсен, унăн пур енчен те самаях туса çитернĕ теорилле курсĕ те пур. Вăл курспа усă курса, эпир хамăр чăваш фольклорĕн кунçулĕпе пурнăçĕ çинчен те пăртакçах калаçма пултаратпăр (паллах, унăн уйрăмлăхĕсемпе спецификине асра тытса пырса).

Фольклористикăра çакă паллă: фольклорăн хăшпĕр тĕрлĕ произведенийĕсем чи авалхи вăхăтсенчех—первобытнăй обществăрах пулнă. Ун пек произведенисен шутне нимĕнрен малтан ĕç юррисем кĕреççĕ. Вăл юрăсене авалхи çынсем коллективлă ĕç вăхăтĕнче юрланă. Коллективлă ĕç процесĕсенчен çуралса тухнă ĕç юррисем хăйсен ритмикине пула авалхи çынсен йывăр ĕçне çăмăллатма, ĕçĕн хусканăвĕсене организацилеме пулăшнă. Вĕсем каярахри вăхăтсенче те çухалман, анчах та пурнăç условийĕсем улшăнса пынă май вĕсен класла характерĕ те улшăнсах пынă. Чи авалхи çынсен ĕç юррийĕсем пирĕн пата çитеймен: эпир çак кĕнекере илсе кăтартнă тĕслĕхсене ниепле те авалхи

ĕç юррисем теме май çук; вĕсем каярахри вăхăтсенче—XVIII—XIX, тен тата XX ĕмĕрсенче çеç пуçланса кайма пултарнă.

Ĕç юррисен тĕп никĕсĕ—мелодипе ритм. Çавăнпа содержани енчен вĕсем нумай чухне питĕ ансат произведенисем. Хăш чух вĕсем нимĕн тĕлсĕр-тăрлавсăр сăмахсенчен çеç танине те тĕл пулма пулать.[1]

Çапах та ĕç юррисенче нимĕнле художествăлăх та, нимĕнле мастерлăх та çук тени йăнăш пулĕччĕ. Ансат ĕç юррисем хушшинчех тăтăшах чăн-чăн пысăк ăсталăхпа, художествăллă пысăк туйăмпа тунисем те тĕл пулаççĕ. Сăмахран, „Каска юрри", „Сăвай юрри", „Тăла пусакансен юррисем" т. ыт. те.

Содержани енчен илсе пăхсан, ĕç юррисене икĕ ушкăна пайлама пулать: ĕçе пыма йăхăраканнисем („Ниме юрри") тата ĕç вăхăтĕнче юрламаллисем („Сăвай юрри" т. ыт. те).

Ĕç юррисен элеменчĕсем бурлаксен юррисенче те тĕл пулаççĕ.

Чăваш ĕç юррисем ялан тенĕ пекех форма енчен икĕ пайлă: пĕр пайĕ, пĕччен юрламалли, ĕç коллективĕн членĕсене вăй талпăнăвĕ пуласси çинчен систерсе хурать, иккĕмĕш пайĕ, пĕтĕм ушкăнпала юрламалли, ĕçĕн импульсне организацилесе пĕр ритмпала ритмлать. Çакна пула ĕç хăвăртрах та, ăнăçлăрах та, йӳнеçӳллĕрех те пулса пырать. Урăхла каласан, ĕç юрри коллективри рабочисен вăйне уйрăлса сапаланса кайма памасть, пĕр çĕре пĕрлештерсе пырать.

Ĕç юррисем пирĕн кунсенче те хăйсен функцине çухатмаççĕ-ха.

Малалла классем пуçланиччен хи тапхăрти фольклор произведенийĕсем шутне тĕрлĕрен вĕрӳ-суру чĕлхисем (вырăсла „заговоры и заклинания") кĕреççĕ. Вĕсен чăн-чăн никĕсĕ—первобытнăй обществăри этемсен коллективĕ çутçанталăкăн хаяр та тискер вăйĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре питрех те вăйсăр пулни, çав кĕрешĕве çăмăллатма меслет шырани, кĕрешӳре çиеле тухма ĕмĕтленни пулса тăрать. Вăл произведенисем яланах магилле сăмахсемпе, магилле действисемпе çыхăнса пынă, мĕншĕн тесен магилле сăмах формулисене авалхи этемсем действисемпе пĕр танах асамлă вăй пулса тăраççĕ тесе шутланă.

Асамлă произведенисем шутнех тата йăлари уяв юррисем те (календарно-обрядовые песни) кĕреççĕ. Вĕсене, этемĕн хуçалăхри ĕçĕсемпе çыхăннăскерсене, яланах хуçалăх çулĕ пуçланнă чух е вăл ăнăçлăн вĕçленсе çитнĕ чух юрланă. Йăлана кĕнĕ уяв юррисене икĕ пая уйăрма йышăннă: пĕрисем—тĕрлĕ вăхăтсенче килсе пыракан уяв юррисем, теприсем—кулленхи пурнăçра юрламалли юрăсем. Н. П. Андреев профессор каланă тăрăх, тĕрлĕ вăхăтра килсе тăракан уявсенче юрлакан юрăсем (урăхла каласан, йăлана кĕнĕ уяв юррисем) нимĕнрен ытларах çĕрĕç

[1] Ку явление хăй вăхăтĕнче нимĕç экономисчĕ социолог К. Бюхер „Работа и ритм" ятлă кĕнекере тĕплĕн уçса панă (Karl Büher, Arbeit und Rhitmus; Leipzig, 1896). Вăл кĕнекене С. С. Звяницкий 1923 çулта вырăсла куçарса кăларнă.

кульчĕпе çыхăнса тăраççĕ. Хĕвел тавра çĕр çаврăннипе çулталăк хушши улшăнса тăни çĕрĕçĕнче питех те пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та çĕрĕç культĕнче хĕвелпе çĕре питĕ пысăк вырăна хурса хисепленĕ. Сăмахран, авалхи чăваш йăли тăрăх çимĕк умĕн çĕре чавалама, чĕркелеме, патакпа çапма юраман („Çинçе"), мĕншĕн тесен вал вăхăтра çĕр пĕтĕ тесе шутланă. Чăваш халăхĕ хĕвеле епле хисепленине те пайтах йăласенче курма пулать. Хĕвелпе çĕре турă вырăннех шутланине кунсăр пуçне тата питĕ нумай тĕрлĕ кĕлĕсенчен те курма пултаратпăр („Çут хĕвел, çут хĕвел амăшĕ, хура çĕр, хура çĕр амăшĕ, çырлах, кĕллĕмĕре хапăл ту"... т. ыт. те).

Кулленхи пурнăçра юрламалли йăла юррисен шутне туй юррисем, вилнĕ çынна пытарнă чух е асăннă чух юрламалли юрăсем те кĕреççĕ. Туй юррисене илсе пăхсан, эпир каллех вĕсем хуçалăхри пурнăçпа таччăн çыхăнса тăнине куратпăр. Мăшăрлă пурнăçпа пурнас йĕрке мĕн ĕлĕкренех экономикăшăн кирлĕ япала пек шутланнă. Çавăнпа та этемсем туй йĕркисене тĕрлĕрен асамлă йăласемпе ирттерсе ярса, çĕнĕ мăшăрăн пурнăçне ăнăçлăраххăн пыртарма тăрăшнă. Вилнĕ çынсене пытарассипе асăнас йăласенче авалхи халăх вилĕрен хăраса пурăнни, вилĕсем хăйсене ан тивччĕр, ан тытчăр тесе, вĕсене епле те пулин çырлахтарма тăрăшни уççăн курăнса тăрать. Çавăнпа та ку йăласене те тĕрлĕ асамлă действисемпе, асамлă юрăсемпе ирттерсе пымалла пулнă. Тĕттĕмрех чăвашсем хушшинче мĕн юлашки вăхăтченех çакăн пек тĕшмĕшлĕх пулнă: вилнĕ çынна çителĕклĕ çырлахтармасан е вăхăтра асăнмасан, çав вилнĕ çын этемсемпе выльăхсем çине тĕрлĕ инкек-синкексем ярса сиен кӳрет тесе шутланă („вилнĕ çын тытни"). Каярахри вăхăтсенче çырса илнĕ пумилкке юррисемпе вилнĕ çынсене пытарнă чух юрламалли юрăсенче çак характерлă енсем сахалтарах сисĕнеççĕ. Ун вырăнне чиркӳ влиянийĕн йĕрĕсем ытларах палăраççĕ. Çапах та вăл влияни чи авалранах тымарланса килнĕ йăласене тĕппипех хупласа лартайман, çавăнпа та мĕн революци пуличченех вăл йăласем чăвашсем хушшинче питĕ çирĕп тытăнса тăнă (сăмахран, вилнĕ çынна асăннă чух урама, пӳрт умне кăвайтă хурса ун тавра ташлас йĕрке).

Хăйсен пурнăçĕшĕн кĕрешес ĕçре авалхи çынсем май килнĕ меслетсемпе пуринпе те усă курнă. Этемĕн сăмахĕ те вăл вăхăтра çавăн пек кĕрешӳ орудиех пулнă. Çав майпа пуçланса кайнă асамлă сăмах формулисем пурна-киле сарăлнăçемĕн сарăлса, тĕрлĕ мифла представленисемпе пуянланса пынă. Кайран вара вĕсенчен тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсем çинчен калакан тотемăлла калавсем, тĕшмĕшле юмахсем (арçурисем, шыврисем, хĕртсуртсем т. ыт. çинчен) тата хушăран фантазиллĕ-ăрăмлă юмахсем те пулса кайнă. Вĕсем пурте этемсен пурнăçне çăмăллатма, лайăхлатма пултаракан асамлă вăй вырăнĕнче шутланса тăнă. Сутмалли юмахсемпе те çав майпалах усă курнă. Вĕсен чи малтанхи функцийĕ çутçанталăкăн явленийĕсене хирĕç кĕрешессинче пулнă, каярахпа çеç вĕсемпе кулленхи практикăллă

пурнăçра усă курма пуçланă. Сăмахран, первобытнăй обществăра çамрăк йĕкĕтсемпе хĕрсене ўссе çитнисен обществине илнĕ чух малтанах вĕсен ăс-тăн ўсĕмĕсене тĕрĕслесе тухнă. Çав шутпа вĕсене тĕрлĕрен сутмалли (тупмалли) юмахсем панă. Çамрăксем çав юмахсен тупсăмĕсене тупма пултарсан, вĕсене ўссе çитнисен шутне кĕртнĕ, тупаймасан—çамрăксен шутĕнчех хăварнă. Ку йĕркене „инициаци йĕрки“ тенĕ.

„Çапла ĕнтĕ классем пуçланиччченхи обществăри фольклор нимĕнрен малтан кулленхи ĕçрен тухса пынă. Вăл пĕтĕмĕшпех асамлă, мифологиллĕ характерлă пулнă. Çавăнпа та каярахри фольклорта эпир çавăн пек элементсем куратпăр пулсан, вăл произведенисем, тĕпрен илсен, классем пуçланиччченхи тапхăрта пулса кайнă, тесе шутлама пултаратпăр“ (Проф. Н. П. Андреев. Русский фольклор, 13 стр.).

Общество классем çине пайланнă хыççăн фольклор диференциленме, ытларан та ытларах класла характер йышăнса пыма пуçлать. Классем пуçланиччченхи обществăра фольклор произведенийĕсемпе кашни ĕççынниех усă курман. Вăл произведенисем уйрăм патриархсен—жрецсен аллинче пулнă. Вĕсем вара çав произведенисемпе пĕчĕккĕнех хăйсен влаçне çирĕплетсе пынă. Анчах общество классем çине пайланнă хыççăн, фольклор уйрăм патриархсен аллинчен тухса, пĕтĕм халăх хушшине хăвăрт сарăлма тытăнать (çапах хăшпĕр асамлă произведенисем, сăмахран, вĕрў-суру чĕлхисем, уйрăм çынсен аллинчех юлаççĕха). Халăх хушшинче юмах-халлап ăстисем, юрăçăсем, халăх пултарулăхĕн чăн-чăн ăстисем тухма пуçлаççĕ. Вĕсем авалхи фольклор материалĕсемпе усă курса, çĕнĕрен-çĕне формăсем туса пыраççĕ. Çапла вара фольклорăн аталанăвĕ пĕр саманта та чарăнса тăмасть, вăл ўснĕçемĕн ўссех, пуянланнăçемĕн пуянлансах пырать. Тĕрлĕрен магиллĕ, мифологиллĕ произведенисем ку тапхăрта хăйсен малтанхи пĕлтерĕшне çухатаççĕ,—вĕсем асамлă вăй паракан произведенисен шутĕнчен тухса, кăмăла йăпатмалли произведенисем вырăнне çех тăрса юлаççĕ. Мифологиллĕ сюжетсем вырăнне пурнăçри явленисемпе ытларах çыхăннă сюжетсем нумайланаççĕ. Тĕслĕхрен, ку тапхăрта новеллă формипе тунă юмахсем, авантюрла сюжетсем, этиологилле калавсем, анекдотсем, пословицăсемпе поговоркăсем т. ыт. ытларах сарăлса пыраççĕ.

Пайтах халăхсен фольклорне илсе пăхсан, эпир çав халăхсен нумайăшĕн эпос формипе тунă пысăк произведенисем пуррине куратпăр. Вырăс халăхĕн фольклорĕнче, ытти формăсемпе юнашарах, былинăллă эпос пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл былинăсем вырăс çĕрĕнчи чаплă паттăрсен кĕрешĕвĕсем çинчен каласа параççĕ. Проф. Н. П. Андреев шухăшĕпе çав былинăсенче вырăссен çамрăк патшалăхĕ хăйĕн тăшманĕсене хирĕç (авалхи Руçри вăрхурахсене, половецсене, тутарсене хирĕç) кĕрешнин йĕрĕсем йĕрленсе юлнă. Паттăрсен чаплă образĕсем урлă (Илья Муромец, Добрыня Никитич, Алеша Попович, т. ыт. те) аслă вырăс халăхĕн хăватлă вăйĕ сăн-сăпатланса курăнать.

2915 - чув.



Национальная библиотека Чувашской

Анчах та чӑваш фольклорӗнче ҫавӑн пек произведенисем пулнипе пулманнине ку вӑхӑтчен никам та тӗплӗн пӑхса тухса татса паман-ха. Чӑнах та, пулнӑ-ши авал чӑвашсен Илья Муромец, Давид Сасунский, Тариэль, Кер-Оглы пек юмахри паттӑрсем? Пулнӑ-ши пирӗн халӑхӑн вӗсен чаплӑ та паттӑр ӗҫӗсене мухтаса хунӑ юрӑсем? Пулнӑ пулсан, вӗсене хӑш вӑхӑтра тата епле юрланӑ-ши?

Пирӗн аллӑра ун пек эпос тӗслӗхӗсем пачах та ҫук. Анчах ку чӑваш халӑхӗн эпос нихӑҫан та пачах пулман тенине пӗлтермест-ха. Ку вӑхӑтчен чӑваш фольклорӗнче унӑн тӗслӗхӗсене тупма май пулман пулсан та, героически сюжетлӑ юмахсенчен нумайӗшӗсем ҫав былинӑсем патне питӗ ҫывӑхах пыраҫҫӗ. Ун пек юмахсен шутне, сӑмахран, Йӑван паттӑр, Али паттӑр, Хӗвелпе уйӑха тыткӑнран хӑтарни т. ыт. юмахсене кӗртме пулать; чӑваш юррисем хушшинче героикӑллӑ эпос йӗрӗсем чӑнах та пачах тӗл пулмаҫҫӗ. Чӑваш юррисен структури, тӗпрен илсен, тӑватӑ йӗркеллӗ куплетсенчен тарать. Малтанхи икӗ йӗрки ҫутҫанталӑкри мӗнле те пулин явлени ҫинчен каласа парать, юлашки икӗ йӗрки юрлаканӑн шалти кӑмӑлне, туйӑмне палӑртать. Пӗр-пӗринпе татти-сыпписӗрех ҫыхӑнса пыракан нумай йӗркеллӗ тата тулли сюжетлӑ юрӑсем чӑвашсен питрех те сайра ҫеҫ пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та юрӑ материалӗсем хушшинче сарлака эпослӑ формӑсем ширани тӗл патне илсе ҫитерессинчен чылаях катара пулӗ тесе шутлама тивет.

Мӗнпе уйӑрӑлса тӑраҫҫӗ-ха эпослӑ произведенисем фольклорӑн ытти жанрӗсенчен? Кунта эпир нимӗнрен малтан унти геройсем ҫавтери вӑйлӑ пулнине куратпӑр. Аса илер вырӑс былинисенчи паттӑрсене—Илья Муромеца, Святогора, Вольгӑна т. ыт. те. Вӗсен аллисенче 30-шар, 40-шер, 90-шар пӑт туртакан хӗҫсем (палицӑсем), кӗлеткисем вӗсен „кашласа ларакан вӑрмантан ҫӳлӗрех, шуса иртекен пӗлӗтрен кӑшт ҫеҫ лутрарах". Кун пек тӗлӗнмелле пысӑк кӗлеткеллӗ паттӑрсем чӑваш халлапӗсенче те пур,—сӑмахран, Улӑп. Ҫавтери вӑйлӑ паттӑрсем те чӑваш юмахӗсенче сахал мар. Илер Али паттӑра. Вӑл ҫӗрӗн хӑлӑпне шыраса тупса, пӗтӗм ҫӗр чӑмӑрне тепӗр майлӑ ҫаврӑрса хурасшӑн. Илер „Хӗвелпе уйӑха тыткӑнран хӑтарни" ҫинчен калакан юмаха. Ку юмахра Йӑван паттӑр ҫӗр ҫулхи юмансене тымарӗ-мӗнӗпе туртса кӑларса, вӗсене алтуине вылянтарнӑ пек вылянтарать. Ту паттӑр темӗн пысӑкӗш сӑрт хысакӗсене хӑйпӑтса илсе, пӳске пек ывтӑнтарать; Ҫӗр паттӑра палеонтологилле тискер кайӑкпа, „пин"[1] ятлӑскерпе танлаштарса кӑтартнӑ. Ҫакӑн пек аналогисем ытти юмахсенче те темӗн чухлех. Али паттӑр ятлӑ юмахра карчӑкпа старикӗн ывӑлӗсем паттӑр виҫине ҫити вӑйланас умӗн пурте 30 ҫул хушши вырӑнтан хускалаймасӑр ларнӑ. Ку вырӑн тӳрех Илья Муромецӑн экспозицине аса илтерет.

---

[1] „Пин"—слон. Ашмарин словарьне пӑх.

Анчах кунта уйрӑм вырӑнсемпе сюжет ситуацийӗсем пӗрешкел пулни кӑна ыйтӑва татса параймасть-ха. Сюжетсен пӗрпеклӗхӗсӗр пуҫне тата вӗсен формисене тӗпчесе тухни кирлӗ. Былинӑсем хӑйсен форми енчен юрӑллӑ произведенисем пулса тӑраҫҫӗ. Юрласса вӗсене ахаль юрӑсене юрланӑ пек мар, урӑхларах, речитатив текен манерпе юрланӑ. Былинӑсен композицийӗнче уйрӑм „запевсем", „зачинсем", „концовкӑсем" тӑтӑшах тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсем эпитетсемпе, гиперболӑсемпе, стандартлӑ формулӑсемпе питӗ пуян.[1] Хамӑр умма лартнӑ ыйтӑва ҫакӑнта шутласа тухнӑ положенисем енчен татса парас тесен, вывод иккӗллӗ пулса тухать. Мӗншӗн?

Чӑваш юмахӗсем мӗнле майпа сарӑлни, халӑх хушшинче мӗнле формӑпа ҫӳрени пуриншӗн те паллӑ. Чӑваш юмахҫи-халлапҫи хӑйӗн юмахне кирек хӑҫан та калав формипе каласа парать. Традицине ҫирӗп кӗрсе юлнӑ канонсем сахал кӑна тӗл пулаҫҫӗ. Пӗр пек вырӑнсем темиҫе хутчен ылмашӑнса ыыни те ҫукпа пӗрех. Вӑл вырӑнсене кашни юмахҫӑ хӑй пӗлнӗ пек улшӑнтарма та, пачах кӑларса пӑрахма та пултарать,—унпӑн юмахӑн структури, тӗпрен илсен, улшӑнмасӑрах юлать. Юрӑллӑ элементсем чӑваш юмахӗсенче нумай мар: хӑшпӗр юмахсенче тӗл пулакан уйрӑм юрӑсем нимӗнрен ытларах диалогсене витӗмлентерме, чӗррӗнтерех тума ҫеҫ юмахӑн сюжечӗпе ҫыхӑнса пыраҫҫӗ. Ҫапла ӗнтӗ, чӑваш юмахӗсен ӑруран ӑрӑва куҫмалли тӗп форми юрӑ мар, повествовани. Анчах та, кунта тӗпчесе тухнӑ сӑнавсем чи авалхи юмахсемшӗн мар, каярахри вӑхӑтсенчи юмахсемшӗн ҫеҫ тӗрӗс пулаҫҫӗ. Епле формӑпа ҫӳренӗ-тӗр паттӑрсем ҫинчен хунӑ юмахсем чи авалхи вӑхӑтсенче,—эпир ун ҫинчен нимӗн те калама пултараймастпӑр, мӗншӗн тесен кун пирки пирӗн аллӑра нимӗнле материал та ҫук. Фольклор пуҫтаракан хӑшпӗр ҫынсем пӗлтернисем кӑна пире пӑт-пат сведенисем параҫҫӗ. Сӑмахран, „Хӗвелпе уйӑха тыткӑнран хӑтарни" ятлӑ юмахӑн умсӑмахӗнче ҫапла каланӑ (алҫырӑвӗ Чӗлхепе литература тата истори институчӗн фондӗнче выртать):

„Ку юмаха эпӗ пурӗ те пӗр хут илтнӗ. Ун чухне эп, 9 ҫулхи ача, Юнтапари шкулта вӗренеттӗм. Ӑна пире каҫхине, ҫывӑрма выртас умӗн, чиркӳ хуралҫи Вӑрӑм Якку каласа пачӗ. Унтан вара 40 ҫул иртрӗ ӗнтӗ. 40 ҫул хушшинче эпӗ темӗн те пӗр курнӑ, темӗн те пӗр илтнӗ, анчах ҫав юмаха итленӗ чух хумханнӑ пек нихӑҫан та хумханман. Ӑна юмахҫӑ пире кӑкӑртан тухакан хулӑм сасӑпа, шыв пек юхса пыракан сӑвӑллӑ чӗлхепе каласа пачӗ. Юмахӑн чӗлхи ман пуҫӑмра тытӑнса юлаймарӗ, анчах юмахне пӗтӗмӗшпех халӗ те манса каяймастӑп".

Ку умсӑмахран эпир Вӑрӑм Якку хӑйӗн юмахне сӑвӑллӑ, юрӑ манерӗпе каласа панӑ тесе шутлама пултаратпӑр. Апла пулсан, унӑн чи малтанхи варианчӗ шӑпах эпосла формӑллӑ пулнӑ темелле.

---

[1] Былинӑсем ҫинчен акад. Ю. М. Соколов кӗнекине пӑх. (Русский фольклор, 1938, 223—257 стр.)

Тепӗр пример: 1939-мӗш ҫулта Пушкӑрт республикинче чӑваш фольклорӗ пухса ҫӳренӗ Н. Ф. Данилов юлташ пӗлтернӗ тарӑх, Бижбуляк районӗнче пӗр халлапҫӑ хӑйӗн халлапӗсене пуҫламӗшӗнчен тытӑнса мӗн вӗҫне ҫитиччен сӑвӑласа каласа парать иккен. Анчах эпир ку халлапӑн содержанийӗ ҫинчен нимӗн те калама пултараймастпӑр, ма тесессӗн, ӑна хут ҫине ҫырса илме май пулман, хыпарне пӗлтерекенӗ хӑй унӑн адрӗсне пире каласа параймарӗ. Чӑн-и, чӑн мар-и вӑл хыпар,—тӗрӗслесе пӑхман. Ҫавӑнпа хальхи вӑхӑтра чӑваш фольклорӗнче былиналлӑ эпос пур тесе калама иртерех. Ку ыйтупа тепӗр тӗрле каласан тӗрӗсрех пулать-тӗр: чӑвашсен тахҫан-авал эпосла произведенисем тен чӑнах та пулнӑ пулӗ те, историлле тӗрлӗ сӑлтавсене пула вӑрахӑн-вӑрахӑнах манӑҫа тухса пынӑ пуль. Юлашкинчен вара пӗтӗм фольклор пуянлӑхӗнче вӗсен йӗрӗсемпе пӗчӗк тӗпренчӗкӗсем кӑна тӑрса юлнӑ пуль...

Крепостничество тапхӑрӗнче (XVII, XVIII ӗмӗрсем тата XIX ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗ) фольклор икӗ йӗрпе аталанса пынӑ: кивӗ формӑсене ҫӗнетсе улшӑнтарас йӗрпе тата пачах ҫӗнӗ формӑсемлӗ произведенисем шутласа кӑларас йӗрпе. Ку тапхӑрта тӗрлӗрен историлле юрӑсем, Степан Разин, Емельян Пугачев тата хресченсен восстанийӗсен ытти ҫулпуҫӗсем ҫинчен тӗрлӗрен халлапсем-юмахсем, юрӑсем, преданисем сарӑлма тытӑнаҫҫӗ. Чӑваш халӑхӗ Разин восстанийӗнче те, Пугачев восстанийӗнче те питӗ активлӑн хутшӑнса кӗрешнӗ, ҫавӑн пирки хӑйӗн фольклорӗнче вӗсен ячӗсене асӑнмасӑр хӑварма пултарайман. Ҫапах та чӑваш фольклорӗнче эпир вӗсем ҫинчен калакан юрӑсемпе юмаххаллапсем питӗ сахал тӗл пулатпӑр. Мӗншӗн ҫапла пулнӑ-ши-ха вӑл? Кӑна хирӗҫ ответлеме йывӑр мар: мӗншӗн тесен революцичченхи саманара вӗсем ҫинчен ҫӳрекен юрӑсемпе юмахсене юриех пуҫтарман, пуҫтарттарман та. Хальхи вӑхӑтра вӑл юрӑсемпе юмахсене астӑвакансем сахаллансах пыраҫҫӗ...

Удел хресченӗсен юррисемпе тӗрлӗ улпутсене хирӗҫ юрланӑ юрӑсене те ҫак тапхӑртах хунӑ пулнӑ. Вӗсем те пирӗн алӑра ҫителӗклӗ чухлӗ ҫук, мӗншӗн тесен вӗсене те ӗлӗкхи вӑхӑтра сахал ҫыра-ҫыра илнӗ. Анчах материалсем сахал пулин те, эпир ку тапхӑрти фольклорӑн тӗп характерӗпе унӑн уйрӑмлӑхӗсем ҫинчен ҫителӗклӗ таранах калаҫма пултаратпӑр. Ун ҫинчен пире нумай мар материалсем хӑйсемех каласа параҫҫӗ. Вӑл юрӑсенче нимӗнрен малтан хресченсен питӗ йывӑр пурнӑҫӗ, вӗсене пуҫ пулса тӑракан классем эксплоатацилени, телейлӗ пурнӑҫ туса ирӗклӗн сывлама кун паманни тата хресченсем хӑйсен юнне ӗҫекенсене хирӗҫ стихийлӑн протестлени яр уҫҫӑн курӑнса тӑрать. Ҫакнах курма пулать вӑл тапхӑрти ӗҫкӗ-ҫикӗ юррисенче те. Ҫапах та халӑх хӑйӗн ӗмӗртенхи шанчӑкне, лайӑх пурнӑҫ пуласса ӗненессине нихӑҫан та ҫухатман. Ҫавӑнпа халӑхӑн творчестви, тӗпрен илсен, яланах ҫирӗп оптимизмлӑ пулнӑ. Ку оптимизм уйрӑмӑнах сатирӑллӑ, шӳтле юрӑсемпе туй юррисенче лайӑх палӑрать.

Крепостничество тапхӑрӗнчех кунта шутласа тухнӑ произ-

веденисемсĕр пуçне пупсемпе улпут таврашĕсем çинчен калакан тĕрлĕрен юмахсем, анекдотсем, пословицăсемпе поговоркăсем нумай сарăлнă. Вĕсем эксплоататăрла классен чăн-чăн сăнсăпатне, пупсемпе улпутсен çăткăнлăхне, аскăнчăклăхне кăтартса параççĕ.

Капитализм тапхăрĕнче (XIX ĕмĕрĕн вĕçĕпе XX ĕмĕр пуçламăшĕ) хресченсем диференциленесси (чухăнсемпе пуянсем çине пайланасси) крепостничество тапхăрĕнчинчен те вăйлăрах пулса пырать. Çакна май халăх творчестви те диференциленет. Пĕр енчен ялти куштан-пуянсене—кулаксене хирĕçле фольклор аталанать, тепĕр енчен кулакла фольклор хăй те самаях вăй илет. Çав вăхăтрах тата иртнĕ ĕмĕрсенчен куçса килнĕ фольклор произведенийĕсем те манăçа юлмаççĕ. Вĕсенчен хăшĕсем хăйсен малтанхи функцийĕсене çухатса, халăх хушшинче аваллăхăн атрибучĕсем вырăнне çеç çӳреççĕ (сăмахран, йăла юррисем), хăшĕсем, çĕнĕ условисенче класс кĕрешĕвĕн хĕçпăшалĕ пулса тăрса, малтанхинчен те интенсивлăрах пурнăçпа пурăнаççĕ.

Капитализм тапхăрĕнче, уйрăмăнах 1905—07-мĕш çулсенче, çĕнĕ юрăсем, революцилле шухăшлă юрăсем çуралса тухса сарăлса пынă. Вăл юрăсен шутне „Çерем пăсаççĕ“, „Сахăр савăтĕнчи рабочи юрри“ т. ыт. кĕреççĕ. Вĕсен тĕп шухăшĕ—патша правительствине хирĕç протестлесси. Ку протест революци задачисене пур енчен те тĕплĕн ăнланса илнĕ класăн протесчĕ мар, вăл протест нумай чухне стихийăллă вăй майлăн кăна çĕкленсе тухать. Çапла пулин те, ку юрăсем хресченсене революцилентерсе пырас тĕлĕшпе, вĕсем хушшине революциллĕ шухăшсем сарас тĕлĕшпе питĕ пысăк вăй пулса тăнă. Çавăнпа эпир вĕсене уйрăмăнах пысăк хак парса пахалатпăр.

1905—1907-мĕш çулсенче фольклор произведенийĕсемсĕр пуçне халăх творчествипе усă курса çырнă литературăллă произведенисем те чылай сарăлнă пулнă. Сăмахран, чăвашсен халăх поэчĕ орденоносец Н. И. Шелепи çырнă „Раççейпа“ „Тав“ ятлă сăвăсем чăвашсем хушшинче питĕ хăвăрт сарăлса пынă. Малтанхи сăввине ялсенче чăн-чăн халăх творчествипе пĕр танах юрласа çӳренĕ.

Çапла ĕнтĕ демократла интеллигенцин малта пыракан пайĕ фольклорпа класс кĕрешĕвĕн интересĕсемшĕн усă курса кĕрешсе пынă. Реакцилле вăйсем те ку çивĕч хĕçпăшала пăрахăç туман. Вĕсем те унпала хăйсен интересĕсемшĕн çителĕклĕнех усă курма тăрăшнă. Вĕсем фольклор произведенийĕсемпе усă курса патша йĕркисене ырлама, халăхăн юхăнчăклă пурнăçне çутă краскăсемпе сăрласа кăтартма ĕмĕтленнĕ. Ку тĕлĕшрен Т. Кириллов çырса кăларнă „Тырпул пулнă çул“ ятлă поэма питĕ характерлă. Çак поэмăра автор пуян чăваш ялĕн ырлăх утравĕнчи пек лăпкă та канăçлă пурнăçне идиллилесе кăтартать. Автор шухăшĕпе çак ялта нимĕнле чухăнлăх та, нимĕнле эксплоатаци те, нимĕнле класс кĕрешĕвĕ те çук, пурте пĕртан ырă пурнăçпа, пĕрне пĕри юратса пурăнаççĕ. Класс кĕрешĕвĕ çинчен кунта сăмах та пулма пултараймасть, м. т. патша правительстви кашни

хресченĕн пурнăçнех лайăх та телейлĕ тума тăрăшать имĕш... Паллах, кун пек произведени халăхăн революциллĕ шухăшне хавхалантарма мар, ăна пăчлантарса, путарса пыма çеç кирлĕ пулнă.

Анчах чăваш халăхĕ пурнăç тĕрĕслĕхĕ хăш енчине лайăх ăнланнă. Вăл хăйĕн çулĕ çинчи монархистла, миссионерла, эксплоататорла шухăшсене нимĕн хĕрхенмесĕр ывăта-ывăта пынă. Большевиксен партийĕпе вырăс пролетариачĕ ертсе пынипе, вăл 1917-мĕш çулхи Октябрь революцинче хăйĕн ĕмĕрхи тăшманне—эксплоататорсен класне тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатрĕ.

III.

Социализмла Аслă Октябрь революцийĕ Совет Союзĕнчи пур халăхсен творчествине те çӳлтен çӳле çĕкленсе, ытарма çук чечекленсе пыма май пачĕ. Çĕршывăн экономикипе культури улшăнса пынипе пĕрлех, халăх творчествинче те пысăк улшăнусем пулчĕç. Кунта эпир тематика улшăннине çех мар, халăх творчествин стилĕ тата художествăлла формипе жанрĕ улшăннине те лайăх куратпăр. Пĕр йышши,—кивĕ жанрсем пĕтсе пынă майăн, çав вăхăтрах тепĕр йышши,—çĕнĕ жанрсем çуралса пынине эпир хамăрах лайăх курса тăратпăр. Тĕслĕхрен, темĕн чухлĕ асамлă произведенисемпе тĕрлĕ кĕлĕсем, вĕрӳ-суру чĕлхисем пĕтĕмĕшпех пĕтсе пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен социаллă никĕсĕ пĕтсе пырать. Çавăнпа та вĕсене халăх мансах пырать. Тĕрлĕ ылханусемпе тухату йĕркисем, усал-тĕселсем çинчен каланисем, тата çавăн пек кирлĕ-кирлĕмарсем пурнăçран пĕтĕмĕшпех тухса ӳкеççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем халиччenех юлнă пулсан та, авалхи йăла юлашкийĕсем вырăнне çеç тăрса юлнă.

Тепĕр енчен илсен, пирĕн тапхăрта „фольклор“ тени хăй те пĕтĕмĕшпех урăхла, çĕнĕ содержанилле ăнлану пулса тăрать. Совет тапхăрĕнчи фольклор—вăл пĕтĕм халăхăн чăн-чăн творчестви. Академик Ю. М. Соколов сăмахĕпе каласан, „фольклор вăл инçетри аваллăхран килсе перĕннĕ сасă çех мар, паянхи кунăн хаватлă сасси те“.

Аслă Октябрь революцийĕччен фольклорпа литература хушшинче тем пек пысăк уйрăмлăх пур тесе шутланă. Хальхи тапхăрта çав уйрăмлăх пĕтнĕçемĕн пĕтсех пырать. Пирĕн тапхăрта фольклор произведенийĕсем халăх сăмахĕнче çех мар, тĕрлĕ хаçат-журналсемпе кĕнекесем çинче литература произведенийĕсемпе пĕр танах пичетленсе пыраççĕ. Çакăн çинчен темиçе тĕслĕх те кăтартма пулать. Вырăссен халăх творчестви мастерĕсем Коргуев, Конашев, Крюкова тата ыт. те, Дагестан халăх поэчĕ Сулейман Стальский, казахсен акынĕ орденоносец Джамбул, чăваш халăх юрăçисемпе халлап-юмахçисем Н. И. Шелепи, Гаврил Федоров, Кашкăр Микули, Марья Дьяконова т. ыт. те произведенийĕсем пĕтĕм халăх произведенийĕсем пулса тăраççĕ. Çак произведенисенче совет халăхĕн аслă идейи—социализмпа коммунизм идейи çутăлса тухса тăрать. Пĕтĕм ха-

лахăн гениллĕ çулпуçĕсен Ленинпа Сталинăн образĕсем фольклорта „авалхи çынсен мифла геройĕпе—Прометейпа танлашаççĕ". Чăваш халăхĕ хăйĕн сăвви-юррисенче, юмахĕ-халлапĕсенче Ленинпа Сталина пахаласа, чĕлхе çине килекен чи хаклă, чи ăшă сăмахсем каласа юрлать, вĕсен ĕмĕр вилми ячĕсене йăхран-йăха йăлтăртатса тăракан сӳнми хĕвелпе танлаштарать. Ленинпа Сталин ятне фольклор нихăçан та пĕр-пĕринчен уйăрмасть. „Ленин атте чĕремре, Сталин атте умăмра", тесе юрлать чăваш ĕçхалăхĕ. Ленинпа Сталин—тĕнчене ăшăтса, çутатса тăракан çут хĕвел, этемлĕхе савăнăç паракан çăлкуçĕсем, нимĕвле тăшмана парăнми паттăр улăпсем, чи çӳллĕ тусенчен те çӳлте вĕçекен маттур ăмăрткайăксем, тĕнче телейне туптакан тимĕрçĕсем,—акă епле танлаштарусем парать халăх хăйĕн аслă çулпуçĕсем çинчен. „Сталин юлташ сăмахĕ пĕр сăмахĕ пин ылттăн", тесе юрлать чăваш халăхĕ хăйĕн аслă çулпуçĕ çинчен. Хăватлă паттăрсем пек, нихăçан тĕксĕмленми çут хĕвел пек, пĕлĕт тӳпинче ирĕклĕн ярăнса çӳрекен ăмăрткайăксем пек тухса тăраççĕ пирĕн ума чăваш фольклорĕнче Ленинпа Сталин образĕсем.

Совет фольклорĕн пурнăçĕ çамрăк пулин те, вăл кунранкун хăвăрт ӳссе малалла аталанса пырать. Вăл ӳсĕм пĕр енчен фольклорăн ĕмĕртен пухăнса пынă пуянлăхĕсемпе усă курнипе, кивĕ формăсемпе сюжетсене çĕнетсе пынипе, тепĕр енчен халăх творчествинче халиччен пулман çĕнĕ формăсем шутласа кăларнипе вăй илсе тĕрекленет. Тĕслĕхрен, граждан вăрçи тапхăрне, революцийĕн аслă çулпуçĕсене т. ыт. те аса илсе каланисем нихçан манăçмасла пурнăçа кĕрсе кайнисем те сахал мар. Вĕсенчен хăшпĕрисем халăх репертуарне çирĕппĕн кĕрсе вырнаçайман-ха, художествăллă тивĕçлĕхне илейменнисем те пур-ха, анчах вĕсене фольклор произведенийĕсен шутĕнчен пăрса хăварма нимĕнле сăлтав та пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен вĕсем кунсерен çĕнелсе, илемленсе, якалса пыраççĕ, халь мар пулсан, каярахпа фольклор произведенийĕсем пулса тăма пултараççĕ. Çавăнпа та вĕсене пуçланса кайнă тапхăртах çырса илни питĕ кирлĕ. Çапла туни çак творчество епле ӳссе çирĕпленсе хăйĕн чăн тивĕçлĕхне тупнине сăнаса пыма май парать. Çавăнпа та совет фольклорне çине тăрсах пуçтарса, тĕплĕн тĕпчесе тухни кирлĕ, анчах çак ĕçе эпир тивĕçлĕ таран тăвайман-ха.

Чăвашсен совет тапхăрĕнчи фольклорĕпе революциченхи фольклорĕ хушшинче пĕр пысăк уйрăмлăх пур. Вăл чăваш юррисен репертуарне революцилле юрăсем кĕрсе вырнаçни пулса тăрать. Ку вара икĕ йĕрпе пулса пынă. Пĕр енчен, чăваш поэчĕсем вырăссен революцилле юррисене тăван чĕлхе çине куçарни; тепĕр енчен—юррăн кĕввисене улăштармасăр, сăвăсем евĕрлех, халăх хăй юрăсем хывни. Пирвайхи шута „Интернационал", „Смело, товарищи, в ногу", „Варшавянка", „Замучен тяжелой неволей", „Мы кузнецы", „Похоронный марш" т. ыт. юрăсем те кĕреççĕ. Иккĕмĕшсен шутне „Проводы", „Сергей поп, Сергей поп", „Эй, Питĕр хули" („Эй, в Таганроге" кĕввипе) тата ытти юрăсене те кĕртме пулать. Юлашкинчен асăннă юрăсене

халăх хăй, нимле поэтсем хутшăнмасăрах хывнă, кĕввисене те хăех йышăннă. Çапла вара Совет влаçĕн пирвайхи çулĕсенче революциллĕ юрăсем вырăссен юррисем урла халăх репертуарне кĕрсе кайнă. Çав юрасене ĕçхалăхĕ чĕререн юратса йышăнса пынă. Çак ĕçе пуçарса яракансем пĕр енчен—вырăсларан чăвашла куçаракан поэтсем, тепĕр енчен—граждан вăрçинчен таврăннă çынсем пулнă. Каярахпа вара революциллĕ юрăсем чăвашсен музыкăпа пурнăç йăлине кунран-кунах кĕрсе пырса, юрăсен репертуарĕнче тивĕçлипех çирĕп вырăн тупнă. Хальхи вăхăтра совет çĕршывĕнчи халăхсен хаваслă юррисене тăван чĕлхе çинчылай куçарнă. Вĕсене тăван чĕлхепе юратса юрлаççĕ.

Чăваш фольклорĕ революциллĕ çĕкленсе пырас çул çинче пысăк чăрмавсем пулнă. Çав чăрмавсем—класла ют элементсем: буржуалла националистсем, кулаксем, тĕн таврашĕпе ĕçлекенсем тата ытти çавăн пек йĕрĕнчĕксем фольклорăн революциллĕ ӳсĕмне чарса пырас тесе кĕрешнинчен тухса пынă. Тĕслĕхрен, революцийĕн пирвайхи çулĕсенче çав йĕрĕнчĕксем пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн революциллĕ гимнне—„Интернационала“ хирĕç хăйсен националистла „гимнне“—„Мухтав сана, чăваша, мухтав аслă йăваша“ тенĕ юррине кăларса тăратнă. Анчах çав лĕпĕрчĕке чăваш ĕçхалăхĕ йышăнмасăр вăхăтра сирсе ыватнă. Çакăн хыççăн вара çав националистсемех „Интернационала“ пăсса, мăшкăласа куçарма хăтланнă. Çав буржуалла националистсемех халăх халлап-юмахĕсене хăйсем майлă, националистла шухăшсемпе пичетлесе кăларнă. Тĕслĕхрен, „Пуянпа чухăн судлашни“ ятлă юмаха чăвашпа вырăс судлашнă пек туса пичетленĕ, т. ыт. те.

Буржуалла националистсемпе ытти тăшмансем, тем тĕрле тăрăшсан та, халăхăн куллен çĕкленсе пыракан кăмăлне чарайман. Çав революциллĕ чаплă юрăсем Октябрь хыççăнхи пĕтĕм чăваш фольклорне аслăн çĕкленсе кайма пулăшрĕç. Çав юрăсем çĕнĕ пурнăçăн çĕнĕ тапхăрĕнче кирлĕ тĕрлĕ частушкăсене калама çук нумай шутлăн саралма май пачĕç. Вăл частушкăсем Совет влаçĕн пирвайхи çулĕсенче çĕнĕ пурнăç çинчен, комсомол çинчен, ирĕке тухнă хĕрарăмсем çинчен, кооператив çинчен, т. ыт. те, т. ыт. те,—пĕр сăмахпа каласан, политикăлла мĕнпур событисемпе явленисем çинчен каласа параççĕ.

Çав частушкăсемех сталинла икĕ пятилеткăра: пятилеткăсем çинчен, колхозла пурнăç çинчен, заём çинчен, Хĕрлĕ Çар çинчен, ударниксемпе стахановецсем çинчен, Сталинла Конституци çинчен, т. ыт. ĕçсем çинчен те пĕтĕм чуна çĕклентерсе хавасла саса парса пынă. Вĕсем халĕ те пĕтĕм чуна çĕклентерсе янраççĕ. Çак частушкăсемпе революцичченхи частушкăсем хушшинче питĕ пысăк уйрăмлăх пур. Хальхи частушкăсем ĕлĕкхи частушкăсем пек пĕр-пĕр çыннăн пурнăç туйăмне çех мар, общество-политикăлла пурнăç туйăмлăхне уççăн кăтартса параççĕ.

Совет тапхăрĕнчи чăваш фольклорĕнче частушкăсем хыççăн тата колхоз юррисем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çак юрăсем те авалтан юлнă юрăсене творчествăллăн çĕнетнипе,

тĕрĕсрех каласан, вĕсене хальхи тапхăра тата паянхи куна тивĕçлĕ содержани панипе пулса пыраççĕ. Тата çакна палăртса хăварас пулать: авалхи юрăсем хăйсен пирвайхи тĕсне пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех çухатса, паянхи куна тивĕçлĕ тĕс йышăнаççĕ. Революцичченхи кĕвĕ-юрăсенче пĕтĕм мухтав килçурт хуçине, хуранташ-тăванĕсене, вĕсен кĕрекинчи ĕçки-çикине çех тивĕçленнĕ пулсан, халĕ пĕтĕмĕшпех урăхла ĕнтĕ. Хальхи кĕвĕ-юрăсенче пĕтĕм коллективăн, пĕтĕм колхозăн пуянлăхĕпе унăн мухтавлăхе янарать. Урăхларах каласан, ĕлĕкхи пурнăçпа йăлари юрăсем совет тапхăрĕнче обществăллă-политикла туйăмлă пулса тăраççĕ. Ку енчен халăх репертуарĕнче революциччен вуçех пулман çĕнĕ юра формисем çуралса тухаççĕ,—ку тепĕр енчен. Тĕслĕхрен, колхозниксеӊ „Туçа хĕрĕсем“ ятлă юррине кăтартма пулать. Пысăк хастарлăхпа, тăрăшса, юратса ĕçлеме чĕнет çав юрă. Кунта вара общество интересĕсем мала тухса тăни питĕ лайăх курăнать. Çакăн пек юрăсем тата та чылай.

Хальхи тапхăрти фольклорта халлап-юмахсем, пословицăсемпе поговоркăсем тата тупмалли юмахсем те тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ. Эпир çак жанрсенче те социализмла тапхăрăн тĕп идейисене, ĕç патне коммунизмла кăмăлпа пымаллине, социализмла пурлăха епле упраса тытмаллине пит лайăх куратпăр. Тĕслĕхрен: „Колхоз пӳлми—хĕлле те, çулла та иксĕлми“, „Колхозшăн пурлăх — тăшманшăн хурлăх“, „Колхоз пурлăхĕ — халăх ырлăхĕ; ăна хаклас пулать, тăшманран сыхлас пулать“, т. ыт. те.

Совет тапхăрĕнчи фольклор революцичченхи фольклортан хăйĕн чăнлăхĕпе уйрăлса тăрать. Асамлă-фантазилле элементсем пурнăçра пулса иртнĕ фактсен чăнлăхĕпе улшăнса пыраççĕ, çав чăнлăх хальхи фольклорăн калама çук пысăк хăвачĕ пулса тăрать.

„Халĕ пĕтĕм ĕçхалăх поэзине нихçан пулман пек чечеклентермелли вăхăт çитрĕ. Халăх хушшинчи талантсем хальхи вăхăтра ниçта палăрмасăр тăрса юлмаççĕ, вĕсем общество юратăвĕнчен пăрăнса юлма та пултараймаççĕ. Вĕсене хăйсен пултарулăхне çӳлтен çӳле çĕклеме пур майсем те пур. Халăх пултарулăхĕшĕн чăн та чăн телейлĕ те çутă тапхăр килсе çитрĕ. Ăна этемлĕхĕн генийĕ Сталин çутатса тăрать“ (Ю. М. Соколов. Русский фольклор, стр. 554).

*И. С. Тукташ.*

# АСЛĂ ÇЫНСЕМ ФОЛЬКЛОР ÇИНЧЕН

## *В. И. ЛЕНИН*

Владимир Ильич халăх творчествине питех те пысăк хакпа хакланă. Вăл халăх поэчĕсен сăввисене вулама юратнă, вĕсенчен паллăраххисене, музыка çине хунисене, юлташĕсемпе пĕрле юрланă.

Октябрь революцийĕ хыççăн, Мускаври пуранна чух, Ленин Даль словарьне вĕренме тытăннă. Çак словарьте ăна уйрăмăнах пословицăсемпе поговоркăсем кăмăла кайнă. Вăл ун çинчен хăйĕн личнăй секретарьне Вл. Бонч-Бруевича каласа панă. Калаçнă май, сăмах халăх эпосĕ пирки пуçланнă. Бонч-Бруевич Владимир Ильича хăйĕн библиотекинче халăх юррисен, юмахĕсен, былинăсен кĕнекисем пурри çинчен пĕлтернĕ. Владимир Ильич вăл кĕнекесене хăй патне илсе пырса пама ыйтнă. Унтан вара, çав кĕнекесем ун аллине лексенех, Ильич çав каçах В. Н. Добролюбов пухса хатĕрленĕ „Смоленский этнографический сборник" ятлă кĕнекене пысăк тимлĕхпе вулама тытăннă.

Тепĕр ирхине Ленин çав кĕнекесем пирки çапла каланă:

— Мĕн тери интереслă материал. Эп ак çак кĕнекесене çиелтен кăна пăхса тухрăм, анчах та куратăп, вĕсене пĕтĕçтерме, социаллă-политикăлла пахалăх енчен пăхса тухма алă çитмест е тимлĕх çитмест пулмалла, вĕт ку материалсем тăрăх халăхăн ĕмĕчĕсемпе кăмăлĕсем çинчен тем тери паха исследовани çырма пулнă пулĕччĕ. Пăхăр халĕ акă Н. Е. Ончуков юмахĕсене. Эп вĕсене уçкаласа кăна тухрăм,—вĕт кунта тĕлĕнмелле лайăх вырăнсем пур. Акă мĕн çине çавранса пăхтармалла пирĕн литература историкĕсене. Ку вăл—чăн-чăн халăх творчестви, эпир пурăнакан кунсенче халăх психологине вĕренме кирлĕ паха творчество.

## *А. С. ПУШКИН*

Татса параймастăп, мĕнле словестноçа пирĕн маларах хумалла, анчах та пирĕн хамăр чĕлхе пур—йăласем, историсем, юмахсем т. ыт. те. Хăюлăраххăн усă курар вĕсемпе!

(Француз словестноçĕ çинчен. 1822—1824.)

Вырӑс чӗлхин свойствисене курас тетӗр пулсан, халӑх юмахӗсене вулӑр, ҫамрӑк писательсем!

(„Атенеяра“ пичетленсе тухнӑ „Евгений Онегин ҫинчен“ ятлӑ статьяна хирӗҫ ҫырнӑ ответран. 1829.)

Авалхи юрӑсене, юмахсене т. ыт. те вӗренни вырӑс чӗлхин мӗнпур енӗсене тӗплӗн пӗлме кирлӗ. Пирӗн критиксем кӑлӑхах ҫакна йышӑнасшӑн мар.

(„Евгений Онегин“ рецензийӗсем пирки ҫырнӑ заметкӑсенчен. 1829.)

## *А. М. ГОРЬКИЙ*

Эсир авалхи юмахсене, мифсене, легендӑсене пӗлни пирки иккӗленместӗп, анчах та вӗсен тӗп шухӑшне тата тарӑнрах ӑнласа илтерес килет манӑн. Вӑл тӗп шухӑш — авалхи ӗҫҫыннисем хӑйсен ӗҫне ҫӑмӑллатма, унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерме ӗмӗтленнинче, ик уралла тӑшмансемпе тӑватӑ уралла тӑшмансене хирӗҫ хӗҫпӑшалланма тӑрӑшнинче, ҫакнашкалах тата сӑмах вӑйӗпе, „вӗрӳсуру чӗлхисемпе“ усӑ курса, ҫутҫанталӑкӑн этемсене хирӗҫ пыракан стихийӑллӑ вӑйӗсене парӑнтарма тӑрӑшнинче...

Питрех те тарӑн та яр-уҫӑ, художество тӗлӗшӗнчен пур енчен те пулса ҫитнӗ геройсен образӗсене ӗҫхалӑхӗн сӑмах халлӗн ҫӳрекен творчестви—фольклор тунӑ.

* * *

Халӑхӑн сӑмах халлӗн ҫӳрекен творчествине пӗлмесӗр—ӗҫҫыннисен чӑн-чӑн историне пӗлме ҫук.

* * *

... Сӑмах искусствин пуҫламӑшӗ—фольклорта. Пухӑр хӑвӑр фольклорӑра, вӗренӗр ун тӑрӑх, якатса аванлатӑр ӑна. Вӑл сире те, пире, Союзри поэтсемпе прозаиксене те, питӗ нумай материал парӗ. Иртнине мӗн чухлӗ авантарах пӗлӗпӗр эпир, ҫавӑн чухлӗ ытларах тарӑнӑн та хаваслараххӑн ӑнланса илӗпӗр хамӑр халь тӑвакан ӗҫӗн пысӑк пархатарлӑхне.

(1934. Совет писателӗсен пӗтӗм Союзри съездӗнче каланӑ сӑмахран.)

* * *

Пословицӑсемпе поговоркӑсем ӗҫхалӑхӗн пӗтӗм пурнӑҫӗпе социально-исторически опытне калама ҫук лайӑх формӑласа тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та писателӗн вӑл материалпа питӗ тӗплӗн паллашмалла. Вӑл материал сӑмахсене, алари пӳрнесене пӗр чӑмӑра епле чӑмӑртатпӑр, ҫавӑн пек чӑмӑртама, тата ҫав сӑмахсенех, ыттисем питӗ ҫирӗп хӗссе вырнаҫтарнӑскерсене, сарӑмлантарса калама вӗрентеҫҫӗ...

Эпӗ пословицӑсем тӑрӑх, урӑхла каласан, афоризмсемпе каланӑ шухӑшсем тӑрӑх, питӗ нумай вӗреннӗ.

(„Эпӗ ҫырма епле вӗренни ҫинчен“.)

* * *

Ăнланма çăмăл сăмахра—чи пысăк ăслăлăх, пословицăсемпе юрăсем яланах кĕске пулаççĕ, анчах та ăспа туйăм вĕсенче уйрăм кĕнекесем çырмалăх та пур.

(М. Горький. „Материалы и исследования".)

* * *

Пирĕн халăх юмах-халлапсемпе сăвă-юрăсем тăвас енчен питех те талантлă халăх, анчах та эпир çакна шута начар илетпĕр. Эпир, халăхăн талантли мĕн пур, çавна уйăрса илме пĕлейместпĕр. Астăвăр-ха, епле аван частушкăсем хывса юрлать халах хăй пурнăçĕ çинчен.

(Совет писателĕсен союзĕн правленийĕнче каланă сăмахран.)

# ОКТЯБРЬЧЧЕНХИ
# Ф О Л Ь К Л О Р

# ĔÇ ЮРРИСЕМ

Ĕç юррисем тесе ĕç процесĕсемпе çыхăнса тăракан, çав ĕç процесĕсене çăмăллатас майпа юрлакан юрăсене калаççĕ. Вăл юрăсем сĕм-авалах, этем обществи классем çине пайланса тăман вăхăтсенчех пуçланса кайнă. Вăл вăхăтра этем коллективĕн ĕçĕ çавтери йывăр пулнă, çавăнпа ĕç вăхăтĕнче коллектив членĕсен хусканăвĕсене организацилесе ĕçĕн ритмикипе, мелодийĕпе çыхăнтармалла пулнă. Çав процесс „синкретизм" текен искусствăн никĕсне хума май панă.

Синкретизм—ĕç процесĕсемпе уйăрăлми çыхăнса тăракан искусство. Кунта музыка та, поэзи те, танец (хусканусем) те пĕрпĕринчен уйрăлмасăр, пĕр вăхăтрах пулса пыраççĕ, вĕсем, ĕçĕн ритмикипе çыхăнса, ĕç процесне çăмăллатма пулăшаççĕ. Каярахпа кăна синкретизм уйрăм элементсем çине пайланнă: мелоди, поэзи, танец. Иккĕмĕш элеменчĕ—поэзи темиçе ĕмĕрсем тăршшинче хăйне расна уйрăма куçса, ĕç юррисен формине йышăннă.

Чи малтанхи тапхăрти ĕç юррисенче сăмахсем мар, ритм, мелоди тĕп вырăнта тăнă. Вăл юрăсенче сăмахсем вырăнне уйрăм кăшкăрусем, йĕркерен темиçе хут каланакан сăмахсем çеç пулнă. Сăмаххисене çавăнтах импровизациленĕ. Каярахпа вăл сăмахсем уйрăм формăсене çирĕпленсе, традицине кĕме тытăннă.

Пурнăçăн çĕнĕ условийĕсене куçнă май ĕç юррисем те хăйсен ăшчиккине, характерне улăштарсах пынă. Сăмахран, первобытнăй обществăри ĕç юррисен текстĕнче класла уйрăмлăх пачах та сисĕнмен пулсан, малаллахи историлле эпохăсенче вĕсем класла характер йышăнма тытăнаççĕ. Тĕслĕхрен, вырăссен „Дубинушка" ятлă юрринче сăмах хуçасем çинчен пырать:

„Да вы, ребята, дери глотку!
Нам хозяин даст на водку".

Чăваш фольклорĕнче хут çине çырса илнĕ ĕç юррисем питĕ сахал, çитменнине çырса илнĕ юррисем те авалхи тапхăртисем мар. Анчах та ку чăваш халăхĕн хăйĕн чĕлхипе юрланă ĕç юррисем пулман тенине пĕлтермест. Вĕсем авалах пулнă, пурнăç улшăннă май улшăнса, урăхланса пынă.

Эпир кунта пичетлекен ĕç юррисене историн каярахри вăхăчĕсенче çуралса тухнă юрăсем тесе шутламалла. Вĕсенчен „Канат юррин" уйрăм припевĕсем кăна чи авалхи ĕç юррисем патне çывăхрах тăраççĕ.

## СĂВАЙ ÇАПАКАНСЕН ЮРРИ

Пĕччен:

Атя, инке, вăрмана
Хура çырла пуçтарма.
Хура çырла пыл пекех,
Пирĕн инке чун пекех.

Пурте:

Ой ишшо, тришна хок!
Пĕрре хоп!
Иккĕ хоп!
Виççĕ хоп!
Тваттă хоп!

Пĕччен:

Инке, терĕм, мĕн терĕм,
Аслăк хыçне тух, терĕм.
Аслăк хыçне тух, терĕм,
Минтер илсе пыр, терĕм.

Пурте:

Ой ишшо, тришна хок!..

Печчен:

Инке, терĕм, мĕн терĕм,
Ăш мунчана пыр, терĕм.
Ăш мунчана пыр, терĕм,
Милĕк илсе пыр, терĕм.

Пурте:

Ой ишшо, тришна хок!..

Альгешево, Шупашкар р., 1923 ç.
Н. Айзман çырса илнĕ.

## КĔПЕР ХЫВАКАНСЕН ЮРРИ

(ВАРИАНТ)

Кĕпер тума пире чĕнчĕç,
Сăвай сапма пире хушрĕç.
Сăвай, сăвай, тӳрех лар,
Çĕр тĕпнелле анах пар,
Пире тукмак нимех мар,
Пĕр йатар та пĕр çапар.
Ай—пĕрре!
Хай—иккĕ!
Ай—виççĕ!
Хай—тваттă!

Сăвайне эпир сăвăпăр,
Кĕперрине хывăпăр.
Кĕпер пултăр хурçăран,
Карлăк пултăр пăхăртан,
Каçакан пултăр пушмаклă,
Лаши пултăр çунатлă.
Ай—пĕрре!
Хай—иккĕ!
Ай—виççĕ!
Хай—тваттă!

Ф. С. Меценатов çырнă „Чăваш литературиˮ ятлă кĕнеке алçырăвĕнчен илнĕ.

## КАНАТ ЮРРИ

Пуçлаканĕ:

Атьăр тăрăр, канат тытăр,
Хăвăртрах, хăвăртрах!

Пурте:

Э-эй, хăвăртрах!
Хăвăртрах, хăвăртрах!
Ой-да-а, ой иш-ша!
Ой-иш-ша раз!
Ой-да-вай, ой-иш-ша!
Ой-иш-ша раз!

Ф. П. Павлов. Çĕнĕ юрăсем. № 15, стр. 21. Шупашкар. 1928 ç.

(ВАРИАНТ)

Айтăр тăрар, вĕрен тытар,
Хăй ишшо!
Пуп çаннийĕ мĕн сарлакăш?
Ха-ха-ха!
Аршăн çурă пулать пуль те,
Хи-хи-хи!

Харăс туртар, йăвантарар,
Хăй ишшо!
Диякăн çӳçĕ метр çур та
Ха-ха-ха!
Купец хырĕм пичке пек те,
Хи-хи-хи!

Ф. С. Меценатов çырнă „Чăваш литератури" ятлă кĕнеке алçырăвĕнчен илнĕ.

## НИМЕНЕ ЧĔНМЕЛЛИ ЮРĂ

Нимене! Нимене!
Тата та пулин нимене!
Ял-йыш, пускил, нимене!
Тата та пулин нимене!

Эс илтетне, Кавĕрле,
Çынсем каяç нимене.

Эй, кума Кулине,
Атя, кума, нимене,
Тата та пулин нимене.
Нимене! Нимене!

Якушкин, Хĕрлĕ Чутай р. 1933 ç. çырса илнĕ.

## ЧĂПТА ÇАПАКАНСЕН ЮРРИ

Ларсам, варли, хам çума!
Эс лармасан, ют ларать,
Ют çын тути—юн тути,—
Титпанча!

Варли тути пыл тути,—
Титпанча!

1902 çулта Шĕмшевĕшри земски шкулти учитель (ĕлĕк Етĕрне у., Элĕк вул. пулнă) Константин Степанов çырса илнĕ.

## ПИР ÇАПАКАНСЕН ЮРРИ

Тăмпăртăк-тăмпăртăк,
Тăмппи-тамппи тăмпăртăк!
Ăса варри пушансан,
Пире çапма шăлтăртăк!

Атьăр халĕ çапар-ха
Çĕнĕ пурнăç тăвиччен,
Сӳсрен пусма пуличчен,
Машинăсем кĕрличчен!

Ф. С. Меценатов çырнă „Чăваш литератури" ятлă кĕнеке алçырăвĕнчен илнĕ.

## ВĔРӲ-СУРУ ЧĔЛХИСЕМ

Вĕрӳ-суру чĕлхисем тесе асамлă вăй пама пултарассине ĕненсе шутласа кăларна сăмахсенчен тăракан произведенисене калаççĕ. Вăл произведенисем сĕм-авалах, общество тĕрлĕ классене пайланса тăман вăхăтсенчех пуçланса кайнă. Авалхи çынсем сăмахра асамлă вăй, çутçанталăкăн тĕрлĕ инкекĕсене сирсе яма пултаракан хăват пур тесе шутланă. Çавăнпа стихия чăрсăрлăхĕсене хирĕç тĕрлĕрен ăрамлă сăмах формулисене шутласа кăларнă. Малтан вăл формулăсемпе ĕç процесĕсене çăмăллатас майпа усă курса пынă, каярахпа, общество тĕрлĕрен классене пайланса кайсан, вĕрӳ-суру чĕлхисем класла характер йышăнаççĕ. Пурнакиле вĕрӳ-суру чĕлхисем пуринчен ытларах хресченсем хушшинче сарăлма тытăннă. Анчах та хресченсен сарлака массисем пур чĕлхесемпе те пĕртан усă курма пултарайман, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене (тухату, вăрах хаяр, пуç çавăру чĕлхисем, çĕлен чĕлхи т. ыт. те) уйрăм чĕлхеçĕсемпе тухатмăшсен аллинче пулнă. Çапла вара çав вĕрӳ-суру чĕлхисем ĕçхалăхĕн пуçĕсене минтретмелли, юмăçсемпе чĕлхеçĕсене пуйтармалли меслет пулса тăнă.

Пирĕн вăхăтра вĕрӳ - суру чĕлхисемпе тĕрлĕрен тухатусем пăрахăçа тухса пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен социаллă никĕсĕ тĕп пулчĕ. Çапах та вăл йăлана татăклăнах пĕтерме—çав вĕрӳ-суру чĕлхисемпе тĕрлĕ тухатусене ĕненессине хирĕç активлăн кĕрешни кирлĕ.

Чи авалхи тапхăрти вĕрӳ-суру чĕлхисем пирĕн вăхăта çитеймен. Кунта пичетленекен тĕслĕхсем XV—XVIII ĕмĕрсенче кăна пуçланса кайма пултарнă.

### ХАЯР ЧĔЛХИ

Ахăрса килекен аслатие хăçан та хăçан хаяр ӳкет,—çавăн чух тин хаяр ӳктĕр çак çын çине (ятне калаççĕ).

Тьфу, тьфу, тьфу.

Çиççе пыракан çиçĕме хăçан та хăçан хаяр ӳкет,—çавăн чух тин хаяр ӳктĕр çак çын çине (ятне калаççĕ).

Тьфу, тьфу, тьфу.

Çавранса килекен çавраçиле хăçан та хăçан хаяр ўкет,—çавăн чух тин хаяр ўктĕр çак сын çине (ятне калаççĕ).

Тьфу, тьфу, тьфу.

1916 ç. Атмал-касси ялĕнче çырса илнĕ.

## УСАЛ ЧĔЛХИ (алпаста)

Авалхи çынсем этеме усал ерет тесе ĕненнĕ. Усал ернĕ çын, вĕсен шухăшĕпе, хĕне каять, унăн яланах шăмшак сурать, ала-ура тапратмалла мар çыврса каять, каç выртсан, тĕлленсе аташса çыврать т. ыт. те. Ун пек çынна сыватас тесе çакăн пек каласа вĕрнĕ:

„Çил алпасти, мул алпасти, шыв алпасти, вут алпасти, вутлă хаяр, вутлă сехмет, вутлă усал çулăхнипе таврăнать. Йытă алпасти, чăхă алпасти, кайак алпасти, мунча алпасти, çил вупăрĕ, хĕвел вупăрĕ, шыв вупăрĕ, вилкайăк вупăрĕ, укçа вупăрĕ, вутлă вупăр, вутлă сехмет, вутлă хаяр, вутлă усал çулăхнипе таврăнать. Питĕрпе Мускав хушшинче вуникĕ çулхи хĕр пур, çавăнта кай, ан тавлаш, ан хирĕç“.

Самар кĕп., Бугуруслан у.
Кивĕ Ганькино ялĕ. 1902 ç.
Н. Богданов çырса илнĕ.

## ВĂРАХ ХАЯР ХĔН ЧĔЛХИ

Этеме вăраха пыракан хаяр хĕн лексен, çак сăмахсемпе вĕрсе сипленĕ:

„Э, пĕсмĕлле. Çўлте турă, çĕрте патша. Туррăн çут çанталакĕ, патшан укçи. Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çеçенхир пулĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çеçен хир варринче çитмĕл те çичĕ ылттăн юпа пулĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ ылттăн юпа тăрринче ылттăн çеçке пулĕ. Çав ылттăн çеçкене хăçан хаяр куç ўксе, вăрах хаяр, хĕн хаяр ўксе тăкса пĕтерĕ, çавăн чух тин çак çынна (ятне калаççĕ) çĕнтерĕ.

Кун таврăнать—таврăнтăр, çĕр таврăнать—таврăнтăр, уйăх таврăнать—таврăнтăр. Çулпа килтин çулпа кайтăр, шывпа килтин шывпа кайтăр, çилпе килтин çилпе кайтăр, пĕвĕнчен тиврин пĕвĕнчен кайтăр, сăнĕнчен тиврин сăнĕнчен кайтар, ăшĕнчен тиврин ăшĕнчен кайтăр. Турăран ырлăх антар, этемрен сиплĕх пултăр. Аминь. Тьфу. Тьфу. Тьфу. (Виçĕ хутчен сураççĕ.)

Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çырма, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çырмара çитмĕл те çичĕ тĕслĕ чул. Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ чула хăçан вăрах хаяр, хĕн хаяр тивсе сăрта хăпартĕ, çавăн чух тин çак çынна çĕнтерĕ.

Кун таврăнать—таврăнтăр, хĕвел таврăнать—таврăнтăр... т. м. та.

Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ вĕçен кайăк пулĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ вĕçен кайăка хăçан вăрах хаяр, хĕн хаяр тивсе пĕр çĕре пуçтарĕ, çавăн чух тин çак çынна çĕнтерĕ.

Кун таврăнать—таврăнтăр... т. м. та.

Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ йăран пулĕ. Çав çитмĕл те çичĕ тĕслĕ йăрана хăçан вăрах хаяр, хĕн хаяр тивсе пĕр çĕре пуçтарĕ, çавăн чух тин çак çынна усал çĕнтерĕ.

Кун таврăнать—таврăнтăр... т. м. та.

Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ вăрманта çичĕ хăлаç урлăш хыр пулĕ. Çав çичĕ хăлаç урлăш хыра хăçан вăрах хаяр, хĕн хаяр тивсе ӳпĕнтерĕ, çавăн чух тин çак çынна усал çĕнтерĕ.

Кун таврăнать—таврăнтăр... т. м. та.

Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çĕлен пулĕ, çав çитмĕл те çичĕ тĕслĕ çĕлен хăçан пĕр çĕре пуçтарăнĕ, çавăн чух тин çак çынна вăрах хаяр, хĕн хаяр аптăратĕ.

Кун таврăнать... т. м. та.

Çитмĕл те çичĕ тимĕрçĕ пулĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ тимĕрçĕн çитмĕл те çичĕ тĕслĕ сунтал пулĕ. Çав çитмĕл те çичĕ тĕслĕ сунтала хăçан усал тивсе çурса пăрахĕ, çавăн чух тин çак çынна вăрах хаяр, хĕн хаяр çĕнтерĕ.

Кун таврăнать... т. м. та.

Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ урам пулĕ, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ урамра çитмĕл те çичĕ тĕслĕ йытă пулĕ, пĕри кăвак пулĕ. Çав кăвак йытă хăçан та хăçан тирĕ ăшĕнчен тухса ӳксе йăваланса çӳрĕ, çавăн чух тин çак çынна вăрах хаяр, хĕн хаяр çĕнтерĕ.

Кун таврăнать... т. м. та.

Атăл урлă, тинĕс урлă имĕш-юмăç пĕр карчăк килет, амаран пĕр ывăл, çăварĕнче пĕр шăл, пуçĕнче пĕр тĕк. Амаран пĕр ывăл— вĕртĕр, суртăр, кăлартăр. Çитмĕл те çичĕ тĕслĕ усал пулĕ, çитмĕл те çичĕ тĕплĕ çĕре кайса пăчланччăр çак çын çумĕнчен.

Кун таврăнать... т. м. та.

Кивĕ Таймурзино ялĕнче И. П. Ярускин çырса илнĕ. 1901 çул.

## ПУÇ ÇАВĂРАН ЧĔЛХЕ

Кахал каларĕшпе, сасан пулă палăрăшпе, турă хушнипе çĕр çаврăнать,—çаврăн. Кун таврăнать,—таврăн. Хĕвел çаврăнать,— çаврăн. Уйăх çаврăнать,—çаврăн.

Çитмĕл çичĕ тинĕс уттинче ылттăн вăрман, ылттăн вăрманта ылттăн пӳрт, ылттăн пӳртре ылттăн сакай, ылттăн сакайĕнче ылттăн йăва, ылттăн йăва çинче ылттăн çăмарта. Çав ылттăн çăмартаран тухнă хур чĕпписем шăкăлтатса пурăннă пек, çак Яккупа Улькка та шăкăлтатса пурăнччăр.

Çитмĕл çичĕ тинĕс уттинче кĕмĕл вăрман, кĕмĕл вăрманта кĕмĕл пӳрт... т. м. та.

Çитмĕл те çичĕ тинĕс уттинче пăхăр вăрман, пăхăр вăрманта пăхăр пӳрт... т. м. та.

Кахал каларĕшпе, сасан пулă палăрăшпе, кун таврăнать,— таврăн. Хĕвел çаврăнать,—çаврăн. Уйăх çаврăнать,—çаврăн. Çĕр çаврăнать,—çаврăн. Çак çутă тĕнчере тухан ăшă хĕвел мĕнле савăнтарать, çавăн пекех çак Яккупа Улькка та пĕр-пĕринпе ăшăнса, савăнса, шăкăлтатса калаçса пурăнччăр.

Кивĕ Ганькино ялĕ (Куйбышев облаçĕ), 1902 ç. Н. Богданов çырса илнĕ.

# ЙĂЛАНА КĔНĔ УЯВ ЮРРИСЕМ

Йăлана кĕнĕ уяв юррисем тесе çулталăк хушшинче кашни çулах пĕр вăхăталла килсе пыракан уяв кунĕсенче юрламалли юрăсене калаççĕ. (Сăмахран, сурхури, хĕр сăри, çăварни юррисем т. ыт. те.) Малтан вĕсем верӳ-суру чĕлхисем пекех магически характерла пулнă, анчах та тĕрлĕрен вĕрӳ-суру чĕлхисенчен хăйсен юрăлла характерĕпе уйăралса тăнă. Çав уяв йăлисенчен нумайăшĕсем çĕрес культĕнчен—хĕвелпе çĕре хисеплессинчен тухса пынă. Пурнă-киле хĕвелпе çĕре хисеплес ятпа пулса пынă уявсем выранне чиркӳ праçникĕсем йышăнаççĕ, çапах та вăл праçниксемпе çыханнă йăласенче те авалхи çĕрĕçĕн кульчĕ сисĕмлĕнех палăрать.

Йăласемпе йăла юррисем хальхи вăхăтра пăрахăça тухса пыраççĕ.

## СУРХУРИ ЮРРИСЕМ

Ĕлĕк сурхури вăхăтĕнче пĕчĕк ачасем килтен киле кĕрсе çатма çинче ăшалана е шывра шӳтернĕ пăрçа пухса çӳренĕ. Çӳренĕ чух вĕсем тĕрлĕ юрăсем юрлăнă.

1.

Сурхури, Кĕркури!
Ваççи хĕрĕ Варвари!
Кĕтĕмĕр—тухрăмăр,
Тӳмми-çухи латти çук.

Хуравар, Элĕк районĕ
1923 çулта çырса илнĕ

Çамрăксем килрен хăмла-салат пуçтарса пĕрле сăра тунă, сăрине ĕçнĕ чух çапла юрланă:

2.

Сурхури пички сăрккавой,
Сурхури пички сăрккавой,
Сăрккавой пички тайăлмасăр
Эпĕр киле каяс çук.

Пурçăн тутăр—сурхури,
Пурçăн тутăр—сурхури,
Ир пулсассăн вĕлкĕшет,
Каç пулсассăн пуçтарнать.

Çуллен акнă тыррисем
Çулленхи пек пулĕç-ши?
Çуллен тунă сурхури
Çулленхи пек пулĕ-ши?

Арман пĕви шăннă чух
Пире кĕпер кирлĕ мар.
Сурхурине ирттерсен
Пире савни кирлĕ мар.

Сĕнтĕрвăрри р. Шуршăл ялĕ. 1933 ç.
Г. Лисков çырса илнĕ.

3.

Çитрĕ, çитрĕ сурхури!
Сурхури, сурхури терĕмĕр,
Сурхури çитрĕ, курăнать.
Атьăр тухăр, ачасем,
Урам тăрăх кайăпăр,
Килрен киле çӳрĕпĕр,
Килрен кукăль чӳклĕпĕр.

Мучи, пире кӳртетни?
Кӳртмесессĕн каятпăр.
Кӳртет, кӳртет, ан кайăр.

Кинемей, пире кукăль пар!
Паратни те памасни?
Кукăль парсан каймастпăр.
Парать, парать, ан кайăр.

Н. И. Ашмарин пухнă алçырусен архивĕ. Том I. KI, 120—165; П. Захаров çырса илнĕ.

## ХĔР CĂРИ ЮРРИСЕМ

Хĕр сăри хĕрĕсем пĕр çĕре пухăнса хăналанмалли пӳрте кĕнĕ чухне ушкăнĕпеле çапла юрланă:

Вуникĕ пус пĕр укçа,
Сумасăрах илмĕпĕр.
Ай-хай, чунçăм кил-йышĕ,
Ыйтмасăрах кĕмĕпĕр.

Пӳрте кĕрсе хăналанса ĕçме-çиме тытăнсан, çапла юрланă:

Çерçи „чим-чим“ теет-çке,
Хуçи „кил-кил“ теет-çке.
Хуçи „кил-кил“ тесессĕн,
Стел умĕнчи çын эпир.
Хуçи килех темесен,
Алăк панчи çын эпир.

Çӳл-ту çинче чул сарай,
Сарнă тӳшек тăршшĕнчен.
Эпир килтĕмĕр çак киле
Авалхи йăла тăршшĕнчен.
Авалхи йăлана прахмастпăр,
Çĕнĕрен йăла кăлармастпăр.

Алăк умĕ чăп-чăпар,
Çерçи йĕрĕ мар-ши çав?
Çакă ĕçе тăвакан
Хĕрсен ĕçĕ мар-ши çав?

Алăк умĕнче хурăнлăх,
Чĕрсе юлăр милĕклĕх.
Эпир кайса пыратпăр,
Курса юлăр куç тулли.

Алăк умĕнчи туй хурань
Янарать-çке уяра;
Вунтăхăр хĕр, пĕр купăс
Янăрать-çке пĕр саспа.

И, уштантăр, уштантăр,
Пирĕн атте куштан-тăр;

Вунă çула çитсессĕн,
Пире ĕçе хушнă-тăр;
Вуник çула çитсессĕн,
Вăййа-кулла хушнă-тăр.

Сĕлтĕр хирне сĕл акрăм;
Сĕлли пулман пулсассăн,
Сĕл вăрлăхсĕр юлаттăм.
Атте салат паман пулсан,
Хĕр сăрисĕр юлаттăм.
Атте салат пачĕ те,
Анне сăра турĕ те,
Хĕр сăрине килтĕмĕр.

Кăçал ыраш пит пулчĕ,
Алсапалан вуртăмăр,
Аттерен те ыйтрăмăр,
Аннерен те ыйтрăмăр:
„Хăрта ирĕк“ терĕçĕ.
Çиттĕр халĕ çăварни!
Пăтшар салат пухăпăр,
Паварпалан тăвăпăр,
Алтăрпалан ĕçĕпĕр.

Симĕс çĕлĕк—си çĕлĕк
Сирĕн сие юратать.
Хĕрлĕ çĕлĕк—тил çĕлĕк
Хĕр сăрине юратать.
Ай-хай, чунçăм хĕр сăри,
Вăййа-кулла юратать.

Улăм çӳппи—çĕр кӳрнек;
Улăм çӳппи вĕçсессĕн
Шӳтте кайĕ çĕр кӳрнек.
Тилĕ çĕлĕк—пуç кӳрнек;
Тилĕ çĕлĕк ӳксессĕн
Шӳтте кайĕ пуç кӳрнек.
Çак хĕр сăри кил кӳрнек;
Çак хĕр сăри кайсассăн
Шӳтте кайĕ кил кӳрнек.

Хĕр-хĕр сăри турăмăр,
Хĕрĕх чăхă пусрăмăр.
Хĕрĕх чăхă пыршине
Вершник умне лартрăмăр.
Вершник умĕ юлашкине
Чĕн тилхепе турăмăр.
Чĕн тилхепе шарт! турĕ,
Ула лаша харт! турĕ.

Сăр-сăр пуян тееççĕ,
Сра хураньпе мул ларать.
Алли пыран, айтăрах!
Чăн хĕр сăри çак пулĕ;
Кăмăл килен ташлăрах!
Ухуталли, тапăрах!

Шĕлтĕр-шĕлтĕр шĕлкеме
Куллен мерчен кĕтнĕ мĕн,
Кĕтнĕ шăрçи мерчен мĕн.
Ай-хай, чунçăм кил-йышĕ
Куллен пире кĕтнĕ мĕн.
Кĕтнĕ хăни эпир мĕн!
Пиçнĕ яшки пире мĕн,
Тунă хурçи сире мĕн!

Вутлă-шывлă хушшинчен
Вут пек сăра турăмăр.
Кӳршĕ-аршă хушшинчен
Кӳл пек сăра турăмăр.

Киле тухса кайма вăхăт çитсен, хĕр сăри пуçлăхĕ пуçарса янипеле, пĕтĕм ушкăнĕпе çапла юрланă:

Пирĕн ялта кам пуян?
Васли пуян тееççĕ.
Васли патне сра ĕçме!
Пĕр йыхравран ан юлăр,
Ик йыхрава ан кĕтĕр.

Раштав уйăх тунă чух
Пăрланать-тăр вак куçĕ.
Эпир сиксе тапнă чух
Силленет-тăр маччисем.

Çуна çĕнĕ пулинччĕ,
Лаши кăвак пулинччĕ;
Вершник маттур пулинччĕ,
Вăр çавăрса лартинччĕ.

## ХĔР СĂРИ ТАКМАКĔСЕМ

Ку такмаксене хĕр сăри хĕрĕсем килхуçине (е хваттерте пулсан, кам пуççаптарать—çавна) пуççапнă чух каланă. Хĕрсем вăл вăхăтра килхуçисене сăра тултарса курка тыттарнă, вара лешсем, сăрине тутанкаласа, хĕрсен такмакĕсене итлесе ларнă:

Тăрăс-тăрăс тапар-и,
Уратине хуçар-и?
Уратине хуççассăн
Ăвăспала саплăпăр,
Хĕрне илсе тухăпăр,
Пике туса кĕрĕпĕр.

Чиперук, Чиперук!
Халь те чипер чиперне,
Тата чипер пуласчĕ!

Сарă кĕрĕк ан тăхăн,
Урам тăрăх ан çӳре.
Ялта ятлă çын пулсан,
Пилĕк пуспа ан витле,
Вунă пусна ан шелле!

Пуян укçи пăхăр-тăр,
Пире парсан кĕмĕл-тăр.
Çав укçана памасан,
Шаши кастар енчĕкне;
Çав укçана парсассăн,
Шăши юсĕ сыхлатăр!

Лутра юман хăйăрне
Хăйăрлама килтĕмĕр,
Çак хуçанăн пуянне
Мулне сума килтĕмĕр.

## ТАШӐ ТАКМАКĔСЕМ

Ĕçкелесе-çикеленĕ хыççăн, хĕр сăри хĕрĕсем икшерĕн-икшерĕн мăшăрланса, ташлама тытăннă. Вăл вăхăтра пĕр ушкăнĕ урисемпе тапăртатса такмакласа ларнă, ыттисем алă çупса тăнă.

Симĕс сапак сиктертĕм,
Сентĕрене тивертрĕм.
Тухъяллине сиктертĕм,
Креке умне ўкертĕм.
Хушпуллине сиктертĕм,
Мĕлке çине ўкертĕм.
Мĕлке çинче—мĕреке,
Пирĕн умра—кĕреке.

Çут хăйăра çутăрах,
Пирĕн кас хĕрне курăрах:
Пирĕн кас хĕрĕ пике пек,
Икĕ пичĕ чие пек,
Татса çиес çырла пек.
Элшелийĕн ачисем
Сахăр лавкки лараççĕ,
Çампа сарă пулаççĕ.
Кашасенĕн ачисем
Тикĕт лавкки лараççĕ,
Çампа хура пулаççĕ.

Вĕтĕ-вĕтĕ пусине
Килле ярса тўрĕмĕр.
Çак ялсенĕн ачисене
Алăк хыçне хĕсрĕмĕр.

Ин-тăн алçыру материалĕсен фончĕ, (Г. Тимофеев, „Тăхăр ял“, т-15. КІ, стр. 356—390. 1901 çул).

## ÇĂВАРНИ ЮРРИСЕМ

Катаччи та çăварни!
Çăвар тулли икерчи,
Кăсъе тулли премĕкĕ,
Ма çăварни теес мар?

Çăварни çуни çунатлă:
Хăрах çунатти çул тытать,
Хăрах çунатти хĕр тытать.
Мĕншĕн çуна теес мар,
Ларса çăварни чупас мар?

Çăварни килчĕ мăн çулпа,
Йртрĕ-карĕ сукмакпа.
Сисмесĕрех юлтăмăр.

Çак çăварни ма килет?
Сар хĕрсене савăнма,
Хурисене хурланма.

Пирĕн çуни хуçмалла,
Хуççан иккĕн лармалла,
Чăссан тăваттăн лармалла,
Икĕ мăшăр чупмалла.

Ăмăрткайăк лашам пур,
Унăн йăви çунам пур,
Сарă вăрăм савним пур,
Çăварни чупма вăйăм пур.

Çул хĕрринче тăракан—
Çуна шăлне сăвакан,
Çăварни иртмест тейĕн-им?

Турта тулли тур лаша,
Турти тăрăх тар юхать,
Тупань тăрăх шыв юхать,
Çăварни иртет, кун юлать.

Çăварни килет виç кунлăх.
Ма килмест-ши çич кунлăх?
Тур лашана тарлатма,
Сарă хĕре савăнма,
Хура хĕре хурланма,
Çырă хĕре çилленме.

Шăнкăр-шăнкăр йĕс шăнкрав,
Шăнкрав сасси çул çинче.
Çак çăварни çитсессĕн,
Сар хĕр сасси ял çинче.

## УЛАХ ЮРРИСЕМ

Пулсан пултăр кăвак ут,
Пуçĕнче пултăр чĕн йĕвен,
Уринче пултăр йĕс такан
Атăл пăрне таптама.
Пулсан пултăр савнă тус,
Пуçĕнче пултăр каракуль,
Уринче пултăр çут калуш
Çын сăмахне таптама.

Чўречене уçса яр,
Санавескă карса яр.
Чун савнине курас-тăк,
Хапха умне тухса лар.

Атте пахчи çĕмĕртлĕх,
Унтах улма йывăççи,
Пĕр улмине татса кайнă,
Кам татнине пĕлместĕп.
Эпĕр иккĕн туслăччĕ,
Курайман тăшман сивĕтрĕ,
Çав çын камне пĕлместĕп.

* * *

Вĕтĕ-вĕтĕ кăтра путек тирĕ,
Хĕвеллĕ кун йăм-йăм курă-
нать.
Ай-хăй, ах та милăй, савнă
тусăм,
Икĕ куçĕ пăхса йăл кулать.

Çўлĕ тусем çинче тĕм-тĕм
кăлкан,
Пĕрчи витĕр уки курăнать.
Сана савни час-час курмасан,
Кунĕ çулталăкăн туйăнать.

Анатри пахчара виç панулми,
Сĕм вăрманта ўснĕ чие пек.
Ай-хай, ах та милăй, хамăр
савни,
Сатра ўснĕ мăкăнь чечек пек.

* * *

Çўл-ту çинче виç хурăн,
Пĕрне касса ярсассăн,
Çўл-ту юлать çаралса,
Иккĕш юлаç хурланса.
Манăн виçĕ хĕр тантăш,
Пĕринпеле каласçан,
Иккĕш юлаç хурланса,
Иккĕш юлаç хурланса.

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Хăма хурса каçса кай.
Пирĕн тантăша тĕл пулсан,
Улах тĕлне кăтартса яр.

Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать,
Хушша каçă хурар-и?
Иккĕн туслă пурăннине
Шур хут çине çырар-и?

Тухрăм утрăм урама,
Симĕс калча хушшипе
Çут калуша çутатма,
Хам савнине ăсатма.

Чĕнтĕр кĕпер айĕнче
Чĕп кăвакал сасси пур.
Эп калаçас ачине
Çын сивĕтес сасси пур.

Ку юрăсене И. Н. Юркин Йĕкер ялĕнче, (Клевлĕ р-нĕ Куйбышев обл). А. А. Седашевран çырса илнĕ.

* * *

Кăвак пĕлĕтсем çинче çутă çăлтăр,
Çĕр каçиччен ăçта çитет-ши?
Ай-хай, савнă тусăм, хура куçăм,
Кĕçĕрхи каç ăçта çўрет-ши?

Хура вăрман витĕр тухнă чухне,
Хура лаша тула пуçларĕ.
Ай-хай, савнă тусăм, хура куçăм,
Курсассăнах кула пуçларĕ.

Икĕ çырма юппи, ай, пĕр пулать,
Унăн хушшинче те шыв пулать.
Икĕ маттур йĕкĕт, ай, пĕр пулать,
Вăсенĕн хушшинче хĕр пулать.

Нумай çырма тăрăх эп çӳрерĕм,
Сапакалă çырла тупмарăм.
Нумай савнă туспа эп çӳрерĕм,
Савнă тусăм ятне ямарăм.

Касам-касам тенĕ улма йывăç
Тăрса юлчĕ шывăн кукăрне.
Каям-каям тенĕ сарă ача
Тăрса юлчĕ тăшман аллине.

Леш енче те ларать улма йывăç,
Ку енне каçайса ларинччĕ.
Алăк панче тăрать пĕр сар ача,
Хамăр çума иртсе ларинччĕ.

Сăмахларăм савнă тусăмпа
Çăварĕнче сахăр пур тесе.
Çăварĕнче сахăр, ай, пулмарĕ,
Унăн япшар чĕлхи пулайрĕ.

Тăваткăл та пахча улма пахчи,
Исĕм çырли ăçта пиçет-ши?
Çивçе кăна пилĕк, хура куçсем,
Кам телейне пахса ӳсет-ши?

Аталăн леш енче çăлтăр çунать,
Çутти килсе ӳкет ку енне.
Эпир савнă туспа пурăннисем
Халĕ килсе ӳкеç куç умне.

Сăрт аякки ешĕл, ай, курăнать,
Те юр кайса курăк шăтнăран.
Хамăр савни çырлан, ай, курăнать,
Те чун савса кăмăл туртнăран.

Шурă та юр çăвать, пушмак путать.
Пурçăн пиçиххисем кам çыхать?
Аппа, кала сăмах чăн тӳррине,
Кĕçĕрхи каç санпа кам выртать?

Çак юрăсене И. Н. Юркин 1888—1911 çулсенче Пӳркелĕнче (Тутар р-кĕ) хăй ашшĕнчен Н. М. Юркинран, тата Пӳркелне ларма пынă Тимĕрçен хĕрĕсенчен (халĕ Куйбышев обл.)— М. А. Ванюшина, А. С. Охотникова тата В. С. Чундеровăран çырса илнĕ.

## СĔРЕН ЮРРИСЕМ

„Сĕрен“ тесе ĕлĕкхи чăвашсем хушшинче вилнĕ çынсен чунĕсене килсенчен хăваласа кăларас тĕлĕшпе пулса пынă йăлана каланă. Ĕлĕкхи чăвашсем ăна ак çапла тунă: мункун çитес умĕн, кĕçнерникун каçхине, çамрăксем пĕр-пĕр киле пухăннă та сĕрен ирттерме хăйсем хушшинчен начальниксем суйланă (старшина, староста, казначей, возовой тата музыкант). Çавăнтах тата килрен киле çӳренĕ чух шатăртаттарма йывăçран шатăрмак тунă. Унтан вара вĕсем пилеш е акаци хуллисем илсе, килрен киле кĕрсе çӳреме тытăннă. Кашни килрех вĕсем çăкăр, çăмарта, укçа пуçтарнă. Кĕмелли çĕре пырса кĕрсенех, ушкăнĕпе: „Сĕрен!“ тесе кăшкăрнă, чир-чĕр килтен тухса кайтăр тесе, хуллисемпе çапнă, шăтăрмакне шăтăртаттарнă, купăс каласа ташланă. Çӳрессе вĕсем кăнтăрла мар, çĕрле çӳренĕ. Хуть те кам патне пырса кĕрсен те, вĕсем хăйсемех сăра ăснă, ĕçтерессе те хăйсемех ĕçтернĕ. Килхуçийĕсем пуçлăхсемпе старшинасем умĕнче тĕк çех тăнă. Сăра ĕçкелесен тата ташлакаласан-мĕн тусан, хуçисем сĕрен ачисене парнесем панă: казначее—укçа, возовоя—çăкăр, çăмарта пухакана—çăмарта т. ыт. те.

Кун хыççăн сĕрен ачисем килхуçисене пуççапса тепĕр киле тухса кайнă. Пурин патне те çӳресе пĕтерсен, вĕсем ялăн анат вĕçне тухнă та çăмартисене пĕçерсе чӳклесе çинĕ, укçисене пĕр пек валеçсе илнĕ. Хăйсем вут урлă сике-сике каçса, килĕсене саланнă.

**Проф. Н. И. Ашмарин.**
Чăваш сăмахĕсен кĕнеки, том XI, стр. 316. Шупашкар, 1936.

## ПИРЕ САРА ПАМАСАН

Пире сăра памасан,
Пички пăкки хуçăлтăр;
Пире чăкăт памасан,
Ĕне сĕтне типĕттĕр;
Пире çăмарта памасан,
Чăххин кучĕ питĕрнтĕр.

## СĔРЕН ТАКМАКĔ

Тимухха, пичче-ев!
Тянь-тянь тяппи-и!
Кĕл вучахĕнче икĕ çăмарти-и пулмĕ-ши-и?
Ытах икĕ çăмарти пулмасан,
Ушу юпи тăрринчи икĕ пус укçи-и-и (тăсса) пулмĕ-ши-и?
Эпир каламастпăр, ачасем калаççĕ.

(Çак сăмахсене сĕрен пуçлăхĕсем иккĕн, алăка уçса, пӳрте кĕмесĕр калаççĕ. Ыттисем вăл вăхăтра: „Сĕрен!“ „Сĕрен!“ тесе кăшкăрса тăраççĕ.)

Ухинкел ялĕнче (Куйбышев облаçĕ) 1924ç. М. Никаноровран А. И. Васильев çырса илнĕ.

## УПИ КАҪМАН ҪЫРМИНЧЕН...

Упи каҫман ҫырминчен эпир каҫса килтӗмӗр,
Упи тухман вӑрманчен эпир тухса килтӗмӗр.
Эй, аппа, тус аппа, пире кала-ха?

Ҫӳл хампарта вир пӑтти ҫиейресчӗ ҫупала...
— Йытӑ кулли пултӑрах, йытӑ кулли пултӑрах.
Эй, аппа, тус аппа, пире кала-ха?

Хӗвел анать, каҫ пулать, выляйрасчӗ хӗрпеле...
— Кӗтни харам пултӑрах, кӗтни харам пултӑрах.
Эй, аппа, тус аппа, пире кала-ха?

Ашшӗ хаяр тееҫҫӗ, ашшӗ хаяр тееҫҫӗ...
—Алтӑр тӗпӗ сыв пултӑр, алтӑр тӗпӗ сыв пултӑр.
Эй, аппа, шур аппа, пире кала-ха?

Амӗш хаяр тееҫҫӗ, амӗш хаяр тееҫҫӗ...
— Черкке тӗпӗ сыв пултӑр, черкке тӗпӗ сыв пултӑр.
Эй, аппа, тус аппа, пире кала-ха?

Инкӗш хаяр тееҫҫӗ, инкӗш хаяр тееҫҫӗ...
— Енчӗк тӗпӗ сыв пултӑр, енчӗк тӗпӗ сыв пултӑр.
Эй, аппа, тус аппа, пире кала-ха?

Ф. П. Павлов. „Ҫӗнӗ сӑрнай“.
Шупашкар, 1931.

## ЧӲК ЮРРИ

Кулянса пыракан Куймас шывӗ
Сыпса пӑхсан шерпет калать;
Валем вырӑнне купи ларинччӗ,
Купи вырӑнне капан ларинч(чӗ).

Илӗрсе пыракан Илепер шывӗ
Сыпса пӑхсан шерпет калать;
Валем вырӑнне купи ларинччӗ,
Купи вырӑнне капан ларинч(чӗ).

Ҫаврӑнса пыракан Ҫавал шывӗ
Сыпса пӑхсан шерпет калать;
Валем вырӑнне купи ларинччӗ,
Купи вырӑнне капан ларинч(чӗ).

Аслӑ ката, юман ката,—
Ывӑҫ вырӑнне кӗлти пултӑр,
Кӗлте вырӑнне, ай, тӗм пултӑр,
Тӗм вырӑнне ҫӗмел пултӑр.

Унтан кёҫён вăта пус пур,
Хырăм пĕр тутти ҫав пулмĕ-ши?
Унтан кĕҫĕн, ай, ҫут уй пур,
Ирĕн-каҫăн тухса кĕретпĕр.

Ялшăм, ялшăм, ой, Ишекшĕм,
Ял-ял урлă, ой, курăнать.
Ой-йой, йой-йо, ой-йой, йой-йо,
Ой-йой, йой-йо, ой-йой, йой-йо.

Ака-суха, ай, шăрт-тĕрен,
Шăрчĕ касать, тĕрен ҫаврать.
Сăпаҫипă ать-апая,
Пире ҫут ҫанталăка, ай, хăварнăшăн.

1936 ç. Г. Александровран ҫырса илнĕ.
(Юхайкас Ишек, Ишлей р. ЧАССР).

## ПУМИЛККЕ ЮРРИСЕМ

Авалхи чăвашсем ҫемьере кам та пулин вилсен, пĕр-пĕр уйрăм кун ăна ятарласа асăнса, апат-ҫимĕҫ, эрех-сăра ĕҫсе-ҫинĕ (пумилкке тунă). Пумилккене пуринчен ытларах кĕркунне, тырпул пуҫтарса пĕтерне хыҫҫăн туса ирттернĕ. Вилнĕ ҫыннине асăнса ҫимешкĕн хăни-хурăнташĕсене пуҫтарнă. Хăнасем малтан пӳртре ĕҫсе-ҫисе юрланă, унтан вилнĕ ҫынна асăнма урама тухнă. Урамра пӳрт умне каска тăратса лартнă, каскин пуҫне ҫурта лартнă, тата ҫав каска кутне кăвайт хунă. Пурте пӳртрен тухсан, ҫуртине ҫутса янă, сĕрме купăсҫă кĕвĕ каласа тăнă, кĕвĕ майĕпе пĕр ҫын е икĕ ҫын ҫунакан кăвайт ҫинче ташлама пуҫланă. Вĕсем ҫав кăвайт мĕн сӳнсе ларичченех ташланă. Вăл вăхăтра ыттисем ҫак юрăсене юрланă:

1.

Шурăмпуҫ килет шуралса,
Шурă пир карсан та чарас ҫук;
Хĕвелтухăҫ килет хĕрелсе,
Хĕрлĕ хăмач карсан та чарас ҫук.
Телейрен иртекен ҫутă тĕнче
Пиртен те юлĕ-ҫке ҫак тĕнче...
Асаттеҫĕм, асатте (ятне калană),
Шурăмпуҫĕ килет шуралса,
Санăн сăну ҫук-ĕҫке.
Чĕкеҫ килĕ чĕвĕлтетĕ,
Санăн чĕлхӳ ҫук-ĕҫке.
Ир тăрсан та, каҫ выртсан та,
Сан вырăну пушă-ҫке.
Эпир сана асăнатпăр,
Эсĕ пире ан асăн.

Ин-тăн алҫыру материалĕсен фончĕ.
С. Байглычево, Тетюш у., Хусан кĕп.
1901 ç. П. Емельянов ҫырса илнĕ.

2.

Ҫĕрти ҫырла пиҫнĕ чух,
Ҫĕртен-шывран уйрăлтăм.
Хурăн ҫырли пиҫнĕ чух,
Хурăнташсенчен уйрăлтăм.

Манӑн вӑхӑт ҫитрӗ,
Кӗрекене ӑсатрӗҫ.
Ман пилӗкри пиҫиххие
Йӑрхаха ҫакса хӑварап.

Ман кӗрекене илсе тухнӑ,
Йӑвантарӑр ярӑр!
Йытта парӑр,
Кушака ан парӑр!

Тухатна, тухатна?
Тухас пулсан, халех тух!
Пыратна, пыратна?
Пырас пулсан, халех пыр!

1929 ҫ. Ульяновскри педтехникумра
вӗренекен Г. Спиридонов ҫырса илнӗ.
(А. И. Васильев).

3.

Кайӑк-кӗшӗк кӗр каять те ҫур килет,
Эсӗ пӗр кайсан килес ҫук.
Тӳпери ҫӑлтӑр хӑҫан пирӗн ума
Манит пулса анни пур?
Пирӗн тӑван пӗр ҫӗр айне кӗрсен,
Хӑҫан арча усламҫи пулса тухни пур?
Калпак ҫуса ҫакрӑм карлӑк ҫине,
Хӗвел ҫӳле кайрӗ, типес ҫук.
Пирӗн тӑван кайрӗ уйӑрӑлса,
Ҫыру ҫырсан ҫыру ҫитес ҫук.
Урама тӑрӑх шур пӳрт лартрӑм,
Чӳречисем ҫумне сат чӗртрӗм.
Пур кайӑксем пурте пухӑнчӗҫ,
Селемин кайӑкин сасси ҫук.
Пур тӑвансем пурте пухӑнчӗҫ,
Манӑн савнийӗн сасси ҫук.
Эремпур ҫулӗ ӑҫтан иртет?
Хӑйӑрлӑ ҫырманӑн пуҫӗнчен.
Пирӗн ҫамрӑк ӗмӗр ӑҫтан иртет?
Хурлӑхпала шухӑш хушшинчен.
Ухмах иккен ула, ай, куракӗ,
Пӗр туратсӑр йӑва ҫавӑрать.
Ухмах иккен пирӗн атте-анне,
Ӑрӑскалсӑр ача ҫуратать.
Пӗчӗккӗ ҫырма сиксе юхать,
Шур чаршав карса чарнас ҫук.
Пирӗн тӑван кайрӗ уйӑрӑлса,
Ылтӑн-кӗмӗл парса чарнас ҫук.

Эрспел. 1929 ҫ. Т. Гаврилова ҫырса
илнӗ. (А. И. Васильев).

## ÇУРХИ УЯВ ЮРРИСЕМ

### АЛЛЮЛИ, ПАЛЛЮЛЛИ

Çӳл ту çине вир акрăм,
Аллюлли, паллюлли!
Çерçи йытти вĕренчĕ,
Аллюлли, паллюлли!

Арăма ятăм хурала,
Аллюлли, паллюлли!
Хура салтак вĕренчĕ,
Аллюлли, паллюлли!

Хам та карăм хурала,
Аллюлли, паллюлли!
Тутар арĕм вĕренчĕ,
Аллюлли, паллюлли!

Хĕре ятăм хурала,
Аллюлли, паллюлли!
Тутар ачи вĕренчĕ,
Аллюлли, паллюлли!

Ывăла ятăм хурала,
Аллюлли, паллюлли!
Тутар хĕрĕ вĕренчĕ!
Аллюлли, паллюлли!

Çĕнĕ Шерӳшкел (Тутар респ.)
1924 ç.
А. И. Васильев çырса илнĕ.

### ÇЫНСЕМ ЕШĔЛ ХУРĂН, АЙ, КАСАÇÇĔ

Çынсем ешĕл хурăн, ай, касаççĕ,
Эпир касассисем те ӳсеççĕ.
Çынсем сарă хĕрпе, ай, выляççĕ,
Эпир выляссисем те ӳсеççĕ.

Кăвак кăвакарчăн вĕçнĕ чухне
Кунĕн-çĕрĕн тĕтре те пулайрĕ.
Самăй эпир ӳссе, ай, çитнĕ чух
Саманисем йăвăр та пулайрĕç.

Эпир урампала иртнĕ чухне,
Эсир йĕс пăралук аваттар.
Сирĕн йĕс пăралук, ай, авăнтăр,
Пирĕн çамрăк кăмăл çаврăнтăр.

Çӳлелле те пăхрăм эп, тĕлĕнтĕм
Кайăк хурсем картипе кайнинчен.
Шухăшласа илтĕм эп, тĕлĕнтĕм
Çамрăк ĕмĕр иртсе те кайнинчен.

Вуниккĕпе явнă чĕн чăпăркка
Мĕшĕн ситрелмелле явнă-ши?
Ăрасна çуралса, пĕрле ӳссе,
Мĕшĕн уйрăлмалла та çырнă-ши?

1929 ç. ЧАССР. А. И. Васильев çырса илнĕ.

## КĂВАК СĂРЛĂ КĂРИЛЬЦА

Кăвак сăрлă кăрильца
Пӳрт умĕнче килĕшет.
Шур çӳçеллĕ шур тутăр
Хĕр пуçĕнче килĕшет.

Çутă пушмак, йĕс кĕле,
Пир(ĕ)н урана юрас çук.
Ялта матур пит нумай,—
Вĕсем пире пулас çук.

Эрспел. Тутар респ..
М. Афанасьевăран 1928 ç.
А. И. Васильев çырса илнĕ.

## ПАТИЯЛИН ПАТРАШКИ

Патиялин патрашки,
Улма йывăç шатрашки.
Чăн тăрринче улт улма,
Ултташĕ те кĕмĕллĕ.
Татса парсам, йыснаçăм,
Ваттисене вăрçтарма,
Мĕкĕтене илĕртме!
Йĕкĕт кайнă Хусана,
Пире выляма йĕкĕт çук.
Тăхлачăçăм Марине,
Савнă хĕрне Алтюкна
Илме килнĕ çичĕ ют.
Вĕсем илмесĕр каяс çук.
И памăр-ха, памăр-ха,
Патне çитсен, чармăр-ха,
Çурма çула çитиччен
Хăвăрах ăсатса ярăр-ха.
Хĕрне илсе кайăпăр,
Çуртне ишсе хăварăпăр;
Ашшĕ тытĕ çурт хуйхи,
Амĕш тытĕ хĕр хуйхи.

Ку юрра юрланă чухне вылякансем икĕ ушкăна уйăрлаççĕ. Пĕр ушкăнĕ ларать, тепĕр ушкăнĕ юрласа карталанса çаврăнать: юрри пĕте пуçласан, ларакан ушкăнĕ патне пырса пĕр хĕрин ятне калаççĕ. Вара ларакансем вăл хĕре кăларса параççĕ те, хăйсем ура çине тăрса юрлама тытăнаççĕ, лешсем вĕсен вырăнне лараççĕ.

Çĕнĕ Эштепен, (Куйбышев облаçĕ). Чернов К. юрланинчен 1928 ç. А. И. Васильев çырса илнĕ.

## И ТАРĂН ВАР

И тарăн вар, тарăн вар,
Тарăн варăн пуçĕнче те
Ачи выртнă, çывăрнă.
И çил тухтăр, тăвăл тухтăр,
Вăл ачана вăраттăр,
Шур курнитса ларттартăр,
Вуник кассуй кастартăр.
Кассуйсене сарă хĕр

Шалт уçать те шалт хупать.
Йал пăхать те йал кулать,
Йĕкĕт чунне йĕкĕлтет.

Эпĕр пусас пусмине
Пустав пусса хуртартăр,
Эпĕр тытас тыткине
Ылттăнлатса хуртартăр,
Эпĕр ларас саккине
Кашма сарса хуртартăр.

Çарăмсем-пуç. (Куйбышев облаçĕ). Н. Шайбулатовăран 1927 ç. А. И. Васильев çырса илнĕ.

## ШУР-ШУР ТĂРĂХ

Шур-шур тăрăх çӳрерĕм,
Шур çип чăлхи эп тупрăм.
Шур çип чăлхи ăшĕнче—
Кĕмĕл çĕрĕ, мерчен куç.
Мерчен куçлă çĕррĕмпе
Сарă хĕре илĕртрĕм,
Шур пӳрт умне çитиччен
Виççĕ тытса чуп-турăм.

Çыр-çыр тăрăх çӳрерĕм,
Симĕс чăлха эп тупрăм.
Симĕс чăлха ăшĕнче—
Пăхăр çĕрĕ, симĕс куç.
Симĕс куçлă çĕррĕмпе
Хура хĕре илĕртрĕм;
Хура пӳрт умне çитиччен
Виççĕ çупса ярайрăм.

Емелкке Таяпи. (Куйбышев облаçĕ). 1924 ç. А. И. Васильев пухнă (çынсем юрланине аса илсе çырнă).

## КАЛЛĔ-МАЛЛĔ КАÇМИНЕ

Каллĕ-маллĕ, ай, каçмине,
И-и, ай, каçмине.
Каçкаласси, ай, хĕн иккен.
И-и, ай, хĕн иккен.
Каçхи вăййа, ай, тухмасан,
И-и, ай, тухмасан,
Çĕр каçасси, ай, хĕн иккен,
И-и, ай, хĕн иккен.

Пиçи-пиçмен çăмартине,
И и, ай, çăмартине
Тавай пĕçерсе çиер-и?
Вунçич çулхи, ай, ачине,
И-и, ай, ачине
Тавай тухса каяр-и?
И-и, ай, каяр-и?

Çĕнĕ Шерӳшкел. (Тутар респ.). 1925 ç. Львов Петртан А. И. Васильев çырса илнĕ.

## ВИРЪЯЛ ХИРНЕ ВИР АКРĂМ

Виръял хирне вир акрăм;
Тутти пулĕ, выççи пулĕ,—
Пире выççи кирлĕ мар.

Виръял ачи, ай, яш ачи,
Сарри пулĕ, хури пулĕ,—
Пире хури кирлĕ мар.

Упи хирне урпа акрăм;
Тутти пулĕ, выççи пулĕ,—
Пире выççи кирлĕ мар.

Упи ачи, ай, яш ачи,
Сарри пулĕ, хури пулĕ,—
Пире хури кирлĕ мар.

Мака-Таяпи. (Куйбышев облаçĕ). 1927 ç. А. Ермолаевăран А. И. Васильев çырса илнĕ.

## АППАЛЮК

И аппалюк, аппалюк!
Аппалюк çырми пуçĕнче
Чĕкеç йăви хуппи пур.
Тĕпне кĕмĕл ямарăм,
Çине ука витмерĕм.

И-ах хула, ах хула,
Ах хулара йĕс хула,
Йĕс хулара йĕс арча,
Йĕс арчара шăналăк,
Шăналăкра сакăр хĕр,
Саккăрĕш те сарă хĕр.
Ан йĕр, ан йĕр, сарă хĕр!
Сакăр лаша акара,
Тимĕр-кăвак сӳрере,
Улма чăпар витере.
Килен-каян шаклапуç
Чунавалник патĕнче.

Çĕнĕ Чаллă Çĕрпӳелĕ, Патăръел районĕ. Кашкăр Микули çырса илнĕ. 1936 çул.

## ЛЕШ АЙККИНЧЕ МĂН ÇĔР ПУР

Леш айккинче мăн çĕр пур,
Мăн çĕр пур, и-хи-хик!
Йĕтĕн акма вырăн пур.

Йĕтĕн çеçки çурăлать,
Çурăлать, и-хи-хик!
Кĕç-вĕç вĕçсе анас пек.

Вĕлтрен ухмах, ай, ухмах,
Ай, ухмах, и-хи-хик!
Сарай хыçне шăтакан.

Улян ухмах, ай, ухмах,
Ай, ухмах, и-хи-хик!
Пӳртекӳнче выртакан.

Шăнкăрч ухмах, ай, ухмах,
Ай, ухмах, и-хи-хик!
Алăк уçса кĕрекен.

Улян шурă, ма шурă,
Ма шурă, и-хи-хик!
Шухăшласа шуралнă.

Шăнкăрч хĕрлĕ, ма хĕрлĕ,
Ма хĕрлĕ, и-хи-хик?
Хĕпĕртесе хĕрелнĕ.

Элĕк р. Куракăш ялĕ. 1928 ç.
Лукин Матвей çырса илнĕ.

# АВАЛХИ ТУЙ ЙЁРКИСЕМПЕ ТУЙ ЮРРИСЕМ

Арҫынпа хӗрарӑм мӑшӑрланасси мӗн авалтанпах питӗ пысӑк вырӑнта тӑнӑ. Мӑшӑрсем йӗркеллӗ, ӗҫлеме пултаракан вӑйпитти ҫынсем пулсан, пурнӑҫ та йӗркеллӗ, ӑнӑҫлӑ пулать, ҫывӑнпа та туй тунӑ чух ӑна тӗрлӗрен асамлӑ йӗркесемпе тата юрӑсемпе ирттерсе ярса, мӑшӑрланакан ҫамрӑксен пурнӑҫне телейлӗрех тума пулӗ, тесе шутланӑ. Ҫакӑн пек ӗмӗтленни туй йӗркисенче те, туй юррисенче те уҫҫӑнах курӑнса тӑрать.

Чӑваш туй йӗркисенче уйрӑмӑнах „хӗр йӗни" (хӗр хӳхлени) пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Кунта эпир ӗлӗк-авал хӗрсене укҫалла сутнине, вӗсене ирӗксӗрлесех качча панине, качча кайнӑ хыҫҫӑн вӗсен пурнӑҫӗ ҫав тери хурлӑхлӑ пулнине куратпӑр.

Октябрь революцийӗ арҫынпа хӗрарӑм хушшинчи танмарлӑха пӗтӗмпех тӗп турӗ. Совет ҫамрӑкӗсемпе хӗрӗсем пӗр-пӗринпе хӑйсен ирӗкӗпе, пӗрне пӗри юратса мӑшӑрланаҫҫӗ. Ҫавна пула хальхи туй йӗркисемпе юррисем те улшӑнса ҫӗнелсе пыраҫҫӗ. Ҫапах та авалхи чӑваш юррисем хӑйсен пуянлӑхӗпе, художествӑллӑ мастерлӑхӗпе пирӗншӗн халӗ те питӗ хаклӑ произведенисем вырӑнне шутланаҫҫӗ.

## АВАЛХИ ЧӐВАШ ТУЙӖ

### Евчӗ

Аслӑ Ҫӗрпӳеленчи Хӗлип Карачӑмӗн ывӑл авлантармалла. Ҫӑварни иртсен тепӗр куннех тухса каять вӑл Шӑхасана, Утча Кӗркурийӗ патне, хӗр килӗшме. Кӗркури патне тӳрех хӑй кӗмест вӑл, пӗр Ҫимун ятлӑ паллӑнӑ ҫынна тупать те ҫавна ярать евчӗ туса хӑтана.

Акӑ Ҫимун Кӗркури патне ҫитсе кӗчӗ. Кӗнӗ-кӗменех, тытӑнчӗ вӑл юптаруллӑн вултса калаҫма:

— Сирӗн пушмак пӑру сутлӑх пур тенине илтнӗччӗ те эп. Ҫавӑнпа килсеттӗм,—тет куҫне чеен хӗстерсе.

Килхуҫийӗ, Ҫимун мӗне шак хурса калаҫнине сисет пулин те, нимӗн пӗлмӗшех пулать-ха:

— Эпĕр выльăх-чĕрлĕх сутасси çинчен никампах та калаçман-çке?—тет.

— Мушăт сирĕн Анна пĕлмест-и?—тесе ыйтать Çимунĕ.

— Тепле-çке çав...—тет килхуçийĕ, кăштах ăнкăрса илнĕ пек пулса.

Çапла юптара-юптара калаçса, евчĕпе хĕр ашшĕ пĕрне пĕри пĕтĕмĕшпех ăнланса çитеççĕ. Кĕркури хăй хĕрне епле вырăнтан çураçма килни çинчен тĕпчеме тытăнать:

— Хăш яла? Кам ачи валли?—тесе ыйтать вăл евчĕрен.

— Аслă Çĕрпӳелĕнчи Хĕлип Карачăмĕн ывăлне валли,—тет евчи.

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп, ачине те лайăх пахлатăп. Якку ятлăччĕ пулас?—текелет хĕрĕн ашшĕ.

— Вăт, вăт, самай çавă илесшĕн сирĕн пушмак пăрăвăра,—тет евчĕ. — Те сутăр ĕнтĕ, те çук?—тет.

— Сутасси... кăçаллăха тăхтасан та юрамаллаччĕ те, çапах, хак килĕшсен, мĕншĕн сутас мар?—тет Утча Кĕркурийĕ, çаплах юптарма чарăнмасăр.

Çимунĕ вара:

— Мĕн чул ыйтăр-ши ĕнтĕ эсир çав пушмак пăрăвăршăн?—тесе тĕпчет.

Кĕркури: „Çĕраллă тенкĕ!“—тет. А пушмак пăрусем вăл вăхăтри хакпа пĕтĕмпе те пилĕк тенкĕ анчах тăнă. Çимунĕ 80 тенкĕ парать те урăх пĕр пус та ӳстермест. Кĕркури 10 тенкĕ чакать. Анчах Çимун килĕшмест, калаçса татăлмасăрах килне таврăнать.

—Хĕршĕн 150 тенкĕ ыйтрĕç те 10 тенкине чакарчĕç. Эпĕ 80 тенкĕ патăм та тек ӳстермерĕм,—тесе каласа парать вăл Карачăмне.

Карачăм: „Апла пулсан, юрĕ“,—тет те çемьипе канашлама киле таврăнать. Тытăнаççĕ хайхисем кил-йышĕпе канаш тума:

— Пуян эрттелĕ ĕнтĕ, хĕрĕн тупри те нумай-тăр, тата 10 тенкĕ ӳстерсе парас пулать,—теççĕ.

Çапла майпа Карачăм Кĕркури патне темиçе хутчен те ярать хăйĕн евчине. Кашни хутрах вĕсем хак çинчен калаçаççĕ. Пĕри пăртак чакарса пырать, тепри тепĕртак хушса пырать. Юлашкинчен, 2—3 хут çитсе калаçнă хыççăн, кусем хулăм укçи пирки пĕтĕмĕшпех килĕшсе çитеççĕ: 100 тенкĕ.

Евчи хĕрĕн ашшĕсем патне кашни хутрах чăпăркка тытса каять. Юлашки хут килсен, хĕре мĕн-мĕн парасси çинчен, туйне хăçан тăвасси çинчен сăмах татаççĕ. Çав вăхăтра хĕрĕ килтех пулсан—килтех пулать, килте çук пулсан—ăна чĕнтереççĕ. Хĕрĕ, хăйне чĕнсен, нимĕн пĕлмесĕрех килсе кĕрет ашшĕ-амăшĕ килне. Анчах кĕнĕ-кĕменех ăна евчĕ: „Çак чăпăрккаран ан уйрăл!“ тесе, виçĕ хутчен çапать те, чăпăрккине, çураçма киличчен, заклад вырăнне, çавăнтах пăрахса хăварать. Хĕр вара хăйне качча парассине пĕлсе, йĕрме тытăнать.

## Хĕр çураçни

Утча Кĕркурийĕсем, Хĕлип Карачăмĕсем хĕр çураçма килнĕ çĕре, пĕр вунă витре сăра туса тата тепĕр 2 четверть эрех илсе хураççĕ. Тĕрлĕрен апат-çимĕçсем хатĕрлеççĕ. Асанас кун çитсен, Хĕлип Карачăмĕ тарантас кӳлет те, ачин хреснашшĕпе хĕреснамăшне (е, вĕсем çук пулсан, хăйне çывăх тăванĕпе арăмне) лартса, хĕр çураçма тухса каяççĕ. Кусем те хăйсем енчен 2 четверть эрех илнĕ. Çитеççĕ Шăхасана. Малтан каллех евчĕ Çимун патне кĕреççĕ, хуçан хатĕрĕ-хĕтĕрĕ çитнĕ пулсан çеç ун патне куçаççĕ. Кĕркури вара хăй ратни-хурăнташĕсем патне хĕр эрехĕ ĕçме тесе чĕнме ярать. Ратнисем пухăнса çитеççĕ те сĕтел çине ĕçме-çимеллисем хатĕрлесе лартаççĕ, пĕр пуçламан çăкăр кăларса хураççĕ, хăнисене сĕтел хушшине кĕртсе лартаççĕ. Карачăм кăсъинчен 50 тенкĕ укçа кăларать те, никама кăтартмасăр хутпа чĕркесе, пуçламан çăкăр çине хурать. Вара эрех пуçлаççĕ те икĕ хăта пĕрне пĕри тав туса ĕçеççĕ, тăхлачисене параççĕ, унтан кайран йĕркерен пур ратни-хурăнташĕсене те ĕçтерме тытăнаççĕ. Ĕçсен-ĕçсен, килхуçийĕсем пăтă пĕçерсе лартаççĕ, хăтисене сĕтел пуçне тĕпел енне ларма ыйтаççĕ. Вара хĕрĕн инкĕшĕ хĕр хатĕрлесе хунă япаласене илет те парне пама тытăнать: Карачăм чĕрки çине 3 аршăн кĕпе пӳлĕх пир хурать, Якку хреснашшĕн чĕрки çине каллех кĕпе пӳлĕх пир хурать. Парне илекеннисем хĕре сăра курки ăшне парне укçи яра-яра параççĕ (кам мĕн чухлĕ парас тет, çаван чухлĕ). Хĕрĕ сăрине ĕçсе ярать, укçине курка тĕпĕнчен алли çине силлесе илет. Кун хыççăн, хĕр çураçма килнĕ хăтасене пăтă çиме лартаççĕ. Хăтисем пата çисе тухаççĕ те киле тухса каяççĕ.

Хăнисем саланнă хыççăн, Кĕркури çăкăр çине хутпа чĕркесе хунă укçана илет те салтса пăхать.

— Алла тенкĕ хăварнă иккен. Тата аллă тенкĕ юлать, — тет вăл хăй ăшĕнче.

Çăварни иртсен çураçса хунă хĕр Çимĕкчен ашшĕ-амĕш килĕнчех пурăнать: тум тавраш ĕсем тăвать, качча каймалли япаласем хатĕрлет.

## Кучченеç улăштарни (пăлчав)

Çимĕк çитесси пĕр эрне ытларах юлсан, Карачăм лаша кӳлсе тăрантасĕ çине арăмне лартать те хăтисем патне „пăлчав" илме каять. („Пăлчав" тесе кучченеç улăштарнине калаççĕ.) Карачăм хăй килĕнчен пĕр виçĕ витре сăра тата çур тырринчен пĕçернĕ апат-çимĕçсем илсе каять. Кусем пырса çитсен, Кĕркури кучченеç сăри ĕçме хăйĕн ялти ратни-хурăнташĕсене пуçтарать. Ĕçкелесе çикеленĕ хыççăн, Кĕркурипе Карачăм туй хăçан пуçланасси тата ачисене хăçан венчете кĕртесси çинчен калаçса татăлаççĕ. Вара, ĕлĕкхи пекех, Карачăмпа арăмне кĕпе пӳлĕх пирпе сурпан, кĕрӳ валли — вĕçне чĕнтĕр тытса тĕрлесе тунă 2 чăпар тутăр парса яраççĕ (вĕсене „кĕрӳ тутри" теççĕ). Карачăмсене хăтисем хăйсем малтан илсе килнĕ пичкепех сăра

тултарса парса яраççĕ тата çур тырринчен пĕçернĕ апат-çимĕçсем те параççĕ. Карачăм килне таврăнать те, кучченеç сăри ĕçме тесе, хăйĕн ратни-хурăнташĕсене пухать, çавăн чухне вара туй хăçан пуçланасси çинчен каласа парать.

## Венчет туни

Кучченеç сăри хыççăн, каччă енчен те, хĕрĕ енчен те туй валли сăра туса, апат-çимĕçсем пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Пăлчав илсе килсен, Карачăм ывăлĕ Якку тарантас кӳлет те, хăй çумне хăй пек çамрăк ача лартса, тӳрех чиркӳ умне каять (венчете кĕме). Çав вăхăтра хĕрĕн инкĕшĕпе пиччĕшĕ те хĕре лартса çитеççĕ. Ашшĕсем, пупсемпе килĕшсе, венчет тунăшăн укçине тӳлесе хунă ĕнтĕ. Вара пупсем чиркĕве пыраççĕ те хĕрпе ачана венчет туса яраççĕ. Венчет тусан, хĕрсем хăйсен килне таврăнаççĕ, каччи хăй килне таврăнать.

## Арçын туйĕ пуçтарăнни. Кĕрĕве тумлантарни

Венчетрен таврăнсан 4—5 кун иртет. Ыран вырсарникун тенĕ чух, кăнтăрласем сулăнсан, Карачăм ватăрах çынсене пухать те ĕçкĕ ĕçме пуçлать. Çак малтанхи ĕçкĕре мăн кĕрӳпе туй пуçĕ те пулаççĕ. Кун каç еннелле сулăнсан, икĕ ачана юланут утлантараççĕ те тивĕçлĕ çынсене туя хăвалама кăларса яраççĕ. Ютри хăнасене туя килме малтанах чĕнсе хунă. Тата каçпарахпа 4—5 çын пĕр витре сăра илеççĕ те туя чĕнме тепĕр хут тухса каяççĕ. Кама чĕнеççĕ—çавна пĕр курка сăра ĕçтерсе хăвараççĕ. Каç сĕмĕ ӳкнĕ çĕре туй çыннисем пуçтарăнса çитеççĕ те тумтирсем усракан пушă кĕлете кĕрӳ тумлантарма тухаççĕ. Кунта сăри-эрехĕ те, апат-çимĕçĕсем те пурте пур; купăс калаканĕсем те çавăнтах çӳреççĕ-ха. Кăшт тăрсан, Яккăвăн хăйне тачă инкĕшĕ пырать те, ăна тенкел çине лартса, тумлантарма тытăнать: çӳçне çаврашкалатса касса илемлетет (ĕлĕк çӳçсене йĕри-тавра çаврашкалатса каснă), çине халат тăхăнтартать, ун çинчен симĕс е кăвак пысăк пиçиххи çыхса ярать, çав пиçиххи çинчен чĕнтĕр вĕçлĕ кĕрӳ тутрине икĕ аяккинчи кăсъисем таран, тĕрленĕ пуçĕсем усăнса тăмалла туса, йăлмакласа ярать, тепĕр тутрине сылтăм кăсъине чикет те каллех вĕçĕсене усăнса тăмалла тăвать. Кун хыççăн кĕрӳ инкĕшĕ пурçăнпа çӳлелле тĕрлесе тунă пĕчĕкрех тăваткал тутăр илет те (ăна „сулăк“ теççĕ), хутлатса виçĕ кĕтеслĕ туса, çурăмĕ çине виçĕ çĕртрен чиксетуртса çĕлесе ярать. Унтан пуçĕ çине пысăк шурă крымски çĕлĕк тăхăнтартать, аллине чĕн саламат тыттарать. Вара пукан çине минтер хурать те Яккăва çавăнта ларма хушать. Якку малтан хăй ларас минтерне аллинчи саламачĕпе виçĕ хутчен хĕреслĕн туртса çапать, унтан тин пырса ларать. Вара кĕрӳ тумлантарас йĕрке çакăнпа пĕтрĕ те.

Кун хыççăн арçын туй йĕркийĕсем пуçланса каяççĕ. Вăйăçă ташă-юрă кĕввисем калама тытăнать, мăн кĕрӳ ташă пуçласа

парать, ун хыççăн кĕçĕн кĕрĕве[1] ташлама хушаççĕ. Унтан вара пурте ташлама-юрлама тытăнаççĕ. Чăн кĕрÿ ни ташламасть, ни юрламасть,—хăй çумĕнчи çынсене хушса кăна ларать,—ташлăр, юрлăр!—тесе. Вара кĕлетре пурте пĕрер ташлаççĕ те пÿрт умне пухăнаççĕ. Пÿрте тăруках кĕмеççĕ, пÿрт умĕнче кăштах чарăнса тăраççĕ.

Мăн кĕрÿ алăк умĕнче такмак калама пуçлать:

— Ну, атте-аннесем, асатте-асаннесем, ларăр вырăнăра, çав ырлăхлă ĕçсене эсир пире тутарнăшăн эпир сире кĕрсе пуççапас тетпĕр,—тет.

Вара ваттисем кашниех алла пĕрер курка сăра тытса, кĕрекене лараççĕ те:—Атьăр, кĕрĕрех,—теççĕ.

Туй çыннисем пÿрте кĕрсе ваттисем умне чĕркуçленсе лараççĕ. Вара мăн кĕрÿ, чăн кĕрÿшĕн сăмах илсе, çапла калать:

— Ну, атте-анне, пеххилĕр мана, эсир мана эпĕ пĕчĕкçĕ ача чухне кипкепе чĕркесе ÿстертĕр, хăвăр ĕçленĕ пек ĕçе вĕрентрĕр, халĕ тата мăшăрлантарма шухăшларăр. Ну, атте-анне, халĕ ĕнтĕ пиллĕр мана, эпĕ сирĕнтен уйрăлатăп. Анчах та уйрăлмастăп сирĕн пурнăçăртан, уйрăлатăп эсир çĕлесе парас кĕпе-йĕмрен анчах. Малашне эп вăл кĕпе-йĕме сиртен ыйтас вырăнне хамăн сирĕн патăра килсе кĕрес арăмăмран ыйтма тытăнăп,—тет.

Вара ваттисем пиллеме тытăнаççĕ. Сăмахĕсем ак çаксем:

— Ну, ачам, пиллĕхлĕ пулăр, лайăх пурнăçпа ватăличчен пурăнăр, тулли пурнăçлă, ырă ача-пăчаллă, выльăх-чĕрлĕхлĕ пулăр; хăвăр хушăрта килĕшÿллĕ пурăнăр, ватă çынсене ан манăр. Ватта курсан—ватă пек пулăр, çамрăка курсан—çамрăк пек пулăр. Хир пек аслă пулăр, вăрман пек пуян пулăр. Ял-йышпа, кÿршĕ-аршăсемпе килĕшÿллĕ пурăнăр.

Кун хыççăн сĕтел хушшинче ларакан ватăсем аллинчи куркисене пĕрне пĕри тав туса ĕçеççĕ те,—ну, тăрăр ĕнтĕ, çитĕ,—тесе, ачисене тăма хушаççĕ.

Мăн кĕрĕве, чăн кĕрĕве тата кĕçĕн кĕрĕве, кирек ăçта пырсан та, сĕтел хушшине лартаççĕ, чăн кĕрÿ айне, хуть те ăçта пырсан та, минтер хурса параççĕ. Вăл минтерĕ çине яланах саламатпа хĕреслĕ çапса ларать. Вĕсем çумне туй çыннисем ретрен ларса тухаççĕ.

Хуçа килĕнче малтан каллех мăн кĕрÿпе туй пуçĕ ташласа параççĕ. Вĕсем хыççăн, кам ташлас тет, пурте юрлама-ташлама тытăнаççĕ—пĕччен ташлать-и, е арçынпа хĕрарăм мăшăрланса тăрса ташлаççĕ-и,—пурпĕрех. Ыттисем пурте алă çупса тăраççĕ.

Туй юррине каллех мăн кĕрÿ пуçласа парать. Вăл çапла пуçлать:

---

[1] Кĕçĕн кĕрÿ аллине мăйран уртса ямалли пысăк сăран сумка параççĕ. Вăл ăна мĕн туй пĕтиччченех пăхса сыхласа çÿрет. Кĕçĕн кĕрĕве, туй çыннисем патне кĕрсен, кашни килтех кулач, чăкăт пуçлама параççĕ. Кĕçĕн кĕрÿ çав кулачăпа чăкăта варринчен пĕрер ташлама чĕлĕ (ташлама чĕлĕ—çавра чĕлĕ) касса илет те, хăйĕн сумки ăшне чикет, тата пĕрер хур тукмакки илсе чикет.

Пирĕн ача маттур, ай, Якку пур,
Пирĕн ача маттур Якку пур,
Ырă кăна кинçĕм Анна пур.

Ун хыçĕнчен туй çыннисене кирек кама та хуть те менле сăвă та каласа юрлама юрать.

Хуçа килĕнчен хăта килне тухса кайиччен туй çыннисене апат лартаççĕ. Апат çисе тăрансан, тĕп хуçана тата тепĕр хут вырана лартса пуççапаççĕ. Хуçапа арăмĕ туй çыннисене çапла пиллесе яраççĕ:

— Лайăх ĕçсе-çисе савăнса çӳрĕр. Пыл çулĕпе кайса, çу çулĕпе килĕр. Хĕрĕхĕн кайса, хĕрĕх пĕррĕн пулса килĕр!

Пуççапса тăрсан, мăн кĕрӳ çак такмака калать:

— Туя тукмак йăваннă, теççĕ. Ача пурри ача йăтăр, ача çукки тукмак йăтăр, ачи-пăчи—кӳмепе, ватти-хĕтти—туяпа; йĕм тăхăнăр та сарă çыхăр, кĕпине лерен калаçнă. Урапа утакан, кутпа шăвакан, атьăр пурте пирĕнпе туя!—тет.

Унтан пурте пĕр хуçа килĕнчен тухса каяççĕ вара. Ялта çӳренĕ чух çуранах çӳреççĕ. Кашни киле пырса кĕмессеренех мăн кĕрӳ такмак калать. Вăл такмакăн сăмахĕсем кĕскереххĕн ак çапла:

— Салам-алик, тав сие! Ĕçетре, çиетре, вылятра, кулатра, пире хапăл тăватра? Эсир хапăл тусан, эпир хапăл. Аслă Çĕрпӳел пуянĕ Карачăм ывăлне авлантарать, Шăхасан пуянĕ Кĕркури хĕр парать. Чăн-и, суя-и çак сăмах,—эпир çавсен чысĕпе ĕçсе-çисе савăнса çӳретпĕр. Хапăл туса яма кăмăл пулĕ-ши, хуçасем?

Хуçи: „Атьăр, кĕрĕрех, кĕрĕрех!“ тет те, туй çыннисем пурте шалалла кĕрсе каяççĕ. Мăн кĕрӳ çак такмака кашни киле кĕмессеренех калать. Туй çыннисем пĕрмаях юрлаççĕ. Ак вăл юрăсем:

Пирĕн ача маттур, ай, Якку пур,
Пирĕн ача маттур Якку пур,
Ырă кăна кинçĕм Анна пур.

Аннана та укçа, ай, патăмăр,
Аннана та укçа патăмăр,
Яккăва та кĕрӳ турăмăр.

Ĕнтĕ оп! тăвар та, ай, коп! тăвар.
Ĕнтĕ, оп! тăвар та, коп! тăвар,
Пуян хĕрне илсе кин тăвар.

Мĕншĕн каяс Юхман, ай, пасарне,
Мĕншĕн каяс Юхман пасарне,
Вĕтĕ шăллă тура илмесен?
Мĕншĕн ӳсес маттур йĕкĕт пулса,
Мĕншĕн ӳсес маттур, ай, пулса,
Хамăр савнисене илмесен?

Шап-шарах та тенкĕ, ай, патăмăр,
Шап-шарах та тенкĕ патăмăр,
Сĕтелех те ури тайличчен.
Мĕнчул шурă парне, ай, парĕ халь,
Мĕнчул шурă парне парĕ халь
Хурама та кашти авниччен?

Чăпар куккук ятăм эп пахчана,
Чăпар куккук ятăм пахчана
Панулми çеçкисе(не) суйлама.
Хура куçма ятăм эп ял çине,
Хура куçма ятăм ял çине
Савнă сарă хĕрсе(не) суйлама.

Йăранĕ-йăранĕ ешĕл сухан,
Йăранĕ-йăранĕ ешĕл сухан,
Çиеесчĕ çиес килнĕ чух.
Хамăр савнă сарă, ай, хĕрсене,
Хамăр савнă сарă хĕрсене
Кураясчĕ курас килнĕ чух.

Тăп-тăваткăл пахча, улма пахчи,
Тăп-тăваткăл пахча, улма пахчи,
Хĕрлĕ улми ăçта пиçет-ши?
Эпирех те савнă, ай, сарă хĕр,
Эпирех те савнă сарă хĕр
Ăçта ырăн сарса выртать-ши?

Мĕншĕн юрламастăр, ай, ачисем,
Мĕншĕн юрламастăр, ачисем,
Сирĕн юрлассăра кам пĕлмест?
Йăпататăр япшар, ай, чĕлхепе,
Илĕртетĕр хура тутăрпа;
Эп мĕн тăвап хура, ай, тутăрпа,
Эп мĕн тăвап хура тутăрпа?
Кӳр тутуна пĕрре чуптăвам.

Шурă кайăк тарчĕ, ай, куртăра,
Шурă кайăк тарчĕ, куртăра?
Ут утланса хыçран хăврăра?
Çĕрпӳ туйĕ килчĕ, ай, куртăра?
Ут утланса хыçран хăврăра?
Çĕрпӳ туйĕ килчĕ, ай, куртăра,
Çĕрпӳ туйĕ килчĕ, куртăра?
Ĕçĕрсене пăрахса чупрăра?
Кунтан Çĕрпӳ туйĕ, ай, кайсассăн,
Кунтан Çĕрпӳ туйĕ кайсассăн,
Ĕçĕрсене манса ан кайăр.

Тěппěр кăна тěппěр, ай, килтěмěр,
Тěппěр кăна тěппěр килтěмěр,
Тěслěрен те курăк тěпретсе.
Шăнкăр кăна шăнкăр, ай, килтěмěр,
Шăнкăр кăна шăнкăр килтěмěр,
Ăшă ыйăхсене вăратса.

Шап-шур иккен çырлан, ай, çеçкисем,
Шап-шур иккен çырлан çеçкисем
Атăлпала Сěве хушшинче.
Илемлě иккен хăтан, ай, туйěсем,
Илемл(ě) иккен хуçан туйěсем,
Ырлăхпала пурлăх хушшинче.

Ытла тăррăн-тăррăн, ай, лармашкăн,
Ытла тăррăн-тăррăн лармашкăн
Тăриех те чěппи мар эпир.
Ытла шăппăн-шăппăн, ай, лармашкăн,
Ытла шăппăн-шăппăн лармашкăн
Шăпчăках та чěппи мар эпир.

Чие кăна чие, ай, тееççě,
Чие кăна чие тееççě,
Чие авринчен пěкě аваççě.
Пěккийěсем начар, ай, пулсан та,
Çапах чие пěкки тееççě.
Пире чухăн, чухăн, ай, тееççě,
Пире чухăн, чухăн тееççě.
Эпěр хамăр чухăн, ай, пулсан та,
Ратнийěсем пуян, тееççě.

Ал(ă)к умěнчи улма, ай, йывăççи,
Ал(ă)к умěнчи улма йывăççи,
Улмийěсем çук-тăк мěн усси?
Ăсла кăна туса, хăмла ярса,
Ăсла кăна туса, хăмла ярса
Юрламасăр ěçни мěн усси?

Тупата та туршăн, ай, туй матки,
Тупата та туршăн туй матки,
Ыран эпě пулăп кил матки.

Хěрěхěн каятпăр, ай, хěр илме,
Хěрěхěн каятпăр хěр илме,
Хěрěх пěрěн пулса килěпěр.

Вырăсла та çӳçме эп кастартăм.
Вырăсла та çӳçме кастартăм,

Аршӑн ҫурӑ ука яртартӑм;
Ҫакӑ Шӑхасансен, ай, хӗрсене,
Ҫакӑ Шӑхасансен хӗрсене
Ҫухрӑм ҫурӑ хыҫран чуптартӑм,
Сутка ҫурӑ куҫран эп пӑхтартӑм,
Сутка ҫурӑ куҫран эп пӑхтартӑм,
Эй-лю—кӑнам иккен, ай-хай-лю.

Вӑрманта та ҫӑкан, ай, хӑвӑл пур,
Вӑрманта та ҫӑкан хӑвӑл пур.
Ташлакансен юрлас кӑмӑл пур,
Юрлакансен ташлас кӑмӑл пур.

Вуниккӗн те тӑрса, ай, ут ҫулсан,
Вуниккӗн те тӑрса ут ҫулсан,
Кӳмӗпӗр-ши ҫаран илемне?
Пурте харӑс тӑрса, ай, юрласан,
Пурте харӑс тӑрса, ай, юрласан,
Кӳмӗпӗр-ши туйӑн илемне?

Ҫакна май тата тепӗр кана юрласан, туй халӑхӗсем хуҫа килӗнчен тухма хатӗрленеҫҫӗ. Тухас умӗн ак ҫакӑн пек юрӑсем юрлаҫҫӗ:

Кӑвак лашасене, ай, кӳлер-и,
Кӑвак лашасене кӳлер-и,
Хӳрисе(не) ҫавӑрса тӳлер-и?
Ваттисе(не) вырӑна, ай, лартар-и,
Ваттисе(не) вырӑна лартар-и?
Ик уринчен тытса тайлар-и?
Сылтӑминчен тытса, ай, тайӑлсан,
Сылтӑминчен тытса тайӑлсан,
Укҫа ыйтать тесе ан калӑр.
Сулахайӗнчен тытса, ай, тайӑлсан,
Сулахайӗнчен тытса тайӑлсан,
Сума сумасть тесе ан калӑр.

Ку юрӑсене юрласа пӗтерне хыҫҫӑн туй халӑхӗсем каччӑн ашшӗ-амӑшӗсене пуҫҫапма тытӑнаҫҫӗ. Пуҫҫапнӑ чух мӗнле сӑмахсемпе пилленине маларах ҫырса кӑтартнӑ. Пуҫҫапса тӑрсан, ҫак сӑвӑсене каласа параҫҫӗ:

Атьӑр кӑна каяр, ай, каймалла,
Атьӑр кӑна каяр, ай, каймалла,
Кайӑксӑр хӑвине ҫитмелле.
Кайӑксӑр хӑвине, ай, ҫитсессӗн,
Ларса та пӗр канаш тумалла.
Ларса та пӗр канаш, ай, тусассӑн,
Хӑта-тӑхлач килне ҫитмелле.

Лашасемпе çула тухсассăн, çакăн пек сăвăласа юрласа каяççĕ:

Юрттари-юрттарми, ай, пымашкăн,
Юрттари-юрттарми пымашкăн
Пирĕн кӳлнĕ утсем начар мар.
Юрлайи-юрлайми, ай, пымашкăн,
Юрлайи-юрлайми пымашкăн
Пирĕн хурăнташсем начар мар.

Çапла, майĕпе арçын туйĕ ялти хурăнташсем тăрăх çӳресе пĕтет. Юлашки киле кĕрсен, юта тухса кайма тарантассемпе лашасем кӳле кӳле килеççĕ (7 урапаран пуçласа 9-11-13-15 урапана çитиччен). Кĕрӳ çыннисем йĕнерленĕ юланутсемпе килеççĕ (7 юланутран пуçласа 13 юланута çитиччен). Юланут çинче, хуть те ăçта кайсан та, чăн хĕрринче сылтăмра мăн кĕрӳ пулать, унçумĕнче—чăн кĕрӳ, виççĕмĕшĕ—кĕçĕн кĕрӳ. Ыттисене „кĕрӳ çумĕсем" теççĕ. Юланут çинче пур те арçынсем анчах пулаççĕ. Юланутлă туй çыннисем хуть те кам патне пырсан та, пӳртум карлăкĕ умне пырса ретрен тăрса тухаççĕ. Мăн кĕрӳ маларах асăннă такмака калать. („Еçетре, çиетре" т. м. çаплах). Анчах та вăл такмак çумне çакăн пек çĕнĕ сăмахсем хушать:

— Ырă йытă та виççĕ çаврăнмасăр выртмасть, эпир те виççĕ çаврăнмасăр пӳрте кĕмĕпĕр,—тет. Çапла калана хыççăн йĕтем вырăнĕ пек вырăнта хĕвеле май виççĕ çавранаççĕ те, лашисем çинчен анса, лашисене кăкарса хураççĕ, хăйсем пӳрте кĕреççĕ.

Урапаллисем пăртак маларах çӳреççĕ. Юланутлисем вĕсем вырнаçса ларнă тĕле çеç çитеççĕ. Урапаллисенчен туй пуçĕ малта çӳрет. Хапха умне çитсенех, ăна алтăрпа сăра параççĕ. Вара вăл хăйĕн такмакне калама тытăнать.

## Хĕр туйĕ

Хĕр туйне, арçын туйĕ пекех, туя хăваласа пуçтараççĕ. Ку туй та кĕрӳ тумлантарнă каçах пулса иртет. Туй халăхĕсем пуçтарăнкаласан, хĕре япаласем усракан кĕлете илсе тухаççĕ. Кунта та, арçын туйĕнчи пекех, сĕтел çинче сăра-эрехсем, ĕçмелли - çимеллисем пурте пулаççĕ. Хĕре хăйне тачарах инкĕш сак çине лартать те тумлантарма тытăнать: пуçне тухъя тăхăнтартать, çакмалли кĕмĕлсене çакса ярать, çине халат тăхăнтартать, унтан шур пĕркенчĕкĕн пĕр кĕтессине 2 пус укçа хурса, çиппе туртса çыхать те хĕр çине пĕркентерет. Пĕркенчĕкĕн пĕр вĕçне вăл хăй çинех хурать.

Хĕр тăруках йĕрме хăнăхаймасть, çавăнпа та ăна инкĕшĕ пуçласа парать. Унăн сăввисем ак çапла пулаççĕ:

Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Ай-хай, ырă аттеçĕм!
Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Ай-хай, ырă аннеçĕм...

Купăс ку вăхăтра хĕр йĕрри кĕввипе выляса тăрать. Инкĕшĕпе пĕрле хĕр те йĕрет. Кăштах вăхăт иртсен, хĕр пĕчченех йĕрме

тытӑнать. Хайӗн юрринче вӑл мӗн пур тӑванӗсене, сывӑх хурӑнташӗсене, тантӑшсене—пурне те асӑна-асӑна илет. Вӑл вӑхӑтра туйри хӗрсемпе каччӑсем хӗр туй юррисене юрласа ташлама тытӑнаҫҫӗ.

Хӗр туйӗнче хӗрсемпе ҫамрӑк арӑмсем ытларах пулаҫҫӗ. Кунта арҫын туйӗнчи пек пысӑк туй пуҫӗсемпе мӑн кӗрӳсем пулмаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсемех пӗрне пӗри пулӑшса йӗркене кӳрсе пыраҫҫӗ.

Кӗлетрен тухсан, хӗр туйӗ пӳрте кӗрет те хӗрӗн ашшӗ-амӑшне пуҫҫапать. Ашшӗ-амӑшӗсем пиллӗх параҫҫӗ, унтан апат ҫитерсе, ратни-хурӑнташӗсем тӑрӑх ҫӳреме кӑларса яраҫҫӗ. Хӗр туйӗ ялта 2—3 киле кӗрсе тухать те тӳрех юта тухса каять.

Хӗр туйӗнче юланутсем пулмаҫҫӗ. Вӗсем ютра ҫӳресе пӗтереҫҫӗ те каллех ялта ҫӳреҫҫӗ. Чи юлашкинчен кӗрсе вӑй-кӗлли уйӑрма хӑйсене сывӑхрах пӗр киле кӗмесӗрех хӑвараҫҫӗ. Хӗр туйӗнче такмак калакан та пулмасть. Хӗрне хӑйне, кашни киле ҫитмессеренех, пӳрте ҫӗклесе кӗртеҫҫӗ, тухнӑ чух та ҫӗклесех кӑларса тарантас ҫине лартаҫҫӗ.

### Хӗр туйӗн юррисем

Аппаҫӑм, аппаҫӑм, ай, Анна пур,
Аппаҫӑм, аппаҫӑм та Анна пур,
Йыснаҫӑм та йыснаҫӑм Якку пур.

Ҫапахах та парса, ай, ямӑпӑр,
Ҫапахах та парса та ямӑпӑр,—
Якку йысна килсен те чармӑпӑр.
Вуник хут ҫаврӑнан, ай, ал ҫыххи,
Вуник хут ҫаврӑнан та ал ҫыххи,
Ҫиппийӗсем ҫӗрчӗҫ те—татӑлчӗ.
Аппаҫӑм, аппаҫӑм, ай, Анна пур,
Аппаҫӑм, аппаҫӑм та Анна пур,
Ҫырниех те тухрӗ те уйрӑлчӗ.

Таллим кӑна таллим, ай, таль нухрат,
Таллим кӑна таллим те таль нухрат,
Талӗрӗнчен епле те уйӑрам-ши?
Аппаҫӑм, аппаҫӑм, ай, Анна пур,
Аппаҫӑм, аппаҫӑм та Анна пур,
Хамӑртан та епле те уйрар-ши?

Лапка кӑна лапка, ай, юр ҫурӗ,
Лапка кӑна лапка та юр ҫурӗ,
Шурӑ кайӑк тухрӗ те йӗр турӗ.
Йыснаҫӑмах, йыснаҫӑм, ай, Якку пур,
Йыснаҫӑмах, йыснаҫӑм та Якку пур,
Анна патне килчӗ те ҫул турӗ.

Кӑвакках та тиха та юпах тиха,
Кӑвакках та тиха юпах тиха,

Пит çамрӑклах кӳлес те теменччӗ.
Аппаçӑм, аппаçӑм, ай Анна пур,
Аппаçӑм, аппаçӑм та Анна пур,
Кӑçалхи çул парас та теменччӗ.

Ытти сӑввисене арçын туйӗнчи пекрехех юрлаççӗ.

### Арçын туйӗ хӑта килӗнче

Хӗр туйӗ хӑйсен ялӗнче çӳренӗ вӑхӑтра арçын туйӗсем те хӑйсен ялӗнче çӳресе пӗтерсе, хӗр ялне килсе çитеççӗ. Малтан каллех евчӗ Çимун патне кӗреççӗ. Мӑн кӗрӳ хӑйӗн малтанхи такмакне калать.

Ку вӑхӑтра хӗр туйӗ те ытти ратни-хурӑнташӗсем тӑрӑх васкарах çӳресе пӗтерсе, чи юлашки киле (вӑй-кӗлли уйӑрма палӑртса хунӑ çӗре) пырса кӗрет. Ун чух арçын туйӗн çыннисем хӗр туйне курма пырсан, вӗсене шала кӗртмеççӗ, çавнашкалах арçын туйӗн çыннисем те хӗр туй çыннисене хӑйсем патне кӗртмеççӗ.

Евчӗ патӗнче кӑшт тӑркаланӑ хыççӑн, арçын туйӗ хӑта килне пырать, хапха умне пырса тӑрсан, вӗсене хирӗç шалтан хӑта патӗнчи хӑнасем тухаççӗ те шала кӗртмесӗр тӑраççӗ. „Калас сӑмахӑрсене калӑр, унсӑрӑн кӳртместпӗр",—теççӗ вӗсем мӑн кӗрӳ çине пӑхса, тата аллине сӑра курки тыттарса. Вара мӑн кӗрӳ хӑйӗн пысӑк такмакне калама тытӑнать.

Мӑн кӗрӳ хӑйӗн такмакне каласа пӗтерсен, алӑри куркине тав туса ӗçсе парать те, туй çыннисем сӑвӑллӑн юрласа пӳрте кӗрсе каяççӗ. Сӑввисем çаксем:

Çупкӑм кӑна çупкӑм, ай, çӗр çырли,
Çупкӑм кӑна çупкӑм çӗр çырли
Пирӗн ача татса çиесшӗн.
Ушкӑн кӑна ушкӑн, ай, сарӑ хӗр,
Ушкӑн кӑна ушкӑн сарӑ хӗр,
Пирӗн ача кӗрсе вылясшӑн.

Пирӗнех те лаша, ай, мӗн ыйтать,
Пирӗнех те лаша мӗн ыйтать?
Сӳпнеех те тулли сӗл(ӗ) ыйтать.
Сӳпнеех те тулли, ай, пулмасан,
Сӳпнеех те тулли пулмасан,
Тапайса сирпӗтсе ярӑп, тет.
Сӳпнеех те тулли, ай, пулсассӑн,
Сӳпнеех те тулли пулсассӑн,
Кукалесе çисе ярӑп, тет.

Пирӗнех те ача, ай, мӗн ыйтать,
Пирӗнех те ача мӗн ыйтать?
Ытамах та тулли хӗр ыйтать.
Ытамах та тулли, ай, пулмасан,
Ытамах та тулли пулмасан,

Çĕр чиккине прахса хăварăп, тет.
Ытамах та тулли, ай, пулсассăн,
Ытамах та тулли пулсассăн,
Ыталаса илсе кайăп, тет.

## Вăй-килĕ уйăрни. Пуç сырни

Çак юрăсене юрланă хыççăн арçын туй халăхĕсем пÿрте кĕреççĕ. Хăти икĕ пÿртлĕ çын пулсан, хăнисене пĕр пÿртне анчах вырнаçтарать, пĕр пÿртлĕ çын пулсан, алăк патнерех вырнаçтарать. Вĕсем умне сĕтел-тенкелсем, сăра-эрехсем, апат-çимĕçсем лартса параççĕ.

Çав вăхăтра хĕр туйĕ юлашки килте пулать. Кирлĕ таран юрласа ташланă хыççăн, вĕсем пĕр витре сăра илеççĕ те хĕрĕн ашшĕ патне вăй-килĕ уйăрма каяççĕ. Хĕрçумĕсем пÿрте кĕрсе юрласа-ташласа тухаççĕ. Пĕркенчĕк айĕнчи хĕрĕ пÿрте кĕмест, алăк умĕнче анчах тăрать. Вăй-килĕ уйăрнă чух хĕр туйĕ, Якку кĕрĕве хурласа, арçын туйĕ Анна кине хурласа юрăсем юрлаççĕ. Арçын туйĕпе хĕр туйĕ çынĕсем пĕр-пĕрин патне хутлама тытăнаççĕ. Виçĕ хут хутласан, хĕрĕн инкĕшĕ хĕр çинчен пĕркенчĕкне илет, тухъипе халатне те хывтарать, унтан пуçне сурпан сырса хушпу тăхăнтартать. Çавна вара „пуç сырни“ теççĕ. Пуç сырса пĕтернĕ хыççăн, инкĕшĕ хĕре каллех халат тăхăнтартать те çине пĕркенчĕк витсе ярать. Унтан кĕрÿшĕ патне кайса, унăнне те халатне хывтарать, çине хĕр хатĕрленĕ кĕпе тăхăнтартать, пуçне тураса якатса, сарă çу сĕрсе хăварать. Пурне те туса пĕтерсен, хĕр инкĕшĕ каллех хĕр туйĕ патне каять те вĕсене юлашки (виççĕмĕш) хут арçын туйĕ патне ертсе килет. Вĕсем килнĕ çĕре арçын туй халăхĕсем хирĕç тухса кĕтсе тăраççĕ. Икĕ туй пĕр-пĕринпе тĕл пулаççĕ. Вĕсем питĕ виртлешÿллĕ сăмахсемпе пĕрне пĕри тăрăхласа юрлама тытăнаççĕ. Хĕрĕпеле каччи алăка хирĕç юнашар тăраççĕ, вăл вăхăтра ваттисем кĕрекере куркасем тытса лараççĕ.

Вăй-килĕ уйăрнă чух хĕр туйĕсем юрлакан юрăсен сăввисем çакăн пек:

Хура кăна сысна, ай, хушка пуç,
Хура кăна сысна хушка пуç,
Пирĕн Якку йысна та кукша пуç.

Хура кăна кĕççе те, ай, хуртланнă,
Хура кăна кĕççе те хуртланнă,
Пирĕн Якку йысна та пыйтланнă.

Пирĕн Шăхасансен ачисен,
Пирĕн Шăхасансен ачисен
Ялтăртатса тăрать те аттисем.

Йыснаçăм, йыснаçăм, ай, Якку пур,
Йыснаçăм, йыснаçăм Якку пур,
Йалтăртатса тăрать те манкисем.

Çakă Якку йыснан, ай, амăшĕ,
Çakă Якку йыснан амăшĕ
Пĕччен вырăн сарса та выртайман.

Йыснаçăм, йыснаçăм, ай, Якку пур,
Йыснаçăм, йыснаçăм, Якку пур,
Вуникĕ те мăшăр пушăтран
Пĕр-пĕр мăшăр çăпата та тăвайман.

Хĕр туйĕсем мăшкăласа юрланине хирĕç арçын туйĕсем те, „Пирĕн Анна инке апларах та, Анна инке çапларах" тесе виртлесе юрламалли сăмахсем тупаççĕ. Çав вăхăтра Анна аллине курка параççĕ. Анна, куркине илсе, хăйĕн пулас упăшкине тав тăвать те, çапла сăвăсем каласа, хĕр йĕрри йĕрме тытанать:

Якку, сана, тав сана,
Якку, сана, тав сана!
Турă çырчĕ пуль сана.

Кăçал каяс теменччĕ,
Кăçал каяс теменччĕ,—
Эсĕ килсе аптратрăн.

Якку, сана, тав сана,
Турă çырчĕ пуль сана.
Эс çын тусан, çын пулăп,
Эс çын тумасан, çын пулмăп.
Ху аллăна илетĕн,—
Йытта кларса ан пăрах.

Кун хыççăн хĕр Яккăва сăмахăн (юрламасăрах) тав тăвать те ĕçсе куркине парать. Унтан Яккăва та çав куркаранах ĕçтереççĕ. Вара вĕсем иккĕшĕ ыталанаççĕ те пўрте кĕреççĕ, ваттисем умне пуççапма чĕркуçленсе лараççĕ. Вĕсемпе пĕрле туй халăхĕсем те пўрте кĕрсе чĕркуçленсе лараççĕ. Пуççапса тăрсан, мĕнпур туй çыннисем юрласа ташлама, ĕçсе-çисе савăнма тытăнаççĕ. Çĕр каçса тепĕр кăнтăрлана çитичченех пырать юрă-ташăпа ĕçкĕ-çикĕ. Ашшĕ килĕнчен тухса кайма вăхăт çывхарма пуçласан, хĕр хурлăхлă сăвăсем тупса, хĕр йерри йĕрме пуçлать. Сăмахĕсем çакăн пек:

Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Ай-хай, ырă аттеçĕм!
Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Ай-хай, ырă аннеçĕм!
Эпĕ сирĕн хушшăрта
Çинçе пўме ўстертĕм,
Чăн-чăн мăкăнь çеçки пек,
Саркаланса çўрерĕм.
Эпĕ хальхи вăхăтра
Çич ют килне каятăп,
Мĕн курасса пĕлместĕп,—
Çавăнпа эп йĕретĕп.

Ах, аттеçĕм, аттеçĕм!
Мана панă хулăмпа
Шурă кĕлет илсе ларт,—
Шурă кĕлет илсе ларт,
Урлă-пирлĕ кашта хур,
Урлă-пирлĕ кашта хур.
Усрав шăпчăк илсе яр,
Усрав шăпчăк илсе яр.
Ир тăрсан та авăттăр,
Каç выртсан та юрлатăр,—
Манăн сассăм çав пулĕ,
Манăн сассăм çав пулĕ...

Хĕр çакна майлă хурлăхлă сăвăсем татах та тупса юрлать.

### Хĕре ăсатни

Хăтасем патĕнче çапла ĕçсе-çисе юрласа ташлана хыççăн, туй халăхĕсене ăсатма хатĕрленме пуçлаççĕ. Ăсату „пашшул пăттин-

чен“ пуçланать. Туй çыннисем пӑтӑ çиеççӗ те хуçасене ӳксе пуççапаççӗ, унтан килӗсене саланма тытӑнаççӗ. Урапасемпе килнисем маларах тухса каяççӗ, юланутлисем, лашасем çине утланса, карташ варринче тӑраççӗ. Хӑта килӗнчен тухса каяс умӗн мӑн кӗрӳ çак такмака калать:

— Ну, хӑтасем, тӑхлачӑсем!

Эпир сирӗн тивлетпе выляса-кулса туя ирттерсе пыратпӑр. Стариксемпе карчӑксем! Патак тытса утакансем! Çатантан тӗрӗнсе утакансем! Куçран, хӑлхаран тайӑлнисем! Чӗтӗрекен пуçлисем, ватти-вӗттисем, сывви-сывмаррисем, мӗнпур хӑтасем-тӑхлачӑсем! Пурте пирӗн хыçран çӗнӗ хӑтана пырӑр!—тет.

Çак сӑмахсем хыççӑн, туй халӑхӗсем хӑта килӗнчен тухса кайса, укӑлчара кӗтсе тӑраççӗ (анчах çӗнӗ хӑтасене хӑнана пухса пыма пӗр çыннине унтах хӑвараççӗ).

Арçын туйӗ тухса кайнӑ хыççӑн, хӗрӗн пиччӗшӗ е шӑллӗ хӗре пӳртрен çӗклесе тухать те тарантас çине тӑратать. Хӗр çумӗсем мӗн чул вырнаçнӑ таран пурте тарантас çине тӑрса тухаççӗ, унтан арçын туйӗ патне пырса чарӑнаççӗ. Вӗсем хӑйсемпе пӗрле пӗр пысӑк витре сӑра илеççӗ. Кусем пырса çитсенех, Якку юланут çинчен анать. Ана пӗр курка сӑра тултарса параççӗ. Вал аллинчи куркине хӗре тав туса ӗçтерет те, ку тарантас çинчен çӗклесе антарса, туй пуç тарантасӗ çине пырса лартать. Хӗр Якку çурӑмӗ çине çӗлесе çакса янӑ „çулӑк“ текен çӳçеллӗ тутӑра касса илет те хӑй çумне чикет. Вара арçын туйне хӗр туй халӑхӗсем çӗлӗкӗсене сулласа пӗр-пӗрипе уйӑралаççӗ. Кӗрӳ хӑйсен ялне юланутпах каять.

## Кӗрӳ килӗнче. Таянчӑк тыттарни. Йӑран тӑпӑлтарни

Акӑ туй кӗрӳ килне кӗрлеттерсе çитрӗ. Туй халӑхӗсем пур те кӗрӳ хапхи умне пырса чарӑнчӗç. Килтен пӗр çын чӗрӗ çӑмарта илсе тухса, Якку аллине тыттарчӗ. Якку çӑмартине хӗр пуçӗ тӑрринче хӗвеле май виçӗ хутчен çаврӑнчӗ те хӗвелтухӑç еннелле ывӑтса ячӗ. Кун хыççӑн туй халӑхӗсем карташне кӗреççӗ. Якку витене каять те канса тӑнӑ лашине йӗвен тӑхӑнтартса, сылтам халат аркийӗпе çавӑтса тухать, хӗре тытма хушать. Хӗрӗ те йӗвен чӗлпӗрне сылтӑм халат аркипелех тытать. Çапла вӗсем витере тӑнӑ ут чӗлпӗрне виçӗ хутчен ылмаштара-ылмаштара тытаççӗ те, чӗлпӗрне лаша çурӑмӗ çине туса, утне лупас айнелле яраççӗ. Çакӑн пек тунине **„таянчӑк тыттарни“** теççӗ.

Унтан хӗр тарантас çине урине малалла тӑсса ларать. Çавӑнтах пӗр 10—12 çулхи хӗрача пырса, ларчӑк çине хыçалалла пӑхса ларать те, хӗрӗн икӗ урине пӗрле тытса, виçӗ хутчен кӑлт-кӑлт тутарса çӗклет. Куна **„йӑран тӑпӑлтарни“** теççӗ. Вара Якку хӗре тав туса сӑра ӗçтерсе, тарантас çинчен çӗклесе антарать. Ку вара хӗре çӗклесси юлашки пулать. Унтан хӗрпе каччӑ алӑк умне утса пыраççӗ. Вӗсемпе пӗрлех пур туй халӑхӗсем те алӑк умнех утса пырса тӑраççӗ. Мӑн кӗрӳ, пӳрте кӗрсе, ваттисем енне çаврӑнса, çапла калать:

— Ну, ваттисем, ларăр вырăна курка тытса. Эпир сире валли кин илсе килтĕмĕр,—тет.

Ваттисем курка тытса кĕрекене лараççĕ. Çав самантрах мĕнпур туй халăхĕсем, пÿрте кĕрсе, вĕсене пуççапма лараççĕ. Пуççапнă чух юрăсем те юрлаççĕ. Вĕсем ак çаксем:

Хĕрĕхĕн карăмăр, ай, хĕр илме,
Хĕрĕхĕн карăмăр хĕр илме,
Хĕрĕх пĕрĕн пулса килтĕмĕр.

Памăпăр, памăпăр, ай, терĕç те,
Памăпăр, памăпăр, терĕç те,
Çапах та илсе килтĕмĕр.

Пиччеçĕм, пиччеçĕм, ай, Карачăм,
Пиччеçĕм, пиччеçĕм Карачăм,
Уруах та айне пукан хур.
Чавсуах та айне, ай, минтер хур,
Чавсуах та айне минтер хур.
Кунтан кинÿ мĕнле ĕçленине
Икĕ хура куçпа, ай, пăхса лар,
Икĕ хура куçпа пăхса лар.
Кунтан кинÿ ĕçле, ай, пĕлсессĕн,
Кунтан кинÿ ĕçле пĕлсессĕн,
Çурăмĕнчен тытса савса яр.
Кунтан кинÿ ĕçле, ай, пĕлмесен,
Кунтан кинÿ ĕçле пĕлмесен,
Купарчинчен пырса тапса яр.

## Хĕр салми

Пуççапса пĕтерсен, хĕрпе каччă, кăмака умнелле кайса, туй халăхне хирĕç пăхса тăраççĕ. Çав вăхăтра сĕтел çинче сĕтпеçупа çăрса пĕçернĕ салмасем тата виçĕ юплĕ йывăç сенĕк пулать. Салмине „хĕр салми“ теççĕ.

Хĕрпе каччă тĕпел кукринче тăнă вăхăтра вĕсем патне инкĕшĕ пырать те пуçĕсем çине пысăк кĕççе витсе хурать. Пĕр шутникрех старике сĕтел хушшине кĕртсе лартаççĕ. Унтан тепĕр çитĕннĕрех ачана сĕтел çинчи йывăç сенĕке тытса ташлама хушаççĕ. Ачи сенĕке тытса пĕрре çаврăнать те старик умне пырса тăрать. Старик ун аллинчи сенĕкĕн пĕр юппи çине пĕр салма тирсе парса, инкĕшне намăс сăмах калама вĕрентсе ярать. Анчах ачи ытлашши намăс сăмах каламасть. Вăл инкĕшĕ умне пырса çапла çеç калать:

— Инке, салма çиетни? Инке, салма çиетни? Эс çийĕн те, эп памăп; эс çийĕн те, эп памап,—тет.

Çав ачана виçĕ хутчен ташлатса, сенĕк вĕçĕсене виçĕ салма тирсе параççĕ. Кашни хутĕнчех сĕтел хушшинче ларакан шутник старик ăна инкĕшне намăс сăмах калама вĕренте-вĕренте ярать, анчах ачи малтанхи сăмахсене çеç калать. Юлашки хутĕнче ача кĕççе айĕнчи инкĕшĕн пуçĕ çинчи пĕркенчĕке карт! турт-

са илет те, пӳртри хĕрупраçĕсене çапкаласа, пӳртрен хăвăрттăн чупса тухса каять.

Салмасем тирнĕ сенĕкне вăл çăнăх ырçи çине лартать, хĕр пĕркенчĕкне те çавăнтах хурса хăварать. (Вăл салмасене тепĕр-ик кунне чăхсене тĕпретсе парса çитерессĕ.) Вара икĕ ызăç çăнăх илсе кĕрет те çынсем çине сапса ярать.

## Хĕве хупни

Кун хыççăн каччăпала хĕр çинчи кĕççене илеççĕ те, çĕнĕ çынна пĕр курка сăра тыттарса, çынсене ĕçтерме хушаççĕ. Инкĕшĕ кĕлете тухса, çĕнĕ çынсем валли вырăн сарса кĕрет. Каç пулсан, çĕнĕ çынсене сĕтел хушшине лартса апат çитереççĕ те „хĕве хупма“ кĕлете илсе тухаççĕ. Вĕсемпе пĕрле çамрăкраххисем пурте тенĕ пекех тухаççĕ. Кĕлетре пĕрер витре сăра тата ытти ĕçме-çимесем те пулаççĕ. Чи малтан Яккăва сарса хунă вырăн çине лартаççĕ, Аннана ăна салтăнтарма хушаççĕ. Анна Якку çинчи халатне хывса хурать, уринчи аттисене хывса илсе, пуç хирлĕ тытса силлет. Хăрах атти кунчи ăшĕнчен пĕр тенкĕлĕх кĕмĕл укçа тухса ӳкет. Анна ăна хăй çумне илсе чикет. Унтан Яккун кĕпи çинчи пиçиххине салтса илет. Çакăнпа вара кĕрĕве салтăнтарасси пĕтрĕ те. Хĕве хупма пынă çынсем Аннапала Яккăва: „Иккĕн выртса виççĕн тăрăр“,—тесе ыр сунса хăвараççĕ те кĕлетрен тухса каяççĕ.

Анна хăй çынсем тухса кайсан тин саланать.

## Пӳлмек çини. Парне валеçни

Тепĕр ирхине çĕнĕ çынсем çывăрса тăриччен Карачăм икĕ çамрăкрах ачана утсем утлантарать те, „пӳлмек çиме“ тесе хăвалама кăларса ярать. („Пӳлмек“ тесе кĕçĕн кĕрӳ туйра килтен киле кĕрсе çӳренĕ чух хăйĕн сăран сумки ăшне пухнă кулачăсене, чăкăтсене, хур тукмаккисене калаççĕ.) Çынсем пухăнса çитсен, çав кулачсене вакласа, пыл сĕрсе параççĕ. Чăкăтпала хур тукмаккисене те çаплах валеçеççĕ. Ку вăхăтра çĕнĕ çынсем тăрса пӳрте кĕнĕ ĕнтĕ.

Пӳлмек çисе пĕтерсен, парнесем валеçме тытăнаççĕ. Хĕр парнисене пĕр пысăк чара çине хурса, пӳрте илсе кĕртеççĕ. Ваттисене курка тыттарса, кĕрекене кĕртсе лартаççĕ. Хуçан аслă кинĕ çав парнесене кашнин чĕрки çине хурса валеçет. Кама мĕнле парне памаллине хăех пĕлсе тăрать вăл: хăшне кĕпе, хăшне сурпан, хăшне кĕпе пӳлĕх пир, хăшне пĕчĕкçĕ тутăр. Парне илекенсем парнисемшĕн çĕнĕ çынна пурте укçа параççĕ. Кун хыççăн парнисене тăхăнса (кĕпе илни—кĕпине тăхăнать, сурпан илни—сурпанне сырать, тутăр илни—тутăрне çыхать, т. ыт. те) ташлама пуçлаççĕ. Вăл вăхăтра çĕнĕ çын салам парать,—ăна инкĕшĕ пулăшать саламне пама. Çĕнĕ çын, пӳртре хăйĕнчен асли ташланă чух, кăмака умнерех кайса чĕркуçленсе ларать. Çакна „салам пани“ теççĕ.

Туй ĕçĕ пĕтсе пырать. Туй пĕтнĕ çĕре çĕнĕ хăтасем те килсе çитеççĕ.

### Çĕнĕ хăта

Çĕнĕ хăтана 10—12—13 урапа таранччен килеççĕ. Вĕсем пурте Карачăм карташне кĕреççĕ. Унтан вара çĕнĕ хăта кĕртес тенсем хăйсем тĕллĕнех хăнасен лашисене хăйсен килĕсене илсе каяççĕ. Тĕп хăта лаши Карачăм патнех юлать.

Çĕнĕ мăшăр ашшĕсен килĕнче ĕçкелесе-çикеленĕ хыççăн, çĕнĕ хăтасене кашни чĕннĕ килех илсе кĕртсе хăна туса çӳреççĕ. Юлашкинчен кам мĕнле лаша илсе кайнă хăй патне—çавăн хуçине расна хăна туса килне ăсатать. Киле каяс умĕн Утча Кĕркурийĕ хирĕç хăна тăвас шутпа хăй патне çĕнĕрен хăта пухса пыма çак ушкăнтанах пĕр çынна хăварать. Ку çын вара Карачăм ратнисене, хăйсем лерен епле килнĕ çав йĕркепех пухса, Шăхасана илсе каять. Хăналас йĕрке кунта та кĕрӳ ялĕнчи пекех.

Çакăнпала вара чăвашăн туй йĕркийĕсем вĕçленеççĕ.

Çĕнĕ Çĕрпӳелĕ, Гiатăръел р. 1938 çул. Кашкăр Микули çырса панă. (Ин-тăн алçыру фончĕ. КI—1938.)

## МĂН КĔРӲ ТАКМАКĔ

(ТУЛЛИ ВАРИАНТ)

Салам-алик, тав сие!
Ĕçетре, çиетре, вылятра, кулатра,
Пире хапăл тăватра?
Хапăл тусан, виçĕ утăм малалла,
Хапăл тумасан, виçĕ утăм каялла.
Хапăл-и, ватти-вĕттисем?
(Халăхсем: „Хапăл“,—теççĕ.)

Асăнни çичĕ кун, тухни виçĕ кун.
Асăннă кун тухаймарăмăр,
Тухнă кун çитеймерĕмĕр:
Утсем ырхан пулчĕç,
Çулсем хура пулчĕç,
Туй ачисем айван пулчĕç,
Айăп тумастăр-и, вата-вĕтĕсем?
(„Айăп тумастпăр“,—теççĕ.)

Эпĕр çак хăта патне
Çĕрпе пĕлĕт хушшинчен килтĕмĕр.
Çĕрпе пĕлĕт хушшинчен килнĕ чух
Утмăл çухрăм сĕм вăрман урлă каçрăмăр,
Çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă каçрăмăр.
Утмăл çухрăм сĕм вăрман урлă каçнă чух
Пĕр пăлан тĕлпултăмăр.
Ун майраки вĕçĕсем ылттăн,
Чĕрни вĕçĕсем кĕмĕл,
Хӳри вĕçĕсем кăлкан.

Майракипе шăйăрать—йĕр тăвать,
Чĕрнипеле пусать—çул тăвать,
Хӳрипеле якатса пырать,—
Эпĕр çавăн çулĕпе килтĕмĕр.

Çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă kaçнă чух
Тĕлпултăмăр пĕр юханшыв:
Пĕр енчен пăхсан—хăйăрлăх,
Тепĕр енчен пăхсан—хăмăшлăх.
Хăйăр урлă шутарса kaçрăмăр,
Хăмăш урлă иштерсе kaçрăмăр.

Утмăл çухрăм сĕм вăрман урлă kaçнă чух
Тĕлпултăмăр пĕр хуп кĕпер.
Хуп кĕпер çинче
Пĕр чашкăрса выртакан
Хура çĕлен куртамăр.
Урлă сиктерес терĕмĕр—сиктерейменрĕмĕр,
Йĕри-тавра çавăрăнас терĕмĕр—çавранаймарăмăр.
Çулĕ питĕ инçе пулчĕ,
Тăхăр çухрăм çавранмалла пулчĕ;
Халь те асатте касса хунă
Хурама чукмар пулчĕ,
Çавăнпа вара çĕлене
Кут айĕнчи минтер пекех çемçетрĕмĕр.
Ĕненмесен, тăвансем, хăвăр кайса пăхăр:
Пирĕн хăта килĕнчи кĕрчеме
Епле чăшкăрса ларать,
Çавăн пекех чăшкăрса
Выртса юлчĕ.

Утмăл çухрăм сĕм вăрман урлă kaçнă чух
Тĕлпултăмăр виçĕ апус.
Эпĕр вĕсенчен чаранса ыйтрăмăр:
— Сĕм вăрман урлă kaçасси инçе-и?—терĕмĕр.
Вĕсем каларĕç:
— Эпĕр пĕлместпĕр,
Эсĕр, кайсан-кайсан, пĕр çын тĕлпулăр,—терĕç,—
Çавăнтан ыйтса пĕлĕр,—терĕç.
Чăнахах та, килсен-килсен,
Пĕр çынна тĕлпултăмăр.
Эпĕр унтан чарăнса ыйтрăмăр:
— Асатте! Сĕм вăрман урлă kaççан,
Хăта килне çитме инçе-и?—терĕмĕр.
Вăл каларĕ:
— Хăта килне çитме
Сĕм вăрман урлă kaççан
Тата çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă kaçмалла,—
терĕ.

Утмӑл ҫухрӑм сӗм вӑрман урлӑ каҫсассӑн,
Тӗлпултӑмӑр пӗр йывӑҫ.
Аякран пӑхсан—хуран курӑнать,
Патне пырсан—шуррӑн курӑнать.
Ҫӳлелле пӑхкаларӑмӑр—куртӑмӑр пӗр йӑва:
Улӑхса пӑхрӑмӑр—
Пӗлеймерӗмӗр мӗн йӑви иккенне.
Мӗн йӑви-ши вӑл?

(Халӑхсем: „Хӗрпе ача йӑви",—теҫҫӗ. Мӑн кӗрӳн ҫакӑн пек ытарлӑ ыйтӑвӗсене хирӗҫ халӑх таварса калаймасан, вӑл такмакне калама пӑрахать те хӑйӗн сӑмахне ҫапла вӗҫлет:

— Тайма пуҫӑм, тав сана!
Тайма пуҫа хӗҫ витмест,
Сӑсар тирне шыв витмест;
Ытлашшине каҫарӑр,
Ҫитменнине ҫитерӗр,—тет.

Халӑх вӑл ыйтусене хирӗҫ ответлесе пырсан, мӑн кӗрӳ хӑйӗн такмакне тата малалла каласа каять):

Утмӑл ҫухрӑм сӗм вӑрман урлӑ каҫса пынӑ чух
Тӗлпултӑмӑр хуранлӑх.
Хуранлӑхра ҫаранлӑх,
Ҫаранлӑхра ҫырлалӑх.
Ҫаранлӑха эпӗр
Тарлӑ утсене канмашкӑн ятӑмӑр;
Ачасем ҫырла ҫисе
Шӑлӗсене хуратса пӗтерчӗҫӗ.
Ачасене утсем ҫине утлантартӑмӑр та
Тухрӑмӑр ҫеҫен хире.
Тӗлпултӑмӑр пӗр ҫилҫунатлӑ урхамах.
Пуҫӗ пӗлӗте тивеймест,
Шыв пек юхать, ҫил пек вӗҫет,—
Утни-чупни сисӗнмест.
Эпӗр ҫав урхамах ҫине ларса килтӗмӗр.

Ҫитмӗл ҫухрӑм ҫеҫен хир урлӑ каҫнӑ чух
Тӗлпултӑмӑр пӗр ҫавра кӳлӗ.
Ҫавра кӳлӗ варринче—ылттӑн юпа,
Ылттӑн юпа тӑрринче—ӑмӑрткайӑк.
Унӑн сӑмси ылттӑн,
Чӗрнисем кӗмӗл,
Куҫӗ мерчен, хӳри кӑлкан.
Ҫӑварӗпе кӗвӗ калать,
Ҫунаттипе ҫупать, урипе ташлать,—
Эпӗр ҫавӑн кӗввипе килтӗмӗр.
Унӑн хӗрӗх ҫӑмарти пур,
Хӗрӗх пӗрӗмӗш савӑнать;

Эпĕр те хĕрĕхĕн çӳретпĕр,
Хĕрĕх пĕрĕн пуласшăн.

Çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă каçнă чух
Тĕлпултăмăр хăмăшлăх.
Хăмăшлăхра пĕр тĕлĕнмелле япала куртăмăр:
Пĕр енчен пăхсан—савăнать,
Тепĕр енчен пăхсан—хурланать.
Хăй калать:
— Манран ялан илеççĕ,
Хам яланах ӳссе пыратăп,—тет.
Мĕн япала-ши çавă?
(Халăхсем: „Хĕрпе ача",—теççĕ.)

Çитмĕл çухрăм çеçен хир урлă каçсассăн,
Курах кайрăмăр çак хăтасен ялне.
Çак хăтасен ялĕ хула пек иккен,
Пирĕн хăтан çурт-йĕрĕ кантур пек иккен,
Çак хăтанăн хапхине
Тăвата юпаран, виçĕ хупăран тунă иккен.
Юписем—мерчен, хăмисем—пăхăр,
Тăпсисем—йĕс, тыткисем—ылттăн,
Çийĕ—калай;
Чĕркуççипе тапсан—уçăлать,
Чĕркуççипе тапсан—хупăнать.
Çак виçĕ хупăран пĕр хуппи
Пире уçса кĕрсе кайма пулмĕ-ши?—тетпĕр.
(Халăхсем:„Пиртен ирĕк",тесе,карташне кĕртсе яраççĕ.)

Çак хăтанăн картишĕ
Пит пысăк иккен:
Тăршшĕ утмăл хăлаç,
Урлăшĕ вăтăр хăлаç.
Утмăл хăлаçра утмăл юпа,
Кашни юпинче утмăл ункă.
Çав утмăл ункăран пĕр унки
Пирĕн тарлă утсене кăкарса кантарма ирĕк пулмĕ-ши?
—тетпĕр.
(Халăхсем: „Ирĕк",—теççĕ те, лашасене кăкарса хураççĕ.)

Çак хăтасен картиш варринче
Çĕр çирĕм пĕренерен пуранă
Вуник хăлаçлă пӳрчĕ пур иккен.
Унăн умне вунсакăр хăмаран
Виçĕ картласлă алкум тунă иккен.
Çав виçĕ картлас çинче
Пĕринче эсир тăрататăр,
Пĕринче—эпир,
Тепринче ман ут тăрать,—

Пире кĕме ирĕк çук.
Эсир хапăл тусан—кĕрĕпĕр,
Хапăл тумасан—кĕмĕпĕр.
(Халăхсем: „Хапăл!"—теççĕ.)

Çак хăтан пӳрчĕ питĕ пысăк иккен;
Тултан пăхсан—ултă кĕтеслĕ,
Шалтан пăхсан—тăватă кĕтеслĕ.
Унăн урайне
Тăхăрвун тăхăр хăмаран сарнă иккен.
Çак тăхăрвун тăхăр хăмаран
Пире выляса кулма
Пĕр хăми ирĕк пулмĕ-ши?—тетпĕр.
Эпир ыйтмастпăр,
Пирĕн ача ыйтать.
(Халăхсем: „Ирĕк!"—теççĕ.)

Çак хăтан пӳртĕнче
Сакăрвун сакăр сакки пур иккен;
Çав сакăрвун сакăр саккинчен пĕр сакки
Пире ларса канма ирĕк пулмĕ-ши?
Эпир кăна мар,
Вĕçсе пыракан ăмăрткайăкĕ те
Уртăш йăвăççи çине ларса канать, тет.
Çак хăтан урай варринче
Пĕр сĕтелли пур иккен.
Унта çак туй ачисене чысласа ямашкăн
Виçĕ чыс хатĕрленĕ:
Çак хăтан
Çичĕ çулхи вăкăрĕ пулнă.
Вăл çичĕ çулта çиччĕ киле таврăнман,
Кăçал, пирĕн ача телейпе,
Вăл киле таврăннă.
Анчах, кĕçĕн алăкран кĕрес тенĕ—
Талппи кĕреймен,
Хапхаран кĕрес тенĕ—
Майраки кĕреймен.
Вара ăна çичĕ сып хӳмене
Сӳтсе кӳртнĕ,
Тăваттăн пуслăхпа пусса,
Ылттăн вĕçлĕ пекĕпе пусса
Хатĕрлесе хунă.

Çак хăтан пилĕк çулхи така пулнă.
Вăл пилĕк çулта пилĕк кĕтĕве каяйман.
Кĕçĕн алăкран тухас тенĕ—
Талппи тухайман,
Хапхаран тухас тенĕ—
Майраки тухайман.

Вăл пуçĕпе те тĕкнĕ,
Кучĕпе те тĕкнĕ.
Ăна пирĕн хăта
Кĕмĕл вĕçлĕ пеккипе пусса,
Пирĕн туй ачисене чысласа яма
Хатĕрлесе хунă.

Çак хăтан виçĕ çулхи кăркки пулнă.
Вăл виçĕ çулта
Виççĕ çĕре анса курман,
Кунĕн-çĕрĕн шулап тăрăх
Çунаттипе шаплаттарса çӳренĕ.
Кăçал, пирĕн ача телейĕшĕн,
Çавраçил килсе
Ăна çавăрса антарнă.
Ăна пирĕн хăта
Пăхăр вĕçлĕ пеккипе пусса
Хатĕрлесе хунă.
Пĕçернĕ чух
Пĕр хурана кĕреймен,
Икĕ турилкке пулайман.
Кашни туй ачине
Пĕрер тукмак тивнĕ.
Кашни тукмакки
Пĕр çăвара кĕреймен,
Икшер çăвар пулайман.
Миçе çăвар пулнă?
(Халăхсем: „Миçе çăвар пулнă, çавăн чухлĕ пулнă",—теççĕ.)
Çакă хăта
Вуник çул пухнă тырринчен
Çичĕ пасманран сăра тунă иккен.
Вăл салатне кĕленче çинче типĕтнĕ,
Аларманĕпе авăртнă.
Çак хăтан
Виç хăлаçлă нӳхреппи пур иккен.
Унта икĕ пăкăллă, хĕрĕх кăшăллă
Сăрккавуй пичĕки ларать.
Пĕр пăккине уçсан,
Тутлă шерпет юхать,
Теприне уçсан, сим-пыл юхать.
Сим-пылне ĕçсен—ӳсĕр пулмалла,
Тутлă шерпетне ĕçсен—
Тутлă калаçса выляса кулмалла.

Çак хăтан пахчинче
Ӳтмăл тĕп улма йывăççи пур.
Кашни йывăççинче утмăлшар турат,
Кашни тураттинче утмăлшар улма.

Кăçал мĕнпурĕ
Миçе улма пулнă иккен?

(Халăхсем: „Мĕн чул пулнă, çавăн чул пулнă пуль",—теççĕ.)

Çак хăтан пахчинче
Ӳртăш йывăççинчен пуранă
Мунчи пур иккен.
Ун лапки—калай, чулĕ—шăрçа,
Кăмаки—мерчен, курки—ылттăн,
Вăлашки—кĕмĕл, милĕкĕ—кăлкан.
Çав мунчара эпĕр
Туй ачисемпе çăвăнса тухнă çĕре
Пирĕн хăта
Виçĕ витре кĕрекен сăмаварне
Вĕретсе хунă;
Вăл вуникĕ пуçлă çĕлен пек
Шăхăрса ларать.
Ун йĕри-тавра
Вуникĕ пар курка лартса тухнă,
Куркисем ылттăн,
Чашкисем кĕмĕл,
Сăмаварĕ йĕс.

Çак чее ĕçсе тăраннă çĕре
Пирĕн хăтан сĕтелли çинче
Икĕ витре лараççĕ:
Пĕринче сим-пыл,
Тепринче тутлă шерпет,
Сим-пылне ĕçсен—ӳсĕр пулмалла,
Тутлă шерпетне ĕçсен—
Çав тутлă шерпет пек
Тутлă калаçса, выляса-кулса,
Çак туя иртттерсе ямалла.

1927 ç. Кĕçĕн Елчĕк р-че çырса илнĕ.

## КĔРНӲКЕРСЕН ЮРРИСЕМ

„Кĕрнӳкерсем" тесе кĕрӳ çумĕнчи çынсене калаççĕ. Кĕрӳ çумĕнче аслă кĕрнӳкер те, кĕçĕн кĕрнӳкер те пулать. Юрласса вĕсем хăйсем кăна юрламаççĕ, вĕсемпе пĕрле туй халăхĕсем те юрлаççĕ, çапах та юррисене „Кĕрнӳкерсен юррисем" теççĕ. Тури чăвашсен кĕрнӳкерсем вырăнне мăн кĕрӳпе кĕçĕн кĕрӳсем пулаççĕ.

Туя туй пек тăвар-и?
Юртан шурă тăвар-и?
Туя начар тумашкăн
Пирĕн кĕрӳ начар мар.

Шăппăн-шăппăн тăмашкăн
Шăпчăк чĕппи мар эпир.
Тăррăн-тăррăн тăмашкăн
Тăри чĕппи мар эпир.
Хăйи-хăйми тăмашкăн
Хăюсăр çын мар эпир.

Ҫак ял хӗрсем пушмаклӑ;
Пушмакӗ тӑрать вун тенкӗ,
Хӗрӗ тӑрать виҫ тенкӗ.
Пирӗн ял хӗрӗсем ҫӑпаталлӑ;
Ҫӑпати тӑрать ҫичӗ пус,
Хӗрӗ тӑрать пин тенкӗ.

Атӑл хӗрне ҫитрӗмӗр,
Кимӗ ҫине лартӑмӑр.
Хӑта килне килтӗмӗр,
Хӗрне илсе тухрӑмӑр.

Хӑта хапхи сӑнчӑрлӑ,
Пули-пулми уҫаймасть,—
Эпир ҫапах уҫрӑмӑр;
Хӑта пусми пуставлӑ,
Пули-пулми пусаймасть,—
Эпир ҫапах пусрӑмӑр;
Хӑта сакки хӑмаҫлӑ,
Пули-пулми ларaймасть,
Эпир ҫапах лартӑмӑр;
Хӑта хӗрӗ пике хӗр,
Пули-пулми илеймест,
Эпир ҫапах илтӗмӗр.

Сӗлӗ арпи хуппине
Ҫилпе вӗҫсе каясран
Шӑналӑк витсе чартӑмӑр.
Ай, инке, сар инке,
Урӑх яла каясран
Ылттӑн парса чартӑмӑр.

Атте лаши тур лаша,
Шурӑм пуҫпе кӗҫенет;
Пирӗн ача, сар ача,
Шурӑмпуҫпе вӑранать;
Вырӑн пур та, мӑшӑр ҫук,
Мӑшӑр илме килтӗмӗр.

Сайра вӑрман сайхахне
Суйларӑмӑр яштине;
Пӳркелсенӗн хӗрсене
Суйларӑмӑр саррине.

Хир-хир урлӑ килтӗмӗр
Хӗрлӗ питлӗ хӗр илме;
Ял-ял урлӑ килтӗмӗр
Ялта ятлӑ хӗр илме;
Шур-шур урлӑ килтӗмӗр
Шур чӗреллӗ хӗр илме;
Вӑрман урлӑ килтӗмӗр
Вӑрӑм пӳллӗ хӗр илме.

Хӑта пире хваттер яр,
Хваттер яр та хӗрне пар,
Хӗрне пар та тӳшекне пар!
Тӳшекки пултӑр ҫиттиллӗ,
Ҫитти пултӑр ҫӳҫеллӗ,
Ҫӳҫи пултӑр шӑрҫаллӑ,
Шӑрҫи пултӑр тенкӗллӗ,
Тенки пултӑр майраллӑ,
Майри пултӑр ачаллӑ,
Ачи пултӑр картуслӑ;
Картус ҫинче вӑй вылять,
Пирӗн алра хӗр вылять.

Хулӑм укҫи илнӗ чух
Лӗкӗрт-лӗкӗрт култӑр-и?
Хӗрне илсе тухнӑ чух
Ёсӗклесе юлтӑр-и?

Ҫул хӗрринчи тирексем
Туратланса ларaҫҫӗ.
Ҫакӑ ялӑн хӗрӗсем
Эпӗр илме пырасса
Ӑратланса ларaҫҫӗ.
Пултӑр-пултӑр пултӑран
Тип яшкана каскалать.
Ҫакӑ ялӑн хӗресене
Амӗш кутран тапкалать.

Чакак, чакак чакалать,
Симӗс хӳрине пӑркалать.
Ах, евӗчӗ, евӗчӗ,
Ултӑ чике сурпаншӑн
Утмӑл уլттӑ хутларӑн,
Ҫичӗ чике тутӑршӑн
Ҫитмӗл ҫиччӗ хутларӑн.

Эпир пырас ҫул ҫинче
Тӑхӑр ӑсан йӑви пур,
Тӑхӑр ӑсан йӑвинче
Тӑхӑр ӑсан чӗппи пур;
Тӑхӑрӗш те вӗҫсессӗн,
Пӗр чӗппи те юлмӗ-ха.
Эпир илес хӗрсенӗн
Тӑхӑр тӗслӗ утти пур,

Çитмĕл тĕслĕ çăрхи пур;
Пирĕн алла кĕрсессĕн,

Пĕр çăрхи те юлмĕ-ха,
Пĕр утти те пулмĕ-ха.

1881 ç. Пўркел (Тутар республике, Буденный р.) Ив. Ник. Юркин пухнă.

## АЙ-ХАЙ, АЛТАТТИ

Ай-хай, Алтатти!
Хурарах та шатрарах.
Ах-ах, астуман,
Астумасăр илнĕ ăна.

Сарă кайăк тăриччен
Сарне туртса çыхинччĕ.
Ах-ах, астуман,
Астумасăр илнĕ ăна.

Хĕвел хĕрсе тухиччен
Питне тăрса çăвинччĕ.
Ах-ах, астуман,
Астумасăр илнĕ ăна.

Ула курак тăриччен
Тăрса ура сыринччĕ,
Ах-ах, астуман,
Астумасăр илнĕ ăна.

Вĕт-вĕт кайăк тăриччен
Вĕт салмине туринччĕ.
Ах-ах, астуман,
Астумасăр илнĕ ăна.

Хура курак тăриччен
Хуранне çуса çакинччĕ.
Ах-ах, астуман,
Астумасăр илнĕ ăна.

Вĕлтрен кайăк тăриччен
Витре çакса тухинччĕ.
Ах-ах, астуман,
Астумасăр илнĕ ăна.

Яманак, Çĕрпў р., ЧАССР. 1938 ç.
И. Патмар çырса илнĕ.

## ХĔРÇУМĔСЕН ЮРРИСЕМ

Туя туй пек тăвар-и?
Юр пек шурă тăвар-и?
Туя начар тумашкăн
Пирĕн аппа начар мар.

Арпалăхри тамана
Арпа чавса ларать-çке.
Ах, йыснаçăм Васли пур,
Куçне чавса ларать-çке.
Куç хупаххи пит вăрăм,
Çампа куçне уçаймасть.

Астăвăр-ха хăлата,—
Чăх чĕппине сĕтĕрет.
Астăвăр-ха кĕреве,—
Хур тукмакне сĕтĕрет.

Таллăм-таллăм шур пурçăн,
Талĕнчен епле уйăрар-ши?

Пĕрле ўснĕ аппана
Хамăртан епле уйăрар-ши?

Тăрăх, тăрăх шурă пир,
Тăрăхĕ вăрăм пулинччĕ.
Аппаçăмах Урине
Çичĕ юта кайсассăн,
Ĕмĕр вăрăм пулинччĕ.

Кĕске çаран утине
Кăçал çулас теменччĕ,—
Шăпи тухрĕ, мĕн тăвас?
Аппаçăмах Ульки пур
Кăçал каяс хĕр марччĕ,
Çырни тухрĕ, мĕн тăвас?

Ах, хăтаçăм, хăтаçăм,
Çичĕ капан ыраш(ĕ) пур,
Çавна çапма кин илет.

Çавна çапса пĕтерсен,
Килне калле ярăп, тет.

Ах, тăхлачă, тăхлачă,
Çич вăлашка кĕпи пур,
Виç вăлашки шăршланнă,
Тват вăлашки хуртланнă,
Çавна çума кин илет,
Çавна çуса пĕтерсен,
Килне калле ярăп, тет.

Уç-ха, инке, пахчуна,
Купăсту пуçне курар ха.
Ил-ха, йысна, çĕлĕкне,
Кукша пуçна кӳрар-ха!
Çĕлĕкне илсе пăхсассăн,
Навус çинчи кăмпа пек.

Ылттăн укçа памасан,
Тыттармастпăр аппана,
Кĕмĕл укçа памасан,
Кăтартмастпăр аппана,
Пăхăр укça памасан,
Пăхтармастпăр аппана.

Ах, йыснаçăм, йыснаçăм,
Виçĕ тĕрке пушăтран
Храх çăпата кăларчĕ,—
Вăл та пулин сулахай.
Сулахайĕ тарамччĕ,
Вăл та пулин пасарăн.
Ах, аппаçăм, аппаçăм,
Виçĕ пĕрчĕ йĕтĕнрен
Кĕрӳ кĕпи кăларчĕ—
Вăл та пулин тĕрĕллĕ.

Хура-хура хурлăхан,
Хурлавас кун паян мĕн;
Ах, аппаçăм, аппаçăм,
Уйăрлас кун паян мĕн.

Мĕншĕн шăппăн тăратăр,
Туя начар тăватăр?
Туя начар тумашкăн
Пирĕн аппа начар мар:
Вăтăр купа капань пек,
Аллă лаша вăйĕ пек,
Туртсан тимĕр татас пек,
Тапсан тăва ватас пек.

Пирĕн йысна пит аван:
Кукăр хурăн кучĕ пек,
Вилнĕ сурăх пуçĕ пек.
Тути-çăварĕ майĕ çук,—
Çĕпре кăкшăм çăварĕ пек.
Хĕреслĕ тенкĕн хĕрри катăк,
Пирĕн йыснан шăлĕ катăк.

Турти епле—тупăлха,
Пĕкки епле—хурама;
Пăхăр халĕ кĕрĕве,
Пуçĕ епле—çĕрелле,
Çĕр чавакан сысна пек;
Сысна тесен, шăрчĕ çук,
Этем тесен, сăнĕ çук,
Йытă тесен, тĕсĕ çук.

1881 ç. Пӳркел ялĕнче И. Н. Юркин пухнă.

## ТУЙ ХАЛĂХ ЮРРИСЕМ

Тĕпĕр-тĕпĕр килтĕмĕр,
Çĕр чĕтретсе килтĕмĕр.
Выртан каска йăванчĕ,
Ларан йывăç хумханчĕ.

Хура-хура хурлăхан
Хурланасси паян кун.
Хĕрлĕ хĕрлĕ хĕрлĕхен
Хĕрелесси хĕвеллĕ кун.
Инкеçĕмех Урине
Уйăрласси паян кун.

Вуник шăллă урапа
Пĕр йĕркерен кусинччĕ.
Инкеçĕмех Урине
Пĕр ăспалан тăринччĕ.

Путĕр-путĕр путене,
Унăн йăви хăш тĕлте?
Ыраш ани пуçĕнче.
Ун йăвине мĕн витнĕ?
Хăмăшран касса хăва витнĕ.
Пирĕн хăта хăш тĕлте?
Аслă ялăн варринче,
Улма сачĕ умĕнче.
Унăн хĕрĕ хăш тĕлте?
Шурă чаршав хыçĕнче,
Шур пĕркенчĕк пуçĕнче,
Кĕмĕл сулли аллинче,
Кĕмĕл çĕрри пӳрнинче.

Ут утлантăм йĕнерсĕр,
Туя килтĕм арăмсăр,
Турăх çирĕм кашăксăр,
Мухмăрларам шӳрпесĕр,
Сиве шăнтăм кĕрĕксĕр.
Ватă та пулин арăмччĕ,
Çĕтĕк те пулин кĕрĕкчĕ.

Хура вăрман хуххине
Суйларăмăр паркине,
Сайра вăрман сайхахне
Суйларăмăр яштакне.
Йыснаçăмах Иван пур,
Суйларăмăр саррине,
Тĕлпултăмăр хурине;
Инкеçĕмех Урине,
Тĕлпултăмăр хурине.

Ах, хăтаçăм, хăтаçăм,
Тĕренче витнĕ пӳрт çине
Шулап витсе кĕрĕпĕр;
Пусса кĕрес пусмине
Пустав сарса кĕрĕпĕр,
Пусма çемçе тăвăпăр;
Тытса кĕрес тыткине
Йĕс пустарса кĕрĕпĕр,
Тытма яка тăвăпăр;
Тăмран çапнă кăмакине
Шăрçа çапса кĕрĕпĕр;
Шăрçа çапнă кăмакине
Йĕс вутă хутса ярăпăр;
Йĕс вутă хĕрсе çуннă чух
Хĕрне илсе тухăпăр,
Пӳртне ишсе хăварăпăр;

Амăшĕ тытĕ хĕр хуйхи,
Ашшĕ тытĕ пӳрт хуйхи.

Туйăм-туйăм, темесен,
Туя илсе каймаççĕ;
Айăм-айăм, темесен,
Ая минтер хумаççĕ,
Пуç ыратать, темесен,
Мухмăр шӳрпи памаççĕ;
Киле каяс, темесен,
Ыр сăрине памаççĕ.

Кинĕм, кинĕм Укçине
Сăхлантарчĕ тĕсĕпе,
Ăмсантарчĕ пĕвĕпе,
Йăпатайрĕ чĕлхипе,
Илĕртейрĕ куçĕпе.

Вуник тантăш — пĕр тантăш
Вуник пăчăр тытрăмăр.
Вуник пăчăр пыршинчен
Чĕн тилхепе турăмăр.
Асаттенĕн çăкине
Касрăмăр та ятăмăр,
Параппан туса килтĕмĕр.
Ĕмĕрченĕн йыттине
Çапрăмăр та прахрăмăр,
Параппан пичĕ турăмăр.
Кинемейĕн кушакне
Çапрăмăр та прахрăмăр,
Параппан çакки турăмăр.
Аслă аппан куркине
Çапрăмăр та ватрăмăр,
Параппан тукмак(ĕ) турăмăр.

1881 ç. Пӳркел ялĕнче И. Н. Юркин çырса илнĕ.

## ХĔР ЙĔНИСЕМ

Ĕлĕкхи вăхăтра хĕрсем хăйсен ирĕкĕпе (кама каяс тенĕ çавна) качча кайма пултарайман. Вĕсене ашшĕ-амăшĕсем хăйсем суйласа илнĕ çынна ирĕксĕрех тытса панă. Вара качча каякан хĕрсем, туй вăхăтĕнче хăйсен тăванĕсем патне кĕрсе çӳресе, хĕрйĕрри сăввисене кала-кала йĕрсе юрланă.

Вăл юрăсенче эпир хĕрарăмăн хурлă шăпине, унăн тивĕçлĕхне таптанине витĕр курса тăратпăр.

Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Хапха умне юр çунă.
Кĕреçепе хырмасан,
Шăпăрпала шăлмасан,

Хĕлле çунă шурă юр
Çулла та каймĕ, терĕн-им?
Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Кунтан кăçал каймасан,

Ёмĕр каймĕ терĕн-им?

Ман çийĕмри шур кĕпе,
Шурă та шурă тееççĕ,
Ун шуррипе мĕн тăвас?
Таçтан çĕвви курăнать.
Эпĕ каяс ачана
Лайăх та лайăх тееççĕ.
Ун лайăхпе мĕн тăвас?
Кӳрши-арши мухтанмасть.

Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Куса-тăран урапу
Кусми пулчим, аттеçĕм?
Ёçле-тăран пĕр хĕрӳ
Ёçлеми пулчим, аттеçĕм?

Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Хуран тулли сĕт çакрăн,
Хурама вутти хурайрăн,
Вĕре-тăтăр, терĕн-им?
Ах, аннеçем, аннеçĕм,
Кунтан каçал парсассăн,
Йĕре тăтăр, терĕн-им?

Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Кĕпе кĕлерме тытăнсан,
Чавса таран кĕл пулăн;
Кĕпе çума тытăнсан,
Пилĕк таран шыв пулăн.
Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Кĕпе çуса килсессĕн,
Пӳрте чупса кĕрĕн те
Тĕпелĕн-алăкăн пăхкалăн,
Сана пулăшас хĕрӳ çук,
Эсĕ кĕтсе илес çук.

Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Хĕвеле хирĕç сат пахчи;
Йĕри-тавра чие ларт,
Варне улма йывăç ларт,
Чăпар куккук тытса яр;
Чăпар куккук авăтĕ,
Улма йывăç хумханĕ,
Эпĕ ютра пулсан та,
Хĕрачу пур пек туйăнĕ.

Çӳлĕ тăвăн пуçĕнче
Ярăнса вĕçет пĕр тăри.
Епле ярăнса вĕçсен те
Тытса илес çынни çук.
Çичĕ ютăн килĕнче
Татăлса йĕрет хĕрача.
Темчул татăлса йĕрсен те,
Хутне кĕрес çынни çук.

Çӳлĕк пуçне юр çунă,
Шăнкăртатать юр шывĕ;
Шăнкартатмасть юр шывĕ,
Шăпăртатать тан шывĕ.
Çичĕ ютăн килĕнче
Шăнкăртатать ман сасă:
Шăнкăртатмасть ман сасă,
Шăпăртатать куççулĕ.

Атте картиш тăваткăл,
Тăват кĕтесре тват юпа,
Юписерен йĕс ункă,
Ункисерен чĕн йĕвен;
Ыр тетеçĕм, тетеçĕм,
Витерен утна тытнă чух
Пĕр йĕвенне илсе тыт.
Пике пек йăмăкна леçнĕ чух
Çĕр пин мулна ан шелле.

Ыр инкеçĕм, инкеçĕм,
Кунтан эпĕ кайсассăн,
Тĕпелте çын пулĕ-ши?
Шурă чаршав карса яр
Эпĕ ларнă вырăна.
Мамăк минтер кĕртсе хур,
Сарă кайăк тытса яр.
Сарă кайăк юр юрлĕ,
Шурă чаршав хумханĕ,—
Епле лайăх пек туйăнсан та,
Пултăру пек туйăнмĕ.

Ах, йыснаçăм, йыснаçăм,
Эсир каяс çул çинче
Çирĕк ларать кашласа.
Çирĕк çулçи çиле май,
Эсир каятăр киле май—
Атте килне асăнса,
Эп юлатăп хурланса
Çич ют килне ĕмĕре...

Ыр аппаçăм, аппаçăм,
Эсир каяс çул çинче
Пĕр аякки пĕрлĕхен,

Пĕр аякки хурлăхан,
Пуха, пуха кай, аппа.
Йăмăк юлчĕ, теейсе,
Йĕре, йĕре кай, аппа.

Ыр шăлăмçăм Энтĕри,
Шур перчетке тăхăнса
Урам тăрăх ан çӳре,
Аллана хыт ан сулла:
Аппа кайрĕ, теейсе,
Ялан йĕрсе ан çӳре.

Ыр йăмăкçăм Укçине,
Кунтан эпĕ кайсассăн,
Ушкăн-ушкăн хĕр иртĕ.
Ушкăн-ушкăн хĕр çинче
Санăн аппу пулас çук...

Ыр тетеçĕм, тетеçĕм,
Хура вăрман варринче
Хурлăхан ӳсет хурланса,
Татаймăн-ши, тетеçĕм?
Çеçен хирĕн варринче
Ыр ут тăрать вĕренте,
Ярайăн-ши вĕренне?
Çичĕ ютăн килĕнче
Йăмăку йĕрет, тетеçĕм,
Çăлаймăн-ши йăмăкна?

Валак тăрăх шыв юхать,
Алă çума юрамасть.
Алă çума юрасан,
Мĕншĕн питме çуман-ши?
Пӳрт çумĕпе шыв юхать,
Кĕпе чӳхеме юрамасть.
Кĕпе чӳхеме юрасан,
Мĕншĕн тухса чӳхемен-ши?
Кашнийĕнех хĕр ӳсет,
Килте ларма юрамасть.
Килте ларма юрасан,
Мĕншĕн эп те ларман-ши?

Ай-хай, ырă тантăшсем,
Эсир тăратăр пике пек,
Асăнаттăм шăрçа пек,—
Ятăрсене пĕлместĕп.
Атăл хĕрне çитмесĕр
Атта хывса хурас мар:
Çич ют килне çитмесĕр
Çич ют ăсне тытас мар.

Ыр инкеçĕм, инкеçĕм,
Тĕпелти тӳшек тĕк пулин,
Тĕкне-çӳçне ан тустар.
Манпа тантăш хĕрсене
Килекене килех, те,
Каякана каях, те.

Таяпа шывĕ аслă шыв,
Чупаттăм та кĕреттĕм,
Ярăнса çӳçме тураттăм.
Ярăнса çӳçме туранă чух
Çичĕ ютăн ачипе
Çуçĕм пĕрчи çыхланчĕ.
Сăвап сунан ывăл-хĕр,
Салтса ярăр çав çӳçе.

Ах, аннеçĕм, аннеçĕм,
Малти пӳртне кĕрĕн те,
Тĕпелелле пăхăн та,
Хĕрĕм çуках, теейĕн;
Алăк патне пăхăн та,
Сысна вити, теейĕн;
Шапăр тытса шалăн та
Куççуллӳне чараймăн;
Хĕрӳ асна килсессĕн,
Шăлас урайне шăлаймăн.
Нихçан асна килмесен те
Çавăн чухне килĕп-ха.

Ах, шăллăмçăм Çămиун,
Тăваткăл кӳлле карта тыт,
Кайăк кăвакаль эп пулăп.
Ют çын пыра пуçласан,
Шалтан, шала эп чăмăп,
Тăван пыра пуçласан,
Тултан, тула эп тухăп.
Ах, шăллăмçăм Çămиун,
Лаша кӳлме тытăнсан,
Хурама пĕккӳ хуçăлчим?
Аппу татăлса йĕнĕ чух
Çамрăк кăмăлу хуçăлчим?

Пирĕн аттен хăй çути
Пăхăр тĕслĕ курăнать:
Пăхăр тĕслĕ курăнсан та,
Ура ĕçĕ те тăваттăм,
Ал ĕçĕ те тăваттăм.
Çичĕ ютăн хăй çути

Кĕмĕл тĕслĕ куранать;
Кĕмĕл тĕслĕ курансан та,
Ура ĕçĕ те тăваймăп
Ал ĕçĕ те тăваймăп.

Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Улма йывăç лартрăн та
Пĕр витре шыв сапмарăн.
Çулçи тăкăнтăр, терĕн-им,
Улми хăртăр, терĕн-им?
Ах, аттеçĕм, аттеçĕм,
Инçе çула парас та,
Йĕрсе пурăнтăр, терĕн-им,
Тĕсĕ шуртăр, терĕн-им?

Ыр аттеçĕм-аннеçĕм,
Эсир килте çывратра?
Эпĕ кунта çывăрмасп.
Çывăрмасăрах тĕллентĕм:

Çыр хĕррипе пырап пек,
Çыр ишĕлсе пырать пек,
Хура çырла пухап пек.
Çырĕ ишĕлсе пыни—
Эсир килте йĕрессе,
Хура çырла пуçтарни—
Эпĕ кунта йĕрессе.

Кайрăм хура вăрмана
Хурăн çырли суйлама:
Хурăн çырли пиçиччен
Лартăм хурăн айĕнче;
Хурăн çырли пиçрĕ те,
Тухрăм хура вăрмантан.
Лартăм атте килĕнче
Пĕвĕм ӳсее çитиччен:
Пĕвĕм ӳсее çитрĕ те,
Тухап атте килĕнчен.

1881 ç. И. Н. Юркин хăйĕн амăшĕнчен Акулина Филипповнăран (Пӳркел, Тутар респуб., Буденный р.) çырса илнĕ.

## СУТМАЛЛИ ЮМАХСЕМ

Сутмалли е тупмалли юмахсем тесе пĕр-пĕр явлени е япала çинчен ытарлăн (аллегорилле) каланă кĕске формăллă фольклор произведенийĕсене калаççĕ. Классем пуçланса кайичченхи вăхăтра сутмалли юмахсем уйрăм йăласемпе çыхăнса пынă, çав майпа вĕсен пĕлтерĕшĕ те асамлă характерлă пулнă. Сутмалли юмахсем хушшинче питĕ авал пуçланса кайнисем те тĕл пулаççĕ (сăмахран, çанталăк явленийĕсем çинчен хунисем). Содержани енчен илсен, вĕсене мифологиллĕ юмахсем теме пулать.

Пурнăç улшăнса пынă майĕпе сутмалли юмахсем те улшăнса çĕнелсе пынă. Вĕсем хăйсен форми енчен çеç мар, содержанийĕ енчен те пачах урăхланнă. Юлашкинчен вĕсен асамлă характерĕ пачах çухалнă та, сутмалли юмахсем ăса йăпатмалли произведенисем вырăнне çеç тăрса юлнă.

Сутмалли юмахсем хăш вăхăтра çурални çинчен вĕсен содержанийĕ тарăх пĕлме пулать. Сăмахран, çутçанталăк явленийĕсем çинчен калакан юмахсенчен хăшĕ-пĕрисем сĕм авалхи вăхăтрах пулма пултарнă, культурăпа çыхăнса тăраканнисем, паллах, пирĕн кунсенче çеç çуралма пултарнă.

Сутмалли юмахсем хăйсен форми енчен çурма-поэтикăлла произведенисем пулса тăраççĕ. Хăш чух вăл юмахсенче образсем ансат, тепĕр чух питĕ нумай енлĕ. Сутмалли юмахсен сасă янравлăхĕ питĕ пуян та хăйне манерлĕ.

### ÇУТÇАНТАЛĂК

Аçтăрканта вутă касаççĕ, турпасĕ кунта сирпĕнет. (*Çиçĕм.*)

Ампарăшки ярăшки, кулса выртать упăшки. (*Уйăхпа хĕвел.*)

Ампар урлă кăвак лаша пăхать. (*Шурăмпуç.*)

Аслăк çинче тимĕр-кăвак лаша кĕçенет. (*Аслати.*)

Алăсăр-урасăр кĕпер хывăп. (*Пăр шăнни.*)

Ашшĕ тула тухиччен ывăлĕ Мускава çитĕ. (*Шухăш, тĕтĕм.*)

Асанне пӳрчĕ умĕнче çур çăкăр çакăнса тăрать; йытăсем вĕреççĕ, хыпса илеймеççĕ. (*Уйăх.*)

Вĕлт турăм, вĕлле хыçне пытантăм. (*Çиçĕм.*)

И эпирччĕ, эпирччĕ, эпир çĕрĕн пинĕнччĕ; пĕр пĕркенчек айне пуçтарăнтăмăр, çутăличчен салантăмăр. (*Çăлтăрсем.*)

Мана çынсем кĕтеççĕ, эп килнине курсанах, пурте тарса пĕтеççĕ. (*Çумăр.*)

Пĕри тăкать, тепри ĕçет, виççĕмĕшĕ ӳсет. (*Çумăр, çĕр, курăк.*)

Сăмсасăр кăвакал пăр шăтарать. (*Тумла.*)

Çеçенхир варринче ылттăн туя вăй вылять. (*Çиçĕм çиçни.*)

Çеçенхир варринче ват юман, ват юманăн вуникĕ турат, вуникĕ туратра тăватшар йăва, тăватшар йăвара çичшер çăмарта. (*Çулталăк.*)

Çĕрте çĕрмест, шывра путмасть. (*Кăмрăк.*)

Çеçенхирте туман урапа кусать. (*Çавраçил.*)

Тулта ту пек, пӳртре шыв пек. (*Юр.*)

Чупса-чупса пынă чух кĕмĕл çĕрĕ тухса ӳкрĕ; ăна уйăх курчĕ—илмерĕ, хĕвел килчĕ—илсе кайрĕ. (*Сывлăм.*)

Уйăх курать, хĕвел илет. (*Тăм ӳкни.*)

Хĕлле те пĕр кĕрӳ, çулла та пĕр кĕрӳ. (*Чăрăш, хыр.*)

Юман кутне юн тăкнă. (*Хĕвел анни.*)

## КУЛЬТУРА. ПУРНĂÇРИ ЯВЛЕНИСЕМ

Автанпа ака турăм, йăран хĕррине ларса кантăм. (*Çыру çырни.*)

Аякран курать, хытă çыртать. (*Пăшал.*)

Ани шурă, вăрлăхĕ хура. (*Кĕнеке.*)

Ăсĕ çук, ĕçĕ пур. (*Сехет.*)

Пӳрт çинчен ӳксен вилмест, кĕпер çинчен ӳксен вилет. (*Хут.*)

Пин-пин пинече пин халăха култарать; хурама хуппи хултăрчи хура халăха култарать. (*Сăрнайпа купăс.*)

Сухапуçĕ тимĕр, анийĕ чул, вăрлăхĕ йывăç. (*Çулу, вутчулĕ, ăвă.*)

Чух-чух тарать, ух-ух хăвалать. (*Чугун çул.*)

Улăх тăрăх ула вăкăр мĕкĕрсе хăпарать. (*Прахут.*)

Тватă кăлтăркка, икĕ йăлтăркка, пер мăрăлкка. (*Автомобиль.*)

Хирелле кайнă чух ялалла пăхать, ялалла кайнă чух хирелле пăхать. (*Кутамкка.*)

## ĔÇ, ĔÇХАТĔРĔСЕМ

Атар капанне айĕнчен туртаççĕ. (*Çăм арлани.*)

Атăл урлă хĕрĕх чĕчеллĕ ĕне каçать. (*Сӳре.*)

Ар лап-лап, пир лап-лап, сенкер саплап. (*Çăкăр унани.*)

Асаттенĕн хăрах ура, вăл та пулин кукăр. (*Шĕшлĕ.*)

Ăвăслăх витĕр юр çăвать. (*Çăнăх аллани.*)

Вăрмана мĕн кĕмест? (*Сӳре.*)

Вĕрен тăрăх ăйăр çитереп. (*Çип арлани.*)

Вăрт-варт вире ял, çаврăнтăм пăхрăм—хамăр ял. (*Хутăр йывăççи.*)

Шăлсăр йытă шăмă кышлать. (*Сӳс тыллани*).

Ик хĕрринчен çуптартăм, вăта çĕртен сыптартăм. (*Çăнăх аллани*).

Ир те чак-чак, каç та чак-чак, варри вак-вак. (*Пăри тӳни*).

Кăмакара лăпсăр-лăпсăр упа ташлать. (*Милке*).

Кăвакалĕ чăмса пырать, хыçран пăрĕ шăнса пырать. (*Пир тĕртни*).

Пĕчĕкçеççĕ пĕкече пĕтĕм хире çаврăнать. (*Çурла.*)

Пĕлсен те калăп, пĕлмесен те калăп. (*Калăп.*)

Сак айĕнче сарă кĕсре кĕçенет. (*Сăра юхтарни.*)

Шакла пуçлă Çтаппанăн пин куç, пĕрийĕ те кураймасть. (*Пўрнеске.*)

Тўп-тўп! Тўпен кĕлти, мĕн кĕлти? Ваш-ваш кĕлти, мĕн кĕлти? (*Вир тўни.*)

Тимĕр йыттăн сўс хўре. (*Йĕп.*)

Утрăм-утрăм, улма тупрăм, улталарăм—кĕмĕл тупрăм; илчĕ килчĕ, парне пачĕ, хутаç кĕрў ташша ячĕ, енчĕк кĕрў çупа пачĕ. (*Кĕрĕпе шăлтăрма.*)

Юмах юплĕ, хўри кукăр. (*Хачă.*)

## КИЛ-ÇУРТ. КИЛ-ÇУРТ ТАВРАШĔ

Ашшĕ-амăшĕ тўрĕ, ачисем кукăр. (*Çатан.*)

Ахмат пиччен куçĕ çуллă. (*Çатма.*)

Ахар йытти ашса пырать, аякки витĕр хĕвел пăхать. (*Çара çуна.*)

Амăшĕн аллă саплăк, хĕрĕн хĕрĕх саплăк. (*Кăмака.*)

Атăл урлă лăпсăр-лăпсăр упа каçать. (*Утă çуни.*)

Виçĕ уралла, икĕ хăлхаллă. (*Лахан.*)

Энтри шалта, пуçĕ тулта. (*Пўрт пĕрени.*)

Ĕни витере, хўри тўпере. (*Кăмака, мăръе, тĕтĕм.*)

Ĕни мĕкĕрет, хўри хĕсĕнет. (*Арман.*)

Икĕ шăллĕ малта тараççĕ, икĕ пиччĕшĕ хыçалтан хăвалаççĕ. Анчах тем чул хăваласан та хăваласа çитеймеççĕ. (*Урапа куса-тăранĕсем.*)

Лашаран çўлĕ, автанран лутра. (*Йĕнерчĕк.*)

Пĕр шăшийĕн ик хўре. (*Çăпата.*)

Пĕр пĕркенчĕк айĕнче тăватă хĕр хўхлесе лараççĕ. (*Сĕтел урисем.*)

Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, килен-каян чуптăвать. (*Шыв курки.*)

Çулла сивĕ, хĕлле ăшă. (*Нўхреп.*)

Чунли тарать, чунсăрри хăвалать. (*Лаша, çунапа урапа.*)

Хура вăкăр айăк пĕрчийĕ хурана шăнăçмасть. (*Хуран хăлăпĕ.*)

Йĕс-йĕс карта, йĕс карта, йĕс картара тимĕр карта, тимĕр картара хĕрлĕ пăру. (*Сăмавар.*)

## ТЫРПУЛСЕМ, ПАХЧА-ÇИМĔÇСЕМ

Арăк мар, çарăк мар, çўлçи ешĕл—милĕк мар. (*Сухан.*)

Виç кĕтеслĕ чăлан пур, ниçтан кĕме шăтăк çук. (*Хура тул.*)

Исенет те писенет, çулталăксăр тапранмасть. (*Калча.*)

Нарат-нарат, турат-турат, турат çинче йăва пур, йăва çинче çăмартисем. (*Пăрçа.*)

Пĕр хутаçра икĕ мăйăр. (*Пăри тĕшши.*)

Пĕчĕкçеççĕ кинĕм пур, пин хут кĕпе тăхăнать. (*Купăста пуçĕ.*)

Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă. (*Майăр.*)

Симĕс арчара хĕрлĕ тавар. (*Арбуз.*)

Çĕр-çĕрлерĕм, çĕрĕк пăяв туртрăм; пур-пурларăм, пур халăха юрарăм. (*Сухан хуппи.*)

Ши! кайрĕ, пи! кайрĕ, çӳле кайрĕ—çăмарта турĕ. (*Хăмла.*)

Йĕтĕр-йĕтĕр йĕтĕрпи, йĕтĕр тăрри шерепи. (*Сĕлĕ.*)

## ЧĔРЧУНСЕМ

Айĕ те тӳшек, çийĕ те тӳшек. (*Хăнкăла.*)

Ăмăрткайăк шыв ĕçет, ик текерлĕк вăй вылять. (*Лаша шыв ĕçни.*)

Кĕреçи малта, ырçи хыçалта. (*Кăвакал.*)

Сар-сар ана, сар ана, сар ана тăрринче сар кайăк, çав сар кайăк аватсан, вилнĕ çынна вăрататъ. (*Автан.*)

Çеçенхир варринче туй хуранĕ вĕрет. (*Кăткă тĕмески.*)

Тӳн-тӳн, тӳн карчăк, тӳн карчăкăн пин шăрпăк. (*Чĕрĕп.*)

Твата старик, тватăшĕн те сухалĕсем каялла. (*Лаша урисем.*)

Чунлинчен чунсăрри, чунсăрринчен чунли çуралĕ. (*Çăмарта.*)

Хир-хир урлă, уй-уй урла эреветлĕ-теветлĕ хĕр килет. (*Чĕкеç.*)

Пӳркел, И. Н. Юркин 1902—10 ç. пухнă.

## ПРЕДАНИСЕМ

Преданисем тесе епле те пулин пулман япала çинчен чăн курнă пек туса каласа панисене калаççĕ. Преданисен шутне этиологилле легендăсем (тĕнче пуçланни çинчен, шывсем-шурсем, тусем, тĕрлĕ чĕрчунсем епле пуçланса кайни çинчен каласа панисем), арçурисем, шыврисем, хĕрт-суртсем тата ытти усал-тĕселсем çинчен каласа кăтартнисем тата тухатмăшсем çинчен кала-кала панисем кĕреççĕ. Вăл калавсем сĕм авалах пуçланса кайнă, мĕншĕн тесен авалхи çынсем, çутçанталăкăн законĕсемпе явленийĕсене ăнланайман пирки, темĕнле „усал сывлăша“ та ĕненнĕ.

Преданисем хăйсен форми енчен питĕ ансат произведенисем пулса тăраççĕ. Вĕсенче калава (произведенине) илемлетмелли меслетсем сахалтарах, ун вырăнне фактсем ытларах.

Ирĕклĕ пурнăçпа пурăнакан Совет çĕршывĕнчи этемсен ăс-тăнĕ кунран кунах аталанса, ӳссе пырать. Шуйттансемпе усал сывлăшсене, тĕрлĕ тухатмăшсене ĕненесси те пĕтсе пырать. Çавăн пирки преданисем хальхи вăхăтра халăх хушшинче сарăлма пултараймаççĕ. Çапах та вăл тĕшмĕшлĕхе пĕтĕмĕшпех тĕп тумашкăн вĕсене хирĕç татăклăнах кĕрешни кирлĕ.

### ВĔРЕÇĔЛЕНЕ ПĂШАЛПА ПЕНИ

Манăн çак Энтĕр ялĕнче пĕр пуйккă тăхлачă пурччĕ. Шакарай Васук арăмĕ тетчĕç ăна. Тăхлачăн Энтюк ятлă ывăлĕ пĕрре вăрçăран курма таврăнать. Арăмĕ Чакак ятлăччĕ вара, кин пулать ĕнтĕ вăл. Кинĕн тата Марье ятлă хĕрĕ те пурччĕ.

Энтюк кĕрӳ курса кайнă хыççăн пирĕн Чакак кин тем аптраса çӳрекен пулать.

Пĕрре çапла тăхлачăпа тĕл пулатпăр та, тăхлачă: ман кине тем пулчĕ, хăта, кин аташать вĕт,—тет,—пырса куран пуль,—тет. Ăна упăшки хыççăн вĕреçĕлен ернĕ пулнă иккен. Тимĕрçĕ Савалейĕнчен илнĕ тапкăчăллă кĕске пăшалăм пурччĕ. Çавна чикрĕм те кайрăм хай тăхлачă патне. Кĕпçи ăшне пĕр тĕпренчĕк çăкăр ятăм. Атту усал çине пăшал каймасть. Мĕн пулĕ, тетĕп. Касхине тăхлачă кăмака çине выртрĕ, кин тĕпеле, эпĕ кулник сакки çине выртрăм. Çывăрмастăп вĕт. Çывăрсан, янклат-

тарса хăварать вăл. Выртатăп хайхи. Нумай выртап-и, сахал-и, —ман Чакак кин хайхи еррипен тăчĕ те... тухать. Тухрĕ те хайхи, мăкăр-мăкăр калаçса тăраççĕ. Эпĕ пăшалама меллесе тытрăм та хуллен кăна алăк патне шуса пытăм. Итлетĕп ĕнтĕ. Кин: хăтасем килнĕ тесе каласа парать усала, ман çинчен калать иккен, аскăн. Алăка уçрăм та: кин, кампа калаçатăн, час кĕр,—терĕм. Кин мана хирĕç чĕнмесĕр-тумасăрах кĕрсе выртрĕ. Эпĕ каллех сыхласа выртатăп. Татах тухрĕ хайхи, татах мăкăртатма тытăнчĕç. Каллех çавăн пек шуйлантарса кўртрĕм кана. Кĕрет те ним чĕнми выртать. Ман кин васка пуçларĕ вĕт хайхи, виççĕмĕш хут татах кăштăртатса тухрĕ. Кĕпине йўле янă хăй, пуçĕнче тутăрĕ те çук. Каллех мăкăртатаççĕ. Тем калаçаççĕ ĕнтĕ, такам пĕлет усалăнне. Еррипен кăна алăк патне пырса яр-р!—уçрăм та алăка: тарс!—тутартăм. Шари-и!—кăшкăрса ячĕ кин. Час кĕр, кампа калаçатăн?—терĕм. Энтюкпа,—тет кин. Мĕн аннў кучĕ Энтюкĕ,—тетĕп. Хăпăл-хапăл тăхлача вăратрăм та веçех каласа патăм. Кине кутăн çăпата сыртарса, кўршĕсем патне леçсе яма хушрăм. Çапла туса, кине Лявук хăта патне леçсе хăварнă. Тепĕр каçхине леш, вĕреçĕленĕ, йĕрне шыраса çўрет, тет. Çакăнталлах кайнă-çке,—тесе калать, тет. Йĕрĕ кутăн пулнипе çухатнă иккен. Лявук чўречи витĕр пырса: Чакак çук-и кунта?—тесе ыйтнă. Лявук хулăн сасăллăччĕ вăл, хытă кăшкăрса пăрахсан, пăрăнса кайрĕ, тет, вара усалĕ.

Тепĕр каçхине кине тупса, пĕтĕм çўç-пуçне тăлпаса пĕтернĕ. Папуй çирĕм,—тесех вилчĕ кин.

Яков Козлов каласа панă. 82 ç. (Шăмăрша р. Виçпўрт-Шăмăршă ялĕ.) 1938 ç. В. Бараев çырса илнĕ.

Энтюк салтакран килсен тепре авланчĕ вара. Пĕрре чиркĕве кĕлле кайсан, Энтюкăн иккĕмĕш арамĕ Чакака вĕреçĕлен ерни çинчен такама каласа тăрать. Çав вăхăтра йывăç çумĕнче тăракан амăшĕ ним пĕлми тĕшĕрĕлсе анчĕ. Вĕреçĕлен хăй çинчен калаçнине кайран та юратмасть, теççĕ çав.

Кисамеев Степан хушса каланă. Энтриел ялĕ, Шăмăрша районĕ.

## СУККĂР ХВЕРИ (СУККĂР ШУЙТТАН)

Кĕске Петюк амăшне тытса пăрахатчĕ. Ануш аппа теттĕмĕрччĕ ăна. Пĕрре çапла çемьисем хăнана кайнă та, килне çамрăк хĕрачасене хăварнă. Элюш ашшĕ Кириле папай та юлнă иккен унта. Эпĕр каччă пулнă та-ха ун чухне, пытăм çапла. Вĕрлĕк хапхаччĕ вара хăйсен. Пытăм та, картиш енчи чўречинчен тем пысăкĕш хура мĕлке кармашса тăнине курах кайрăм. Ку, суккăр Еливан пулас, хăратам-ха,—тетĕп. Аллине çаклансан, упа пек лутăркатчĕ вара çынна, вăрттăн пыратăп. Хайхи суккăр Еливан пўрт алăкĕ еннелле хыпашласа пыра пуçларĕ. Эпĕ ун хыçĕнчен пыратăп. Аллăмра темĕн пысăкĕш рычак. Алăк умне çитрĕ те

кӗлет еннелле суланчӗ. Мӗн шырать ку?—тетӗп. Унта та тем хыпашласа пырать. Еливанах, тетӗп, ӗнтӗ. Лупас айнелле каять. Мӗн мурӗ хӑтланса ҫӳрет ку?—тетӗп. Рычака ҫӗклерӗм те яра патӑм кӗлет ҫумне пӗтӗм вӑйӑмпа. Вӑйлӑ пулнӑ, ун чухне ҫамрӑк вӗт-ха. Те ҫӗре, те ҫӳле кайрӗ Еливан, пачах ҫухалчӗ. Хам та шикленсе кайрӑм. Пӳрте чупса кӗретӗп те Кириле папая каласа паратӑп.

— Суккӑр хвери пулнӑ пулӗ, терӗ. Хунарпа тухса шыратпӑр та, йӗрӗ те ҫук. Ануш аппана тытса пӑрахаканӗ ҫавӑ пулнӑ иккен. Ҫавӑнтан вара пӗрре тытса пӑрахин хуть!

Яков Козлов каласа панӑ, Вл. Бараев ҫырса илнӗ.

## ХӖРТ-СУРТСЕМ (ПИРӖШТИСЕМ) ЙӖРНИ

Ҫурта пӗччен хӑварсан, пирӗштисем йӗреҫҫӗ, тени тӗрӗс ҫав вӑл. Ӗлӗк ҫапла Якрав пиччесем ҫуртне хупсах таҫта тухса кайнӑччӗ. Вара ҫав Якрав ҫуртӗнче шавах йӗрнӗ сасӑ илтӗнетчӗ. Ҫапҫамрӑк хӗрача сасси пек ачаш сасӑллӑччӗ.

— Эй, хуҫамӑр кайрӗ, хуҫамӑр кайрӗ,—тесе йӗретчӗҫ. Пӗчӗкҫеҫҫӗ хӗрачасем вӗсем, шап-шурӑ тумпала. Хуҫи лайӑх, ырӑ пулсан, пирӗшти яланах ҫурта пулӑшать. Шӑнкӑр-р, шӑнкӑр, йӑнкӑр-р, йӑнкӑр! тутарса (кӗнчеле) авӑрласа ларнине хам та темиҫе илтнӗ.

Ӗҫкӗрен-мӗнрен таврӑнсан, яланах: Тавси, хӗрт-сурт, темелле. Вӑл ӑна сума-суни пулать.

Хӗрт-сурт выльӑха та сават. Юратнӑ лашан ҫилхине хӗр ҫӳҫне ҫитленӗ пек ҫитлет вара. Ҫав ут тутӑ та пулать. Хӑр улӑм та усӑллӑ ӑна. Тата хӑшпӗр лаша витерен шавах тарласа тухать. Ҫитерни те усӑсӑр. Ӑна выльӑхсен пирӗштийӗ хӗнет, теҫҫӗ вара.

Яков Козлов каласа панӑ. В. Бараев ҫырса илнӗ.

## АРҪУРИСЕМ ҪИНЧЕН

Вӑсем ӗлӗк Пӑталуй вӑрманӗнче нумай пулнӑ. Пӗрре утӑ ҫулма кайнӑ хӗрсем пӗр кӳлӗ хӗрне пыраҫҫӗ те: шампӑр-р! сикрӗ, тет, шыва пӗр хӗрарӑм. Вӑл арҫури пулнӑ, иккен. Унӑн кӳлӗ хӗрне сап-сарӑ вӗрене тури манса юлнӑ пулнӑ. Хайхи хӗрсем ҫав турана ним вырӑнне хумасӑрах хӑйсем выртакан вырӑна илсе таврӑннӑ. Каҫ пулсан, хайхи арҫури:

— Турикки те пирикки,—тесе пӗтӗм вӑрмана янратса йӗрет, тет. Тепӗр кун турине леҫсе пӑрахсан, пӗр сасӑ та кӑлармарӗ, тет, вара. Вӑл хӗрсем пынӑ вӑхӑтра ҫӳҫне тураса ларнӑ пулнӑ иккен.

А. И. Бараева-Егорова каласа панӑ. Шӑмӑрша районӗ, Энтриел ялӗ. 1939 ҫ. В. Бараев ҫырса илнӗ.

* * *

Арçурисене куракансем ĕлĕк-авал чăнах та нумайччĕ. Халь питех ашкăнмаççĕ çав. Çынсем умне тухма чарăнни çинчен ак çапла калаççĕ ăна:

— Вăрманта çынсем чĕренче чĕрнĕ. Пĕр арçури, çавсене курса, таçтан аякран ахăлтатса кĕçенсе килет, тет, ясар арăм пек. Çўçĕсем лаша хўринчен вăрăм, пысăк кĕлте пек, тет, тата кăкăрĕсем ĕне çиллинчен пысăк, тет. Хăй: каття пур-и, каття пар,— тесе çухăрать, тет. Вара çынсем пĕр хулăм чĕренчене савăлпа уйăрна та, ак кунта каття, тесе аллине чикме хушнă. Леш аллине чиксен, савăла туртса илеççĕ те: эх, хĕстерсе лартрĕ, тет, аллине! Йыттисене вăслатаççĕ. Çураç, тет, лешсем тире. Тĕкĕ кăна тусать, тет. Савăла тепĕр хут çапсан, вут пек пĕрхĕнчĕ, тет, вара.

Тата пĕр ут кĕтĕвĕнчен çўрен лаша килне шавах лачкам шыва ўксе таврăннă. Ялĕ, çак Энтриел пек, вăрман хĕрринче пулнă. Мĕнле ку тарлать?—теççĕ хуçисем,—мĕнле ку тарлать?

Пĕрре учĕ çине кив кашма çавăрса çыхаççĕ те, кашми çине лайăх кăна сăмала сĕреççĕ. Каçпаларах хайхи çўрен ут таçтан аякран кĕçенсе тĕпĕртетсе килет вăрмантан.

— Хире тухрăм—хир кулли, яла кĕтĕм—ял кулли,—тесе çухăрса килет, тет. Лаша çине кутăн утланнă, тет, хăй. Siксе юлайман, сăмалана пула. Хальрех курăнмаççĕ тата.

Яков Козлов каласа панă,
Вл. Бараев çырса илнĕ.

# ЛЕГЕНДĂСЕМ

Легендăсем тесе чиркӳпе-тĕнпе çыхăнса тăракан е мĕнле те пулин мораль çинчен вĕрентекен калавсене калаççĕ. Легендăсенче пайтах чухне турăсемпе тĕрлĕ святойсен сăн-сăпачĕсем ахаль пурнăçри этемсен образĕсем пек кăна курăнаççĕ, çакна пула вара вĕсем тĕн вĕрентӳне сисĕмлĕнех хирĕçлеççĕ. Сăмахран, „Сывлăм“ ятлă легендăна илсен, унта турăсем те вилĕмлĕ, этемсем пекех пурăннине куратпăр. Хăшпĕр легендăсем хăйсен содержанийĕпе обществăри класла хирĕçӳсене çутатса параççĕ (сăмахран, „Сăвăр халлапĕ“).

Хальхи вăхăтра легендăсемпе тĕрлĕрен пуп тавращĕсемпе кулаксен юлашкийĕсем усă курма тăрăшаççĕ. Вĕсем тĕрлĕрен „чудăсем“ çинчен, „тĕнче пĕтесси“ çинчен т. ыт. тĕшмĕшлĕхсем çинчен легендăсем шутласа кăларса, ĕççыннисен ăс-тăнне минтретме тăрăшаççĕ. Вĕсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымалла.

## ЧĔКЕÇ ХӲРИ МĔНШĔН ИКĔ ЮПЛĔ ПУЛНĂ?

Çĕр çине турă шыв тултарсан, пĕр Ной ятлă çын кимĕ ăшне кĕрет, тет. Çав Нойăн киммине шăши шăтарса шăтăк тăвать, тет. Кăна çĕлен курать, тет те, пуçне пырса чиксе, питĕрсе хурать, тет. Ной кăна курсан, çĕлене ыр ятлă тăвать: „Çитерес ăна!“ тет. Пăвана яраççĕ çĕлен валли апат шырама. Пăван вĕçсе тухса каять те, нимĕн çыртса килме тупаймасăр, этем ӳтне çыртса килет. „Илсе килтĕм“, тет. „Мĕн илсе килтĕн?“ —тесе ыйтать турă. Пăванĕ мĕн илсе килнине пĕлтерес тесе анчах чĕлхине кăларать,—шăп çак самантра чĕкеç вĕçсе пырать те, этем çинчен усал сăмах ан калатăр тесе, унăн чĕлхине çыртать татать. Леш пăванĕ нимĕн калаймасăрах калла нăрласа каять. Чĕкеçе уншăн çĕлен çилленет, çилленипе унăн хӳрине çыртса илет, тет. Çавăнпа çапла икĕ вĕçлĕ пулнă, тет, чĕкеçĕн хӳри.

Ин-тăн алçыру материалĕсен фончĕ.
(Г. Тимофеев, „Тăхăр ял“, стр. 570—572.
1901 çул. KI 356--390).

## СЫВЛĂМ

I.

Хĕвел—пĕлĕтĕн хуçи.

Унăн икĕ арăм пулнă: Ирхи Шуçăм тата Каçхи Шуçăм.

Пит те хаяр иккен Каçхи Шуçăм, пит те йăваш иккен Ирхи Шуçăм.

Ирхи сенкер Шуçăмăн хĕрĕ пулнă. Ăна Ирхи Сывлăм тесе чĕннĕ. Каçхи йăм-хĕрлĕ Шуçăмăн, хаярскерĕн, ывăл пулнă. Ăна Этем тесе чĕннĕ.

Хĕвелĕн арăмĕсем пĕрне пĕри юратман, нимĕнрен ытларах Каçхи Шуçăм Ирхи Шуçăма кураймасăр пурăннă. Анчах Ирхи Шуçăмĕ лăпкă та йăваш пулнă... Вăл харкашма юратман, çавăнпа нихăçан та çилĕпе хĕрелсе йăмăхман...

II.

Юратнă иккен Ирхи Сывлăм çĕр çинче уçăлса çӳреме. Пуринчен те ытларах улăхри курăксем чечеке ларсан çӳреме юратнă...

Этем те юратнă улăх тăрăх çӳреме, чечексен çыххи пуçтарма.

Пĕррехинче çаксем пĕр уçланкăра шăп та шай пĕр-пĕринпе тĕлпулаççĕ.

— Эс мĕн туса çӳретĕн кунта?—ыйтать Ирхи Сывлăм.

— Уçăлса çӳретĕп, чечексем пухатăп,—ответлет кăна хирĕç Этем.—Эсĕ тата мĕн туса çӳретĕн?

— Эпĕ вăл чечексене сана валли çуса тасататăп, илемлĕрех те çутăрах пулччăр, тесе тăрăшатăп.

Килĕшрĕç Этеме Ирхи Сывлăмăн сăмахĕсем. Вăл ăна куçĕнчен пăхрĕ. Ирхи Сывлăмăн куçĕсем шыв тумламĕсем пек çап-çутă йăлтăртатаççĕ иккен.

Сывламĕ те пăхрĕ Этем çине. Этемĕ пĕтĕмпе тĕксĕм те çирĕп иккен. Вара Этем çапла каларĕ Сывлăма:

— Мĕн туса пурăнасси пур унта, пĕлĕт çинче? Эс луччĕ хам пата куç, иксĕмĕр пĕрле пурăнапăр.

Нумай шухăшласа тăчĕ Сывлăм, çапах та килĕшрĕ Этемпеле...

Юратса пăрахрĕç вĕсем пĕрне пĕри...

Сывлăмĕ хăйĕн тусне кăтра çӳçĕсемпе тĕксĕм ӳчĕшĕн, Этемĕ Сывлăма—мерчен пек çутăшăн...

III.

Юрамасть çамрăк хĕре амăшĕнчен ыйтмасăрах маттур йĕкĕтсем патне чупмашкăн.

Саккун хушмасть апла тума, авалтанах хушмасть.

Намăс тиенет ун пек тусан амăшин пуçĕ çине.

Ячĕ каять ун пек тусан çамрăк хĕр-пикен.

Анчах та пăхăнман çак саккуна Ирхи Сывлăм, шавах чупнă амăшĕнчен вăрттăн хăйĕн юратнă тусĕ патне. Амăшĕ, йăваш кăмăлласкер, нимĕн те сисмен, нимĕн те шарламан... Сывлăм шавах çӳренĕ Этем патне, шавах лăпкаса ачашланă ăна, юлашкинчен унсăрăн пурăнаймиех пулса çитнĕ...

Пĕр ирхине, кăтра сурăх-пĕлĕтсем тӳпе çеçенхирĕ тăрăх чупса çӳренĕ чух, Сывлăм ашшĕпе амăшĕнчен вăрттăн çĕр çине, Этем патне аннă...

Сывлăм ашшĕ—Хĕвел ăна-кăна нимĕн те шухăшламан, ăна-кăна нимĕн те асăрхаман... Вăл хăвăртрах хăйĕн арăмĕ—Каçхи Шуçăм патне çитме васканă.

Анчах хаяр та çилĕллĕ пулнă Каçхи Шуçăм. Асăрханă вăл хăйĕн ывăлĕпе Ирхи Сывлăм пĕрле ларнине, асăрханă та хăйĕн упăшкине—Хĕвеле элек пама тытăннă...

— Эсĕ нимĕн те пĕлместĕн-и?

— Çук, нимĕн те пĕлместĕп,—тавăрнă Хĕвел.

— Ава кур, унта санăн ывăлупа Ирхи Шуçăмăн хĕрĕ айхашаççĕ.

Çаврăнса пăхнă Хĕвел çĕр çинелле.

Курнă илемлĕ Сывлăм-пикепе кăтра пуçлă Этем пĕр-пĕринпе ачашланса ларнине. Сывлăмĕ Этем çине сулхăн вăштăртаттарса ярать мĕн, унăн пичĕсене çутă-çутă тумламсемпе çуса тасатать мĕн...

Çиллес Каçхи Шуçăм тата ытларах çилленсе ӳкнĕ çакна курсан, унăн пичĕ юн пек хĕрелсе тĕксĕмленнĕ.

— Эхер те эс вĕсене нимĕн те тумасан, эпĕ санпала урăх пĕр кун та пуранассăм çук!—тенĕ вăл упăшкине.

Тĕксĕмленнĕ çилĕпеле Сар Хĕвел те.

Хăйĕн арăмне йăпатса çапла каланă:

— Сывлăм! Паянран пуçласа эсĕ хĕрарăм пулăн, çĕр çинче Этемпеле пĕрле пурăнма тытăнăн... Чуну санăн, тăрă шыв тумламĕ пек сапаланса кайса, ирсерен те каçсерен çĕр çине ӳкĕ!—тенĕ.

Çавăнтан пуçласа пурăнать Сывлăм çĕр çинче Этемпеле пĕрле. Çавăнтан пуçласа Хĕвел ывăлĕ Этем те пĕччен мар, ун çумĕнче яланах савнă мăшăрĕ пур. Ăна Сывлăм тесе чĕнеççĕ.

„Чувашские сказки“ ятлă сборникрен.
Мускав, 1937. Стр. 61—63.

## СĂВĂР ХАЛЛАПĔ

Авал пĕр ялта пурăннă, тет, пĕр пуян. Пулнă, тет, унăн икĕ ывăл та икĕ хĕр. Выльăх-чĕрлĕх пулнă, тет, унăн карташ тулли, тырă-пулă кĕлете шăнăçми. Хăвăр пĕлетĕр пуян кăмăлне: пулнă, тет, вăл пăрçа пекех хытă. Ĕмĕрне те кӳршĕ-аршă йĕп те туянайман, тет, унтан. Ялта нумай этеме куççулĕ тăктарнă, тет, çав хыткукар.

Ак тара кĕрĕшет, имĕш, çав пуян патне пĕр тарçă. Килĕшет, пулать, вăл çулталăк тăршшĕпе ĕçлеме. Калаçса татăлнă, пулать, вĕсем, ĕçленĕшĕн пуян ăна пĕр ана тулă акса парать, тесе.

Тарçă хĕр пек йăваш та ытла ĕçчен пулнă иккен. Ĕçлет вăл виçĕ çын ĕçне, нимĕнрен те пăрăнмасть, нимĕне те кӳренмест.

Ак çитет кĕркунне—пăхаççĕ: пуян анисем хуп-хура, тарçă ани çинче тулă хăмăш пек. Хыткукарăн, çакна курсан, калама çук

ăш вăркать. Вăл, выçă куçлăскер, сăмаха каялла тăвать те, тарçа тулă пулман анине парать, тарçăн пулнă анине хăйне илет.

Пуянпа тарçă хушшинче пысăк шав тапранса каять. Тарçă, çук çын пулсан та, анине парас мар тесе, тарăхса калаçать. Пурлă çын, темерĕн,—чее пулнă ĕнтĕ вăл, тилĕ пекех.

Ака вăл тăвата тăван ачине тарçă ани çине илсе каять, вĕсене анан тăвата кĕтессине тăвата шăтăк алтма хушать. Вара çав кашни шăтăка пĕрер ачине лартать те çиелтен çатан хăвипе витсе хуплать. Ачасене çапла майлаштарать те çапла хушса хăварать:

— Ачасем, пĕр сас-чĕвĕсĕр ларăр шăтăксенче. Эпир тарçăпа килсе: „Кам ани?“ тесе ыйтас пулсан: „Пуянăн“, тесе, пĕр сăмах кăна калăр,—тесе хушса хăварать.

Хăй вара килне таврăнать те тарçа çапла калать:

— Ырă çынна чура тавраşпе йўçĕнкĕллĕ пулни килĕшмест. Атя эппин ана çине те, çĕр амăшĕнчен: „Кам ани“, тесе ыйтар. Çĕр амăшĕ суя сăмах калас çук, вăл кам ани тейĕ—тулă çавăннах пулĕ,—тет.

Ака вĕсем ана çине иккĕшĕ те пыраççĕ, кашни кĕтесри шăтăк тĕлне çитсен, кам ани, тесе ыйтаççĕ.

— Эй, ама тура, çĕр амăшĕ! Каласам,—кама пўрнĕ çак ана?—тесе пĕр харăс йăлăнаççĕ вĕсем. Çакна хирĕç кашни шатăкран: „Хуçанăн“, тенĕ пĕр сăмах кăна илтĕнет.

Тарçă йĕрсе ярать. Çĕр амăшĕ хăй çапла пилленĕ пулсан, мĕн тăвăн. Вăл пуçне чикет те, хуçа килне ĕç ĕçлеме васкаса утать.

Каç пулсан, пуян ана çине тепĕр хут пырать те ачисене шăтăкран тухса киле таврăнма чĕнет. Анчах мĕн пулчĕ, тăмаша? Пĕр шăтăкран та пĕр сасă-чĕвĕ те хирĕç чĕнмест. Хыткукар старик шăтăк çинчи çаппа тапса ывăтать, шăтăка хăй чикĕнсе кĕрет. Анчах мĕн пулчĕ, хăямат! Шăтăкра ача мар,—йытă евĕрлĕ кайăк ларать. Старик кайăка аллипе тытасшăн хыпаланать,—кайăк вăшăл-вăшăл çĕр айнелле анса каять. Вăл аптăранă енне каялла сиксе тухать, ун хыçĕнченех кайăк та сиксе тухать те „ши“ шăхăрса ярать. Вăл каллех кайăк патне сиксе ўкет,—кайăк шăтăка пуçиле кĕрсе чикĕнет. Çĕр-каç тăршшĕпе асапланать-асапланать те пуян, халран каять; вара ачисенчен ĕмĕрлĕхе татăлса, килне таврăннă, тет.

Çав пуян ачисенчен ĕнтĕ сăвăрсем пулса кайнă, тет. Çав усал йăхран пулнă чунсене тырă анисем çинче пурăнма хушман, тет, парлаксем те кăлкан тĕмисем çинче кăна шăтăк алтма хушнă, тет. Тата вĕсене хура халăх тыррине тивме те хушман, тет, пуянсен тыррине кăна вăрласа тăранма хушнă, тет. Сăвăрсем çав пилпе ĕнтĕ ĕмĕрне пурăнса ирттереççĕ, тет. Сăвăр этеме курсан ши! шăхăрать; вăл: „эпĕ çынран хăрамастăп, кайăк пулсан та, хура халăх тыррине тивместĕп“, тесе каласшăн, тет. Сăвăра тытса йытта тулаттарас пулсан, вăл икĕ лаппипе питне хуплать те, этемле: ў-ў... тесе ĕсĕклесе йĕрет. Вăл вара çапла йĕнĕ чух ĕмĕтсĕр çынсене ылханса йĕрет, тет.

Илемлĕ литература антологийĕнчен илнĕ. 1935 ç.

# ИСТОРИРИ ПАЛЛĂ ÇЫНСЕМ ÇИНЧЕН ÇӐРЕКЕН ХЫПАРСЕМ

Историри паллă çынсем çинчен хунă юрăсемпе халлапсем чăваш фольклорĕнче пĕчĕк вырăн йышăнса тăраççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра вĕсене юриех пуçтарман, хальхи вăхăтра вăл юрă-халлапсенчен нумайăшĕсем манăçа тухнă. Анчах та ун пек юрăсем, халлапсем чăваш халăхĕ хушшинче сахал мар пулнă. Уйрăмăнах илсен, Пугачевпа Степан Разин çинчен тĕрлĕрен юрăсем, халлапсем нумай çӳрене тесе шутламалла, мĕншĕн тесен чăвашсем вĕсен движенийĕсене чылай хутшăннă пулнă.

Эпир ку пайра çав историри паллă çынсем çинчен çӳрекен кĕске хыпарсене пичетлетпĕр. Вăл хыпарсем историри событисемпе фактсене тĕрĕсех çутатса парайманççĕ. Сăмахран, 2 №-лĕ кĕске калавра Пугачев Шупашкар-касси ялĕ патĕнче 2—3 уйăх пурăннă, тесе пĕлтернĕ. Ку тĕрĕс мар. Пугачев чăвашсем патĕнче 2—3 уйăх пурăнман: историри сведенисем тăрăх вăл 1774 ç. июлĕн 17-мĕшĕнче Атăл урлă каçса чăваш хушшине килсе кĕнĕ те, июлĕн 24-мĕшĕнче Улатăртан Саранска тухса кайнă.

Çапах та, историри паллă çынсем çинчен хунă калавсем фактсемпе событисене тепĕр енчен тĕпчеме май пáраççĕ. Сăмахран, Пугачев чăвашсем хушшинче 3 уйăх пурăнман, анчах та Пугачевăн восстанийĕ, Пугачев хăй тухса кайнă хыççăн та, нумая пыма пултарнă. Çак енчен илсен, вăл калавсем фольклор наукишĕн çеç мар, истори наукишĕн те паха материалсем пама пултараççĕ.

## ХУРАН КУКЛИ

Пăкача[1] çинчен пире мамак çапла каласа паратчĕ:

„Çав Пăкача ĕлĕк пĕр яла çитнĕ, тет те, пуянсемпе пупсене çакса вĕлерме тытăннă, тет. Çак ялта пĕр çĕрме-пуян пурăннă мĕн. Паллах, пуянăн ыр пурнăç çинчех вилес килмест. Пĕçерме хушать, тет, вăл арăмне хуран кукли. Арамĕ пĕçернĕ пулать ĕнтĕ. Унччен пулать-и, кунччен пулать-и те, çитет кĕрет хăй пуян патне Пăкача хăйĕн салтакĕсемпе.

— Тух хăвăртрах, сана халех çакса вĕлеретпĕр!—теççĕ кăна салтаксем.

[1] Пăкача—Пугачев.

— Чим-ха, тет, пуянĕ, тепĕр хуран кукли çием-ха,—тет.

Пăкачăн хырăмĕ выçнă тĕл пулнă витнă. Кĕрсе ларать те ку сĕтел хушшине, сăптăрмах тытăнать çуллă хуран куклисене.

— А-яй, тутлă иккен сан кукăлусем,—тет хай, сухалне шăлкаласа.

— Ку мĕ-ĕн,—тет чее пуянĕ,—эп сире ыран тата тутлăрах пĕçерсе çитерĕттĕм,—тет.

Ну, Пакача вара çак пуяна хăйĕн пĕтĕм çарĕ валли кукăль пĕçерме хушать, тет.

Çапла, хуран кукли çитерсе çăлăнса юлнă, тет, пуян вилĕмрен".

Тракушкă ялĕнчи (Х. Чутай р.) Василий
Григорьев каласа панă.
1930 ç. И. Д. Никитин çырса илнĕ.

## ПУГАЧЕВ ÇИНЧЕН

Мати-кассинчен 10 çухрăмра Шупашкар-касси (Ишлей р.) пур. Çав ял патĕнче Пугачев пурăннă. Ун патне чăвашсем çăкăр, аш, сĕт, çăмарта леçнĕ. Вăл унта 2—3 уйăх пурăннă, тет. Патĕнчи (Çӳлти-касси) пуп, Пугачев пынине сиссен, тарса пытаннă, тет.

1906 ç. Кушников Ст. Кузьм. каласа панă.
И. Д. Никитин çырса илнĕ.

## ЙĂВАН УЙĔ

Çăкалăх Шăмат патĕнче Йăван уйĕ пур. Хусана илме кайнă чух Иван Грозный унта çулталăк тăнă.

Лаç вырăнĕ,—вăл та Çăкалăх Шăмат патĕнче. Унта тимĕрç лаççи пулнă: çар валли хатĕр ĕçленĕ.

Хурăн çулĕ, мăн çул, Çăкалăх çывăхĕнчен иртет.

1920 ç. Çăкалăх Шăматри Захар
Алексеев каласа панă.
И. Д. Никитин çырса илнĕ.

## ТУРХАН

Ĕлĕк-авал, пин çула яхăн ĕлĕкрех, чăвашсем хушшинче турхансем пурăннă. Вĕсем халăхшăн аслă çулпуçĕ евĕрлĕ çынсем пулнă. Суйласса вĕсене халăх суйласа лартнă. Çавăнпа та вара халăх турхана пăхăнса пурăннă. Турхансем уйрăм çынсене айăплама та, вĕсен айăпĕсемшĕн каçарма та пултарнă. Пĕр сăмахпа каласан, патша пек пулнă ĕнтĕ.

Çу кунĕсем пуçланнă вăхăтра турхан хăй турра-и ĕнтĕ, темле хăвата-и, парне пару туса ирттернĕ. Ăна „чук", „уйчӳк" тенĕ. Çак уйчӳксене вара пĕтĕм чăваш халăхĕ пухăннă. Çав йăла нумайччен пынă чăвашсем хушшинче.

Ватă турхан вилсен, ун вырăнне тивĕçлĕ çынна халăх çĕнĕрен суйласа лартнă. Ватă турхан хăй виличчен çамрăккине, пулас турхана, хăйĕн кĕллисене вĕрентсе хăварнă.

Турхансем тĕрлĕ çĕрсенче пурăннă. Çаванпа тĕрлĕ çĕрсенче Турхан уйĕсемпе Турхан улăхĕсем пур. „Турхан уйĕ" Шупаш-

кар уесĕнче те пур, вăл Тĕрлеме ялĕнчен çурçĕр еннерех. Халăх калана тăрах, çакăнта турхан тутарсен ханĕпе вăрçнă имĕш. Çав вăрçăн сăлтавне чăвашсен турханĕ тутарсен ханне темле вăрçăра пулăшу паманнинчен тухса кайнă, теççĕ. Çав вăрçăрах турхан хăй те вилнĕ вара. Вăл вилнĕренпе чăвашсем урăх турхан суйламан, теççĕ.

Известия общества Археологии, Истории и Этнографии при Имп. Казан. Университете, том III. 1880—1882 год. Стр. 283. Ив. Артомонов каланинчен çырса илнĕ.

# КĔРЕКЕ ЮРРИСЕМ

Кĕреке юррисем тесе ĕçкĕ çикĕ вăхăтĕнче, кĕреке хушшинче пĕрле юрламалли юрăсене калаççĕ. Вăл юрăсене ĕлĕк-авал йăхри чи ватă стариксем пуçласа пană, унтан, вĕсем пĕрер çавра юрланă хыççăн, ĕçкĕри ытти çынсем те ушкăнĕпе юрлама тытăннă. Кĕреке юррисен шутне авалхи вăхăтсенче ака-суха юррисем çеç кĕнĕ, анчах пурна-киле ĕçкĕ-çикĕ юррисене, удел хресченĕсен юррисене, çĕн çĕре каякансен юррисене тата шӳтле юрăсене те кĕреке юррисен шутне хурса юрлама тытăннă. Уйрăмлăхĕ те вĕсен çакăнта кăна пулнă: авал кĕреке юррисене хисеплĕ ватă çынсемсĕр нихçан та пуçлама юраман, каярахпа ку йăла пачах пăрахăçа тухна.

Кĕреке юррисем хăйсен малтанхи тапхăрĕнче магически характерлă пулнă. Чăвашсем тырпул акса тăранса пурăнма тытăнсан, вĕсен примитивлă ĕçĕн сиплĕхĕ пĕтĕмĕшпех çутçанталăк условийĕсенчен килнĕ. Çанталăк вăйне хăйне пăхăнтарма пултарайман этем тĕрлĕрен асамлă кĕлĕ-юрăсем шутласа кăларса, хăйĕн йывăр ĕçĕн результачĕсене ăнăçлă тума, пурнăçа çăмăллатма, лайăхлатма пулать, тесе ĕненнĕ. Çавăнпа та ака-суха праçникĕсем (кĕр-сăри, авăн-яшки) вăхăтĕнчи ĕçкĕ-çикĕсенче те çĕр ĕçĕ ăнăçлă пултăр, тырпул пуян пултăр, выльăх-чĕрлĕх ытларах ĕрчетĕр тесе, кĕлтуса юрланă. Çапла, малтан çĕр ĕçĕн кульчĕпе çыхăнса тăнă ака-суха юррисем, сĕм авалран тымарланса килнĕскерсем, тĕрлĕ тапхăрсенче тĕрлĕрен улшăнса, кĕрекере юрламалли юрăсем пулса тăнă.

Кĕреке юррисенчен пайтахăшĕсем авалхи чăвашсен ĕç условийĕсене, вĕсен уйрăм хуçалăхлă кăмăлне, малашнехи ĕмĕчĕсемпе шанчăкĕсене питĕ лайăх çутатса параççĕ. Сăмахран, 2-мĕш №-лĕ юрра илсен, ăна юрлакансем „ултă лаши акара пулччăр, виçĕ кĕсри сӳрере пулччăр, ана йăранлă пултăр, çаран чикеллĕ (чикĕллĕ) пултăр“, тесе ĕмĕтленнине куратпăр. Ку ентĕ—уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресченĕн вакбуржуаллă идеологийĕ.

Ĕмĕт—ĕмĕтпе, çапах та пурнăçра ĕмĕтсем вырăна кĕмесĕрех те тăрса юлма пултараççĕ. Çын телее ĕмĕтленет, анчах тупаймасть, ыр пурнăç кĕтет—кĕтсе илеймест, пуйма шутлать—пуяймасть. Çакă вăл ĕлĕкхи саманари ĕçхресченĕн, ĕçхалăхĕн шăпи

пулнӑ. Халӑх епле йывӑрлӑхсем чӑтса пурӑннине, унӑн тарнеӑйне сӗлӗхсем епле ӗҫсе пурӑннине, унӑн шӑпи мӗншӗн ҫавтери йывӑр пулнине тата халӑх ҫилли епле ҫӗклене-ҫӗклене тухнине удел хресченсен юррисем питӗ лайӑх кӑтартса параҫҫӗ.

Пурнӑҫ темчул хӗн-хурлӑ пулнӑ самантсенче те халӑх хӑйӗн шанчӑкне ҫухатман. Вӑл хӑйӗн вӑйне ӗненнӗ. Ҫавӑнпа та вӑл хунӑ чи хурлӑхлӑ юрӑсенче те оптимизм палӑрать.

Кӗреке юррисем хушшинче ӗҫкӗ-ҫикӗ юррисем уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Художествӑллӑх енчен вӗсем ҫавтери илемлӗ, юрра илем кӳрекен меслечӗсем вӗсен ҫав тери пуян, эмоцилле вӑйӗ тарӑн та сарлака. Пирӗн революцичченхи чӑваш писателӗсем К. В. Ивановпа М. Федоров хӑйсен творчествине нимӗнрен малтан халӑх творчествин паха енӗсемпе пуянлатса пынӑ, хӑйсен произведенийӗсенче унпала питӗ сарлакан усӑ курнӑ.

## АКА-СУХА ЮРРИСЕМ

1.

Алран кайми аки-сухи,
Алран кайми аки-сухи!
Асран кайми атти-анни,
Ай-яр, ай-ар, ай-яй-ай-ах.

Аки-сухинчен уйрӑлас ҫук,
Аки-сухинчен уйрӑлас ҫук.
Ат(ти)-аннине, ай, манас ҫук.
Ай-яй-яй-яй, ай-яй-яй-ах.

Асран кайми пӗлӗш-тантӑш,
Асран кайми пӗлӗш-тантӑш!
Пуринчен пахи ял-йыш,
пускил,
Ай-яй-яй-яй, ай-яй-яй-ах.

Ай ӗҫер-и, ай ҫиер-и,
Ай ӗҫер-и, ай ҫиер-и!
Виличчен пӗрле пурӑнар-и,
Ай-яй-яй-яй, ай-яй-яй-ах.

Ф. Павлов. „Ҫӗнӗ Сӑрнай"
Шупашкар, 1931 ҫ. Стр. 36.

2.

Аки-сухи асран кайми,
Асран кайми аки-сухи!
Шӑрчӗ кастӑр, трен хӑпаттӑр,
Асран кайми аки-сухи!

Ултӑ лаши акара пулччӑр,
Виҫӗ кӗсри сӳрере пулччӑр,
Тихисем хыҫран выляса
пыччӑр,
Асран кайми аки-сухи!

Ана йӑранлӑ, ай, пултӑр-и,
Ҫаран чикеллӗ, ай, пултӑр-и.
Кӗр акни, ҫур акни хулӑм
пултӑр,
Хулӑм кӗр аки тулӑх пултӑр.

Атте-аннерен, ай, пахи ҫук,
Турӑран-пӳлӗхрен асли ҫук.
Ӗҫетпӗр те, ай, ҫиетпӗр
Атте-анне, ай, тивлетпе.

Юман йывӑҫ пылне-ҫуне,
Юман йывӑҫ пылне-ҫуне
Ӗҫетпӗр те, ай, ҫиетпӗр.
Асран кайми аки-сухи!

1917 ҫ. Вӑрнар районӗнче
М. Е. Шашков ҫырса илнӗ.

3.

Арҫынсем сухана тухсассӑн,
Арҫынсем сухана тухсассӑн,
И-и-и тухсассӑн
Эрнипех ҫумӑр ҫӑвинччӗ.

Утӑ та ҫулма тухсассӑн,
Утӑ та ҫулма тухсассӑн,
И-и-и тухсассӑн
Эрнипех сулхӑн тӑринччӗ.

Ыраш вырма тухсассӑн,
Ыраш вырма тухсассӑн,
И-и-и тухсассӑн
Ҫилӗ те пӗр май вӗринччӗ.

Ҫур тырри вырма тухсассӑн,
Ҫур тырри вырма тухсассӑн,
И-и-и тухсассӑн
Ҫилӗ те пӑтранчӑк вӗрминччӗ.

40—50 ҫул ӗлӗкрех юрланӑ.
Чистай у. Кутум вол. Вӑтӑр
юман Киремет ялӗ. 1926 ҫулта
Ратников юрласа панӑ.

4.

Аслӑ пӗр ката хыҫӗнче,
Аслӑ пӗр ката хыҫӗнче
Ахӑрса ака турӑмӑр,
Ахӑрса ака турӑмӑр.

Утмӑлах ҫулхи стариксем
Тыр пуркки ҫакса ҫӳреҫҫӗ.
Вуник пӗр ҫулхи ачасем
Ут пуҫӗнче вӑй выляҫҫӗ.

Уя пӗр тухсан, мӗн хавас?
Ака-суха сасси пит хавас.
Хӑртна пӗр пырсан, мӗн хавас?
Ҫава-ҫурла сасси пит хавас.

Анкартне кӗрсен, мӗн хавас?
Тӑпачсен сасси пит хавас.
Киле пӗр кӗрсен, мӗн хавас?
Ывӑл-хӗр сасси пит хавас.

Алдиарово, Тӑвай р. 1916 ҫ.
В. Воробьев ҫырса илнӗ.

## ҪӖРПӲЕЛ ЮРРИСЕМ

Юрла кӑна юрла, ай, тееҫҫӗ.
Ку юррине епле юрлам-ши?
Савнӑ тӑванӑмсем,
Савнӑ тӑванӑмсем,
Савнӑ чунӑмсем.

Кунтан та пӗр юрла, ай, пӗлмесен,
Хуҫисене епле юрам-ши?
Савнӑ тӑванӑмсем,
Савнӑ тӑванӑмсем,
Савнӑ чунӑмсем.

Сӑпаҫҫипӑ чӑпар, ай, куккукне
Ҫич ҫӑмарта туса панӑшӑн,
Кӗтӗм вӑрмана,
Тухрӑм ҫаврӑнса,—
Юлчӗ тайӑлса.
Сӑпаҫҫипӑ хам(ӑ)рӑн тӑвансене
Пире хисеп туса чӗннӗшӗн.
Кӗтӗм вӑрмана,
Тухрӑм ҫаврӑнса,—
Юлчӗ тайӑлса.

Шур Атӑлтан кимӗ, ай, аниччен
Ларар-и-ха ҫыран хӗрринче.
Авӑтать куккук,
Янӑрать вӑрман,
Савӑнап, тӑван.

Хамăрах ĕçлесе пур пуличчен,
Кĕтер-и халь çын пек пуличчен.
Авăтать куккук,
Янăрать вăрман,
Савăнап, тăван.

Куçхаршисем вăрăм, ай, куçсенчен,
Кăтра çÿçсем вăрăм пилĕкрен.
Эсĕ çын маттурне ăçтан пĕлен?
Çăварĕнчен тухнă сăввинчен.

Тимĕр-кăвак лаша, пĕтре çилхе,
Аслă çула тухсан йăрхалать.
Эпир юрланă чух, калаçнă чух
Аслă хуçа пуçне пăркалать.

Анкарти хыçĕнче, ай, тил(ĕ) юртать,
Кам пурсуйлă çынсем, çав тытĕ.
Çулталăкăн хушши вуник уйăх,
Кам телейлĕ çынсем, çав пурнĕ.

Кăвак ут утлантăм эп, хир каçрăм
Урпапала тулă пухасшăн;
Урпа ани çинче, ай, ут вылять,
Тулă ани çинче мул вылять.
Сирĕн кĕрекĕрте, ай, мĕн вылять?
Сирсе сирĕлмиех сим вылять.

Пирĕнех те атте, ай, пит ăста
Хапха юписене сăрлама.
Эпир аттерен те тата ăста
Курка тĕпĕсене çулама.

Шурă юрсем çăвать—пушмак путать,
Пурçăн пиçиххисем кам çыхать?
Никам çыхмасан та, хам çыхăп.
Сирĕн пек ыр çынна, ай, кам савмĕ?
Никам савмасан та, хам савăп.

Лапка кăна лапка, ай, юр çăвать,—
Çунаях шăвайми тăвас, тет, пуль.
Курка çине курка килех тăрать,
Алăкран тухайми тăвас, тет, пуль.

Ыр учĕсем ырхан, çулсем хура,
Эп çитессисенчен, ай, пит хăрап.
Сирĕн пек те ыр çын, ай, умĕнче
Эп юрлассисенчен, ай, пит хăрап.

Сиктĕрме урапа, йĕс ӳрече,
Хăш хĕрринчен сиксе, ай, ларам-ши?
Ай-хай тăванăмсем, пĕр чунăмсем,
Хăш хулăртан тытса тайăлам-ши?

Тăрантас та урапа, сăран кӳме,
Тăват кĕтессинче тăват тӳмме.
Ан тутăхтăр тӳмми, ай, сĕрех тăр,
Ан сивĕнтĕр, тăван, килех тăр.

Шатраллă-шатраллă, ай, куркăр пур,
Хăймаланса çӳрен сăрăр пур.
Хăвăр çине пăхсан, ай, пĕвĕр пур,
Килĕрсене кĕрсен, чысăр пур.

Иĕслĕ йĕнерсене, ай, кам йĕслет?
Савăтри маçтăрсем, çав йĕслет.
Ырă ĕçке-çике, ай, кам çиет,
Çакă тăванăмсем, çав çиет.

Тупăлха та турта, турă лаша,
Туртмассерен турти авăнать.
Ай-хай тăванăмсем, пĕр чунăмсем,
Курмассерен чунăм савăнать.

Çĕнĕ-Чаллă Çĕрпӳелĕ, Патăръел районĕ.
Кашкăр Микули çырса илнĕ. 1936 çул.

## ЭЛШЕЛ ЮРРИСЕМ

Шурă Атăл хĕррине шаксем хыврăм:
Шаккăмсем кайрĕçĕ сулă пулса.
Савнăях та тăванăмсене эп чуптурăм:
Сурчăкăмсем кайрĕçĕ пыл пулса.

Анкарти тулашĕнче пит тăман,
Ял хушшинерех кĕрсессĕн епле-ши?
Эпирех те çын панче пит аван,
Хамăр патра пырсассăн епле-ши?

Анкарти тулашĕнче эп ут çултăм,
Симĕс явлăксем эп пĕркентĕм.
Симĕс явлăксене çилĕ сиртĕр,
Пирĕн пуçри усала тур сиртĕр.

Кĕркуннехи çĕрсем тĕттĕм çĕр,
Уйăхĕсем пулмин те, çăлтăрĕ пур.
Пъятам-пъянам килнĕ, хăна пулăр:
Тулли креке пулмин те, çăкăрĕ пур.

Çӳлĕ тусем çинче виçĕ хӳрăн,
Пĕрне кассан уçă та юлмĕ-ши?
Кунтанах та эпирех халь кайсассăн,
Тĕпел-сыппăр уçă та юлмĕ-ши?

Çӳлĕ тусем çинче çырла пиçет,
Тĕрлĕрен те куракка яванса.
Пъятам-пъянам килнĕ, хăна пулăр,
Уйăхпалан хĕвел пек çавранса.

Хусанăн хулинче, ай, хут хаклă,
Чĕмпĕр хулинче те чĕн хаклă.
Çак çутçанталăкра мĕн хаклă?
Ырăлăхпа сывлăх пит хаклă.

Кукукусем юрлаççĕ кук тесе,
Эпирех калатпăр хух тесе;
Çынсем пире калаç шух тесе,
Эпир хуйхăратпăр çук тесе.

Улача кĕпенĕн умĕ ука,
Мамăк тӳшекĕн çитти пӳс.
Ĕнтĕ, тăванăмсем-çунатăмсем,
Тата тепре куриччен йĕр те тӳс.

Шурă Атăл хĕрри шурă хăйăр,
Епле шур пулсан та юр пулмĕ.
Пирĕнех те тăвансем пит аякра,
Аякра пулсан та ют пулмĕç.

Çӳлĕ тусем çине улăхнă чух
Чĕн хăмăт пăявĕсем татăлчĕç;
Чĕн хăмăт пăявĕсене сыпа-сыпа,
Аллăмри вун пӳрнеме тăм илчĕ.

Вунă пурнеме ăшăта-ăшăта,
Хĕрлĕ чĕрем те шуралчĕ.
Çак тăвансем патне кайсассăн,
Юр пек шурă чĕрем те хĕрелчĕ.

Сĕтеллĕрсем çинче шур çăмарта,
Чут-чут шуратмасăр та çиеттĕм.
Çак тăвансем патне те халь килсессĕн,
Чут-чут юрламасăр каяттăм.

Вĕр-çĕнĕрен кĕрĕк эп çĕлетрĕм,
Пĕр тăхăнман çĕртен тăхăнтăм.
Çакăях та киле халь килсессĕн,
Пĕр юрламан çĕртен те юрларăм.

Урамӑрсем вӑрӑм та халь утмашкӑн,
Хапхӑрсем вырӑсла уҫмашкӑн.
Ӗнтӗ умӑр ҫутӑ та ҫийӗр хӗрлӗ,
Вӑтанатӑп куҫӑртан пӑхмашкӑн.

Уттари-чуптари ҫӳремешкӗн
Пирӗн кӳлнӗ утсем начар мар;
Хӑйиех те хӑйми ҫӳремешкӗн
Пирӗн атте-аннесем начар мар.

Хура вӑрман касрӑм—эп ҫул хыврӑм,
Самар шывӗсене те курасшӑн.
Инҫеех те ҫула ҫывӑх турӑм
Хамӑр тӑвансене курасшӑн.

Хура вӑрман ҫинче хура пӗлӗт,
Тата мӗн ҫӑвассисем пур-ши халь?
Ай-хай ҫинҫе пӳҫӗм те хура куҫӑм,
Тата мӗн курассисем пур-ши халь?

Иккӗех те шурӑ та халь ут юртать,
Тилкеписем тӑрӑх та шыв юхать;
Ҫакӑях та тӑвансем ас(ӑ)ма килсен,
Икӗ хура куҫамран шыв юхать.

Элшелийӗн урамӗ сакӑлталлӑ,
Сакӑлтисем кайӗҫ, юр кайсан;
Элшелийӗн урамӗ илемлӗ урам,
Илемӗсем кайӗҫ, эпир кайсан.

Акӑшпалан турткӑшсем халь тавлашать,
Урттӑш йывӑҫ ҫине те ларасшӑн.
Аттепелен анне халь канашлать,
Ырӑях та ҫынсене хурӑнташ тӑвасшӑн.

Атьӑр уттарар-и те чуптарар-и,
Ҫулсем ҫинче шур юр пур чухне.
Атьӑр ӗҫер-ҫиер те выляр-кулар-и,
Ҫамрӑк пуҫра сывлӑхсем пур чухне.

Сирӗн ҫири камсулсем пит килӗшет,
Те аркине тикӗс те тытнӑран?
Сирӗнпелен сӑмахсем пит килӗшет,
Те ӗлӗкрен пӗрле те ӳснӗрен?

Урампала иртсе эп каяттӑм,
Эс чӳрече умӗнче лараттӑн.
Эсӗ чӗнтӗн, тӑван, эп чӗнмерӗм,
Ҫиленсе мар, тӑван, вӑтанса.

Ҫӳлӗ тусем ҫине ҫурт лӑртрӑм,
Кӑткӑлла ҫӗр пулмасан юрӗччӗ.
Суйла-суйла кӑна хурӑнташ турӑм,
Ҫын сӑмахпе сивӗнмин лайӑхчӗ.

Кӗримиски ҫӗлӗк тӑхӑнас мар,
Тӑхӑнсан та пусса лартас мар.
Кирек ӑҫта кайсан та, шух ҫӳрес мар,
Атте-анне ятне ярас мар.

Шӑпчӑксем авӑтать чав-чав тесе,
Хура вӑрманти хурӑн ҫийӗнче.
Ӗнтӗ, тӑванӑмсем ҫунатӑмсем,
Эсир асӑнмастӑр пуль ҫур ҫулта,
Эп асӑнап сире минутра.

Пӳсрен те ҫипиркке[1] ҫӗлетрӗм;
Ҫаннисем вӑрӑм та, пӳ кӗске.
Ӗнтӗ, тӑванӑмсем-ҫунатӑмсем,
Каяс ҫулсем вӑрӑм та, кун кӗске.

Кӳлнӗ утсем нумай тӑрсассӑн,
Ҫилкисене йывӑр килмӗ-ши?
Килнӗ хӑна нумай тӑрсассӑн,
Хуҫисене йывӑр килмӗ-ши?

Шӑпӑр-шӑпӑр кӑна ҫӑмӑр ҫӑвать,
Тӗнчисене тикӗс тивет-ши?
Ҫака киле килнӗ хӑна-вӗрлӗ,
Куркийӗсем тикӗс тивет-ши?

Кӳлнӗ утӑмсене чараймасӑр,
Ҫула тухсан виҫҫӗ те ҫаврӑнтӑм.
Ҫак тӑвансем асма, ай, килсессӗн,
Кӗске ҫӗрте виҫҫӗ вӑрантӑм.

Пӳртӗрсенче усрав кайӑк пур,
Пӗсехинче чӑпар тӗксем пур;
Уйрӑм-уйрӑм ҫуралса пӗрле ӳссе,
Уйрӑлмӑттӑм тенӗ те ҫӗрсем пур.

Инҫе кӑна ҫула, ай, тухнӑ чух
Турӑ утҫӑм пуҫне ухкалать.
Эпирех те юрӑ юрланӑ чух
Юрӑ ӑсти пуҫне пӑркалать.

Ҫӗнӗех те ҫуна, ай, сӑрлӑ хыҫ,
Хыҫӗсенчен пӑхса ан юлӑр.

[1] Ҫие тӑхӑнмалли тумтир ячӗ.

Эпирех те кунтан кайсассӑн,
Ухмах кайрӗ тесе ан кулӑр.

Кӗмӗлех те ҫӑраҫҫи, йӗс пӑлчӑра
Пулсан пулӗ Хусанӑн лавкинче.
Эпирех те ырӑ, ай, курасси
Пулсан пулӗ атте-анне ҫийӗнче.

Улӑхрӑм эп ҫӳлӗ тусем ҫине,
Шӑпӑртатса юхать юр шывӗ.
Ҫак тӑвансем аса килсессӗн,
Шӑпартатса анать-ҫке куҫҫулӗ.

Ҫӳлӗ тусем ҫинче пӗр чие,
Тата хӑҫан пулӗ-ши ҫӗр чие?
Халӗ эпир, тӑвансем, пӗр ҫӗрте,
Тата хӑҫан пулӑпӑр пӗр ҫӗрте?

Ӗнтӗ ҫил ҫаврӑнать, ҫил ҫаврӑнать,
Ҫӗмӗрт ҫеҫки хӑвана явӑнать;
Шухӑшламан чухне шухӑшӑм ҫук,
Шухӑшласан, ҫамрӑк пуҫ ҫаврӑнать.

Хусанӑн та тӑвӗ, ай, ҫӳлӗ ту,
Ухаймаҫҫӗ ямшӑкӑн лашисем.
Маттурах ҫуралтӑм, шух ӳсрӗм,
Кураймаҫҫӗ ялти тӑшмансем.

Шурӑ Атӑл урлӑ каҫнӑ чухне
Шурӑ пулӑ ҫисе каҫатра-м?
Ӗнтӗ пӗвӗр вӑрӑм, пилӗкӗр ҫинҫе
Винакратсем ҫисе ӳсетре-м?

Хура вӑрман хыҫне капкӑн хутӑм
Юртса пыран хӗрлӗ тилӗшӗн.
Ашшӗ-амӑшӗ ӳксе йӗрсе юлчӗ
Ытам тулли сарӑ ачишӗн.

Хӑрантсуски явлӑк, пурҫӑн ҫӳҫе,
Ҫыхсан-ҫыхмасан та пуҫ тулли.
Ӗнтӗ, тӑванӑмсем-ҫунатӑмсем,
Курсан-курмасан та куҫ тулли.

Шурӑ юрсем ҫӑвать, пушмак путать;
Симӗс пурҫӑн пиҫиххи кам ҫыхать?
Калӑрсамӑр, тӑвансем, чӑн тӳррине:
Сирӗн чунӑр кама та пит савать?
Манӑн чунӑм сире те пит савать.

Вуниккĕлле явнă чĕн тилкепе
Явкаланать Хусан лавкинче.
Ай-хай, çинçе пӳçĕм, хура куçăм,
Авкаланать çич ют аллинче.

Атьăрах та каяр, ăçта каяр?
Хусан çырми тăрăх çырлана.
Пиçнисене татăпăр хут çине,
Пиçменнине татăпăр алса (ă)шне.
Пиçнисене парăпăр тăвансене,
Пиçменнине парăпăр çич юта.

Пĕчĕкçĕ те пахча мăкăнь пахчи,
Илемл(ĕ) иккен ешĕл те вăхăтра.
Ентĕ çинçе пĕвĕм, çамрăк ăсăм,
Илемл(ĕ) иккен çамрăк та вăхăтра.

Кукăр кĕвентесем эп çĕклеймĕп,
Çинçе пилĕкĕмсене авваймăп,
Сирĕн пек те лайăх çын умĕнче
Кĕçĕн пуçма асла хураймăп.

Кĕмĕл çĕрĕ эпир хывтартăмăр
Пилĕкех те кĕмĕл тенкĕрен.
Çакă тăвансене суйларăмăр.
Ылттăн çулçи ӳснĕ пахчаран.

Çĕнĕех те çуна, чĕрме тупан,
Çулаях та тухсассăн, йĕрĕ пур.
Ентĕ, пĕр тăванăмăрсем çунатăмсем,
Килĕре те килсессĕн, чысăр пур.

Уттарах та чуптар, ай, тиетĕр,
Хăр кӳлетĕр чуман лашăра.
Юрлаях та юрла, ай, тиетĕр,
Хăр ĕçтеретĕр пыллă сăрăра.

Иртеех те вĕл-вĕл, каç та вĕл-вĕл
Ялан аслă миме ялавĕ.
Иртеех те шав-шав, каç та шав-шав
Ялан хамăр тăван патĕнче.

Атăлăн леш енче мĕн ĕçлеççĕ?
Чĕнтен тилкепесем яваççĕ,
Варрисене пурçăн та хураççĕ,
Вĕçĕсене укасем яраççĕ.
Тытсаях та курăттăм эпĕ ăна,—
Уки тĕпренесрен хăратăп.
Ай-хай, хăтаçăм та тăхлачăмçăм,

Тăрсаях та юрлăттăм сирĕн умра,
Чĕлхем юнăшасран хăратăп.

Атăлĕсем тулăх пулман пулсан,
Ларайăмĕччĕç пурлаксем ким çине.
Çак тăвансем сăра туман пулсан,
Килейĕмĕттĕмĕр эпир çак киле,
Ĕçейĕмĕттĕмĕр эпир çак сăрана,
Килейĕмĕттĕмĕр эпир хăнана.

Çӳлĕ тусем çинче çуртçăм пур,
Вуникĕ те вĕлле хуртçăм пур,
Çуллен çур хушмантан ӳпкем пур;
Эпирех те килетпĕр, хăр пымастăр,
Çавăнпа та манăн ӳпкем пур.

Кăвик-кăвакарçан, чакăр куç,
Кураканни, тулă сапăрсам.
Пирĕнех тăвансем, ай, аякра,
Кураканни, салам ярăрсам,
Салам ярса салам, ай, çитмесен,
Хăвăрах та килсе курарсам.

Алăкăрсен умĕнче улма йăвăç,
Улмисем пулманни мĕн илем?
Тутлă ăсла туса, хăмла ярса
Юрламасăр ĕçнисем мĕн илем?

Шăпчăксем авăтаççĕ чак-чак тесе,
Сачĕсенче панулми çук тесе,
Ĕнтĕ ăшăм çунать, куççем йĕрет,
Пĕрле ӳснĕ тăвансем çук тесе.

Сĕтеллĕрсем çинче шур тарилкке,
Сĕтне çуне нумай та çитерчĕ.
Ай-хай, пĕр аппаçăм, пĕр йыснаçăм,
Сăпкари ача пекех силлерĕ,
Алăри ача пекех сиктерчĕ.

Кукăр кĕвентесене эп çĕклеймĕп,
Çинçе пилĕкĕмсене авăймăп.
Сирĕн пекех лайăх çын халь умĕнче
Сĕтел умне тăрса юрлаймăп,
Кĕçĕн пуçма асла хураймăп.

Юрла кăна юрла, ай, тиетĕр,
Сире епле юрăсем пит кирлĕ?
Сакăрвунă сакăр юррăм пур,
Пĕр сак çине сарса суйлатăп.

Çак тăванăмсем патне килсессĕн,
Усрав юррăмсене юрлатăп.

Урампалан иртсе пыраттăм,
Çил çаврăнчĕ сылтăм аркăма.
Çамрăкла шухăша юлтăмăр,—
Юн çаврăнчĕ çамрăк чĕрене.

Мĕшĕн каяс Юхман, ай, пасарне,
Симĕс пурçăн тилкепе илмесен?
Симĕс пурçăн тилкепе пасарта çук,
Сирĕн пек тăвансем манăн çук.

Шурă Атăл урлă kaçмашкăн
Икçĕр аллă сумлă ут кирлĕ.
Сирĕн пек лайăх тăвансен умĕнче
Мамăкран та çемçе чĕлхе кирлĕ.

Утмăл хăлаç вăрман кастартăм,
Улма йывăç пуррине пĕлмерĕм.
Сĕтел умне тăрса калаçрăм,
Ватăсем пуррине пĕлмерĕм.

Вĕлтĕр кăна вĕлтĕр вĕçмешкĕн
Вĕренен те çулçи мар эпир,
Питех пысăк-пысăк калаçмашкăн
Ĕнтĕ пуянăн ачисем мар эпир.

Маттур утсем çине ларсассăн,
Хирĕç тĕл пулакан çын çул парĕ.
Атте-анне ятне лайăх тытсан,
Пире лайăх çынсем чыс парĕç.

Лутра кăна хурăн хур пулмĕ,
Хурăн шывĕнчен те пыл пулмĕ.
Йĕрсе хуйхăрса халь ан тăрăр:
Хуйхăран чĕресенче çу пулмĕ.

Хура шывсем юхать аната май,
Сарă хăмăш тайăлать шыва май.
Ĕнтĕ, тăванăмсем-çунатăмсем,
Пирĕн çамрăк пуç тайăлать сире май.

Тайла та пуççене хĕç витмест,
Тутлă чĕлхе-çăвара пыл витмест.

Юрла кăна юрла тиетĕр,
Чăн-чăн юррăн ăсти эпир мар.

Ӑнласа та юрлама тытӑнсан,
Юррӑн ӑстинчен те кая мар.
Юрла кӑна юрла тиетӗр,
Куҫ айӗнчен пӑхса кулатӑр.

Улӑхӑн та ути ухлемлӗ,
Хутра кӑна ситре хӑяхлӑ.
Пирӗн ҫамрӑк пуҫсем хурлӑхлӑ,
Хутра кӑна ситре ырлӑхлӑ.

Тӑваткӑл та кӳме сӑран кӳме,
Тӑвата кӗтесси те йӗс тӳме.
Ан тутӑхтар, тӑванӑм, сӗрех тӑр;
Эрненӗн те хушшиултӑ кун,
Эрне ан тӑр, тӑванӑм, пырах тӑр.

Алӑкӑрсем умӗнче ӗрешетке,
Аллӑрсенче ешӗл перчетке,—
Ан пӑрахсам ешӗлӗ пӗтиччен.
Эсир ан пӑрахӑр эпир ӳсиччен,
Эп пӑрахмӑп эсир виличчен.

Кӑвик кӑвакарчӑн кӑвакӗ ҫук,
Шурӑ кӑвакалӑн тӗпекӗ ҫук.
Пирӗн ҫамрӑк пуҫсенче телей ҫук.

Ҫурхи шывсем юхать, ҫыр юлать,
Маттур утсем юртать, ҫул юлать.
Пирӗн пек айвансенчен мӗн юлать?
Мӗн выляни-кулни—ҫав юлать.

Ӗнтӗ пӗлӗт юхать, пӗлӗт юхать,
Ман пуҫӑмри ҫавракa ҫӗлӗк пек.
Ӗнтӗ ӗмӗр иртет, ӗмӗр иртет,
Ҫывӑрмасӑр курнӑ тӗлӗк пек.

Ӗнтӗ пӗлӗт юхать, пӗлӗт юхать,
Тата мӗскер юхасси пур-ши-ха?
Ӗнтӗ пуҫӑм ҫамрӑк, ӑссем кӗске,
Тата мӗскер курасси пур-ши-ха?

Ӗнтӗ шав-шав вӑрман, кӗр-кӗр вӑрман,
Мӗншӗн кӗрлеет-ши ҫав вӑрман?
Туратран та турата ларасшӑн,
Турат тӑрринчен ҫулҫӑ ярасшӑн.

Ӗнтӗ шав-шав хӑмӑш, кӗр-кӗр хӑмӑш,
Мӗншӗн кӗрлеет-ши ҫав хӑмӑш?
Сыпӑкран та сыпӑка ларасшӑн,
Сыпӑк ҫумӗнчен ҫулҫӑ ярасшӑн.

Ĕнтĕ шав-шав нарут, кĕр-кĕр нарут,
Мĕшĕн кĕрлеет-ши çав нарут?
Патшаран та ырлăх кĕтесшĕн,
Турăран та сывлăх илесшĕн.
Турриех те çырать ырлăха,
Патшиех те çырать хурлăха.

Ку юрăсене 1902 — 1903 çулсенче
Тăхăр ял тавращĕнче Г. Т. Тимофеев
çырса илнĕ.

## ЧУЛÇЫРМАСЕН ЮРРИСЕМ

Шур киççипрен тутăр эп кăнтартăм,
Кăнтартăм та куçран кăларгăм.
Хам тăвана инçе эп ăсатрăм,
Ăсатрăм та куçран çухатрăм.

Ылттăнпала кĕмĕл мĕншĕн хаклă?—
Мăскал çине хурса виçнĕрен.
Хамăр тăван пире мĕншĕн хаклă?—
Мĕн кĕçĕнтен пĕрле ӳснĕрен.

Хурами хумханать, çулçи вĕçет,
Ун тымарĕ епле чăтать-ши?
Çамрăк ĕмĕр иртет, чун хурланать,
Çамрăк пуçăм епле чăтать-ши?

Кашкăрах та тĕслĕ утçăм пурччĕ,
Каç пулать пуль тесе юртатчĕ.
Аттем пурччĕ, милай, аннем пурччĕ —
Ачам килет тесе кĕтетчĕç.

Чупрăмах та ухрăм çӳл ту çине,
Чистай урлă Хусан курас пек.
Ӳстертĕм те çинçе, ай, пӳçĕме
Хурлăх урлă ырлăх курас пек.

Чистай урлă Хусан курни çук,
Хурлăх урлă ырлăх курни çук.

Çӳл ту çинче çĕлен, ай, шăхăрать
Хыт-хурасем çумне таянса.
Ир те кĕтрĕм, тăван, каç та кĕтрĕм,
Хапха юпи çумне таянса.

Хăпартăм та çӳлĕ, най, ту çине—
Куртăм тупăлха та ушкăнне.
Тупăлха ушкăнне курман пулсан—
Курса юлăр тупăлха пӳçĕме,

Манăн шурă кĕпе пĕрре анчах,
Çуса тасатсассăн, юр пекех.
Манăн савнă тăван пĕрре анчах,
Курса калаçсассăн, чун пекех.

Вырăсла та хапха, тимĕр тăпса:
Вăйлă çăмăр çусан, хӳтлĕх çук.
Пĕччен шутлап, ай-хай, ним тăваймап—
Хам тăванăм хута кĕмесен.

Хура вăрман хĕрри хыт хуралăх,
Кам çулĕ-ши, эпир çулмасан?
Атте-аннен айван, ай, ачисем,—
Кам йĕрĕ-ши, эпир йĕмесен.

1936 çулта Чулçырмара (Куйбышев облаçĕ) Шумковсенчен Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## ХӐНА ЮРРИСЕМ

### АТӐЛПА ТИНӖС ХУШШИНЧЕ

Атӑлпала тинӗс, ай, хушшинче
Икӗ купца ларать, ай, сут туса.

*Хушса юрламалли:*

Пурӑнар-ха тӗнчере
Телей хӑпса киличчен.
Телей хӑпса килсессӗн,
Эпир ҫын пек пулӑпӑр.

Пичӗсене ҫӑваҫ, ай, шерпетпе,
Пуссаях та шӑлаҫ, ай, шур пӳспе.
Пурӑнар-ха тӗнчере...

Мӗскӗнех те ҫыннӑн, ай, ачисем
Питне ҫӑваҫ хура куҫҫулӗпе.
Пурӑнар-ха тӗнчере...

Питне ҫӑваҫ хура куҫҫулӗпе,
Пусса шӑлаҫ кӗпе, ай, ҫаннипе.
Пурӑнар-ха тӗнчере...

Аслӑ ҫулпа апуссем, ай, пыраҫҫӗ,
Ҫӑлтӑр-хушка ҫӳрен, ай, ҫул пуҫӗ...
Пурӑнар-ха тӗнчере...

Атте-анне пехил, ай, парсассӑн,
Пулаймӑпӑр-ши эпир, ай, кил пуҫӗ?
Пурӑнар-ха тӗнчере...

Чӗкеҫӗсем аслӑк, ай, тӑрринче,
Вӗҫевӗсем пӗлӗт, ай, хушшинче.
Пурӑнар-ха тӗнчере...

Çамрăк чунсем нуша, ай, аллинче,
Пурăнăçсем асап, ай, хушшинче.
Пурăнар-ха тĕнчере...

Çĕпрел, Пăва у. 1914 ç. Г. Лисков
çырса илнĕ.

## АТТЕ ПАХЧИ

Атте пахчи хурлăханлăх та, хурлăханлăх;
Хурлăхан витĕр утма çул,
Пахчи урлă утма çул.
Утма çулпа пынă чух та, эп пынă чух
Хурлăхан сапаки çапăнчĕ,
Çампа хурлăхлă, ай, пулн(ă) эпир.

Анне пахчи пултăранлăх та, пултăранлăх;
Пултăран витĕр утма çул,
Пахчи урлă утма çул.
Утма çулпа пынă чух та, эп пынă чух
Пултăран сапаки çапăнчĕ,
Çампа лутра, ай, пулн(ă) эпир.

Пичи пахчи çĕмĕртлĕх те, çĕмĕртлĕх;
Çĕмĕртлĕх витĕр утма çул,
Пахчи урлă утма çул.
Утма çулпа пынă чух та, эп пынă чух
Çĕмĕрт сапаки çапăнчĕ,
Çампа хура, ай, пулн(ă) эпир.

Инке пахчи кĕпçеллĕх те, кĕпçеллĕх;
Кĕпçеллĕх витĕр утма çул,
Пахчи урлă утма çул.
Утма çулпа пынă чух та, эп пынă чух
Кĕпçе çӳлçи çапăнчĕ,
Çампа шатра, ай, пулн(ă) эпир.

Халăх юрăçи Г. Ф. Федоровăн чи юратнă юрри.
Вăл ăна хăй шухăшласа кăларнă.
„146 халăх юрри", №-1, стр. 18. Чебоксары—
Москва, 1934 г.

## ШĂНКĂРТТĂМ, ШĂНКĂРТТĂМ

Шăнкăрттăм, шăнкăрттăм юррăм пурччĕ,
Шăнкăрттăм, шăнкăрттăм юррăм пурччĕ!
Шăл хушшинчех усраттăмччĕ,—
Тухрĕ те ӳкрĕ сĕм вăрмана.

Карăм шырама сĕм вăрмана та,
Карăм, карăм пĕр çулпа.

Виç кĕтеслĕ пӳрт ларать те,
Кĕрес терĕм—кĕртмерĕç.

Йытти те тухрĕ вĕрмешкĕн те,
Качаки тухрĕ чармашкăн,
Хуçи тухрĕ курмашкăн та
Шур чăлхапа пушмакпа.

Авалхи юрă. Г. Ф. Федоров, „146 халăх юрри". № 2, стр. 18. Чебоксары—Москва, 1934 г.

## ПИРĔН МĔНПЕ МУХТАНАС

Çи-пуçпала мухтанас—
Çие пустав тăхăнман;
Лашипеле мухтанас—
Аттин лаши пĕр чуман;
Тум-çуртпала мухтанас—
Çине листа витиман;
Каппаясчĕ—капăр мар,
Мухтанасчĕ—пуян мар,
Ни каппаяс хуйхи çук,
Ни мухтанас хуйхи çук!

Кайăк ларма карти çук,
Ут кăкарма юпи çук,
Кӳлсе тухма лаши çук,
Ларса тухма çуни çук,
Чип-чип теме чăххи çук,
Сапса пама сĕлли çук.
Пуçтĕпекки—масмакки,
Ик çунатти—сурпанни,
Хĕвел çути—кĕп(е) умĕ;
Хăть хурлăр та, хăть мухтăр,—
Манран луччĕ арăм çук.

Томаккасси, Шупашкар районĕ, Г. Ф. Федоров юрласа панă.

## ЧУН ХУРЛАННĂ ВĂХĂТ...

Хура вăрман касрăм эп, хир турăм,
Пит хĕрелнĕ вăхăт,
Чун хурланнă вăхăт,
Кăмăла хуçать-çке
Çак асаплă вăхăт...

Пĕр юманне х(ă)вартăм уй паллишĕн,
Пит хĕрелнĕ вăхăт...

Вăл юмана касрăм, вĕлле турăм,
Пит хĕрелнĕ вăхăт...

Вăл вĕллене ятăм, ай, хурт çури,
Пит хĕрелнĕ вăхăт...

Пыл çурисем макраççĕ пыл çукран,
Пит хĕрелнĕ вăхăт...

Эпирех макратпăр, ай, кун çукран,
Пит хĕрелнĕ вăхăт...

1903 çулта Корсунь уезĕнчи чăвашсем хушшинче И. Н. Юркин çырса илнĕ.

## ĂРАСКАЛĂМ ÇУК

Хура вăрман çине эп хурт ятăм.
Камăн йĕс йĕпсе пур, çавă тытĕ,
Манăн йĕс йĕпсе çук, эп тытас çук...

Çеçенхир варрине эп ут ятăм.
Камăн йĕс йĕвен пур, çавă тытĕ,
Манăн йĕс йĕвен çук, эп тытас çук...

Хамăр атте килне камах тытĕ?
Камăн ăраскал пур, ай, çав тытĕ,
Манăн ăраскал çук, эп тытас çук. .

1934 ç. Çĕрпӳ районĕнче И. Пагмар çырса илнĕ.

## ÇИНÇЕ ПИЛĔК ÇӲРЕН ЛАШИ

Çинçе пилĕк çӳрен лаши,
Çинçе пилĕк, ай, лашийĕ
Ай, тур-тур, карĕ пуль, карĕ пуль
Вăрман улпуч(ĕ) аллине.

Çӳлĕ кăвак, ай, лашийĕ,
Çӳлĕ кăвак лашийĕ
Ай, тур-тур, карĕ пуль, карĕ пуль
Вăрман улпуч(ĕ) аллине.

Сарă вăрăм чипер хĕрĕ,
Сарă вăрăм чипер хĕр
Ай, тур-тур, карĕ пуль, карĕ пуль
Ялти пуян аллине.

Томаккасси, Шупашкар р., Г. Ф Федоров юрласа панă.

## ÇАРАНСЕМЕХ ТĂРĂХ

Çарансемех тăрăх эп çӳрерĕм
Кĕрепенке хăмла та, ах, тускайăм, тупмарăм.
Ял-ял урлă нумай эп çӳрерĕм,
Сирĕн пек лайăх çын та, ах, тускайăм,
тупмарăм.

Утлансаях тухрăм хура çăрха
Хура çул тусанне те, ах, тускайăм, пусарма.
Юрласаях ятăм çакă юрра
Çунакан чĕрене те, ах, тускайăм, пусарма.

Утçăм тарăн çырмана, ай, кĕмерĕ,
Çак тĕнчене ик ĕмĕр, ах, тускайăм, килмерĕ.

Çак тĕнчене икĕ ĕмĕр килсен,
Курăпăр-ха эпир те, ах, тускайăм, ыр пурнăç.

Çителлĕ, Мелекес р., Куйбышев облаçĕ. 1928 ç. Е. Галанскаяран А. И. Васильев çырса илнĕ.

## ХУСАНТАН ТУХАКАН

Хусантан тухакан мăн çулĕ те (2)
Ик айккипе хурăнлăх,
Ăшшăн-ăшшăн хĕвел пăхсан та,
Хурăн(ĕ) те тăрăх сухăр юхать.

Калла-малла шухăшласан,
Калла та малла шухăшласан,
Икĕ те куçран куççуль юхать.
Ай-я-ра...

Г. Ф. Федоров 1908 çулта юрланă. „146 чăваш юрри", № 43, стр. 29. Шупашкар—Мускав, 1934 ç.

## ЭПИР ПУРМИС ПУЛАС ÇУК

Сар тăлăппа мĕн тăвас та,
Сар тăлăппа мĕн тăвас?
Эпир пурмис пулас çук та,
Пурмис ятне илтес çук.

Лайăх тумтирпа мĕн тăвас та,
Лайăх тумтирпа мĕн тăвас?
Эпир тиек пулас çук та,
Тиек ятне илтес çук.

Нумай укçапа мĕн тăвас та,
Нумай укçапа мĕн тăвас?
Эпир хуçа пулас çук та,
Хуçа ятне илтес çук.

Г. Ф. Федоров 1895 çулта юрланă. „146 чăваш юрри", Шупашкар—Мускав, 1934 ç.

## ХУÇИ КАЛАТЬ

Хуçи калать: „Кай, кай!" тет,
Витри калать: „Чим-халь", тет,
„Ăснă сăри пур-халь", тет.

Хуçи калать: „Кай, кай!" тет,
Четвĕрт кленчи: „Чим-халь", тет,
„Тулли четвĕрт пур-халь", тет.

Хуçи калать: „Кай, кай!“ тет,
Хуран калать: „Чим-халь!“, тет,
„Пиçнĕ пăтти пур-халь“, тет.

Хуçи калать: „Кай, кай!“ тет,
Турилкки калать: „Чим-халь“, тет,
„Пуçламан чăкăт пур-халь“, тет.

Хуçи калать: „Кай, кай!“ тет,
Хутаççи калать: „Чим-халь“, тет,
„Пуçламан шăрттан пур-халь“, тет.

Хуçи калать: „Кай, кай!“ тет,
Сĕтелли калать: „Чим-халь“, тет,
„Пуçламан хăпартлу пур-халь“, тет.

Тăрăн ялĕ, Комсомольск р. 1919 çул.
Кошкин П. Н. çырса илнĕ.

## ХУРА ВĂРМАН ХЫÇНЕ ШУР ЮР ÇУНĂ

Хура вăрман хыçне шур юр çунă,
Хура сăсар пырса йĕр тунă;
Хура сăсар йĕрне йĕрле-йĕрле,
Тăрса юлтăм хура вăрман варрине;

Турăран ырлăх кĕте кĕте,
Тăрса юлтăм хурлăх варрине.

Ку юрра 1936 çулта Чулçырмара
Стихван Шавлы хăйĕн 78 çулхи
аслашшĕнчен Шумков Александр
Федоровичран çырса илнĕ.

## И ЧУПРĂМ ТА ХĂПАРТĂМ ÇӐЛ ТУ ÇИНЕ

И чупрăм та хăпартăм çӳл ту çине,
Çаврăнса пăхрăм вăрман çине—
Хура вăрман çийĕ, ай, пĕр тан мар,
Эпир çынсенчен, ай, кая мар,
Ăрăскаламăр çукран, ай, каярах.

Ĕремпуртан илнĕ, ай, çăм шарăх
Виç хут çаврăнмарĕ măйăма,—
Çавăнпала илеймерĕм савнине.
Маликавран илнĕ симĕс пиçихи
Виç хут çаврăнмарĕ пилĕкĕме,
Çавăнпах та каяймарăм савнине.

Илим-Горара (Тамбов облаçĕ) Васильева ятлă карчăкран 1935 çулта
Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## УДЕЛ ХРЕСЧЕНЁСЕН ЮРРИСЕМ

### УДЕЛ ТЫРРИ

Удел тырри, удел тырри акнă чух,
Вĕт-вĕт çăмăр çăвать-çке.
Вĕт çăмăр мар, ай, ним те мар,—
Хура халăх куççулĕ.

Удел тырри, удел тырри вырнă чух,
Вăш-вăш çилсем вĕреççĕ.
Вăш-вăш çил мар, ай, ним те мар,—
Хура халăх сывлăшĕ.

Удельниййăн, удельниййăн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа сăрланă.
Хĕрлĕ сăр мар, ай, ним те мар,—
Хура халăх юнĕ вăл.

Удельниййăн, удельниййăн катукне
Маттур утсем туртаймаç.
Маттур-маттур, ай, ачисем
Удельниран тухаймаç.

Удельниййăн, удельниййăн хыçĕнче
Ялан удел капанĕ.
Ирпе каç та тухса пăхать
Удельниййăн вахтăрĕ.

Чăваш литературин антологийĕнчен илнĕ.

### УДЕЛЬНИЙĂН КАНТУРНЕ

Удельниййăн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа сăрланă.
Хĕрлĕ сăрă мар иккен,—
Хура халăх юнĕ иккен.
Ай, ылмашать сылтăм куç,
Мĕн курăпăр малашне?

Удельниййăн канавне
Алта-алта пĕтрĕçĕ
Ялти лайăх ыр çынсем.
Ай, ылмашать сылтăм куç,
Мĕн курĕ-ши çамрăк пуç?

Удельниййăн катукне
Турта-турта пĕтрĕçĕ
Ялти лайăх лашасем.
Ах, ылмашать сылтăм куç,
Мĕн курĕ-ши çамрăк пуç?

Пирĕн Данил—старшина,
Çичĕ вулăс пуçлăхĕ.
Çич вулăсран пухнă мул
Пуçне çăлма çитмерĕ.
Ах, ылмашать сылтăм куç,
Мĕн курĕ-ши çамрăк пуç?

Икĕ пар ут тан тăрать;
Хăшне ытарса ларам-ши,
Хăшне ытарса хăварам-ши?
Ах, ылмашать сылтăм куç,
Мĕн курĕ-ши çамрăк пуç?

Ик айккинче ик арăм,
Хăшне ытарса хăварам-ши,
Хăшне ытарса илем-ши?
Ах, ылмашать сылтăм куç,
Мĕн курĕ-ши çамрăк пуç?

Шурут, Йĕпреç р., 1932 ç. çырса илнĕ.

## УДЕЛЬНИЙĂН УÇĂМĔ

Удельнийăн уçăмĕ
Кăвакарать, ешĕрет.

Удельнийăн çаранĕ!
Çаранĕ тулли валемĕ.

Удельнийăн анкартийĕ!
Анкарти тулли капанĕ.

Удельнийăн кĕлечĕ!
Кĕлечĕ тулли ырашĕ.

Удельнийăн кантурне
Хĕрлĕ сăрпа сăрланă.

Хĕрлĕ сăрпа сăрламан,
Халăх юнпе сăрланă.

Кивĕ Шерўшкел, Тутар респуб. 1924 ç.
А. И. Васильев çырса илнĕ.

## КĂВАКАРЧĂН ЧĔППИ ТЕ

Кăвакарчăн чĕппи те, ай, вĕçнĕ чух
Кунĕсем тĕтреллĕ те пулайрĕç.
Самăй эпир пурнас, ай, тенĕ чух
Удельни нухайккисем çунтарчĕç.

Эпир ларас-тăрас та, ай, тенкеле
Çавăрса тунă мĕн ăстисем.
Эпир мĕн курасса та мĕн илтессе
Ларса çырнă мĕн те пĕр турă.

Хурчăкисем хурăнăн, ай, тăрринче,
Çуначĕсем пĕлĕтĕн те, ай, хушшинче.
Пĕвĕмĕрсем ыр çын та, ай, умĕнче,
Чунăмăрсем туррăн та аллинче.

Сирĕн икĕ пўртĕр те хире-хирĕç,
Ун çивиттисем те пĕр тикĕс.
Паянах та капла та, ыран тепле?
Иртейинччĕ ĕмĕрĕмсем пĕр тикĕс.

Хура вăрман тăрăх та, ай, тил юртать;
Кам маттур пурсуйлă çын—çав тытĕ.
Çулталăкăн хушши те вуник уйăх,
Кам телейлĕ çынах та—çав çитĕ.

Сăкăт, Патăръел р. 1934 ç.
В. П. Воробьев çырса илнĕ

## ÇЕН ÇЕРЕ КАЯКАНСЕН ЮРРИСЕМ

### АТЬĂР КАЯР СИБИРЕ

Атьăр, каяр Сибире!
Акмасăр тырă пулать, тет.
Пулать-и те, пулмасть-и,—
Атьăр, кайса курăпăр.
Ах, çук, çук, çук, пулас çук,
Акмасăр тырă пулас çук,
Пирĕн телейсем çавнашкал...

Атьăр, каяр Сибире!
Вутсăр çăкăр пиçет, тет.
Пиçет-и, пиçмест-и,—
Атьăр, кайса курăпăр.
Ах, çук, çук, çук, пулас çук,
Вутсăр çăкăр пиçес çук,
Пирĕн телейсем çавнашкал...

Атьăр, каяр Сибире!
Çапмасăр аван çапăнать, тет.
Çапăни, çапăнми,—
Атьăр, кайса куратпăр.
Ах, çук, çук, çук, пулас çук,
Çапмасăр аван çапăнас çук,
Пирĕн телейсем çавнашкал...

Атьăр, каяр Сибире!
Çулмасăр утă çулăнать, тет.
Çулăни, çулăнми,—
Атьăр, кайса куратпăр.
Ах, çук, çук, çук, пулас çук,
Çулмасăр утă çулăнас çук,
Пирĕн телейсем çавнашкал...

Атьăр, каяр Сибире!
Çилсĕр çилармань авăрать, тет.
Авăри, авăрми,

Атьӑр, кайса пӑхӑпар.
Ах, ҫук, ҫук, ҫук, пулас ҫук,
Ҫилсӗр ҫилармань авӑрмасть пуль,
Пирӗн сывлӑшпа авӑрать пуль...

Атьӑр, каяр Сибире!
Шывсӑр шывармань авӑрать, тет.
Авӑри, авӑрми,—
Атьӑр, кайса пӑхатпӑр.
Ах, ҫук, ҫук, ҫук, пулас ҫук,
Шывсӑр шывармань авӑрмасть пуль,
Пирӗн куҫҫульпе авӑрать пуль.

Черепаново, Хӗрлӗ-Чутай р.
1933 ҫулта ҫырса илнӗ.

## ИРӖКСӖРЕХ КАЯС ПУЛАТЬ

Атте мана шур пӳрт лартса парас тетчӗ,
Йӗтем варринче чӑрӑш шӑтса ӳссессӗн.
Йӗтем варринче чӑрӑш шӑтса ӳсейрес ҫук,
Атте мана шур пӳрт лартса парайрас ҫук.
Ирӗксӗрех каяс пулать ҫӗн ҫӗре
Сӗм варманта чӑрӑш касса шур пӳрт лартма.
Сӗм вӑрманта чӑрӑш касса шур пӳрт лартсан,
Пырса курӑр пирӗн пата, тӑвансем.

Пичче мана кӗлет лартса парас тетчӗ,
Урам варринче ҫӑка шӑтса ӳссессӗн.
Урам варринче ҫӑка шӑтса ӳсейрес ҫук,
Пичче мана кӗлет лартса парайрас ҫук.
Ирӗксӗрех каяс пулать ҫӗн ҫӗре
Сӗм вӑрманта ҫӑка касса кӗлет лартма.
Сӗм варманта ҫӑка касса кӗлет лартсан,
Пырса курӑр пирӗн пата, тӑвансем.

Шӑллӑм мана калуш илсе парас тетчӗ,
Седьмой номер ҫичӗ пуса юлсассӑн.
Седьмой номер ҫичӗ пуса юлайрас ҫук,
Шӑллӑм мана калуш илсе парайрас ҫук.
Ирӗксӗрех каяс пулать ҫӗн ҫӗре
Сӗм вӑрманта пушӑт касса ҫӑпата тума.
Сӗм варманта пушӑт касса ҫӑпата тусан,
Пырса курӑр эпир мӗнле ташланине.

Йӑмӑк мана алшӑлли туса парас тетчӗ,
Кӑмака ҫинче йӗтӗн шӑтса ӳссессӗн.
Кӑмака ҫинче йӗтӗн шӑтса ӳсейрес ҫук,
Йӑмӑк мана алшӑлли туса парайрас ҫук.

Ирĕксĕрех каяс пулать ҫен ҫĕрĕ
Сĕм вăрманта йĕтĕн акса алшăлли тума.
Сĕм вăрманта йĕтĕн акса алшăлли тусан,
Пырса курăр эпир епле ал шăлнине.

Уразметево, Куславкка р.
1918 ҫ. Г. Г. Лисков ҫырса илнĕ.

## СИБИР ҪУЛĔ

Сибир ҫулĕ—вăрăм ҫул...
Ҫул вăрăмшăн каймастпăр,
Ĕмĕр вăрăмшăн каятпăр,
Сыва пулăр, тăвансем.

Чĕкеҫ вĕҫет малалла,
Ик ҫунатти каялла.
Эпĕр каятпăр катана,
Тăвансем юлаҫ хыҫала.

Шĕшкĕ тăрри—йăмăксем,
Йăмра тăрри—шăллăмсем,
Ах, сыв пулăр, пур пулăр,
Пурте пирĕн пек ан пулăр.

## АЙТĂРАХ, КАЯР

Айтăрах, каяр
Ҫĕнĕрех ҫере.
Ҫĕнĕрех ҫĕртре
Ҫĕнĕ ҫурт лартар.

Ҫĕнĕрех ҫĕртре
Ҫĕнĕ ҫурт лартар,
Ҫĕнĕ ҫурт ҫине
Виҫ чӳрече касар.

Пĕрĕмĕш чӳречи
Пултăр пахчана,
Иккĕмĕш чӳречи
Пултăр уялла.

Иккĕмĕш чӳречи
Пултăр уялла,
Виҫҫĕмĕш чӳречи
Пултăр тинĕсе.

Пĕрĕмĕшĕнчен пăхрăм—
Шăпчăксем юрлаҫ,
Иккĕмĕшĕнчен пăхрăм—
Вăй хĕрсем выляҫ.
Иккĕмĕшĕнчен пăхрăм,—
Вăй хĕрсем выляҫ.
Виҫҫĕмĕшĕнчен пăхрăм—
Карапсем ишеҫ.

Карапсем шыв ҫинче,
Хам карап ҫинче.
Карап хăйăр ҫинче,
Хам хуйхă ҫинче.

Эпирех пурăнас
Ай тенĕ чух
Ешĕрен курăксем
Типшĕрсе ларчĕҫ.

Ҫынсемех пурăнас
Ай тенĕ чух
Типшĕрен курăксем
Ешĕрсе ларчĕҫ.

Чĕнер, Сĕнтĕрвăрри р.
1929 ҫ. Н. Васильев ҫырса илнĕ.

# ШЎТЛЁ ЮРĂСЕМ

## УТМĂЛ ПЁРЧЁ УРПА АКРĂМ

Утмăл пĕрчĕ урпа акрăм
Еррипе,
Çитмĕл пĕрчĕ пухса илтĕм
Еррипе.
Тур тихапа турттартăм
Еррипе,
Ват лашапа аштартăм
Еррипе.
Таканапа салат хыврăм
Еррипе,
Печчуркара типĕтрĕм
Еррипе.
Аларманьпе авăртрăм
Еррипе,
Хуран çуртан[1] сăра турăм
Еррипе.
Хăна-вĕрлĕ пуçтартăм
Еррипе,
Пўрнескепе ĕçтертĕм
Еррипе.
Тухрăм утрăм пĕр çулпала
Еррипе,
Йĕлмелĕхе çитсе кĕтĕм
Еррипе.
Йĕлме касрăм, йĕлтĕр турăм
Еррипе,
Тураттинччен туя турăм
Еррипе.
Яр-яр шуçрăм, çĕтех карăм
Еррипе,
Ухмах ялне кĕрех карăм
Еррипе.
Ухмах тухрĕ параппан çапса
Еррипе,
Матки тухрĕ таш-ташласа
Еррипе.
Карчăк тухрĕ ятлаçмашкăн
Еррипе,
Хĕрсем тухрĕç курмашкăн
Еррипе.
Йытти тухрĕ тулламашкăн
Еррипе,
Вĕшли тухрĕ хăваламашкăн
Еррипе.
Тартăм-тартăм тарăн варпа
Еррипе,
Карта урлă каçсах карăм
Еррипе.
Карта урлă каçсах карăм
Еррипе,
Çампа пĕççĕм чармак пулчĕ
Еррипе.
Шăтăк виттĕр пăхрăм та
Еррипе,
Çампа куçăм чармак пулчĕ
Еррипе.

Ассакасси, Элĕк р. 1928 ç.
К. Виноградов çырса илнĕ.

---

1 Хуран та çурăран.

## ХĔРĔМ, САНА МĔН КИРЛĔ

— Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Икĕ карташ ыр ут пур,
Пĕри сана пултăр-и?
— Ай, апай, ай, аттей,
Сула пулса вилччĕр-и!

— Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Йĕри-тавра çуртăм пур,
Пери сана пултăр-и?
— Ай, апай, ай, аттей,
Вутпа хыпса çунтăр-и?

— Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Ик ял çинче хура ача,
Пĕри сана юраллă.[1]
— Ай, апай, ай, аттей,
Салтак кайса вилччĕр-и?

— Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Ик шупашка кĕпе пур,
Пĕри сана пултăр-и?
— Ай, апай, ай, аттей,
Вăра вăрласа кайтăр-и!

— Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Икĕ карташ ĕнем пур,
Пĕри сана пултар-и?
— Ай, апай, ай, аттей,
Чĕмере тивсе вилтĕр-и!

— Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Ик ял çинче сар ача,
Пĕри сана халаллă.
— Ай, апай, ай, аттей,
Паçрах çавна калас мĕн!

Чурпай, Етĕрне р. ЧАССР.
1930 ç. Чеботарев çырса илнĕ.

## ПУÇТАРТĂМ, ПУÇТАРТĂМ

Пуçтартăм, пуçтартăм
Пĕр çĕклемлĕх хăрăк шанкă.
Пĕçертĕм, пĕçертĕм
Старик валли вир пăтти.
Ярас-и, ярас-и
Çур кашăк пек уçлам çу?
Кулянтăм, кулянтăм,—
Мĕншĕн нумай ятăм-ши?

Сарас-и, сарас-и,
Айне вĕт чул сарас-и?
Витес-и, витес-и,
Çине вĕлтрен витес-и?
Тратас-и, тратас-и,
Çӳçрен туртса тратас-и,
Кутран тапса тратас-и?

Пуçтартăм, пуçтартăм
Пĕр çĕклемлĕх хăрăк шанкă.

Пĕçертĕм, пĕçертĕм
Савни валли шур пăгă.
Ярас-и, ярас-и
Çич кашăк пек сивĕ çу?
Кулянтăм, кулянтăм,—
Мĕншĕн сахал ятăм-ши?

Сарас-и, сарас-и,
Мамăк тӳшек сарас-и?
Ахальлине сарас-и?
Витес-и, витес-и,
Парчук çитти витес-и,
Ахальлине витес-и?
Тратас-и, тратас и,
Алран тытса тратас-и,
Чуптуса та тратас-и?

Элĕк р. Куракăш ялĕ 1929 ç.
Лукин Матвей çырса илнĕ.

## КАНТĂР АНИ ПУÇĔНЧЕ

— Кантăр ани пуçĕнче
Кансĕрлерĕн эс мана.
— Çук, çук, çук, инкеçĕм,
Кансĕрлемен эп сана.

— Пуса ани пуçĕнче
Пусмăрларăн эс мана.
— Çук, çук, çук, инкеçĕм,
Пусмăрламан эп сана.

[1] Юрăхлă.

— Йĕтĕн ани хыçĕнче
Йĕрĕнтертĕн эс мана.
— Çук, çук, çук, инкеçĕм,
Йĕрĕнтермен эп сана.

— Аслă вăрман леш енче
Асăнтартăн эс мана.
— Çук, çук, çук, инкеçĕм,
Асăнтарман эп сана.

— Тарăн çырма варринче
Тарăхтартăн эс мана.
— Çук, çук, çук, инкеçĕм,
Тарăхтарман эп сана.

— Сарай алăк хыçĕнче
Савăнтартăн эс мана.
— Çук, çук, çук, инкеçем,
Савăнтарман эп сана.

Çĕнĕ-Чаллă Çĕрпӳелĕ, Патăръел р.
Кашкăр Микули çырса илнĕ. 1936 ç.

## САЛТАК ЮРРИСЕМ

### ХУРĂН ТА ТУНКАТИ

Хурăн та тункати пит кĕре,
Вутă тусан—çурасси.
Салтак та теме пит лайăх,
Кайма та тăрсан—каясси.

Хура та вàрман варринче
Хурлăхан та йывăç хурлăхлă.
Пирĕн те атте килĕнче
Асла та ывăль хурлăхлă.

Пилеш те пăхма хĕп-хĕрлĕ,
Çиме тăрсан—пит йӳçĕ.
Салтак та ячĕ пит аван,
Кайма та тăрсан—пит начар.

Кӳлсе те тăратнă тур лаша
Вăрăм та çула каймашкăн.
Пире те анне çуратнă
Ĕмĕр те хуйхă курмашкăн.

Килхушшинче те çавра кӳл,
Епле те утса çаврăнам-ши?
Çакă та салтак нушине
Епле те чăтса ирттерем-ши?

Сиксе те вĕрет сăмавар,
Кăмрăксăр мар, кăмрăкпа.
Сиксе те тухать çамрăк чун,
Хуйхăсăр мар, хуйхăпа.

Ансăр та çырма урлăшне
Сиксе те каçса пулмарĕ.
Çакă та салтак ячĕнчен
Хăтăлса та юлса пулмарĕ.

Тур лашана кӳлнĕ чух
Кунĕ те пулчĕ тĕтрелле.
Эпир те ӳссе çитнĕ чух
Самани пулчĕ хурлăхлă.

Çитсă та кĕпе çĕлетрĕм,
Ма чăтăмсăр пулчĕ-ши?
Яштак та пĕве ӳстертĕм,
Ма телейсĕр пулчĕ-ши?

Вутă та çунсан мĕн юлать?
Ним юлмин те, кĕл юлать.
Эпир те кайсан мĕн юлать?
Вунçич çулхи хĕр юлать.

Сĕнтĕрвăрри р. Чĕнер ялĕнче
1929 ç. Н. Васильев пухнă.

### ЛЕШ АЯККИ ЕШĔЛ, АЙ, КУРĂНАТЬ

Леш аякки ешĕл, ай, курăнать,
Тен юр кайса курăксем шăтнăран?

Хамăр тăван лайăх, ай, курăнать,
Тен чун савса кăмăлсем туртнăран?

Ёнтĕ мĕнсем нумай, мĕнсем нумай?
Хуйхă çапла нумай пулать çав.

Ёнтĕ мĕнсем сахал, мĕнсем сахал?
Телей çапла сахал пулать çав.

Укăлчанăн тулне шур юр çунă,
Йĕлтĕрпеле çӳрекен пĕри çук.

Патшан тумтиррисем симĕс-кăвак,
Аратланса тăхăнакан пĕри çук.

Атăлах та тĕпне, ай, чул ятăм,
Хăçан калла çаврăнса тухĕ-ши?

Патша нуши çине пуçа ятăм,
Хăçан калла çаврăнса килĕ-ши?

Чăвашкасси Улхаш.
Чĕмпĕр у. 1914 ç.
Г. Лисков çырса илнĕ.

## МĔН АСЛАТИ АВĂТАТЬ

Мĕн аслати авăтать, мĕн çиçĕм çиçет,
Типĕ кăлкан тăррине вут çапса çунтарать?

Типĕ кăлкан тăррине вут çапса çунтарать.
Çамрăк салтаксем вăрçа хатĕрленеççĕ.

Çамрăк салтаксем вăрçа хатĕрленеççĕ,
Хăйсем хатĕрленеççĕ, хăйсем йĕреççĕ.

Хăйсем хатĕрленеççĕ, хăйсем йĕреççĕ,
Икĕ те куçĕнчен вут тăкăнать, юн тумлать.

Икĕ те куçĕнчен вут тăкăнать, юн тумлать,
Мĕншĕн-ши йĕреççĕ çав çамрăк çынсем?

Мĕншĕн-ши йĕреççĕ çав çамрăк çынсем?—
Вăхăтсăр вилĕмпе вилессе сиснĕрен.

Вăхăтсăр вилĕмпе вилессе сиснĕрен,
И тăван та ачисем тăлăха юлнăран.

Саратов облаçĕ, Чăваш Кулат-
ки ялĕнче 1928 ç. Абдюмов Г. М.
çырса илнĕ.

## КĂҪАЛ САЛТАК

Кăҫал салтак пуласса пĕлнĕ пулсан—
Ҫурхи шывпах юхса каяс мĕн,
Пуп улăх варрине чарăнас мĕн,
И аҫа та кикен пулас мĕн,
Хурҫă ҫавапала касăлас мĕн,
Чĕркуҫ(ҫи) таран паккус ӳкес мĕн,
Пилĕк ҫӳлли валем ӳкес мĕн,
И кĕрхи вĕт ҫăмăрпа ҫĕрес мĕн,
Ҫурхи сĕлтĕпе юхса каяс мĕн,
Шур Атăл варрине чарăнас мĕн,
Шур Атăлăн кăпăкĕ, ай, пулас мĕн,
Раҫҫей патшине юрăхлă, ай, пуличчен
Шур Атăла пулăшу, ай, пулас мĕн,
Мĕнпур нушам ҫанта тулас мĕн.

Неверкинра (ҫав районах, чăвашла Ҫăрттанлă, Тамбов облаҫĕ) 1935 ҫулта Абачкин старикрен Стихван Шавлы ҫырса илнĕ.

## ШУРĂ ПАТШАН ШУРĂ ЛАШИ

Шурă патшан шурă лаши
Авкаланать аллинче;
Пульницари тухтăрсем
Авкаланаҫ ман умра.

Пульницанăн урай-маччи
Ни пĕлĕт мар, ни ҫĕр мар;
Пульницанăн чӳречисем
Ни уйăх мар, хĕвел мар.

Чӳречисен чаршавĕсем
Каҫхи кăвак хуппи мар;
Пульницари тухтăрĕсем
Ни атте мар, анне мар.

Атте-анне, килсе курăр
Манăн чунăм тухиччен,
Пичче-инке, килсе курăр
Мана йăтса кайиччен.

Акка-йăмăк, килсе курăр
Мана ҫĕре хывиччен,
Шăллăмăмсем, килсе курăр
Ҫие тăпра яриччен;

Мĕн пуртăван, мĕн пур ял-йыш,
Килсе курăр ҫĕре кĕриччен.

Ҫулйĕр тусĕ—йыттăм Улаҫкам,
Эс те килсе ула пуҫ ҫинче.

Ман шăтăка, ҫук, алтмарĕҫ
Сарă чечек пур ҫĕре,
Мана витсе, ҫук, хумарĕҫ
Ешĕл ҫерем кассипе.

Вăшăл-вăшăл ҫил ҫеҫ вĕрет,—
Ман тăпрана вĕҫтерет;
Шăпăр-шăпăр ҫăмăр иртет,—
Ман тăпрана нӳретет.

Танлă пиҫен тан шăтĕ,
Чармак чарĕ йĕппине.
Никам килмĕ—калта шăвĕ,
Ҫĕлен ши-ши шăхăрĕ.

Инҫе ҫула ҫитеймерĕм,
Вăйран таталса ӳкрĕм.
Нашăк-нашăк сар хĕр йĕрĕ,
Нар чĕрине шуратĕ.

Ку юрра Чăваш Эштепенĕнче (Куйбышев облаҫĕ) ача-пăча яслинче ĕҫлекен хĕртен (ячĕ паллă мар) 1936 ҫулта Стихван Шавлы ҫырса илнĕ.

## ЭХ, САЛТАКСЕМ

Эх, салтаксем, аванах ачисем,
Ăçта сирĕн арăмсем?
— Пирĕн арăмсем çумри хĕçпăшалсем!

Эх, салтаксем, аванах ачисем,
Ăçта сирĕн çуртăрсем?
— Пирĕн çуртсем хулари шур чул витесем!

Эх, салтаксем, аванах ачисем,
Мĕншĕн пиçиххийĕр тăп тытмасть?
— Тип çăкăрпа лĕп шыв сыпса çинĕрен!

Эх, салтаксем, аванах ачисем,
Мĕншĕн питĕр-куçăр кăн-кăвак?
— Ир те каç та папуй çинĕрен!

Чăваш Эштепенĕнче Макçăм старикрен
1936 çулта Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## РЕЗАНЬ ХИРĔНЧЕ

Резань хирĕнче—аслă хирĕнче
Тырă-пулă начар пулнă,
Толькă тĕм-тĕм хăва.
Вăл хăва айĕнче выртать салтак вилли.

Пур çĕртен те аманнă,—алури те çук,
Унăн кăкри витĕр çичĕ пульă тухнă,
Унăн ури вĕçĕнче тăрать кăвак лаша,
Хире çурса кĕçенет те кукалет.

„Эй лашам, ман лашам, тăван киле кайса кил.
Эсĕ кайсан, кала аттене-аннене:
Мана авлантарчĕçĕ пăшал лушипе,
Мана венчет турĕç çивчĕ хĕçпеле.

Авă манăн атте-анне—юман юпа,
Авă манăн атте-анне—хура тăпра,
Авă манăн йăмăк—йăмăк юман тупăк.
Авă манăн арăм—арăм шупка уйăх.
Авă манăн ачамсем—ачамсем çут çăлтăрсем.

Çав старикренех
Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## ÇИЧЧĔПЕЛЕ ЭП КАРĂМ

Çиччĕпеле эп карăм, ай, путрете,
Çичĕ юплĕ çырма, ай, тĕл пултăм,
Çичĕ юплĕ çырма, ай, леш енче
Чăрăш йăвăç ларать, ай, сарăлса.

Тĕпĕнчен тăррине, ай, турачĕ,
Ăмăрткайăк йăва çавăрать,
Çавăрать те хăй макăрать,
Çичĕ çăмарта, ай, тăвать.

И çиччĕшне те пусса кăларать,
Ултăшĕ çунатлă, пĕри çунатсăр,
Çунатлисем вĕçсе кайрĕç,
Çунатсăр та тени эп пултăм.
Атте-аннен мĕскĕн тени
Ай-хаях та эп пултăм.

Куççулĕм те шăпăр юхать,
Шăлăмсем те шатăр тăвать,
Чĕремçĕм те шар çурăлать,
Ĕсĕклесех чунăм макăрать.

Неверкинра Абачкин старикрен
1935 çулта Стихван Шавлы
çырса илнĕ.

## ЛАПСĂРККА ТА ЮМАН

Лапсăркка та юман мĕншĕн авăнать,
Те сивĕ çил хытă вĕрнĕрен.
Çамрăках та йĕкĕт мĕншĕн кулянать,
Те ĕмĕри хăвăрт иртнĕрен.

Авланма та мул, ай, çук пуласран,
Çунатсем те вĕçме пулас, ай, çукран,
Карăм çеçенхире ăрăсăма шырама,
Тупаймарăм ăрăсăма—куртăм пулăçăсене.

Эй, пулăçăсем, аван ачасем,
Карăр сĕрекĕре пысăк шывăн урлăшне,
Тытайăрсам çамрăк ача ăрăсне,—
Тытаймарĕç вĕсем ăрăса,
Тытрĕç вĕсем çăрттан пуллине.

— Кала çăрттан, ăрăс ăçта?
— Сан ăрăсу тинĕс варринче,
Сан ăрăсу тинĕс тĕпĕнче,
Вăхăтсăрах чулпа çыхса янă.

Неверкинра, 1935 çулта Абачкинсенчен Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## ПАТШАПАЛА ПАТША

Патшапала патша шухăш тăваççĕ:
Атя халĕ вăрçă çĕклер, теççĕ,
Хура халăха пĕтерер, теççĕ,
Хамăр çеç ирĕкре пурăнар, теççĕ.

Варшав çунать—тĕтĕм ÿкет
Тăттăшах та этем юнне ĕçнĕрен.
Варшав урам кленче урам:
Çурăлтăр та çĕмĕрлтĕр,
Пирĕн пуçа çав çиет,
Пирĕн юна çав ĕçет.

Чупрăмах та кĕтĕм лавкана,
Улма илтĕм укçалла.
Çынна çитрĕм, айван пуçăм
Кирлĕ пулчĕ патшана.

Ан йĕр, аттем, муш таврăнăп,
Ан йĕр, аннем, муш хăтăлап.
Висла урлă каçрăмăр
Кĕпер çукран çын хурса.

Илим-Горара (Неверкин р-нĕ, Тамбов облаçĕ) Васильева карчăкран 1936 çулта Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## САЛТАК АРĂМ ЮРРИ

Пĕр усрав хĕр шыв ăсать:
Хурăн çулçи сарăлнă чух,
Хур мамăкне тăкнă чух,
Манăн савнă ывăлăм
Вырăн сарса выртнă чух.

Чупрăм кĕтĕм, ай, пахчана:
Сатра ÿснĕ сар майăра
Татса пăхрăм—тĕшĕ çук,
Тĕлĕкрен те, ай, вăрантăм,
Хамăн çумра мăшăр çук.

Илим-Горара Васильева карчăкран 1936 çулта Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## ЧУПРĂМАХ ТА

Чупрăмах та антăм шыв хĕрне,
Юрне шăлса тăкса, вак касрăм,
Ăшăм çуннă енне выртса ĕçрĕм,
Сĕлтĕшĕсем çыпаçрĕç çамкана.

Шăлса ил-ха, аннем, шур тутрупа,
Çăлса юл-ха, аттем, мулупа...
Шăлса илме, аннем, шур тутру çук,
Çăлса юлма, аттем, мулу çук.

Вир пăтти пĕçерсе, куç хывса
Ан ларт, анне, çиес килмест.
    Атте, мĕн тăвас?
Учĕсене кӳлсе çавăрса тăратнă:
Каяс килмест, аттем.
    Анне, мĕн тăвас?

Сутанкăлта (Похвиçнĕ р. Куйбышев облаçĕ) 1936 çулта Эрнюк карчăкран Стихван Шавлы çырса илнĕ.

## 1905 ÇУЛХИ ЮРĂСЕМ

### ЙĂЛТĂР-ЙĂЛТĂР

Йăлтăр-йăлтăр кленче ту,
Çав ту çинче иккĕн пур:
Пĕри—турă, тепри—патша.
Турри çырать ырлăхне,
Патши çырать хурлăхне;
Эпир ăна чăтас çук.

1905 ç. И. Д. Никитин çырса илнĕ.

### ÇЕРЕМ ПĂСАÇÇĔ

Çерем пăсаççĕ, хăяр акаççĕ,
И, час шăттăр тесе, шывсем сапаççĕ.

Çĕн Улхаш ачи, сарăях ачи,
И, çухатрĕ пуçне халăх ĕçĕшĕн.

Çĕн Улхаш лаши, тимĕрех лаши,
И, унăн уринче тимĕрех такан.

Çĕн Улхаш ачин, сарăях ачин,
И, унăн уринче тимĕрех тăлă.

Тимĕрех тăлă, улаях çулĕ,
И, ĕмĕрĕ иртет Сибирь çĕрĕнче.

Ваçли амăшĕ ылханать хытă,
И, патшасен пуçне çĕр çăттăр, тесе.

Чăвашкасси Улхаш, Куйбышев облаçĕ. 1916 ç. Лисков çырса илнĕ.

## РАҪҪЕЙ

Пирĕн Раҫҫей пиг пысăк,
Ах турă!
Вĕҫĕ-хĕрри ун курăнмасть,
Тур ҫырлах!
Улпучĕсен хырăмĕсем—
Ах турă!
Пичĕке пек тулса тăрать,
Тур ҫырлах!
Пуҫлăхĕсем, полицисем –
Ах турă!
Пуҫа ухса ҫеҫ тăраҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Куҫĕсене пăхма хăрăн,
Ах турă!
Ҫĕлен пекех пăхкалаҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Аллисенчи саламатсем,
Ах турă!
Ним айăпсăр ҫаптараҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Кăкрисенче медалĕсем,
Ах турă!
Ҫăлтăр пекех курăнаҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Йыттисене юратаҫҫĕ,
Ах турă!
Шур кулачă ҫитереҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Ĕҫҫыннисем-хĕресченсем,
Ах турă!
Нумайăшĕ выҫă лараҫ,
Тур ҫырлах!
Пирĕн Раҫҫей тырри-пулли,
Ах турă!
Ниҫта чиксе пĕтерес ҫук,
Тур ҫырлах!
Хулисенче, ялĕсенче,
Ах турă!
Вĕҫсĕр-хĕрсĕр ыйткалакан,
Тур ҫырлах!
Пирĕн Раҫҫей питĕ чаплă,
Ах турă!
Пĕтĕм ҫынна тĕлĕнтерет,
Тур ҫырлах!
Ĕҫҫыннипе хресчен юнне,
Ах турă!
Сĕлĕх пекех сăхса тăрать,
Тур ҫырлах!
Пирĕн Раҫҫей питĕ пуян,
Ах турă!
Никам шутне тупаяс ҫук,
Тур ҫырлах!
Хуласенче таварĕсем,
Ах турă!
Лапкисене шăнăҫмаҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Чухăнĕсем темĕн чухлĕ,
Ах турă!
Ҫи-пуҫĕсем ҫĕтĕк-ҫатăк,
Тур ҫырлах!
Вăрăм ҫӳҫсем чиркӳсенче,
Ах турă!
Упа пекех сухăраҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Виллинчен те, чĕрринчен те,
Ах турă!
Тăпăлтарса ҫеҫ илеҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Пирĕн Раҫҫей шкулĕсенче,
Ах турă!
Буржуйсем ҫеҫ вĕренеҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Хĕресчене, ĕҫхалăхне,
Ах турă!
Ниҫта та ҫул памаҫҫĕ,
Тур ҫырлах!
Пирĕн Раҫҫей вăрмансенче,
Ах турă!
Шучĕ те ҫук пурлăх ҫĕрет,
Тур ҫырлах!
Хура халăх ҫурчĕ-йĕрĕ,
Ах турă!
Хăрăк-харăк тӳнсе тăрать,
Тур ҫырлах!
Пирĕн Раҫҫей питĕ хаяр,
Ах турă!
Ĕмĕр-ĕмĕр юн юхтарать,
Тур ҫырлах!
Тĕрмесенче тăп-туллиех,
Ах турă!
Айăпсăр ҫын тулса тăрать,
Тур ҫырлах!

Пирĕн Раççей çĕршывĕнче,
Ах турă!
Çăмăр пекех куççуль çăвать,
Тур çырлах!
Пирĕн Раççей вăрçă вăрçать,
Ах турă!
Хисеп те çук тăлăх-турат,
Тур çырлах!

Пирĕн Раççей питĕ пысăк,
Ах турă!
Вĕçĕ-хĕрри ун курăнмасть,
Тур çырлах!

Ку юрра 1905 çулта Н. Шелепи çырнă. Анчах та вăл халăх хушшине сарăлса, халăх юрри пулса тăнă.

## РАБОЧИСЕН ЮРРИ

Атте-аннен савман, ай, ывăлĕ,—
Леçсе пачĕç Саксун аллине.
Леçсе пачĕç Саксун, ай, аллине,
Саксун леçрĕ сахăр савăтне.
Саксун леçрĕ сахăр ай, савăтне;
Сахăр савăтĕнче ĕçле-ĕçле,
Çу çурта пек пĕвĕм авăнчĕ.
Çу çурта пек пĕвĕм, ай, авăнчĕ,
Нар пек хĕрлĕ питĕм шуралчĕ,
Нар пек хĕрлĕ питĕм, ай, шуралчĕ,
Çут çăлтăр пек куçăм курми пулч(ĕ),
Çут çăлтăр пек куçăм курми пулчĕ,
Вутра çунтăр сахăр савăчĕ!
И вутра та çунтăр сахăр савăч(ĕ),—
Манăн çамрăк пуçма пĕтерчĕ.

Саратов облаçĕ, Чăваш Кулатки ялĕ, 1928 çулта
Абдюмов Т. М. çырса илнĕ.

## ТĔРМЕ ЮРРИ

Акă ĕнтĕ, мĕн ĕнтĕ,
Акă ĕнтĕ, мĕн ĕнтĕ?
Ара ĕнтĕ, мĕн ĕнтĕ,
Сăнчăр сасси илтĕнет.

Сăнчăр сасси илтĕнет,
Пире уçса кăлараç.
Йĕри-тавра пăхрăм та—
Йĕри-тавра салтаксем.

Хĕçпе пăшал хушшинче
Эп каятăп Сибире.
Эп каятăп Сибире,
Сибире та катăрга.

Сылтăм енне пăхрăм та
Куртăм чунăм савнине.
Савни, маншăн ан кулян,
Эп вилĕмрен хăрамасп,
Тулькă хăрап асапран.

Ассакасси, Элĕк р. 1928 ç. Кузьма Волков çырса илнĕ.

## КАТĂРГĂНА ЯНĂ ÇЫН ЮРРИ

Ӳсрĕ пĕччен-тăлăххăн
Уйри вată хурама.
Ӳсрĕм эп те çавнашкал
Пурнăçра асап курма.

Çурçĕр енчен вĕрен çил
Туллать хураман пӳве,
Ман пуçăмри йывăр шухăш
Çӳçентерет чĕреме.

Çуркуннехи аслă шыв
Юхса выртать аванса.
Çаван пекех манăн ĕмĕр
Иртет иккен пăлханса.

Сат варринчи улмине
Татса çисе пулмарĕ;
Çакă хĕнлĕ пурнăçпа
Ырлăх курса пулмарĕ.

Ир те тăман, каç та тăман,—
Шур мулкачă ăçта-ши?
Паян хуйăх, ыран асап,
Ирĕк пурнăç ăçта-ши?

Тул çутăлнă вăхăтра
Саркайăксем юрлаççĕ,
Вут пек çунан чĕрене
Пушшех хурлантараççĕ.

Сарă чечек пуçтартăм
Пуçкăшăлĕ çавăрма.
Кĕсле-купăс туянтăм
Чĕрем çунсан калама.

Хире тухрăм, çўле пăхрăм
Кайăк хурсем вĕçнине.
Пĕччен ларса шухăшларăм
Ĕмĕр епле иртнине.

Чĕвĕл-чĕвĕл çерçисен
Аслăк çинче йăвисем.
Ман пек тăлăх ачасен
Ниçта та çук килĕсем.

Мĕн çамрăкран пурнăçра
Тўсме тиврĕ хуйăха.
Хамран тарнă ырлăха
Тĕл пуласси тупăкра.

Ута уттарса ятăм,
Пирус тивертсе ятăм;
Ăшăм питĕ çуннă енне
Йĕрсе юрласа ятăм.

Хурçă перо шăхăрса
Шăвать шурă хут çинче,
Малти пурнăç сĕткенне
Сăхса илет сĕлĕхле.

Хур кайăксем килнĕ чух
Кунĕ пулчĕ тĕтреллĕ.
Эпир ўссе çитнĕ чух
Пурнăç пулчĕ асаплă.

Пысăк тĕрмен чўречи
Мĕншĕн тĕксĕм курнать-ши?
Мĕн чухлĕ çын айăпсăр
Çавăнта пуç хуман-ши?

Шăпăр-шăпăр çăмăр çăвать,
Йĕс тўмме пек таталса.
Килти пурнăç аса килсен,
Чунăм каfive хурланса.

Вата-вата çакине
Вăхăт çитет йăванма;
Патшан юнлă тĕрмине
Вăхăт çитет йăтăнма.

Вăрман урлă килтĕмĕр
Врене çулçи çуттипе,
Хир-хир урлă килтĕмĕр
Ыраш пусси çуттипе.

Ял-ял урлă килтĕмĕр
Ыр çын краççын çуттипе,
Таван яла çитрĕмĕр
Хаваслă чун çуттипе.

Пĕрре, терĕм, иккĕ, терĕм
Çырла çеçки пиçнĕ чух.
Юрлам, терĕм, савăнам, терĕм
Пĕрре килсе курнă чух.

Виçĕ хурăн пĕр тĕпрен,—
Харăс тăрса касар-и?
Пур тăвансем пĕрле чухне
Харăс тăрса юрлар-и?

Лутра юман айĕнче
Йăва çавраç кайăксем;
Пуç чикме çук чăтлăхра
Сиксе юрлаç шăпчăксем.

Лутра шĕшкĕ, сар майăр,
Авса татса пулмарĕ.
Çуралтăм та çитĕнтĕм,—
Пурнăç курса пулмарĕ.

Пĕр трантас пар ут кӳлнĕ,—
Вăхăт тухса лармашкăн.
Ума салтак килсе тăнă,—
Вăхăт тухса каймашкăн.

Сат варринчи çереме
Ир тăрăр та ут ярăр.
Эпĕ кунтан кайсассăн
Эрнеренех хут ярăр.

Потянов çырса илнĕ. „Канаш", сентябрь 14, 1937 ç. № 211.

## БУРЛАКСЕН ЮРРИ

1.

*Пĕри:* Эпир ĕлĕк çамрăк чух,
Хуньăм патне кайнă чух,
Матка хуплу çĕклетчĕ те,
Хам сăрине çĕклеттĕм.
*Хор:* Ах, анчах!
*Пĕри:* Х(ă)çан иртĕ-ши çак ĕмĕр те,
Çак бурлакра çӳресси?
*Хор:* Ах, анчах!
Харăстин! Харăстин!
Харăстин! Харс та,
Харс!

2.

*Пĕри:* Эпир кунти çынсем мар,
Энтри пасар панчисем,
Антра кăшман ялĕсем те,
Ухмах Йăван ачисем.
*Хор:* Ах, анчах!
*Пĕри:* Хăçан иртĕ-ши çак ĕмĕр те,
Çак бурлакра çӳресси?
*Хор:* Ах, анчах!
Харăстин! Харăстин...

3.

*Пĕри.* Пир(ĕ)н арăмсем килте-çке,
Шур чăлхапа, пушмакпа.
Эпир хамăр бурлакра та
Пахилкеллĕ çăпатапа.
*Хор:* Ах, анчах!
*Пĕри:* Хăçан иртĕ-ши çак ĕмĕр те,
Çак бурлакра çӳресси?
*Хор:* Ах, анчах!
Харăстин! Харăстин...

4.

*Пĕри:* Пир(ĕ)н арăмсем килте-çке,
Пурçăн вĕçлĕ сурпанпа.
Эпир хамăр бурлакра та,
Сӳс кантраллă кутамккапа.
*Хор:* Ах, анчах!

*Пĕри:* Хăçан ирте-ши çак ĕмĕр те,
Çак бурлакра çӳресси?
*Хор:* Ах, анчах!
Харăстин, харăстин...

5.

*Пĕри:* Шурхут çинче хăй çути,
Тул çутлаччен çунайрать.
Пире арăмсем кĕтеççĕ те,
Пукрав уйăхĕ иртиччен.
*Хор:* Эх, анчах!
*Пĕри:* Хăçан иртĕ-ши çак ĕмĕр те,
Çак бурлакра çӳресси?
*Хор:* Эх, анчах!
Харăстин! Харăстин...

6.

*Пĕри:* Шуркут йăви çӳлтех мар,
Ал çитесех çĕрте мар.
Пир(ĕ)н арăмсем кунтах мар та,
Ир-каç курас çĕртех мар.
*Хор:* Ах, анчах!
*Пĕри:* Хăçан иртĕ-ши çак ĕмĕр те,
Çак бурлакра çӳресси?
*Хор:* Ах, анчах!
Харăстин! Харăстин...

7.

*Пĕри:* Пир(ĕ)н арăмсем килте-çке,
Укçа пухса лараççĕ.
Эпир хамăр бурлакра та,
Пыйтă пухса çӳретпĕр.
*Хор:* Ах, анчах!
*Пĕри:* Хăçан иртĕ-ши çак пурнăç та,
Çак бурлакра çӳресси?
*Хор:* Ах, анчах!
Харăстин! Харăстин...

Илет шывĕ çинче сулăсем тунă çĕрте юрланă.
Ф. П. Павлов. Çĕнĕ юрăсем. № 16, стр. 23—24.
Шупашкар, 1928 ç.

# СĂПКА ЮРРИСЕМПЕ АЧА-ПĂЧА СĂВВИСЕМ

Сăпка юррисем тесе пĕчĕк ачасене ачашласа йăпатнă чух юрлакан юрăсене калаççĕ. Вăл юрăсенчи сăмахсем питĕ çепĕç те ăшă кăмăллă пулаççĕ. Вĕсен тĕп шухăшĕ—алăри (сăпкари) ачана сывлăх, телей, ăраскаллă пурнăç сунни.

Ача-пăча сăввисене те малтан пĕчĕк ачасене йăпатас шутпа пысăккисемех шутласа кăларнă. Пурна-киле вĕсем ача-пăчасем хушшине сарăлса, уйрăм пайлă фольклор пек пулса тăнă. Ача-пăча сăввисен конструкцийĕ ансат, анчах та сăмахĕсем питĕ çавăрнăçлă. Вăл сăвăсенче сайра-хутра пачах ăнланма çук йĕркесем (е куплетсем) тĕл пулаççĕ. Ун пек йĕркесемпе куплетсем пĕчĕк ачасем хăйсем хушшинче пĕр-пĕринчен ăслăрах, ытларах пĕлнĕ пек пулма тăрăшнинчен тухса кайма пултарнă.

## ЧАКАК

Чакак! Чакак!
Чакак амĕш чакăлтăмра,
Ачи-пăчи арчара,
У-у-ух!

Курак! Курак!
Курак амĕш Кушкăра,
Ачи-пăчи маччара,
Пирĕн няни сăпкара.
У-у-ух!

Яманак, Çĕрпӳ р. ЧАССР.
1938 ç. И. Патмар çырса илнĕ.

## ЧИ-ЧИ КĂСИЯ

— Чи-чи кăсия,
Ăçта каян, кăсия?
— Кантăр вăрри вăрлама.
— Е хуçи курсассăн?
— Тарăп-хăпарăп хыр тăрне.
— Е хырăму выççассăн?
— Хыр икелĕ çиййĕп-çке.
— Е пырна ларсассăн?
— Чавăп-чавăп кăларăп.
— Е юну тухсассăн?
— Шыва кĕрĕп чӳхенĕп.
— Е çунатту пăрлансан?
— Вут хурăп та ăшăнăп.
— Е вутту вăйлансан?

— Тапăп-тапăп сӳнтерĕп.
— Е тяппу хуçăлсан?
— Тимĕрçе кайăп сыптарăп.
— Е тимĕрç çук пулсан?
— Пăхăрçа кайăп сыптарăп.
— Е пăхăрçă çук пулсан?
— Улатăра кайăп сыптарăп.
— Е Улатăр çук пулсан?
— Чĕмпĕре кайăп сыптарăп?
— Е Чĕмпĕр çук пулсан?
— Тапăп-тапăп,
Тапă айне кĕрех кайăп!

Эскетен, Çĕмĕрле р. ЧАССР.
1929 ç. И. Тукташ çырса илнĕ.

## ТĔКĔЛТУ

Тĕкĕлту, тĕкĕлту,
Тĕкĕл-тура йăви пуль,
Йăви çинче карас пуль,
Карас çинче пылĕ пуль;
Çакă пирĕн шеремет
Ашшĕпеле амăшне
Ылттăнпала кĕмĕл пуль,
Иртсе пыран çынсене
Кĕреçе çинчи çӳп те мар.

Чу-чу, чучуне,
Хурама хуппи сăпки,
Çĕмĕрт йывăç пĕкечи,
Пилеш йывăç сиктĕрми,
Çиччĕ пирĕ çивитти,—
Илем тесен—мулăм çук,
Çын илесрен—чунăм çук.

Атте-анне çуратнă,
Ăшă шыва кĕртнĕ,
Шур кипкепе чăрканă,
Кăмака çине вырттарнă,
Çăвара пыл хыптарнă,
Телейлĕ пул теейнĕ.

Чу-чу, чучуне,
Ачине, нянине,
Альлине, тяппине.
Тетте илер вылямa,
Чăмлак тăвăп сахăртан.
Ня-ня
Пеп пе...
Е, тата!

Ку юрра 1939 çулта Чулçырмара Стихван Шавлы хăйĕн 77 çулхи асламĕшĕнчен Шумкова Марфа Ильиничнăран çырса илнĕ.

## ПӲРНЕСКЕ

Пурăнтăм, пурăнтăм—
Пӳрнеске тупрăм.
Пӳрнескине килемея патăм,
Килемей мана пашалу пачĕ,
Пашалуне няххине патăм,
Няхxи мана тютю пачĕ,
Тютюне паняçкине патăм,
Паняçки мана чĕн пушă пачĕ,
Чĕн пушипе çĕре çапрăм,
Çĕр мана çеçке пачĕ,
Çеçкине эп вучаха хутăм,—
Пот! терĕ, çот! терĕ,
Çӳлти чӳрече витĕр
Тухрĕ-кайрĕ,
Сĕнтĕр вăрманне
Çитрĕ-ӳкрĕ.

## УТРĂМ, УТРĂМ

Утрăм, утрăм—улма тупрăм,
Улмине аннене патăм,
Анне мана кукăль пачĕ,
Кукăльне анчăка патăм,
Анчăк мана пушă пачĕ,
Пушине кĕлете çакрăм,
Кĕлет мана тырă пачĕ,
Тыррине тиккие патăм,
Тикки мана çăмарта пачĕ,
Çăмартине вучаха хутăм,—
Çат! терĕ, пат! терĕ,
Тĕнĕ витĕр тухрĕ кайрĕ.
Хĕрлĕ питлĕ майрасем
Каçса кайса кулаççĕ,
Татăк кутлă тимĕрçсем
Хĕрсе тимĕр çапаççĕ.

## КĂРКУЛЬККА

— Ăçта каян, Кăркулькка, Кăркулькка?
— Мăн кĕтӳ пăхма каятăп, каятăп.
— Мăн кĕтӳ хуçи мĕн парать, мĕн парать?
— Хура лаша парас, тет, парас, тет.
— Хура лаши ăçтарахра, ăçтарахра?
— Хапха хыçне кăкарнă, кăкарнă.
— Хапхи хыçĕ ăçтарахра, ăçтарахра?
— Шывпа юхса кайнă, кайнă.
— Шывĕ ăçтарахра, ăçтарахра?
— Хурсем ĕçсе янă, янă.
— Хурĕсем ăçтарахра, ăçтарахра?
— Хуртлă ту çине кайнă, кайнă.
— Хуртлă тăвĕ ăçтарахра, ăçтарахра?
— Вăкăр тĕксе салатнă, салатнă.
— Вăкăрĕ ăçтарахра, ăçтарахра?
— Хĕрсем хуса кайнă, кайнă.
— Хĕрĕсем ăçтарахра, ăçтарахра?
— Качча кайса пĕтнĕ, пĕтнĕ.
— Каччийĕсем ăçтарахра, ăçтарахра?
— Хусанпа Питĕр хушшинче, хушшинче
Параппан çапса хут вулаç, хут вулаç.

## ШĂШИ ĂÇТА

— Шăши ăçта?
— Шăтăкра.
— Шăтăкĕ ăçта?
— Шыв тулнă.
— Шывĕ ăçта?
— Вăкăр ĕçсе янă.
— Вăкăрĕ ăçта?
— Кӳпсе вилнĕ.
— Вилли ăçта?
— Хуртлă кăпшанкă çисе янă.
— Хуртлă кăпшанкă ăçта?
— Хурчăка тытнă.
— Хурчăки ăçта?
— Ларма кайнă.
— Мĕн ĕçпе?
— Ашăк çуна çиттипе.
— Çурăмĕ мĕн?
— Тылла-пуççи.
— Хырăмĕ мĕн?
— Уйран çӳпçи.
— Çӳçĕ мĕн?
— Хăях.
— Ури мĕн?
— Сенкĕ.
— Алли мĕн?
— Кĕрепле.

Ку сăвăсене Шĕмшевĕшри (халĕ Советски р.) земски шкулра вĕрентнĕ учитель К. Степанов хăйĕн вĕренекенĕсем урлă пуçтарнă. 1902 çул.

## МУЛКАЧ

Мулкач, сата кĕр,
Мулкач, сата кĕр!
Вăт-вăт-вăт сата кĕр,
Вăт-вăт-вăт сата кĕр.
Мулкач, уруна тап,
Мулкач, уруна тап!
Вăт-вăт-вăт уруна тап,
Вăт-вăт-вăт уруна тап.

Мулкач, ална çуп,
Мулкач, ална çуп!
Вăт-вăт-вăт ална çуп,
Вăт-вăт-вăт ална çуп.
Мулкач, сатран тух,
Мулкач, сатран тух!
Вăт-вăт-вăт сатран тух,
Вăт-вăт-вăт сатран тух.

Яманак ялĕнче (Çĕрпӳ р.)
1938 ç. Ив. Патмар çырса илнĕ.

## ВАТТИСЕН САМАХЁСЕМ

Ваттисен сӑмахӗсем тени пӗр-пӗр пысӑк шухӑша кӗскен (пӗр фразӑпа), образласа каласа панине пӗлтерет. Вырӑсла вӗсене пословицӑсем теҫҫӗ. Вӑл сӑмахсене пухакансем вӗсем ӑҫтан пуҫланса кайнисене кӑтартмасӑрах ҫырса илсе пынӑ, анчах та кун ҫинчен эпир ҫав сӑмахсен содержанийӗпе характерӗ тӑрӑх пӗлме пултаратпӑр. Сӑмахран, хӑшпӗр ваттисен сӑмахӗсенче мифологиллӗ элементсем тӗлпулаҫҫӗ,—вӗсем питӗ авалах, общество классем ҫине пайланиччен хӑтрах пуҫланса кайма пултарнӑ; классем ҫинчен калаканнисем, паллах, каярахри вӑхӑтра, крепостничество тапхӑрӗ тӗлнелле, чиркӳпе пупсем ҫинчен калаканнисем—чӑвашсем хушшинче христианство сарӑлса кайнӑ хыҫҫӑн (XVIII ӗмӗр) пуҫланса кайнӑ.

Октябрь революцийӗччен хӗрарӑм чура вырӑнче пулнӑ. Унӑн обществӑра та ҫемьере те нимӗнле правӑсем те пулман. Ҫак правӑсӑрлӑха хӗрарӑмсем ҫинчен калакан ваттисен сӑмахӗсем лайӑх ҫутатса параҫҫӗ.

Аслӑ социализмла революци хӗрарӑмӑн пурнӑҫне тӗпренех улӑштарчӗ. Ленинла-сталинла политика ӑна пур енчен те арҫынпала танлаштарчӗ, ҫавӑнпа та ӗнтӗ халӗхи саманари ваттисен сӑмахӗсене те хӗрарӑмсем урӑхларах сӑн сӑпатланса кӗреҫҫӗ.

### КЛАССЕМ ҪИНЧЕН

Усал пуянран уссине ан кӗт.

Усал йытӑ вӗрет—яла кашкӑр кӳрет, ырӑ йытӑ вӗрет - ялтан кашкӑр хӑвалать.

Лаша лашана кӗҫенниччен пӗлет, йытӑ йытта—шӑршланиччен, пуян пуяна—мулӗнчен.

Мӗскӗнӗн саплӑк ҫинче саплӑк ларать.

Сурӑх ылханни кашкӑра ҫитмен, чухӑн ылханни пуяна витмен.

Ҫуккине хӑҫан пуласса кӗтме ҫук.

Ҫӗвӗҫӗн укҫи йӗпӗпех тухать, тимӗрҫӗн—тимӗрӗпех.

Ҫукран пур пулсан—турӑпа тан, пуртан ҫук пулсан—ҫӗрпе тан.

Ҫук ҫын укҫи тӑрна пек кӑшкӑрать.

Кашкӑр пулӑшсан, вӑрӑмтуна та лашана ӳкерет.

Кётӳ кётсе илнӗ укҫа кётӳ чăпăрккипех шартлатса пӗтет.
Кăвакал—кӳллине кура чăмать, этем—витӗнчӗкне кура урине тăсать.
Халăх сурать—кӳл тăвать, пӗччен сурать—типсех пырать.
Хура халăхăн хура тăпра ҫине урине чикмесен хырăмӗ нумаях тăранаймасть.
Хура ҫăкăр ҫиекен ниҫта та хур пулман, шурă ҫăкăр ҫиекен нихăҫан та ыр пулман.
Хӗрхеннине хӗрлӗ йытă ҫинӗ, тет.
Нумай та пӗтет, сахал та ҫитет.
Нушине пытаракан—пӗлнӗ, мулне пытаракан вилнӗ.
Ыр ут ҫынна таптамасть, ыр ҫын ҫынна тиркемест.
Ыр ут пуласси тихаран паллă, ыр ҫын пуласси ачаран паллă.
Ырлăхпа усала юраймăн, кăмăлупа пуяна юраймăн.
Ырă ут такăнмасăр пулмасть, ырă ҫын йăнăшмасăр пулмасть.
Йытă шăмă кăшлать, чухăн хăй нушине кăшлать.
Чун хӗнекен мул тупать, мул хӗнекен юн тупать.
Йыттăн хӳри куккăр, пуянăн—алли.
Йытта тилӗ тума хал ҫук.
Пурри пурҫăн тăхăнать, ҫукки ҫулхах тăхăнать.
Пуян ҫăкăрне хырăмпа тултса пӗтереймӗн.
Пуян ҫынăн ачи-пăчи ҫураличченех ҫитӗннӗ.
Пуянăн кушакӗ те куян тытать.
Пуян ҫынăн анчăкӗ те тилӗре.
Пуйма каякан вилсе килнӗ, вилме каякан пуйса килнӗ.
Пурри пуррипе тăмасть, ҫукки ҫуккипе тăмасть.

## СУТ ҪИНЧЕН

Сут ҫинчи ӗҫ—такана ҫинчи шыв.
Патша сутне турă сучӗ витес ҫук.
Тиек йытти тилӗ тытать, пуп кушакки пулă тытать.
Канттур ӗҫне ӗҫлекен—халăх юнне ӗҫекен.
Шывăн турачӗ ҫук, вутăн алли ҫук; улпутсемпе шантарсен чӗри ҫук.
Ялти писсăр йытти хыт ҫыртать.

## ПУПСЕМ ҪИНЧЕН

Пуп куҫӗ—нӳхреп куҫ.
Турруна пуҫҫапиччен пупна пуҫҫап.
Тӗпсӗре тӗмен ҫитмен, ӗмӗтсӗр пупа прихут ҫитмен.
Пуп пăтавкин тӗпӗ ҫук.
Пуппа тияккăнăн пурнăҫӗ хăяккăнăн.

## ХУҪАЛĂХ

Аш пулсан, хуплу тума пулать.
Арман ҫуначӗ кашни ҫаврăнмассерен пӗр чӗлӗ ҫăкăр антарать.
Укҫанăн куҫӗ ҫук, салатаканӗн пуҫӗ ҫук.
Утна яр та ҫуран ут.
Укҫа нумай пулсан, арман тыт, ыраш нумай пулсан, сысна усра.

Вăрă вăрлать—хăварать, вут тухать те тасатать.
Выртан каска мăкланать, çӳрен каска якалать.
Çăкăр-тăвар хире-хирĕç.
Çур ырхан та кĕр мăнтăр.
Çулталăк ĕçлени тăрантармасть, виç кун ĕçлени тăрантарать.
Çĕнĕ пуртă аври лартсан та киввине ывăтса ан яр.
Кирлĕ мар катăк пуртă та ĕмĕрте кирлĕ пулнă.
Иккĕн икерчĕ çиме аван, тăваттăн авăн çапма аван.
Хĕлĕн хырăмĕ пысăк.

## КУЛЛЕНХИ ПУРНĂÇПА ЙĂЛА

Аллунти тăрну ĕçерĕнсен, алтуйипе персе тытаймăн.
Аттуна тăхăн та çăпатуна та кăларса ан пăрах.
Ахаль лариччен кĕрĕк аркине йăвалама хушнă.
Алли ĕçленине çурăмĕ çĕклĕ.
Аптаранă кăвакал кутăн чăмнă, тет.
Асăнсанах ака кӳлмеççĕ.
Алă шăнсан алса ăшне чикме хушнă.
Асли аслă пултăр, кĕçĕнни кĕçĕн пултăр.
Упине тытмасăр тирне сутма хушман.
Ута пăхакан çуран утман, ватта пăхакан выçă çӳремен.
Улмуççинчен улми аякка кайса ӳкмест.
Усал сăмах утпа çӳрет, ырă сăмах çуран çӳрет.
Выççан çăкăр та тутлă, тăрансан пыл та йӳçĕ.
Ватта сума сăвакан—хăй те ватă пулакан, ватта хурлăх тăвакан—хăй те хурлăх куракан.
Вăрман хăлхаллă, хир куçлă.
Лайăх хĕре шыракан—инке арăмсăр юлакан.
Сивĕ çитмĕл çулхи старике те вунçич çулхи йĕкĕт тăвать, тет.
Çапма пĕлмен чăпăркки хăйне çаврăнса тивнĕ, тет.
Çамрăкла вĕренейменне ватăлсан вĕренме çук.
Çынна ĕç типĕтмест, хуйхă типĕтет.
Çĕвĕçĕн кĕрĕкĕ çĕтĕк, тимĕрçĕн пуртти катăк.
Çĕтĕк кĕрĕк йытă вĕрнипе те çĕтĕлет.
Куç умĕнче ан мухта, куç хыçĕнче ан хурла.
Кушака кулă, шăшие вилĕм.
Инçерех хурсан илме çывăх.
Ӳт чĕлхенен шăмми çук, чăн сăмахăн суйи çук.
Туман тихан пилĕкне ан хуç.
Чĕлхӳпе калаçма ан васка, ĕçне тума васка.
Пур чух пылпа, çук чух шывпа.
Пăхман хĕвеле ирĕксĕр пăхтараймăн.

## ХĔРАРĂМСЕМ ÇИНЧЕН

Амăшне пăх та хĕрне ил.

Ачаш хĕр ача тунă, тет.

Качча кайиччен—„качча каяс“, качча кайсан—„атте патне каяс“.

Качча каяс тенĕ хĕр качча каяйман, вилес тенĕ карчăк çĕр çула çитиччен вилеймен.

Хĕрарăмăн çӳçĕ варăм та ăсĕ кĕске.

Начар арăм хушпу тăвайман, начар арçын ака тытайман.

Ĕлĕкхи Чĕмпĕр кĕпĕрнинче
И. Н. Юркин пухнă. 1902—1910 çç.

# ЮМАХСЕМ

Революцичченхи чăваш фольклорĕнче юмахсем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Юмахсем тесе фантазиллĕ е авантюрлă-новеллăллă произведенисене калаççĕ. Вĕсен фантазилле элеменчĕсем мифологилле представленисем çинче никĕсленсе тăраççĕ. Тĕрлĕ юмахсенче этем обществин чи авалхи тапхăрсенчи йĕрĕсемех йĕрленсе юлнă (сăмахран, çынсене çини çинчен, йăх хутшăнăвĕсем çинчен, тĕрлĕрен асаплă вилĕмпе вĕлернисем çинчен каланисем). Мифологилле юмахсем общество классем çине пайланиччченхи тапхăртах пуçланса кайнă. Вăл вăхăтри этемсем юмахсене асамлă вăй паракан формулăсем тесе шутланă, çавăнпа та йăла тăрăх пулса пыракан тĕрлĕ уявсенче вĕсемпеле усă курма тăрăшнă.

Каярахри вăхăтсенче юмахсем халăхăн кăмăлĕпе ĕмĕчĕсене палăртмалли меслетсем пулса каяççĕ. Ун пек юмахсен геройĕсем вырăнне хăш чух хресчен ывăлĕсем, хăш чух чухăн хресченсем, хăш чух салтаксем тухаççĕ. Уйрăмăнах чăваш юмахĕсенче—Ухмах Йăван (Кукша Йăван) образĕ пысăк вырăнта. Чухăн хресчен ывăлĕ Кукша Иван, хăйне ухмаха персе, нумай чухне хăйĕнчен ăсла хуракан піччĕшĕсене те, пуян улпутсене те, патша генералĕсене те улталаса çӳрет, юлашкинчен хăй патшана ларать.

Общество ӳсĕмин кашни тапхăрех юмахсем çине хăйĕн йĕрне хăварса пынă. Çавна пула, чи авалхи юмахсенче те каярахри саманан влиянине курма пулать. Сăмахран, паттăрсем çинчен хунă юмахсем тĕрлĕ вариантсемпе тĕлпулаççĕ: хăш вариантĕнче теп герой вырăнĕнче чухăн хресчен ывăлĕ тăрать, хăшинче—салтак, тата хăшпĕринче—патша ывăлĕ.

Юмахсем пурнăçăн класлă енĕсене питĕ лайăх уçса параççĕ. Сăмахран, „Куртейпе Уртемей" ятлă юмаха илсен, унта эпир чухăнпа пуян хушшинчи отношение куратпăр, „Ылттăн сумккă" ятлă юмах та—чухансемпе пуянсем хушшинчи кĕрешĕве кăтартса парать т. ыт. те.

Революцичченхи саманара юмахсем халăхăн ăстăнĕпе кăмăлне хавхалантармалли пĕртен-пĕр меслет пулса тăнă. Ку çеç те мар: халăх аллинче юмахсем класлă кĕрешĕвĕн çивĕч хĕçпăшалĕ

пулнӑ. Халӑх хӑйне эксплоатацилесе пурнакан харампырла классене юмахсем урлӑ хӑйӗн вичкӗн сӑмахӗсемпе питлесе, ӑна хирӗҫ кӗрешсе пынӑ. Халӑх хӑй хушшинче темӗн чухлӗ юмах ӑстисем, пысӑк мастерсем ҫуратса кӑларнӑ. Ҫав мастерсем халӑх пурнӑҫӗпе кӑмӑлӗ тата унӑн малашнехи ӗмӗчӗсем ҫинчен темӗн чухлӗ илемлӗ те ӑс-тӑна хавхалантаракан юмахсем хунӑ. Ҫавӑн пирки юмахсем пирӗн вӑхӑтра та халӑх пултарулӑхӗн чи паха произведенийӗсем вырӑнне шутланаҫҫӗ.

## ТИЛӖПЕ УЛА-ТАККА

Пырать пӗр хӑмӑр тилӗ йӑпӑртатса вӑрманпа. Ун ҫулӗ ҫине сунарҫа шӑтӑк алтса хунӑ пулнӑ. Чупса пынӑ ҫӗртенех йӑнкӑлт! ӑнса кайрӗ тилӗ ҫав шӑтӑка. Сиккелет-сиккелет, кускалать-кускалать,— ниепле те тухаймасть. Шӑтӑк тӗпӗнче тилӗ вӗткеленнине йӑвӑҫ тӑрринче ларакан ула-такка курчӗ.

— Мӗн ӗҫлен, тилӗ тус?—тесе ыйтать кунран ула-такка.

— Пусӑ алтатӑп,—тет тилли.

— Мана та алтса памӑн-ши?—тет ула-такка.

— Алтса парасси парӑттӑм та, анчах малтан ку пусӑ пурине ярса пӗтерес пулать ҫав. Пулӑш мана пӑртакҫах, вара пӗрлех кайӑпар,—чееленет хӑмӑр тилли.

— Мӗнпе пулӑшам эп сана?—ӑнланаймасӑр ыйтать ула-такка.

— Сана йавӑр ӗҫех хушмастӑп, эсӗ мана пура яма йӑвӑҫ тураттисем кӑна тултса пар,—тет тилли.

Тытӑнчӗ ула-такка тилле пулӑшмашкӑн. Туратран турата ларса, шӗвӗр сӑмсипеле шак тутарать те—пӗр турат ӳкерет, шак тутарать те—теприне касса ярать. Касса янине пӗр, тилӗ патне пыра-пыра пӑрахать. Тытӑнчӗ тилли туратсене шӑтӑка купаламашкӑн. Купаларӗ-купаларӗ те, шӑтӑкӗ тулса та ларчӗ.

— Ну, мӗнле, ӗҫ пӗтрӗ-и?—тесе ыйтать ула-такка.

— Пӗтрӗ,—тет тилли.

— Пӗтрӗ пулсан, айта ман пата пусӑ алтма,—чӗнет ула-такка.

— Пырасси пырӑп та-ха, анчах эс мана мӑкрыччи шучӗпе кӑвас ӗҫтер,—тет тилли.

Ула-такка килӗшрӗ те, кӑсем кӑвас сутакан шырама тухса кайрӗҫ.

Такмак пасарне ҫитеспе ҫаксене хирӗҫ пӗр сутӑҫӑ килет.

— Ав пуян Сахар пасара кӑвас сутма каять, пытанса вырт тӗм хушшине,—тет ула-такка. Тилли йӑпӑр-япӑр пытанчӗ. Ула-такка Сахар лавӗ ҫинчи пичке тӑрне хӑпарса ларчӗ те шӗвӗр сӑмсипеле шаккамах тытӑнчӗ. Шаккасан-шаккасан, пичке хӑми витӗрех шӑтса тухрӗ. Сирпӗнет кӑна пыл-кӑвас юман пичкерен.

Ула-такка хӑйӗн ӗҫне пӗтерсен, шак тутарчӗ Сахара ҫамкинчен. Эх, ҫилленсе кайрӗ Сахар чӑрсӑр кайӑк ҫине! Ҫилленсе кайрӗ те хӑваламах тытӑнчӗ. Ула-такки юриех аялтан кӑна вӗҫсе пырать.

Кайăк хыççăн чупса хăшкăлнă хушăра Сахарăн пичкери кăвасĕ веçех юхса тухрĕ те, тĕмсем хушшинче пытанса выртакан тилĕ хăвăртрах чупса тухса, хырăмĕ панк пуличчен ĕçсе тултарчĕ.

Пуян Сахар кайăка хăваларĕ-хăваларĕ те, нимĕнсĕрех килне çаврăнса кайрĕ.

— Ну, епле, ĕçрĕн-и?—тесе ыйтать ула-такка тилĕрен.

— Ĕçрĕм, ÿсĕрĕлсех кайрăм,—тавăрать тилли тайкаланса.

— Апла пулсан, атя пусă алтма.

— Каясси кайăпăр та-ха, анчах эс мана малтан култарса кăтарт-ха,—тет тилли.

— Юрĕ, айта ман хыççăн,—килĕшрĕ лешĕ.

Халь тилĕпе ула-такка Такмак ялĕн анкарти хыçнелле шăвăнчĕç.

Пуян Сахар ывăлĕпе пĕр тарçи йĕтем çинче ясмăк çапаççĕ. Ула-таккапа тилĕ темĕн пăшăлтатса илчĕç те, çаксем тĕлне çитсен, чарăнчĕç. Тилли карта хушакĕ витĕр йăпшăнса пăхса выртать, ула-такки Сахар ывăлĕн пуçĕ çине кайса ларчĕ те, шĕвĕр сăмсипеле шак тутарчĕ çамкинчен.

— Ай-ай, Микихвер! Çап ку кайăка пуçенчен!—тесе кăшкăрса ячĕ Сахар ывăлĕ, çамкине хыпашласа. Тарçи, кайăка çапап тесе, нимĕн шухăшласа тăмасăрах, яра пачĕ тапачпала кăна пуçĕнчен. Сахар ывăлĕ тÿп кайса ÿкрĕ те, вилсе те выртрĕ.

Карта хушакĕнчен пахса выртакан тилĕ варне тытнă та, йăвалана-йăвалана кулать. Кулсан-кулсан, ула-такки кунран çапла ыйтать:

— Ну, мĕнле, пусă алтма кайăпăр-и?—тет.

— Каясси кайăпăр-та-ха, юлашкинчен тепре хăратса кăтарт,—тет тилли.

— Юрĕ, тилĕ тус, хăрасах килет пулсан, атя хам хыççăн,—тет ула-такка.

Калаçса татăлчĕç те, хайхисем шутарчĕç тырă ашшĕн вараххăн ял вĕçнелле.

Çитсе тухрĕç самай ял вĕçĕнче пурăнакан Тимухха старикĕн киле патне. Хĕвел анса ларчĕ, Тимухха лашине шăварма тухса кайрĕ. Хапхине хупмасăрах хăварчĕ хăй. Ула-такка тилле хапха çумне лартрĕ, хăй, хапха тăрне ларса, шаккама тытăнчĕ. Шак-шак! тутарать, шак-шак! тутарать.

Тимуххан килĕнче виçĕ ахăр йытă пулнă. Хапхана шакканă сасса илтсенех, кăсем сикрĕç тухрĕç те урама, тытăнчĕç тилле хăваламашкăн. Эх, хаваласçĕ, эх, хăваласçĕ, тилĕ хыçĕнчен пăс кăна тухса пырать. Ахăр йытăсем тилле вăрманах хуса кĕрсе карĕç. Тилли, ниçта кайса кĕреймен енне, йăкăлт сиксе кĕчĕ пĕр юман хăвăлне. Йыттисем юман тавра вĕре-вĕре çаврăнаççĕ. Хăраса ÿкнĕ тилĕ юман хăвăлĕнче хăйĕн урисенчен ыйтать:

— Эсир мĕнле килтĕр: хăраса-и, хăрамасăр-и?—тет.

— Эпир мĕн пур вăйпа малалла тапаçланса килтĕмĕр,—теççĕ кăна урисем.

Тилĕ хăлхисенчен ыйтать:

— Эсир мĕнле килтĕр?—тет.
— Эпир йăпшăнса-йăпшăнса килтĕмĕр,—теççĕ хăлхисем.
Тилĕ хӳринчен ыйтать:
— Эсĕ тата мĕнле килтĕн?—тет.
— Эпĕ, кĕç тытаççĕ-и, кĕç çиеççĕ-и, тесе килтĕм,—тет хӳри.
— Ах, мур, эс мана çапла шелленĕ-и-ха, йытăсене çитересшĕн пулни-ха?—тет кана хирĕç тилли, çилленсе.—Ак, парам-ха сана уншăн йытăсене ывăтса,—тет.
Çак сăмахсемпе тилĕ хăй хӳрине юман çуракĕнчен тулалла кăларса ячĕ те, ахăр йытăсем ăна çавăнтах ярса илчĕç, унтан тиллине хăйне те сĕтĕрсе кăларса çурчĕç. Çапла вара тилĕ хăйĕн кун-çулне хăех тирпейлерĕ.
Юмах ятăм, юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм.

Институтăн алçыру фондĕнчен.

## УХМАХ ЙĂВАН

Пĕр чухăн пурăнакан çыннăн виçĕ ывăл пулнă, тет. Иккĕшĕ кирек ăçта ĕçлесе çӳресе ашшĕ-амăшне тăрантарнă, тет. Кĕçĕнни ухмах пулнă, тет, вăл Йăван ятлă пулнă, тет.
Пурăнаççĕ-пурăнаççĕ, тет,—пурнăç ниçтан та малалла каймасть, тет. Ашшĕ ачасем çитĕнсе çитиччен улпутран пĕр 10 тенкĕ укçа кивçен илсе килес пуль тесе шутлать, тет.
Улпут патне кайса 10 тенкĕ укçа илсе килет, тет те, укçи каллех пĕтрĕ, тет.
Ашшĕ çапла калать, тет:
— Текех эпĕ сире тумлантарса усрама пултараймастăп, тухса кайăр та, кирек ăçта кайса укçа тупса килĕр, улпута парса татмалла, хусамăр тумланăр,—тесе калать, тет.
Ачисем виççĕш те тухрĕç те кайрĕç, тет. Пĕр çул тваткăлне çитрĕç, тет те, иккĕшĕ пĕр çулĕпе пĕрле кĕрсе кайрĕç, тет, ухмаххи тепĕр çулĕпе пăранчĕ, тет те, пĕр вăрмана кĕрсе кайрĕ, тет. Вăрманпа кайрĕ-кайрĕ, тет те, пĕр çурта çитсе кĕчĕ, тет. Пӳртĕнче 12 кăмака, 12 кăмакара 12 хуран, 12 хуранра 12 куршак вĕресе лараççĕ, тет. Ухмах Йăван хырăмĕ выçса кайнă, тет те, кăмкаран куршаксене туртса кăларса, пĕрне сыпса пăхрĕ, тет, теприне сыпса пăхрĕ, тет,—сыпса пăхнипех таранса, хыçалти вырăн çине кĕрсе выртрĕ, тет.
Нумай пулчĕ-и, сахал пулчĕ-и,—пӳрте вуникĕ вăрă çитсе кĕчĕç, тет. Апачĕсене кăларса пăхрĕç, тет те, кашнинченех сыпасыпа пăхнă, тет. Кăсем пурпĕрех апатне ларса çирĕç, тет те, çывăрма саланчĕç, тет. Пĕри хăйĕн койки патне çитрĕ, тет те,—вырăнĕ çинче çын вырта парать, тет. Ку хăвăртрах ытти юлташĕсене чĕнсе килет, тет.
— Эсĕ кам?—тесе ыйтаççĕ, тет, Йăванран.
— Сирĕн çын!—тет ухмах Йăван.
— Пирĕн çын пулсан, тăр!—теççĕ лешсем.
Йăвана туртса тăратаççĕ, тет те, калаçма пуçлаççĕ, тет.

— Эпир таçти-таçти çĕре çитсе хуçасене çаратса çӳрерĕмĕр, анчах пĕр хуçана ниепле те çаратма пултараймастпăр,—теççĕ, тет.

— Эпĕ пултаратăп,—тет ухмах Йăван.

Каç пулса çитсен, вăрăсем Йăвана полици пек тумлантарчĕç, тет те, 12 лаша кӳлсе ларса, хуçа патне тухса кайрĕç, тет. Анкарти тулашне пырса çитрĕç, тет те, ухмах Йăван хуçа килне кайрĕ, тет, вăррисем унтах юлчĕç, тет. Хуçа килне çитсен, Йăван алăкран шаккаса хуçана кăшкăрать, тет:

— Алăк уç!—тет. Хуçи тухса уçать, тет те, Йăван калаçма тытăнать, тет.

— Часрах лаша кӳл, сана хулана чĕнеççĕ,—тет.

Хуçи лаша кӳлтерчĕ, тет те, Йăвана лартса, хулана тухса кайрĕ, тет. Вăрмана çитсе кĕрсен, полици пек тумланнă Йăван пынă çĕртех сикрĕ, тет те, вăрмана чăмрĕ анчах, тет.

Хуçи, ку мана улталарĕ,—тесе килне таврăнчĕ, тет.

Йăван вăрманти çурта çитсе кĕнĕ çĕре лешĕсем хуçанне 12 лав япала çаратса çитнĕ, тет.

— Эсĕ пултаратăн, молодец,—теççĕ, тет, ухмах Йăвана. Унтан Йăвана асли туса хучĕç, тет. Йăван вĕрентсе анчах пурăнать, тет, лешĕсем ăçта килчĕ унта кайса, çаратса çӳреççĕ, тет.

Пурăнсан-пурăнсан, Йăван çапла шухăшлать, тет: „Кунтаман мĕн туса пурăнас, халĕ хам та пурăнма пултаратăп, киле каяс луччĕ“, тет. Çапла шухăшларĕ, тет те, ăна вăррисем пĕр çĕртен ылттăн, тепĕр çĕртен кĕмĕл, тата тепĕр çĕртен пăхăр илсе пĕр чăматан парса ячĕç, тет. Йăван çул тăваткăлне çитрĕ, тет те, пиччĕшсене каллех тĕл пулчĕ, тет. Пиччĕшсем калама та çук тумланнă, тет.

— Эсĕ пирĕнпе ан пыр,—тесе ятласа тăкрĕç, тет, Йăвана.

Ухмах Йăван каярах юлчĕ, тет те, хыçалтан курăни-курăнми утса пырать, тет. Яла çитсен, пиччĕшсем ял хушшипех кайрĕç, тет, ку ял тулашпе кайса, анкартине кĕчĕ, тет те, чăматанне хăмла вырăнне пытарса лартрĕ, тет, хай çĕтек-çатăк тумтирripех пӳрте кĕчĕ, тет. Пиччĕшсем ашшĕпе ĕçме ларнă, тет, ашшĕ те Йăвана ятласа пĕтерчĕ, тет:

— Сантан ĕмĕрте те ыр çын пулас çук, тухса кай!—тесе вăрçать, тет.

Йăван ашшĕне хуллен чĕнсе илсе:

— Айта-ха анкартине, сана пĕр япала кăтартам,—тесе калать, тет.

Анкартине илсе кайрĕ, тет те, хăмла вырăнĕнчи чăматанне уçса кăтартрĕ, тет. Кăна курсан, ашшĕ тĕлĕнсе хытсах кайрĕ, тет. Йăван хăйĕн çĕтĕк-çатăк тумтиррине хывса печĕ, тет те, лайăх тумтирсем тăхăнса ячĕ, тет, унтан чăматанне илсе, ашшĕпеле килелле кайрĕç, тет. Ашшĕ, пӳрте кĕрсен, пиччĕшсене мăкăрлантарса анчах хуса кăларса ячĕ, тет.

— Атте, хайхи улпута 10 тенкĕ леçсе пар!—тет Йăванĕ.

Ашшĕ 10 тенкĕ илчĕ, тет те, улпута леçсе пачĕ, тет.

— Пирĕн укçа ку анчах мар, тата ылттăн, кĕмĕл пĕр чăматан,—тесе калать, тет.

Улпут ир тăрать, тет те, лаша кӳлсе, Йăван патне чуптарать, тет. Йăван патне çитсен:

— Йăван, санăн аçу ылттăн нумай тесе каласа кăтартрĕ,— тет.

— Пур,—тет Йăванĕ.

Хайхи улпут, ылттăна ĕмĕтленсе, Йăвана çапла калать, тет:

— Манăн витере 12 алăк, çав витере манăн пĕр ăйăр пур. Çавна вăрласа тух та—ăйăр хунах пултăр, вăрлаймасан, санăн ылттăну мана пултăр,—тет.

Улпут кайсан, Йăван патне пĕр пуçтаракан пырса кĕчĕ, тет. Йăван кăна 5 тенкĕлĕх ылттăн кăшт тыттарчĕ, тет те, малтанхи çĕтĕк-çатăк тумтиррине тăхăнса, пуçтараканпа пĕрле улпут патне тухса кайрĕ, тет, унтан улпут патнех пытанса юлчĕ, тет. Улпут тухрĕ, тет те, пуçтаракана 20 пус парса ячĕ, тет.

Каç пулса çитсен, Йăван улпут тумтирри тăхăнса, хуралçисем патне тухрĕ, тет те:

— Эсир çĕрĕпе тăрса, шанса та кайăр, кĕçĕр Йăван жульăк ăйăр вăрлама килет, хытă хурал тăрар,—тесе эрех ĕçтерет, тет.

Хуралçисем, ӳсĕрĕлсе çитсе, пĕри пĕр çĕре, тепри тепĕр çĕре йăвана-йăвана кайрĕç, тет.

Йăван ăйăра илсе тухса, утланса ларчĕ, тет те, килне вĕçтере пачĕ, тет.

Ир тăрсан, улпут тарçисенчен ыйтать, тет:

— Çапла-çапла, Йăван килчĕ-и?—тет.

— Килмен,—теççĕ тарçисем.

Ăйăрĕ патне пырса пăхать, тет те,—витере ăйăр çук, тет.

Улпут каллех Йăван патне каять, тет.

— Кăна турăн, тата манăн кил хушшинче тепĕр ăйăр пур. Ăйăрĕ çине утланса ларнă, хӳринчен, чĕлпĕрĕнчен тытнă, çавна варласа кил, вăрласа килсен, ăйăрĕ хунах пулать, вăрламасан, санăн ылттăну мана пулать,—тет.

Йăван, каç пулсан, кĕсъисене эрехсем тултарать, тет те, ӳсĕре персе, улпут алăкĕ умне пырса выртать, тет. Выртнă çĕртех, алăк айĕпе пĕр пулăштухне кăштăрт! шалалла кустарса ярать, тет. Тарçисем кураççĕ, тет те, мĕскерех ку тесе, чупса пыраççĕ, тет. Унтан, эрех иккенне пĕлсе, тытса ĕçсе яраççĕ, тет. Йăван, выртсан-выртсан, тата тепĕр пулăштух кăларса кустарса ярать, тет. Тарçисем кураççĕ, тет те, тата тытса ĕçсе яраççĕ, тет. Тарçисем çапла ĕçе-ĕçе ӳсĕрĕлсех çитрĕç, тет те, пурте йăвана-йăвана кайрĕç, тет, Йăван килхушшине кĕрет, тет те, хăшин аллине çулкă тыттарать, хăшне сарайне илсе кайса, урлавсем çине хăпартса лартать, тет, хăй ăйăр çине утланса ларса килне вĕçтере парать, тет.

Улпут ир тăрать, тет те, каллех Йăван патне чупать, тет. Ылттăн ăшран та каймасть, тет, хăйĕн.

— Ну, Йăван, кусене турăн, тата манăн майран пӳрнинче ылттăн çĕрĕ пур. Çавна вăрласа кил, тет. Вăрласан, çĕрри сана пултăр, вăрлаймасан, санăн чăматанри ылттăн мана пултăр,— тет. Йăван ку хутра та килĕшрĕ, тет. Вăл çав кунах пасара

кайса корзинкăпа ĕне хырăмлăхĕсем, сурăх пыршисем илсе таврăнчĕ, тет.

Йăван патне каллех пĕр пуçтаракан пырса кĕрет, тет. Йăван ăна 15 тенкĕлĕх ылттăн парса, хăйпе пĕрле улпут патне илсе каять, тет. Улпут патне кĕрсен, Йăван пытанса юлчĕ, тет. Улпут тухса, пуçтаракана 10 пус парса ячĕ, тет.

Каç пулса çитсен, улпутпа майри çывăрма выртаççĕ те:

— Кĕçĕр Йăван жульăк килет, çывăрма юрамасть,—тесе калаçса выртаççĕ, тет. Выртсан-выртсан, кусем сисмен хутранах çывăрса кайрĕç, тет. Йăван пытаннă çĕртен тухать, тет те, ĕне хырăмлăхне улпутпа майри хушшине, пыршисене вучаха тултарса хурать, тет. Улпут майри çĕрле вăранать, тет те:

— Айна ятăн-и-мĕн? Алла çемçи кĕрсе кайрĕ,—тесе, улпута вăратать, тет.

Улпучĕ:

— Йăван килчĕ пулмалла, часрах çурта çут-ха,—тет айăх тĕлĕшпе. Улпут майри тăчĕ, тет те, шарпăк шырама пуçларĕ, тет. Шăрпăкне ниçта та тупаймарĕ, тет, вара майри вучаха кайса кăвар шырама пуçларĕ, тет. Унта аллине пыршă кĕрсе кайрĕ, тет. Майра варланса пĕтнĕ аллине çумашкăн çĕррине кăларса хучĕ, тет. Йăван çĕррине илчĕ, тет те, йăлт анчах тухса тарчĕ, тет.

Улпутăн çаплах ылттăн илес килет, тет, ăшран пĕрре те каймасть, тет. Ир тăрать, тет те, татах Йăван патне чуптарать, тет.

— Манăн укçа арчи пур, чӳрече умне лартатăп та хам пăшалпа хурал тăратăп. Варласа кил, вăрласан, укçи арчипех сана пулĕ, вăрлаймасан, санăн чăматанри ылттăн укçа мана пуле,—тет. Йăван татах килĕшет, тет.

Улпут тухса кайсанах, хайхи Йăван тухрĕ, тет те, çулпа пырать, тет. Пĕр çынна çапса пăрахнă, тет те, виççĕн хурал тăраççĕ, тет.

— Сутăр мана кĕçĕрлĕхе ку вилене, сире 10-шар тенкĕ паратăп,—тет Йăван хуралçăсене.

Хуралçисем 10-шар тенкĕ илчĕç, тет те, вилнĕ çынна Йăвана парса ячеç, тет. Йăван вилнĕ çынна йăтса кайрĕ, тет те, улпутăн чӳречи умне тăратса хучĕ, тет. Улпут курнă, тет те, майрине çапла калать, тет:

— Йăван килчĕ, халех тытатпăр!—тет. Унччен те пулмарĕ, тет, пăшалне карслаттарса та ячĕ, тет. Вилнĕ çынни кĕптĕрт-кĕптĕрт туса кайса ӳкрĕ, тет. Улпут, Йăвана тин пĕтертĕм тесе, вилнĕ çынна пытарма йăтса каять, тет. Çав хушăра Йăван улпутла тумланса кĕрет, тет те, улпут майрине:

— Халь Йăвана пĕтертĕм, кӳр укçа арчине кайса лартам,—тет. Майри ăна укçа арчине тыттарать, тет те, Йăван каллех йăлт анчах курăнать, тет. Улпут, вилнĕ çынна пытарса таврăнсан, пăхать,—укçа арчи çук, тет.

Вăрăсене çараттарнă пирки пĕр пуп çаплах улпутран кулнă, тет. Улпут пуп çине çилленет те, Йăван патне кайса çапла калать:

— Йăван, юлашкинчен мана пупран култар та, пĕтĕм имение сана паратăп,—тет.

Хайхи Йăван улпутпа килĕшет, тет те, хулана кайса хаклă риза илсе килет, тет. Унтан пĕр аслă праçникре, пуп кĕлле кĕнĕ, тет те, Йăван риза тăхăнса, хĕресне çыхса, ангел пек пырса, пупа çапла калать, тет:

— Санăн рая каймалла, халăха нумай тытса ан тăр, часрах киле кайса, матăшкăна мĕнпур япалисене кăларса утма кала, эпĕ сире каçпа рая илсе кайма килетĕп, эсир çарамасланса кĕтсе тăрăр,—тет.

Каç пулса çитсен, Йăван пуп патне пырать, тет те, матăшкипе иккĕшне те икĕ мăйăх ăшне кĕме хушать, тет. Пуппала майрине мăйăх ăшне чиксе çыхса хурать, тет те, улпут патне йăта-йăта илсе каять, тет.

Йăтса кайнă чухне:

— Эсир рая хăпарнă чухне шăрш ан кăларăр, шăрш кăларсанах, рая кĕрейместĕр,—тет.

Йăван улпут чӳречи умне вăрăм пусма тăратрĕ, тет те, пупне йăтса хăпартма тытăнчĕ, тет. Йăтса хăпарнă чухне Йăван хăеах шăрш кăларчĕ, тет те:

— Ма шăрш кăларатăн?—тесе, пупа çӳлтен теп! тутарса пăрахрĕ, тет. Матăшкине те çаплах турĕ, тет. Ир пăх та—пуппала майри улпут чӳречи умĕнче вырта параççĕ, тет.

Ир тăрсан, хайхи улпут пур жандармсене пухать, тет те, пупа, мăйăх ăшĕнчен кăларса, тытăнаççĕ, тет, ăшалантарма. Хĕртеççĕ-хĕртеççĕ те яраççĕ. Пупĕ, çара пакартан, аран килне çитсе ӳкет, тет. Кайран матăшкине те çаплах туса кăларса яраççĕ, тет.

Улпутпа майри каçса кайса кулса тăраççĕ, тет.

Юлашкинчен, култарнăшăн, улпутăн ирĕксĕрех имениные Йăвана памалла пулчĕ, тет.

Ванькушкĕнь ялĕ, Советски р-нĕ, Н. Николаев калана тăрăх Е. И. Скориков-Маль çырса илнĕ.

## ТĂРНА ТУС

Пĕр çыннăн тăватă ывăл пулнă. Кĕçĕнни пит чее пулнă та кукша пулнă. Ăна Кукша Иван тенĕ. Вĕсем хула çывăхĕнчерех пурăннă та, пăрçа акса, пăрçапа суту-илӳ тукаланă.

Пĕрре ашшĕ пăрçа пăхма каять. Çитет ани патне. Çитет те тĕлĕнсех каять: пăрçана йăлт таптаса пĕтернĕ. Старик, нимĕн тума та çук, ахăр ачасене черетĕн хурал тăратмасăр та чарса пулмĕ, тесе, килне кулянса таврăнать. Килĕнче вăл мĕн пулни çинчен ывăлĕсене каласа пачĕ те, лешсем пурте пăрçа сыхлама черетрен кайма пулчĕç. Чи малтан асли кайрĕ. Вăл ана çине çитсе, пăхкаласа ларкаларĕ те, ыйхă пуснипе, çывăрах кайрĕ. Вăранчĕ—хĕвел çӳлех улăхнă, пăрçа анине татах такам таптаса кайнă. Çапла вара вăл нимĕн курмасăрах килне таврăнчĕ. Ашшĕ ыйтать:

— Ну, ачам, мĕн куртăн та мĕн илтрĕн?—тет.

— Çук, атте, çĕрĕпе куç хупмасăр сыхларăм, пĕр япала та пымарĕ,—тет аслă ывăлĕ.

Иккĕмĕш каçхине иккĕмĕш ывăлĕ кайрĕ. Иккĕмĕш ывăлĕ те çĕрĕпех çывăрса, нимĕн курмасăрах килне таврăнчĕ. Виççĕмĕш каçхине виççĕмĕш ывăлĕ кайрĕ. Ку та нимĕн курaймасăрах таврăнчĕ. Юлашки каçхине Кукша Ивана кайма черет çитрĕ. Кукша Иван пĕр çĕклем мучала илчĕ, кĕсъине çăкăрпа сухан чикрĕ, вара, хĕвел ансанах, ана çине тухса утрĕ. Ана çине çитсенех, Кукша Иван мучаларан темĕн чухлĕ мăйкăçсем туса тултарчĕ те кашни хăмăл çумнех çыха-çыха тухрĕ. Каç пулчĕ. Кукшана ыйхă пуса пуçларĕ. Вăл, çывăрас мар тесе; сухан çиет. Çурçĕр те çитсе килет. Кукша Иван пĕлĕт çинелле пăхса çăлтăр шутлама тытăнчĕ. Анчах сакăрвун саккăра çитернĕччĕ,—сасартăк парçа ани çине пĕр кĕтӳ тăрна кăшăлтатса вĕçсе килсе ларчĕ. Кукша çавăнтах сиксе тăчĕ те тытăнчĕ тăрнасене вăрăм чăпăрккапа çунтарма. Тăрнисем хăранипе пĕр самантра кăшкăрашса вĕçсе саланса пĕтрĕç. Пăхать Кукша—пĕр ватă тăрна мăйкăçа лекнĕ. Чупса пычĕ те тăрнана мăйĕнчен çавăрса тытрĕ.

— Ак телей! Ыранхи ирхи апат валли аш тупрăм,—тет хай савăннипе. Çапла каласанах, тăрна чĕлхеленчĕ те Кукшана çапла калать:

— Эсĕ манатархасшăн яр, Иван тус. Эпĕ сана питĕ пысăк ырлăх тăвăп, мĕн кăна ыйтăн—çавна парăп. Малашне нихăçан та кунта килмĕп, тата хам тăванăмсене те килме хушмăп. Вара сирĕн пăрçăра никам та тивекен пулмĕ,—тет. Кукшан çапах та тăрнана ярас килмест.

— Эпир сире тваттăн тватă каç сыхларăмăр. Юлашкинчен аранах алла лектертĕм. Эпĕ сана тем парсан та ярассăм çук, атте патне илсе каятăп,—тет. Тăрна каллех йăлăнать:

— Тархасшăн яр. Ак аçуна шантарма çак ман тĕксене илсе кай. Вара вăл сана ахалех шанĕ,—тет.—Эпĕ сана кирлĕ кунта кирлĕ пулăп,—тет.

Кукша тăрнана хĕрхенчĕ те, ку чăнах та мана кирлĕ пулма пултарĕ тесе, аларан вĕçертсе ячĕ.

— Эпĕ ăçталла вĕçсе кайнине сăнаса юл. Эпĕ ăçта кайса ларăп—манăн килĕм те çавăнта пулĕ,—терĕ те тăрна, вĕçсе кайрĕ.

Кукша килне таврăнчĕ. Ашшĕ ыйтать;

— Ну, ачам, мĕн куртăн та мĕн илтрĕн?—тет. Кукша калать:

— Курма-илтме мар, хам аллăмах лектернĕччĕ те, анчах питĕ тилмĕрнĕрен вĕçтерсе ятăм; ак шанмасан тĕксене тытса пăх,—тет. Ашшĕ Кукшана питĕ мухтарĕ. Кукши апатланкаларĕ те çав кунах тăрна патне хăнана тухса утрĕ. Çитрĕ тăрна килне, хăйсен ялĕ хыçĕнчи чуллă сăрт çине. Вăл пырса кĕнĕ чух тăрни пăри пуçах çисе ларать мĕн. Кукша Иван ана сывлăх сунчĕ те, питĕ ывăнтăм тесе, ун вырăнĕ çине канма ларчĕ. Тăрни Кукшана çапла калать:

— Ах, тусăм, сана чыслама халĕ манăн нимĕн апат-çимĕç те çук. Ак сана валли пĕр кучченеç хатĕрлесе хунăччĕ, ме, кĕсъюна

чик те килне илсе кай. Анчах асту, килне ҫитмесӗр те уҫса ан пах,—тет. Ҫапла каларӗ те тӑрна тус Ивана пӗр шурӑ тутӑр тыттарчӗ. Тутар кӗтессисене кашнинех темле чӑмӑрккасем хурса ҫыхнӑ.

Кӑшт кансан, Иван килне таварӑнма тухрӗ. Ҫул ҫинче унӑн пӗр ял ҫумӗнчен иртсе каймалла. Пырать хайхи Иван ҫулпалан. Ҫул хӗрринче пӗр ватӑ карчӑк тӑра парать.

— Ӑҫта кайрӑн, ывӑлӑм? Эсӗ ҫулла та кӗрӗкпе ҫӳретӗн-ҫке, санан ҫанҫурӑмна та тар ҫиет пулӗ. Ак эпӗ мунча хутрӑм, кӗрсе кай,—тет. Кукша шухӑшлакаласа тӑчӗ те карчӑк хыҫҫӑн мунчаналла утрӗ. Унтан, япалисене мунча палтӑрне хывса хучӗ те хӑй шала кӗрсе кайрӗ. Кӑшт ҫапӑнкаларӗ те калла тухрӗ. Тухсанах кӗрӗк кӗсъине чиксе пӑхать—шур тутӑр ҫук. Кукша нимӗн тӑва пӗлмест, ӑнран кайрӗ. Ӑн кӗрсен, тумланчӗ те пуҫне усса килнеле утрӗ.

Тепӗр кунне Кукша каллех тӑрна патне кайрӗ. Вал тӑрнана шурӑ тутӑра вӑрлани ҫинчен каласа пачӗ. Тӑрна калать:

— Ан хуйхӑр, тусӑм. Ме ак сана ҫуна, ку ҫуна сана ӑҫта кяяс тенӗ ҫавӑнта илсе ҫитерӗ. Хӑвӑртрах улӑхса лар та ҫул ҫинче ниҫта та ан кӗр,—тет. Кукша улӑхса ларчӗ те ҫуна ҫине, яра пачӗ килнеле.

Хайхи карчӑк каллех ҫул ҫине тухса тӑнӑ. Кукшана татах мунча кӗме чӗнет. Кукша шухӑшласа тачӗ те, нимӗн те пулмӗ-ха, тесе, мунча патне чуптарса пычӗ. Ҫунине кӑкарчӗ те мунчана кӗчӗ. Анчах кӗнӗччӗ,—ҫунине асне те илчӗ. Ку карчӑк, тутӑра вӑрлана пек, ҫунана та ан вӑрлатӑр, тесе, мунчаран чупса тухрӗ. Пӑхать—ҫуна ҫук; карчӑк ларса та тарнӑ. Нимӗн тума та ҫук. Кукшан йере-йӗре килнелле утмала пулчӗ.

Тепӗр кунне Кукша каллех тарна патне кайрӗ. Тӑрнана хӑйӗн хуйхине каласа пачӗ. Тӑрна калать:

— Ан хуйхӑр, тусӑм. Ме ак сана мӑйрака, кирлӗ вӑхӑтра уҫса пӑх та, мӗн пулнине хӑвах курӑн,—тет.—Карчӑк мунчана йыхӑрсан—кай, анчах майракуна хӑвпа пӗрлех илсе кӗр,—тет. Ҫапла каларӗ те тӑрна Кукшана пӗр майрака пачӗ. Кукши ӑна тав турӗ те киле тухса утрӗ.

Хайхи карчӑк каллех ҫул ҫине тухса тӑнӑ. Кукша—кӗрӗкпе, йӗп йӗпе тарланӑ. Карчӑк калать:

— Ӑҫта кайрӑн, ачам? Ахар эсӗ питӗ инҫене кайнӑ пулӗ, ытла хытӑ тарланӑ. Ҫанҫурӑмна тар ҫиет пуль, мунча кӗрсе кай,—тет. Кукша пӗр шухашламасӑрах мунча патнелле утрӗ. Салтӑнчӗ те, мӑйракине алла илсе, мунчана кӗчӗ. Хӑй алӑкне тачах хупмарӗ, мӗн ӗҫлӗ-ха ку карчӑк, тесе, тулалла пӑхса тӑрать. Карчӑк мунча пӑлтӑрне кӗчӗ те Кукша кӗрӗк кӗсъисене ухтарма пуҫларӗ. Унччен те пулмарӗ, Кукша аллинчи мӑйракине уҫса та ячӗ. Сикрӗ тухрӗ мӑйрака ӑшӗнчен пӗр саламатлӑ хусах.

— Мӗн кирлӗ, Иван тус?—тесе ыйтать Кукшаран.

— Ак ҫак карчӑк мана виҫӗ кунччен аптратрӗ. Пӗрмаях ман ҫумри япаласене вӑрла-вӑрла юлать. Тӑн кӗрт пӗрре асӑнмалӑх!—терӗ Кукша. Хусах карчӑка ҫивӗтӗнчен ҫавӑрчӗ илчӗ те:

— Çын япалине ан вăрла! Çын япалине ан вăрла! Ăçта хутăн, каялла пар!—тесе, саламатпа çунтарма тытăнчĕ. Кашни çапмассерен юн сирпĕнет. Кукша тĕлĕнсе кайнипе тек пăхса тăрать. Вара карчăк Кукшана тилмĕрме пуçларĕ:

— Ах, ачам, чунăма ан илех. Япалусене пĕтĕмпех каялла паратăп, тархасшăн чар,—тесе тархаслать. Кукша карчака шеллерĕ те хусаха майрака ăшне хупса хучĕ. Вара карчăк çавăнтах тутăра та, çунана та илсе пырса пачĕ. Кукша Иван майракипе тутăрне кĕсъине чикрĕ те, çуни çине улăхса ларса, килнелле вĕçтерчĕ.

Пырса кĕчĕ яла. Халăхсем тĕлĕнсе çеç тăраççĕ. Ашшĕ те, тетĕшĕсем те—пурте тĕлĕнсе кайнă. Кукша çунана вите умне какарчĕ те пӳрте кĕчĕ. Тетĕшĕсем, малалла мĕн пулĕ-ха, тесе, Кукша çине пăхса тăраççĕ. Кукши вĕсене пурне те йĕркелесе тăратрĕ. Унтан кĕсъинчи тутăрне кăларчĕ те кĕтессинчи чăмăрккасене салтма пуçларĕ. Кашни салтмассерен пĕр хĕр тухать. Чи малтан тухнине Кукша аслă тетĕшне пачĕ, ытти хĕресене—юлашки икĕ тетĕшне пачĕ. Чи юлашки хĕрне хăй илчĕ. Ку вара питĕ хитре те питĕ маттурскер пулчĕ.

Тетĕшĕсем, Кукша арăмĕ хăйсеннинчен маттуррине курсан, ĕрлеше пуçларĕç. Пĕри калать, эп илеп, тепри калать, эп илеп. Унччен те пулмарĕ, Кукша кĕсъинчи майракине туртса кăларчĕ те уçса та ячĕ. Саламатлă хусах сиксе те тухрĕ.

— Мĕн кирлĕ, Иван тус?—тет салтак, сиккелесе.

— Çунтар саламатпа ак çак ухмахсене!—терĕ Кукша.

Тытăнчĕ хусах кăсене саламатпа çунтармашкăн. Эх, çунтарать, эх, çунтарать. Тетĕшĕсем чĕркуççи çине тăрса Ивана тархаслаççĕ.

— Тархасшăн чар, Иван, хусахна! Урăх ниçăхан та тавлашмăпăр,—теççĕ.

Иван хусахне майрака ăшне хупса хучĕ те, тетĕшĕсем тархаслама чарăнчĕç. Тепĕр эрнерен ашшĕ пур ывăлĕсене те пĕр кунтах туй туса пачĕ. Кĕреке хушшине, чи хисеплĕ вырăна, тăрна туса илсе килсе лартрĕç. Хăйсене ырлăх тунăшан ăна ĕçтерчĕç-çитерчĕç, пĕтĕм чĕререн тав турĕç. Тăрни вĕсене ырă та телейлĕ пурнăç сунчĕ.

Халлап хэпха тăрринче, хам кăмака çинче.

Институтăн алçыру фондĕнчен.

## ЫЛТТĂН СУМККĂ

Пурăннă, тет, ĕлĕк-авал пĕр карчăкпа старик. Вĕсен пулнă икĕ ывăл. Ывăлĕсем ӳссе çитсен, вĕсене карчăкпа старик авлантарса уйăрса кăларса яраççĕ те, хăйсем часах вилсе каяççĕ. Аслă ывăлĕ, ашшĕсен мулне илсе юлнипе, питĕ вăйлă пуйса кайнă. Кĕçĕнни çав тери чухăн пурăннă. Çитменнине унăн тăхăр ывăл пулнă, вĕсене тăрантарма унăн кашни çулах тырри çитмен.

Кĕçĕн ывăлĕ, Иван, нихçан та пăрçа акса курман пулнă. Пĕрре вăл шухăша каять: „Эпĕ нихçан та пăрçа акса курман,

çавăнпа манăн тыра пулмасть-тăр", тесе шухăшлать. Тепĕр çураки валли, хĕлле ыйткаласа çӳресе, пĕр çур пăт пек пăрçа вăрлăхĕ тупса хурать вăл.

Ака çуркунне çитрĕ, анчах Иванăн пăрçа акмалли çĕрне сухалама лаши те çук. Иван пиччĕшĕнчен кайса йăлăнать.

— Пăрçа çĕрне сухаласа акмашкăн лаша памăн-ши?—тет.

— Пăрçуна çурмалла тăвăн-и, вара парăп?—тет пиччĕшĕ.

— Юрать,—тет Иван,—пур—пĕрле, çук—çурмалла.

Вара ăна пиччĕшĕ пăрçа акса парать.

Пăрçа питĕ те лайăх шăтать. Иван пĕрре хире кайса пăхать те, пăрçа лайăх шăтнине кура, килне çав тери хавасланса таврăнать. Тепре каять: пăрçа шап-шура чечеке ларнă. Виççĕмĕш хут каять. Пăхать—пăрçине Там вĕтеленĕ кайнă. Тытăнчĕ хай Иван тарăхнипе Тăма хăваламашкăн. Эх, хăвалать, эх, хăвалать! Хăваласан-хăваласан, Иван Тăма хăваласа çитрĕ. Вăл вăрманта, тунката çинче сухалне тураса ларать мĕн. Иван ăна тӳрех сухалĕнчен çавăрса илчĕ те ласкама пуçларĕ:

— Мĕн тума эсĕ манăн пăрçана пĕтерсе кайрăн? Тӳле мана уншăн, атту халех сухална туртса кăларатăп!— тет Иван.

— Ан тив-ха, Иван тус,—тет Тăмĕ,—ме сана ака уншăн пĕр сумкка.

— Мĕн тумалла сан çак çĕтĕк сумккупа?—тет Иван çиленсе. Тăмĕ калать:

— Киле кай та, ачусене сĕтел йĕри-тавра ларт, унтан çак сумкка сĕтел çине силле,—тет.

Иван пуçне усса, килне сумккă çакса таврăнать. Сĕтел йĕри-тавра ачисене лартать те силлет çĕтĕк сумкка. Сумккăран, мĕн кăна кирлĕ, пурте сĕтел çине тăкăнса кăна тăрать. Çапла Иван лайăх пурăнма пуçлать. Кăна пиччĕш курать те Ивана калать:

— Атя, Иван, манăн кив капансемпе çак сумкка улăштарар,—тет.

— Атя улăштарар,—тет Иван. Хайхисем килĕшрĕç те сумккăпа кив капансене улăштарса та хучĕç. Анчах пĕр-ик çул та пурăнма ĕлкĕреймерĕç, Иванăн ачисем кив капансене çисе те ячĕç. Каллех Иван çука тăрса юлчĕ. „Капла эпĕ каллех çука тăрса юлтăмçке. Ĕлĕкхи пек, кăçал та пăрçа акса пăхмалла мар-ши манăн?—тесе шухăшлать вăл. Шухăшлать те, çуркунне каллех пăрçа акса хăварать. Пăрçине ку хутра та Тăм илсе каять. Тытăнать Иван Тăма хăваламашкăн. Эх, хăвалать, эх, хăвалать! Хăваласан-хăваласан, хăваласа çитрĕ. Тăмĕ каллех вармантa тунката çинче сухалне тураса ларать иккен. Ячĕ те илчĕ ăна Иван кăвак сухалĕнчен:

— Мĕншĕн эсĕ манăн пăрçана тустарса кайрăн? Тӳле хăвăртрах, атту халех сухална туртса кăларатăп!—тет.

— Ан тив-ха, Иван тус, ме, ак сана уншăн ылттăн сумккă парса ярам,—тет Тăмĕ.

Иван ылттăн сумкка илет те килне таврăнать. Лартать ачисене сĕтел йĕри-тавра, силлет хай ылттăн сумкка, анчах сумккăран вуникĕ салтак сиксе тухаççĕ. Сиксе тухаççĕ те тытăнаççĕ

Иванăн ачисене саламатсемпе хĕртмешкĕн. Иванĕ аран-аран сумккине хăваласа кĕртрĕ салтаксене. Унтан сумккине илчĕ те пиччĕш патне кайрĕ, малтанхи çĕтĕк сумккăпа улăштарса килчĕ. Пиччĕш ылттăн сумккă туяннипе савăнсах кайрĕ те хăйсен таврашĕсене, пуянсене пухса, хăналантарма шухăш тытрĕ. Пухрĕ хайхи мĕн пур пуянсене, хăй юриех ĕçме-çиме нимĕн те хатĕрлеттермерĕ. Хăнасем пухăнса çитсен, Иван пиччĕшĕ ылттăн сумкка тытать те сĕтел çине силлет. Ак сиксе тухрĕç, тет, вуникĕ салтак сумккăран. Тытăнчĕç, тет, хăнисене саламатсемпе ăшалантармашкăн. Хăнисем хăшĕ чӳречерен, хăшĕ алăкран, ĕппĕн-теппĕн, аран-аран туха-туха тарчĕç, тет.

Хăнисем тепĕр кунне Иван пиччĕшĕ çинчен сута параççĕ, пиччĕшĕ—Иван çинчен сута парать. Ак Ивана сута чĕнтереççĕ. Иван хай ылттăн сумкка сута çаксах каять. Сут тытăнсан, Иван сумккине тытать те сутйисем умне силлет. Сиксе тухрĕç сумккăран каллех вуникĕ салтак, тытăнчĕç сутйесене ăшалантарма. Шалт хĕнесе пĕтерчĕç. Сутйесем Иванран тархаслаха ыйтаççĕ, тет.

— Чар, Иван, салтакусене, нимĕскер те тумастпăр сана!—Анчах Иван салтаксене юриех чармарĕ, тет. Вара лешсем сутйесене хĕнесе вĕлерсех пăрахрĕç, тет.

Юмах юман урлă, хам хапха урлă.

Институтăн Ăслăлăх Экспедицийĕн материалĕсенчен илнĕ.
Аслă Сĕнчел, Тельман р., Тутар. р.
Краснов Андрей çырса панă.

## Н У Ш А

Пурăннă, тет, пĕр ялта пĕр карчăкпа пĕр старик. Кăсен пурнăçĕ питĕ начар пулнă, тет, анчах старикĕн хунĕ питĕ пуян пурăннă, тет.

Пĕрре, çимĕк çитсе килнĕ чух, карчăкки старикки‍не калать:

— Ваçлей, ĕнтĕ çынсем çимĕк валли сăра та тăва пуçларĕç, пирĕн иксĕмĕрĕн нимĕн те çук. Кай-ха аттесем патне, сăра тума пĕрер пăт салат памĕç-и?—тет.

Ваçлей пĕр пăтавкка илет те хунĕсем патне тухса утать.

— Хуньăм, пире пĕрер пăт салат памăн-ши? Çынсем ĕçнĕ чух пирĕн те ĕçес килет,—тет Ваçлей.

— Мĕншĕн парас мар,—тет хунĕ.—Карчăк, парса яр кĕрĕве пĕр пăт салат,—тет.

Хунямăшĕ Ваçлее пĕр пăтавкка салат тата тепĕр хутаç типĕтнĕ какай тыттарса ярать.

Пырать Ваçлей çулпала, пĕр аллипе пăтавкка йăтнă, тепĕр аллипе хутаç çĕкленĕ. Кунăн пĕр арман пĕви урлă каçса каймалла. Вершник çине улăхма тăрсанах, Ваçлей такăнчĕ ӳкрĕ те салатне веçех шыва тăкса ячĕ. Мĕн тăвас? Ваçлей нимĕн тума аптранипе пĕр патак илчĕ те шыва пăтратма пуçларĕ. Пăхать Ваçлей—шыв сăра тĕслĕ пулса кайрĕ. „Аха, шыв сăра пекех пулчĕ иккен-ха, ĕçсе пăхам-ха, сăра тути каламасть-и?“—тесе

шутлать вăл хăй ăшĕнче. Унтан хырăмĕ çине выртать те шыва чăпăртаттарсах ĕçме тытăнать.

— Аха, эпĕ ўсĕрĕлтĕм иккен-ха. Ну, халь юрă юрлас ĕнтĕ, — тет Васлей.

Тытăнчĕ юрлама. Пĕр-ик çавра юрларĕ те хăй хыçĕнче такам юрланине илтех кайрĕ. Пăхать—темĕнле çын тайкаланса юрласа килет. Хăй çĕтĕк аçам тăхăнса янă. Васлей ку çынна кĕтсе илчĕ те çапла калать:

— Атя, хăта, пĕрле кайăпăр. Иккĕн утмашкăн та çăмăлрах, юрлама та хавасрах,—тет.

— Атя!—тет лешĕ.

Кăсем иккĕш ыталанчĕç те юрра янраттарса кăна пыраççĕ.

Кайсан-кайсан, Васлей кунтан çапла ыйтать:

— Эсĕ кам пулатăн, хăта? Эпĕ сана паллаймастăп,—тет.

— Епле паллаймастăн эс мана?—тет лешĕ.—Эпĕ санăн Нушу пулатăп вĕт.

— Ну, атя апла пулсан хам пата!—тет Васлей.

Кăсем каллех пĕр-пĕринпе ыталашрĕç те, юрла-юрла, Васлей килнелле уттарчĕç.

Килне çитес умĕн Васлей арăмĕ çырмаран сăра лартма шыв ăсса хăпарнине курать.

— Ара ăçта ĕçрĕн капла, Васлей? Санăн салату ăçта, аттесем памарĕç-и-мĕн?—тесе ыйтать вăл Васлейрен.

— Парасса пачĕç те,—тет Васлей,—телейĕм çук: арман вершникĕ урлă каçнă чух такăнтăм та шыва тăкăнса кайрĕ, шывне пăтраткаларăм та салатлă шывран сăра пулчĕ тăчĕ. Ĕçрĕм те ўсĕрĕлсе кайрăм, юрлама тытăнтăм, унтан хамăн Нуша тусăма тĕл пултăм. Сăра лартасси пулмарĕ, ĕнтĕ атя хăвăртрах киле, Нуша тусăма какай та пулин пĕçерсе çитерер, пирĕн ăна чыслама урăх нимĕн япала та çук,—тет.

Çитрĕç килне. Васлей яшка пĕçерме вутă касма тухрĕ, Нуши пўртре ларса юлчĕ; Васлей хыççăнах арăмĕ тула вутă çĕклеме тухрĕ.

— Эсĕ чи пысăк арчуна пушат-ха, эпир çав Нушана ун ăшне тытса хупса асăнтарар-ха пĕрре,—тет Васлей арăмне. Арăмĕ самантрах пăлтăрта ларакан пысăк арчана пушатрĕ. Васлей вута çĕклесе кĕчĕ, ун хыççăн арăмĕ те кĕчĕ. Нуша сĕтел хушшинче çаплах юрă юрласа ларать, Васлей Нуша çумне ларчĕ те юрлан пекки тăвать. Унччен те пулмарĕ, Нушана пырĕнчен ярса тытрĕ те:

— Арăм, тыт урисенчен, Нушана тĕрмене хупар!—тесе кăшкăрса ячĕ. Арăмĕ хайхине урисенчен тытрĕ, Васлей пырĕнчен тытрĕ. Нушана пăлтăралла сĕтĕрсе тухрĕç те пысăк арчана тĕркелесе те чикрĕç, унтан пысăк çăрапа питĕрсе илчĕç. Каçхине Васлей лаша кўлчĕ те, Нушана тытса хупнă арчана урапи çине хурса, вăрмана тухса кайрĕ.

Çитрĕ вăрмана. Пĕр йывăç тĕми айне пысăк шăтăк алтрĕ те арчана тĕртсе йăвантарса ячĕ. Унтан арча çине тăприне тапта-тапта варса хучĕ, паллă ан пултăр тесе, çулçăсем витсе хăварче.

Çакăн хыççăн Васлейĕн пурнăçĕ кунран-кун малалла кайма пуçларĕ. Хунĕ Васлейрен тĕлĕнет: „Ăçтан илчĕ ку кĕрӳ укçа, епле ку пит час пуйса кайрĕ? Пурăна-киле ку манран та иртсе кайĕ, унтан вара пире паллами те пулĕ“, тет.

Çимĕкре Васлей хăна пуçтарчĕ. Хунĕпе пъянамăшне те чĕнчĕ. Ĕçрĕç-çирĕç кусем, юрларĕç. Васлей хăй те хĕрчĕ.

Хунĕ ыйтать:

— Васлей кĕрӳ, кала-ха, эсĕ епле майпа пит хăвăрт çĕкленсе кайрăн, ăçтан та пулин укçа тупрăна?—тет.

Васлей Нушана епле лектернине, ăçта хунине, епле çавăнтан вара пурнăçĕ малалла кайнине хунĕне тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ. Каласанах, хунĕсем киле кайрĕç.

Тепĕр кунне Васлей хунĕ хăйĕн мăнтăр лашине кӳлчĕ те, тимĕр кĕреçе илсе, вăрмана тухса кайрĕ. Çитрĕ вăрмана. Нушана пытарнă вырăна шырама пуçларĕ. Шырарĕ-шырарĕ—ниçта та çук. Унтан кăшкăрма тытăнчĕ:

— Кĕрӳ Нуши ăçта-ши? Кĕрӳ Нуши ăçта-ши?!—тесе кăшкăрать.

Нуша çинçе сасăпа:

— Кунта!—тет. Вăл вилес патнех çитнĕ иккен.

Васлей хунĕ Нушана шыраса тупрĕ те, çĕр айĕнчен алтса кăларса, килне илсе таврăнчĕ. Килĕнче арча çăрине персе ватрĕ те Нушана сĕтĕрсе кăларчĕ.

— Кай ĕнтĕ, Нуша, хăвăн малтанхи тусу патне, кĕрĕве малтанхи пекех чухăн пурăнтар,—тет.

— Çук, ырă çынăм, эп ун патне тем тусан та каяссăм çук,—тет Нуши.—Вăл манăнне кĕçех чуна илмерĕ. Ыр та эсĕ çăлса кăлартăн. Халĕ ĕнтĕ эпĕ сан патăнтан ниçта та каяссăм çук,—тет.

Çапла каласанах, Нуша курăнми пулать. Çав каçхинех Васлей хунĕн мăнтăр лаши ӳксе вилчĕ, тет. Петрав умĕн çунса кайрĕ, тет. Çапла унăн пурнăçĕ каялла кайнăçемĕн каялла кайса пычĕ, тет. Васлейĕн пурнăçĕ тата малалла кайрĕ, тет те, Васлей аван пурнăçпа пурăнма пуçларĕ, тет.

Юмаха Янăш ялĕнчи (Ишлей районĕ)
Александров М. çырса панă.

## ПУЯНПА ЧУХĂН

Пулнă, тет, пĕр пуян. Ун патĕнче пĕр чухăн хресчен тарçăра ĕçлесе пурăннă. Пĕрре пуянпа чухăн хире пуян çĕрне суха сухалама каяççĕ. Чухăнĕ, хăйĕн вилес патне çитнĕ ырхан кĕсрине хĕрхенсе, сухине ăшăх кăна ярса сухаласа пырать, пуян лашине мĕнпур вăйран мекĕрлентерет. Пуянĕ çакна асăрхарĕ те, çиленсе, чухăна хартса тăкрĕ:

— Эсĕ мĕн ман лашана кăна хăваласа пыратăн, хăвăнне хĕрхенсе вершук тарăнăш анчах сухалаттаратăн?—тет. Çапла каларĕ те пуян, чухăн лаши патне чупса пырса, ăна мĕнпур вăйпа пуçĕ урлă пушă аврипе туртрĕ. Чухăн лаши енчен-еннелле сулкаланса илчĕ те çавăнтах кайса ӳксе вилсе те выртрĕ. Чухăн

пĕр самант хушши нимĕн тума аптăраса тăчĕ. Мĕн тăвас? Нимĕн тума та çук. Чухăн хăйĕн кĕсрин тирне сӳсе илсе хĕвел çинче типĕтрĕ те, тирпейлĕн хутлатса, михĕ ăшне чиксе хучĕ, унтан пуяна ылханса, ăçталла куç курать—çавăнталла утса кайрĕ.

Кайсан-кайсан, хайхискер пĕр вăрманти ешĕл уçланкăна çитсе кĕчĕ. Пăхать чухăн—уçланкă варринче улпут çурчĕ курăнса ларать. Чухăн, çав çуртăн аялти хутĕнчи пĕр чӳречи умнелле йăпшăнса пырса, пĕр йăвăç тĕмĕ хушшине кĕрсе ларчĕ те, шалта мĕн хăтланнине сăнама тытăнчĕ. Улпучĕ килте çук иккен те, унăн арăмĕ хăйĕн еркĕнне тĕрлĕрен хаклă йышши апат-çимĕçсемпе чысласа хăналантарать иккен.

Нумай вăхăт иртрĕ-и, сахал-и,—кĕç хай çурт патне улпут хăй те трантаспа кĕрлеттерсе çитсе тăчĕ. Арăмĕ ăна чӳрече витĕр асăрхарĕ те апат-çимĕçсене хăпăл-хапал кăмакана пытарса лартрĕ, еркĕнне пысăк арча ăшне хупса хучĕ. Унтан упăшкине хирĕç чупса тухрĕ те, нимĕн пулман пекех йăпăлтатма пуçларĕ. Кăсем часах пӳрте кĕрсе карĕç.

Кăшт тăхтасан, чухăн тĕм хушшинчен тухать те чӳречерен шаккама пуçлать:

— Хваттере яраймăр-ши мана, ырă çынсем?—тет.

— Ма ярас мар, кĕрсе вырт,—тет улпут.

Чухăн миххине çурăм çине çавăрса хучĕ те пӳрте кĕчĕ. Улпучĕ ӳсĕр иккен, вăл чухăна тӳрех сĕтел хушшине лартма хушрĕ. Чухăн сĕтел хушшине кĕрсе, миххине сĕтел айне хучĕ. Ӳсĕр улпут тытăнчĕ кунтан ыйтса тĕпчеме: хăш ял çынни, мĕн çăмăлпа çӳретĕн, ăçталла çул тытатăн?—тесе ыйтать.

Çапла калаçса ларнă хушăра чухăн сĕтел айĕнчи миххине урипе кăлт! тĕртет те, михри кĕсре тирĕ кăпăр-капăр туса илет.

Улпут ыйтать:

— Сĕтел айĕнче мĕн кăпăртатать санăн?—тет.

— Ман асамçă,—тет чухăнĕ.

— Мĕн асамлама пултарать вăл?—ыйтать улпут.

— Мĕн кирлĕ, çавна!—тет чухăнĕ.

— Манăн халех питĕ тутлă апат-çимĕç ĕçсе-çиес килет. Повăрсем часах хатĕрлесе параймĕç, хăвăн асамçуна чи тутлă апат-çимĕç хатĕрлеттер-ха,—тет улпут.

— Халех пурте пулĕ!—тет чухăнĕ.

Унтан миххине урипе тапса кăпăртаттарчĕ те:—хатĕр!—терĕ.

— Ăçта, çук-çке?—тесе ыйтать улпут.

— Кăмакара,—тет чухăн.

Кăмакана уçса пăхаççĕ те, унта чăнах та туллиех ĕçмеллиçимеллисем лараççĕ. Ӳсĕр улпут хăйпе пĕрле чухăна та хăналама пуçларĕ.

Ĕçсе-çисе тăрансан:

— Тата мĕн тухатма пултаратăн?—тет улпут.

— Шуйттана та тухатма пултаратăп,—тет чухăнĕ.

— Шуйттана тухатса кăтарт-ха эппин,—тет лешĕ. Чухăн каллех хăйĕн миххине урипе тĕртсе кăпăртаттарать те:

— Хатĕр, тухатрăм!—тесе пĕлтерет.

— Ăçта шуйттанĕ, çук-çке?—тет улпучĕ.

— Ав çав арчара,—тет чухăнĕ.—Уlăхса лар хăвăртрах арчи çине, атту шуйттанĕ тухса тарать,—тет.

Улпут хăпăл-хапăл арча çине улăхса ларчĕ. Кăшт тăрсан, арчана уçса пăхаççĕ те, унта чăнах та такам пăшкаса выртнине кураççĕ. Улпут малтан хăрасах кайрĕ, анчах часах лăпланчĕ те чухăнран йăлăнма пуçларĕ:

— Сут асамçуна!—тет.

— Ма сутас мар, сутатăп,—тавăрать чухăнĕ.

— Мĕн чухлĕ ыйтатăн?

— Виçĕ курка ылттăн,—тет чухăн.

Кăсем хакĕпе килĕшрĕç те, улпут чухăна виçĕ курка ылттăн виççе пачĕ. Чухăнĕ тухса кайнă чух:

— Шуйттанĕ халĕ те арчарах вĕт-ха. Кӳрĕр-ха, эпĕ ăна та хампа пĕрлех илсе каям, атту вăл сире темĕнтепĕр туса пĕтерĕ,—тет.

Улпут килĕшрĕ. Чухăн арчана михĕ ăшне чиксе, çурăм çине çавăрса хучĕ те, улпут патĕнчен тухса кайса, малалла утрĕ.

Кайсан-кайсан, вăл пĕр юханшыв хĕррине çитрĕ те хытă сасăпа:

— Ох, ывăнтăм-çке. Ку арчана малалла çĕклесе каяс та мар пуль, çак шыва персе хăварам луччĕ,—терĕ. Арча ăшĕнчи çынни кăна илтсен хăраса вилсех кайрĕ.

— Пушалстă мана шыва ан пăрах. Мĕн ыйтнă, çавна парăп,—тесе тархаслама тытăнчĕ.

— Пĕр курка ылттăн парăн-и?—тесе ыйтать чухăнĕ.

— Пĕр курка мар, виççĕ те шеллемĕп, анчах тархасшăн кăларса яр мана,—тет лешĕ.

Чухăнĕ кунтан виçĕ курка ылттăн илет те ирĕке кăларса ярать. Унтан, арчине шыва ярса хăварса, ултă курка ылттăн укçапа килне таврăнать.

Килне çитсен, унăн мĕнпур укçи мĕн чул тăйнине пĕлес килсе кайрĕ. Ярать хайхи пуян патне тараса илме. Пуянĕ нимĕн ыйтмасăрах парса ярать. Чухăн укçине турттарса пăхать те, тарасине каллех леçсе парать. Пуянĕ тарасине илет те, ун çумне пĕр ылттăн укçа çыпçăнса килнине курах каять. „Ак тамаша! Ăçтан çыпçăннă-ха ку ылттăн укçа тараса çатми çине? Укçа виçсе пăхман-ши-ха ку чухăн? Ăçтан тупăннă ун тарасапа виçмелĕх укçа? Каям, пĕлсе килем“, тесе шухăшлать пуян тĕлĕннипе.

Çитрĕ хайхи чухăн патне.

— Епле майпа пуйса кайрăн эсĕ?—тесе ыйтать чухăнран.

— Кĕсре тирне пиtĕ лайăх хакпа сутса ятăм,—тет чухăнĕ.

— Тир илекенсем татах тупăнмĕç-ши?—ыйтать пуянĕ.

— Мĕншĕн тупăнмĕç? Тупма пулать!—тет чухăнĕ.

Пуян хăвăртрах килне кайрĕ те мĕнпур лашисене пусса пăрахса, тирĕсене сӳсе илчĕ. Унтан тепĕр кунне хулана пасара илсе тухса, хытă сасăпа кăшкăрма пуçларĕ:

— Лаша тирĕ сутатăп! Лаша тирĕ сутатăп!

Пуян тавра темĕн чухлĕ халăх пухăнчĕ.

— Мĕн чухле сутатăн?—тесе ыйтаççĕ.

— Кашни тиршĕн виçшер курка ылттăн укçа,—тет пуян.

Кăна илтсен, çынсем питĕ тарăхса кайрĕç:

— Ухмаха ернĕ ку этем. Тытса хупса лартăр ăна!—тесе кăшкăрашма пуçларĕç.

Пуян ку япала ырра мар иккенне тавçăрса илет те, тирĕсене пăрахса хăварсах килнелле вĕçтерет.

— Мĕн шуйттанĕ тăвам ку чухăна? Улталарĕ вĕт вăл мана. Пĕр лашасăр тăрса юлтăм. Каçару пулмĕ ăна уншăн, халех каягăп та шыва путарса вĕлеретĕп,—тесе, çавтери тарăхса ятлаçма пуçларĕ.

Пуян çавăнтах михĕ илчĕ те чухăн патне тухса кайрĕ. Чухăн килне çитсен, чухана çулса илсе, вайпах михĕ ăшне чиксе хучĕ, унтан шыва путарма тесе, кӳлĕ хĕррине çĕклесе кайрĕ.

Акă пырать пуян хăшкăлтатса чиркӳ çумĕпе. Чиркӳрен кĕлĕ юррисем юрланă сасă илтĕнет. Пуян чăтса тăраймарĕ, миххине çĕре лартса хăварчĕ те чиркĕве кĕчĕ. Чухăнĕ михĕ ăшĕнче пăшкаса выртрĕ-выртрĕ те, такам: „Эх-ха-хай! капла пурăниччен вилесчĕ луччĕ ман“, тенине илтех кайрĕ. Чухăн кăштах йăшаланса илчĕ те лешĕнчен ыйтать:

— Кам эсĕ? Чăнахах вилессӳ килет-и санăн?—тет.

— Эпĕ нумай выльăх усракан пуян çын, паян пĕр улпут патне унăн чипер хĕрне качча илме пĕр кĕтӳ выльăх хăваласа кайрам. Улпут мана хĕрне памарĕ. Халь вилес тетĕп ĕнтĕ,—тет.

— Апла пулсан, кĕрсе вырт ман вырăна,—тет чухăн.

Лешĕ михĕ çăварне салтса чухăна кăларса ячĕ те, хăй ун вырăнне кĕрсе вырнаçрĕ. Чухăнĕ унăн кĕтӳне хăваласа киле тавăрăнчĕ.

Пуян чиркӳрен тухрĕ те, миххине илсе шыва кайса печĕ.

— Аранах пĕтертĕм ку чухăна. Халĕ текех мана улталаймăн,—тет пуян савăнса.

Яла çитет те пуян, тĕлĕнсе хытсах каять: чухăн хăйĕн хапхи умне тухса ларнă та пысăк кĕтӳ кĕтсе лара парать.

— Ак тамаша! Ăçтан тупрăн ку кĕтĕве?—тесе ыйтать пуян.

— Шыв тĕпĕнчен,—тет чухăнĕ.

— Урăх çук-и унта çакăн пек кĕтӳсем?—тет пуянĕ.

— Епле çук пултăр, темĕн чухлех!—тет чухăн.

— Каям-ха эппин эпĕ те унта. Эсĕ мана михĕ ăшне чиксе хур та шыва кайса яр-ха,—тет пуян чухăна.

Чухăнĕ пуяна михĕ ăшне чикет те шыв хĕррине çĕклесе каять. Халь кăна шыва пăрахма тытăннăччĕ, пуянĕ шалтан кăшкăрса та ячĕ:

— Чим-ха, чим, эсĕ михĕ çăварĕнчен пысăк чул çых, шыв тĕпĕнчи кĕтӳ патне хăвăртрах анса çитмелле пултăр,—тет.

Чухăнĕ мĕн хушнине ратлансах турĕ: михĕ çăварне тем пысăкĕш чул çыхрĕ те пуяна пĕрех шывалла сулласа ыврăтрĕ. Пуянĕ вара шыв тĕпнелле янкăртатса анчĕ кайрĕ, кăпăксем çеç тухса юлчĕç ун хыçĕнчен.

Çапла вара чухӑн пуяна тирпейлерӗ те, хӑй яла таврӑнса лайӑх пурнӑçпа пурӑнма пуçларӗ, тет. Улпут кӗтӳне пӗтӗмпех чухӑн çынсене валеçсе пачӗ, тет.

Ку юмаха 1907 çулта Улхаш ялӗнче (халь Пухтел р.) çырса илнӗ.

## ЧЕЕ КӖРӲ

Ёлӗк-авал пӗр ялта пит чее, тӗсрен-питрен илемсӗртерех çамрӑк каччӑ пурӑннӑ, тет. Пурӑнсан-пурӑнсан, çак каччӑ авланнӑ, тет. Арӑмӗпе пит лайӑх килӗштерсе пурӑннӑ, тет. Анчах çак кӗрӗве хунямӗш юратман, тет. Килӗнче те, кӳрши-аршисемпе те: пирӗн кӗрӳ начар, питӗ илемсӗр, кӑмӑла каймалла кӗрӳ пулмарӗ, тесе, кулянса калаçнӑ, тет.

Кӗрӳ, хунямӗш юратманнине пӗлет пулсан та, пӗр уявра ун патне хӑнана пынӑ, тет. Хунямӑшӗ кӑна хӑна тума чей вӗретнӗ, тет те, сетел çине типӗ çакӑр касса хунӑ, тет. Анчах кӗрӳшӗ, сӗтел хушшинче ларнӑ çӗртенех, сакайӗнче пӗр пичке сӑра, кӑмака умӗнче пӗр така пуçӗ, шкапӗнче капӑртма пуррине курах кайнӑ, тет. Çаксене курсан, пер чее шухӑш шухӑшласа тупнӑ, тет те, хунямӑшне çапла калана, тет:

— Хунякам, эпӗ иртнӗ каç тӗлӗнмелле тӗлӗк курнӑ. Çавна сана каласа парам-и?—тесе сӑмах хушнӑ, тет.

— Мӗнле тӗлӗк, кӗрӳ, кала ха, кала!—тенӗ, тет, хунямӑшӗ. Керӳшӗ тӗлӗк калама пуçланӑ, тет:

— Тӗлӗкре сирӗн пата хӑнана килме тухрӑм пек. Килнӗ чухне çул çинче сирӗн сакайӗнче ларакан пичке пек пысӑк çӗлен ман пата чӑшкӑрса пычӗ пек. Ну, мӗн ӗçлес? Тытрӑм та çапрӑм кӑмака умӗнче ларакан така пуç пек чулпала. Çӗлен пуçӗ шкапри капӑртма пек лапчӑнса ларчӗ,—тесе пӗтерчӗ, тет, кӗрӳшӗ тӗлӗкне. Хунямӑшӗ пӗр хурланса, пӗр саванса кайнӑ, тет. Ним тума аптранипе:

— Кӗрӳ, эп сана юратап! Эсӗ хӑвӑн чӗлхӳ-çӑварупа ман камала тупрӑн,—терӗ, тет. Вара хунямӑшӗ кӗрӳшӗ умне пичкери сӑрине те, кӑмака умӗнчи така пуçне те, шкапри капӑртмине те илсе тухса лартнӑ, тет. Çавӑн хыççӑн хунямӑшӗ кӗрӳшне лайӑх юратакан пулнӑ, тет.

Тимофеев Георгий. Д. Ново-Янашево, М.-Яльчиковского р.

## УЛТАВÇӐ АЧА ÇИНЧЕН

Ёлӗк пӗр ултавçӑ пурӑннӑ.

Пӗрре вӑл çул хӗрринче хурӑн çумне тайӑнса тӑнӑ, тет. Ун патӗнчен пӗр улпут пар лашапа иртсе пынӑ, тет.

— Ма хурӑн çумӗнче тӑратӑн?—ыйтнӑ кунран улпут.

— Çак хурӑн йӑванса кайсан, тӗнче пӗтет, çавӑнпа тытса тӑратӑп,—тенӗ лешӗ.

Унтан çапла хушса хунӑ:

— Санăн арăмна таркăнсем илсе карĕç, тенĕ.—Эс хурăна тытса тăр-ха, эп сан пар лашупа халех арăмна калле илсе килĕп,— тенĕ.

— Юрĕ,—тенĕ улпучĕ.

Вара ку ача пар лаша çине ларнă та вĕçтернĕ. Улпучĕ хурăн йăванса каясран тĕресе тăнă, тет. Леш кăшт тайăнсан, тата хытăрах тĕренĕ, тет. Тăнă-тăнă, тет, леш ача килмен, тет. Улпутăн хырăмĕ те выçнă, тет. Вара, улпут хурăна тĕкĕлесе тăма пăрахса, килне таврăннă, тет. Килне пырса çитсен, арăмне курса, савăнса кулса янă, тет.

— Сана таркăнсен аллинчен çав ача çăлса илсе килчĕ-им-ха? —тенĕ, тет.

— Мĕнле таркăнсенчен?—тесе ыйтнă арăмĕ тĕлĕнсе.

Вара улпучĕ арăмне çапла каласа панă:

— Эп çулпа пыраттăм, пĕр ача пĕр хурăна тĕртсе тăратчĕ. Эп çапла ыйтрăм: „Ăмма апла тĕресе тăран?"—терĕм те, вăл: „Çак хурăн йăванса кайсан, тĕнче пĕтет", терĕ. Унтан: „Сан арăмна таркăнсем илсе карĕç", терĕ. Çавăнпа эп ăна хам лашасем çине лартса ятăм та, хам хурăна тĕрелесе юлтăм. Кĕтсе тăтăм-тăтăм—килмерĕ. Хырăм выçрĕ те, хурăна пăрахса киле таврăнтăм, тенĕ.

Арăмĕ вăрçа пуçланă:

— Лашасене те çухатрăн, çын кулли те пултăн. Çав хурăн йăваннипе тĕнче пĕтессине кам шантăр ĕнтĕ? Ăна ухмах та шанас çук,—тенĕ.

Ултавçă лашасене пасара илсе кайнă та сутнă. Хăйне мĕн кирлине пасарта илнĕ, тет.

Слакпуçĕнчи (Бишбуляк р. Пушкăрт
респ.) Леонтьев И. Н. каласа панă.

## ПУЯНА УЛТАЛАНИ

Ĕлĕк-авал пĕр пуян çын пулнă, тет. Çав пуян çын каланă, тет:

— Тăвансем! Итлĕр-ха, эпĕ сире мĕн калам: пуçтарăнăр пĕр çĕре мĕнпур ялти çынсем. Вара çавсенчен хăшĕ мана сăмахпа улталĕ, çавна вара пĕр хутаç укçа паратăп,—тенĕ тет.

Çынсем часах пуçтарăнчĕç те пуяна улталама пуçларĕç. Еретпе улталаса пыраççĕ, пĕри те улталаймасть, тет.

Хай пĕр çамрăк ача улталама пуçларĕ, тет. Ача калать, тет:

— Эпир ĕлĕк асаттепе иккĕн пурăнаттăмăрччĕ. Пирĕн çĕр пуç хурт пурччĕ. Çăва тухсан, хуртсене улăха лартаттăмăрччĕ. Пĕрре асаттепе хуртсем патне карăмăр та пăхатпăр—пирĕн икĕ хурт çук. Хай эпир, асаттепе иксĕмĕр, икĕ лаша утлантăмăр та хуртсене шырама кайрăмăр. Çÿресен-çÿресен, пĕр хуртне тупрăмăр, тепри çук. Тепĕр кун хам çеç кайрăм. Эй, çÿреп, эй, çÿреп! Пырса тухрăм пĕр вара. Пирĕн хурт варта кашкăрпа çапăçса вырта пырать,—тесе каларĕ, тет.

Леш пуян каларĕ, тет:

— Çук, улталан, хурт нихçан та кашкăрпа çапăçмасть,—терĕ тет. Леш ача:

— Э-э, улталарăм-и?—терĕ тет те, укçа хутаççине йăтса тухса карĕ, тет.

Слакпуç, Бишбуляк р. Иванов çырса илнĕ.

## ЯЛАМПИ

Пĕр карчăкпа пĕр старик пурăннă. Арăмĕ çамрăкрах пулнă Çапла, пурăннă вăхăтра çак арăм Тимук ятлă çынпа туслашнă Ăна старикки сисмен.

Утă çулмалли вăхăт çитсен, арăмĕ юри халсăр пуланçи пулса выртнă. Ах! тесе, вырăн çинчен те тăман.

— Старик,—тенĕ,—эсĕ утă çулма каятăн, мана пăхаканçын çук пулать. Кил-çурт пуçтаракан пĕр-пĕр çынна тупса кил-ха,—тенĕ.

Старик арăмин сăмахне итленĕ те çын шырама тухса кайнă. Çулпа пырсан-пырсан, пĕр ачана тĕл пулнă.

— Ăçта каян, мучи?—тенĕ ача.

— Арăм халсăр выртнă пирки мана утă çинче пĕр çын кирлĕ пулать,—тенĕ старик.

— Эппин мана ил,—тенĕ ачи.

— Сан яту мĕнле?

— Манăн ят Ялампи,—тенĕ çамрăк ача.

— Çук, ун пек ятлă çын мана кирлĕ мар,—тенĕ кăна старик.

— Пирĕн ялта пурте çав ятлă. Урăх ятлине тупаймастăн,—пĕлтернĕ ача.

Старик малалла утнă. Ача аякран чупса старик пынă çул çине тухса ларнă.

— Ăçта каян, мучи?—ыйтнă хайхи ача.

— Мана утă çинче вăхăтлăх ĕçлеме çын кирлĕ, çын шыратăп.

— Эпĕ пыма пултаратăп.

— Яту мĕнле?

— Ялампи!

— Чăнах та урăх ятлă çын тупаймастăп пулĕ, атя эппин!—.тенĕ старик.

Ачапа старик килелле утнă.

Килте нумай та тăман, хатĕрленсе утă çине тухса кайнă. Арăмĕ выртса юлнă. Анчах ачи старикĕн арăмĕ пăлахая персе выртнине пĕлнĕ. Çул çинче ача урапа çинчен старик сисиччен кĕреплине пăрахса хăварнă. Вырăна çитсен, кĕрепле çуккине курах кайнă старик.

— Ниушлĕ кĕрепле хураймарăмăр?—тенĕ вăл.

— Киле манса юлнă,—тенĕ ача.

— Кайса илес пулĕ,—тенĕ старик.

— Мĕн утса çӳрен, эсĕ ватă вĕт, хам самантра кайса килетĕп,—тенĕ те ача, яра панă ял еннелле.

Ача, киле çитсен, хуçа арăмне сыхлама пусма айне кĕрсе ларнă. Чăнах та, кӳршĕ Тимук çитнĕ. Пăлтăрта улаххăн калаçма пуçланă.

— Эсир ăçта çулатăр-ха?—тенĕ хуçа арăмĕ.
— Эпир сан старикрен инçе мар,—пĕлтернĕ Тимук.
— Эпĕ эппин сан пата шăрттан илсе пырăп. Анчах мĕнле пыма пĕлмелле-ха?—тенĕ хуçа арăмĕ.
— Эпĕ турпас пăрахса кайăп. Çав турпас йĕрĕпе пыр. Пирĕн патах пырса тухăн,—тенĕ Тимук.
— Юрĕ эппин,—тенĕ старик арăмĕ.
Хай Тимукĕ тухса кайсан, ача та тухса кайнă. Турпас тăкса кайнă çул тепĕр еннелле пăрăнса кайнă. Ача унталла каякан турпасне пуçтарса илнĕ те хăйсем утă пуçтарнă çĕре пăрахса кайнă.
Старик арăмĕ шăрттансем-мĕнсем хатĕрлесен, Тимук патне йĕрлесе турпас йĕрĕпе кайнă. Кайсан-кайсан, ăçта каяс тенĕ çĕре мар, старикки патне çитсе тухнă. Хăй питĕ капăр тумланнă пулнă.
— Уçăлма тухрăн-им-ха?—ăшшăн ыйтнă старик.
— Кăштах уçăлтăм пек-ха,—тенĕ арăмĕ йăнăшса.
Çиме лариччен ача Тимук капан хывнă çĕре кайнă та çапла каланă:
— Тимук, эсĕ ĕнер инке патне мĕн тума пытăн? Сана хĕнеме мучи сенĕкпе килет,—тенĕ. Çапла каланă та мучĕш патне чупса таврăннă.
Мучăшне каланă:
— Мучи, сана Тимук капан тăрри тăрлама чĕнчĕ,—тенĕ.
— Каяс,—тенĕ те старик, сенĕкне йăтса утнă.
Старик сенĕке йăтса пынине курсанах, хай Тимук, ку хĕнеме килет, тесе, ялалла тапрĕ анчах.
Старик кайсан, ача арăма çапла каланă:
— Сана эпĕ калама маннă. Эсĕ Тимукпа калаçнине мучи пĕлнĕ те халĕ ăна хĕнеме карĕ. Килсен, сана пулать,—тенĕ.
Арăм çакна илтет те,—килелле. Старик сенĕкне йăтса таврăннă.
— Тимук таçта кайса пытаннă,—тенĕ ачана.—Тата карчăк ăçта карĕ-ха?—тенĕ.
— Вăл киле чупрĕ. Ара, вĕри кăмакари кĕле милке йĕпетмесĕрех шăлнă та, милкĕ тивсе кайса çунма тытăннă. Авиç чупать килелле,—тенĕ.
Старик, кил çунать тесе, сенкине пăрахнă та, часрах киле чупнă. Старикĕ хыççăн чупнине курсан, арăмĕ татах хытă чупнă.
Арăмĕ çитсенех, старикки хашкаса çитнĕ. Старик ним çуннине те курман. Старикки сăмах хушиччен арăмĕ хăранипе чĕркуçланса тархаслама тытăннă:
— Тархасшăн ан тив. Урăх Тимукпа нихçан та çыхăнмастăп. Киле те кӳртместĕп,—тенĕ.
— А-а-а,—тенĕ старикки,—эсĕ унпа, ют çынпа пурăнатăн-и?—тытăннă кăна паркаласа илме.
Ача, старик утă çулнă çĕртен, хăйĕн çулĕпе уттара панă.

Хĕрлĕчутай ялĕнчи Хохлов Е. Ф.
каланинчен Федоров М. М.
çырса илнĕ.

## ЧУКМАР ПУÇ

Пĕр çынăн виçĕ ывăл пулнă. Ашшĕ ачисенче чĕнсе илчĕ те ыйтать:

— Эсир мана мĕн ĕçлесе тăрантаратăр?—тет.

Аслă ывăлĕ калать:

— Эпĕ платник ĕçĕ ĕçлесе тăрантаратăп, — тет.

Вăталăхĕ калать:

— Эпĕ çăпата туса тăрантаратăп,—тет.

Кĕçĕнни, Йăван ятли, ухмахрах пулнă та, ашшĕне çапла калать:

— Эпĕ чукмар пуçлă патакпа тăрантаратăп,—тет.

— Спаçипă, ывăлăм, санăн ырă сăмахна,—тет ашшĕ.

Пиччĕшсем пурттисене илчĕç те, пĕри йăвăç касма, тепри пушăт касма тухса кайрĕç. Ухмах Йăван та пуртă илсе, вăрмана чукмар пуçлă патак касма тухса кайрĕ.

Пиччĕшсем вăрмантан пĕри йăвăçсем касса, тепри пушăт касса таврăнчĕç. Йăван та пĕр чукмар пуçлă патак касать те пиччĕшсем хыççăн киле килме тухать. Çул çинче калаçса пырать:

— Ах, ку чукмар пуçлă патакпа пĕрре пиччесене пуçĕсенчен ярса пăхасчĕ, тет. Анчах çиленмен, çапма сăлтавĕ те çук,—тет.

Сикрĕ тухрĕ Йăвана хирĕç пĕр хура йытă. „Пиччесене çапманне, çак хура йытта та пулин çапса пăхам хăть“, тет Йăван. Анчах йытти тарма пуçларĕ. Йăван ăна ĕрлентерсе хăваласа пырать. Йытти, ниçта кайса кĕреймесĕр, сике пачĕ пĕр тарăн çырмана. Йăван та йытă хыççăнах çырмана сикрĕ. Çырма тĕпĕнче укçа пички ларнă мĕн. Йытти çав пичке çине хăпарса кайрĕ. Йăван пĕрех туртса çапрĕ чукмар пуçлă патакпа, анчах йытти аяккалла сиксе ӳкрĕ те, чукмарĕ пичке тĕпне вăрăнса салатса пăрахрĕ. Йăван пăхать те тĕлĕнсех каять: пичке тулли пăхăркĕмĕл укçа. Йăван пĕр шĕлепке укçа тултарать те ашшĕне кайса калать:

— Атте, ман чукмар пуçлă патак пĕр пичке укçа пачĕ,—тет.

Ашшĕпе Йăван лаша кӳлчĕç те, шăналăкпа пăтавкка илсе, тухса кайрĕç, тет. Çырма тĕпне анчĕç те пĕр лав укçа тиесе, шăналăкпа çыхса лартрĕç.

— Эсĕ киле кай, эпĕ хăйăр ăшĕнчи укçана пухса юлатăп,— терĕ Йăван ашшĕне.

Ашшĕ лашине вар тăрăх уттарса тухрĕ те киле кайрĕ. Йăван çырма тĕпĕнчех чаваланса ларса юлчĕ. Каç пулса çитрĕ те Йăван та киле таврăнма тухрĕ. Çул тăрăх пĕр пуп хăнаран ĕçсе таврăнать мĕн. Пупĕ те ӳсĕр, ямшăкĕ те ӳсĕр, трантаспа пыраççĕ. Пупĕ трантас урлă пуçне усса янă. Хайхи ухмах Йăван шухăшлать: „Ку пупăн пуçне татса илес-ха, ан тив, ир тăрсан, мухмăрла, пуçне шыратăр“, тет. Чукмар пуçлă туйипе туртса касрĕ те пупа мăйĕнчен, пупăн пуçĕ татăлчĕ ӳкрĕ. Йăван пуп пуçне килне илсе таврăнчĕ те, никам асăрхиччен, мачча çине ывăтса ячĕ. Пуп ямшăкĕ киле çитет те, утне тăварса, пӳрте кĕрет.

Матăшкă ыйтать:

— Пирĕн пачăшкă ăçта?—тет.

— Халĕ ÿсĕртерех те, трантас çинче çывăрать-ха,—тет ямшăкĕ.

Ир тăрсан, пăхаççĕ те, пуп пуçне такам касса кайнă. Мĕн тăвас? Пуху тăвас пулать.

Ухмах Йăван пиччĕшĕсем пухха тухса утрĕç.

Йăван ашшĕнчен ыйтать:

— Пиччесем ăçта кайрĕç?—тет.

— Пуп патне пуху тума кайрĕç,—тет ашшĕ.

— Апла пулсан, манăн та кайса пăхас-ха,—тет ухмах Йăванĕ.

Тухса кайрĕ хайхи пухха. Пуп патне çитрĕ те, унта пÿрт тулли халăх.

— Эсир кунта мĕн ĕçлетĕр?—тесе ыйтать Йăван.

— Пуп пуçне трантас çинче выртнă çĕртех такам татса кайнă,—теççĕ çыннисем.

— Эпĕ татса кайрăм,—тет ухмах Йăван.

Çынсем Йăванран ыйтаççĕ:

— Татрăн пулсан, пуçĕ ăçта?—теççĕ.

— Мачча çине ывăтрăм,—тет Йăван.

Пиччĕшсем, хыпаланса ÿксе, килне чупса пыраççĕ та мачча çине хăпарса пăхаççĕ. Мачча çинче чăнах та пуп пуçĕ выртать иккен. Пиччĕшсем хăраса вилсе кайрĕç, ним тума та пĕлмеççĕ. Аптраса çитсе, картари качакине пусрĕç те ун пуçне мачча çине хăпартса хучĕç, пуп пуçне нÿхрепе пытарчĕç.

Хайхи ухмах Йăван пухури халăха ертсе çитрĕ.

Çынсем Йăванран ыйтаççĕ:

— Пуп пуçне ăçта хутăн?—теççĕ.

Йăван мачча çине хăпарса кайрĕ те, халăхран ыйтать:

— Сирĕн пуп пуçĕ мăйракаллă пулсаччĕ-и?—тет.

— Çук, мăйракаллă мар,—теççĕ çынсем.

— Ку мăйракаллă,—тет Йăван мачча çинчен.

— Кирек те мĕнле пултăр, пăрахса пар,—теççĕ çынсем.

Йăван качака пуçне, мăйракинчен тытса, мачча çинчен çĕре яра пачĕ.

— Ку пуп пуçĕ мар, качака пуçĕ,—теççĕ çынĕсем.

— Урăх эпĕ курман, çакна анчах татса илтĕм,—тет Йăван.

Çынсем:

— Чăн та ку Йăван ухмах, качака пуçĕпе çын пуçне те паллаймасть,—тесе тухса кайрĕç, тет.

Тутаркас р., Орлов каласа панă. Скориков-Маль çырса илнĕ.

## КАПУЛККА

Ĕлĕк пĕр улпут пурăннă. Çак улпутăн çĕрĕ питĕ нумай пулнă.

Пĕрре улпут хăй çĕрне пăхса çаварăнма тухать. Çÿрет-çÿрет, ниепле те пăхса пĕтерейместь. Каç пулса килет. Улпут пĕр яла çитет те уй хĕрринчи çын патне хваттере кĕрет.

Кил хуҫин питĕ хитре хĕр пулнă та тепĕр лăкăш-лакăш усал кĕсре пулнă. Кĕсрине, ытла начартан, Капулкка тесе чĕннĕ вăл.

Улпут хваттер хуҫин хай хитре хĕрне курах каять. „Ай, ку хĕр пит майлă пулмалла. Кунпа ман пĕр каҫ юнашар ҫывăрса пăхасчĕ",—тесе шухăшлать. Анчах хĕрпеле сăмах тапратса калаҫма ун ятне пĕлеймест.

Кил хуҫийĕ питĕ вашават кăмăллă ҫын пулнă иккен. Хĕрне калать:

— Улпута чей вĕретсе ĕҫтересчĕ, хĕрĕм, хуран айне хума вут-шанкă илсе кĕр-ха,—тет. Хĕрĕ тухать те пĕр ҫĕклем вут-шанкă йăтса кĕрет. Алăк сулли урлă каҫнă чух ку такăнчĕ ӳкрĕ.

— Эх, капулкка! Алăк сулли урлă каҫаймастăн!—тесе кăшкăрса пăрахрĕ кăна ашшĕ.

Улпут старик ҫапла каласа вăрҫнине илтет те: „А-ха, ку хĕр Капулкка ятлă-иҫ!"—тесе тавҫăрса илет. Унтан кăшт ларсан-ларсан:

— Эй, старик, сут мана Капулккуна?—тесе ыйтать. (Ун чухне ашшĕсем хĕрĕсене сутма та пултарнă пуль ҫав ĕнтĕ.)

— Сутатăп,—тет старик, ку улпут кĕсре ҫинчен калать пуль, тесе.

— Мĕнчул ыйтатăн?—тет улпут.

— Ҫитмĕл пилĕк тенкĕпе паратăп,—тет старик.

— Ҫитмĕл пилĕк тенкĕ мар, ҫĕр тенкĕ те шалккă мар!—тет улпучĕ.—Кĕҫнерникун леҫме пыр,—тет. Унтан старике ҫĕр тенкĕ кăларса тыттарать те хăй тепĕр кунне килне тухса уттарать. Килне ҫитсен, улпут кĕҫнерникуна хăнасем пухма хушрĕ, темĕн чухлĕ апат-ҫимĕҫ пĕҫерттерсе тултарчĕ, ҫӳлти хута Капулккана валли мамăк тӳшексем сартарса вырăн хатĕрлесе хучĕ.

Ҫитрĕ кĕҫнерникун. Хай старик тул ҫутăлнă-ҫутăлманах тăрать те Капулкка ятлă кĕсрине ҫавăтса, улпут патне леҫме каять. Улпут патĕнче шăп хăна-вĕрлĕсем кĕрлесе ларнă тĕле ҫитет.

— Эй, старик, сана кам кирлĕ?—тесе ыйтаҫҫĕ кунран улпут тарҫисем.

— Эп улпута валли Капулкка леҫме килтĕм, —тет ку.

Тарҫисем улпут патне пыраҫҫĕ те:

— Темле ҫĕтĕк-ҫатăк старик сан патна Капулкка ҫавăтса килчĕ. Ăҫта ямалла ăна?—теҫҫĕ.

Улпучĕ, ҫĕтĕк-ҫатăк старик хĕрне хăй патĕнчи чаплă хăнасем умне тăратма намăс тесе шутласа, хăнасенчен вăрттăн, ҫӳлти хута, мамăк тӳшек ҫине хăпартса вырттарма хушать. Тарҫисем тĕлĕнсех каяҫҫĕ, анчах улпут хушнине итлесех пулать. Хай ырхан кĕсрене аран-аран мекĕрленкелесе ҫӳлти хута хăпартса вырттарчĕҫ.

Улпут хăнисем шавласа кăна ĕҫсе-ҫисе лараҫҫĕ.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и, тарҫисем каллех улпут патне пырса ыйтаҫҫĕ:

— Ҫав Капулккана мĕн парас: сĕлĕ-и, е утă-и?—теҫҫĕ.

— Ма мăшкăлататăр эсир манран? Капулкка вара сĕлĕ ҫиет-им? Ак аш кукли, ак тулă икерчи, ак шур кулачă. Тухса парăр! —тет улпучĕ ҫилленсе.

Тарçисем тухаççĕ те кĕсрене çулă икерчĕсем, шур кулачăсем, аш куклисем илсе кайса параççĕ. Кĕсри аш шăршине сисет те харт та харт! тăвать, çӳлти хутра çурта йатса антарас пек тапăртатма тытăнать. Улпут хăнисем унăн-кунăн пăхкаласа илеççĕ те, ку çурта вăрăсем çаратма тапăннă пуль тесе, йалт кăна тухса тараççĕ. Улпут пĕчченех тăрса юлать.

Каç пулчĕ. Улпут, Капулккапа выляса пăхам-ха, тесе, çӳлти хута хăпарать. Аллипеле хыпашласа, мамăк тӳшек патнелле утать. Кăна кĕсре ури кĕрех кайрĕ. Кĕсри хăраса ӳксе шарт çеç тапса ячĕ те улпута тӳрех çамкаран лектерчĕ. Улпут çавăнтах йăванса кайса вилсе те выртрĕ.

Çапла вара, Капулкка хресчене çĕр тенкĕ усă пачĕ, пĕр улпута пĕрлĕхсĕр турĕ.

Ишлей районĕнчи (ЧАССР), Анаткас Маркари Домнов Яков хăйĕн амăшĕнчен çырса илнĕ.

## САРĂ КУН ÇĔРШЫВĔНЧЕ

Пĕр çын пурăннă. Унăн виçĕ ывăл пулнă. Хăй ватăлса çитрĕ. Ачисем те ӳссе çитрĕç.

Пĕрре ашшĕ ачисене çапла каларĕ:

— Эсĕр пурăнатăр-пурăнатăр, ниçта та тухса çӳреместĕр. Эпĕ вăт таçта та çитнĕ. Эпĕ çитнĕ çĕре эсир нихăшĕ те, нихçан та çитес çук,—терĕ.

Ывăлĕсем итлесе тăчĕç те çапла каларĕç:

— Атте, ниушлĕ эсĕ çитнĕ çĕре эпир нихçан та çитме пултараймăпăр?—терĕç. Çапла каларĕç те, ашшĕ пулнă çĕрсене çитсе килме пулчĕç.

Малтан аслă ывăлĕ хатĕрленчĕ. Ĕçсе çирĕ те, ала парса, килтен тухса карĕ. Çул çинче икĕ эрне карĕ. Кайсан-кайсан, вăл пĕр вăрмана çитрĕ. Вăрманăн урлăшĕ те тăршшĕ те 10 çухрăм. Вăрман варрипе пынă чух пер пысăк ватă юман тĕл пулчĕ. Ăна 6 ылттăн кăшăлпа кăшăлланă. Хăлаçпа йĕри-тавра хăлаçласа пăхать те,ултă хăлаç пулать.

— Акă ĕнтĕ эпĕ атте çитнĕ вырăна çитрĕм, халĕ килелле таврăнас,—терĕ те старикĕн аслă ывăлĕ, килне таврăнчĕ.

Киле çитсенех, ашшĕ ыйтать:

— Ну, ывăлăм, ăçта çитсе килтĕн?—тет.

— Эсĕ çитнĕ çĕре çитрĕм. Икĕ эрне карăм, çул çинче пĕр тваткăл вăрмана çитрĕм, çав вăрман варринче 6 ылттăн кăшăлпа кăшаллана юман куртăм,—тесе ответлерĕ ывăлĕ.

— Э-э-э, ывăлăм, вал эпĕ çитнĕ çĕре çитмелли çул çинчи пĕрремĕш станци анчах пулать,—терĕ ашшĕ.

Вăталăх ывăлĕ итлесе тăчĕ-тăчĕ те çапла каларĕ:

— Атте, эсĕ çитнĕ çĕре эпĕ çитетĕпех,—терĕ.

— Кайса пăх-ха, çитейĕн-и,—терĕ ашшĕ.

Вăталăх ывăл хатĕрленчĕ те, ĕçсе çисе, çула тухса карĕ. Уйăх çура карĕ. Малтанхи пиччĕшĕ çитнĕ вăрман урлă та каçрĕ. Кайсан-кайсан, питĕ пысăк тваткăл вăрмана çитсе кĕчĕ. Ку

вăрманăн тăршшĕ те, урлăшĕ те сакăрвунă çухрăм. Вăрман варрине çитсен, пĕр пысăк юман ларнине курать. Юманне 12 ылттăн кăшăлпа кăшăлланă. Хăлаçласа пăхать те, йĕри-тавра 12 хăлаç пулать.

— Ну,—терĕ,—вăталăх ывăлĕ,—атте çитнĕ вырăна çитрĕм, халĕ киле таврăнас,—терĕ. Пĕр тапхăр ларса канчĕ те, тăрса, килелле утрĕ. Уйăх çурă утсан, киле çитрĕ. Питĕ ывăнса килчĕ.

— Ăçта çитрĕн ывăлăм?—тесе ыйтать ашшĕ.

— Уйăх çурă кайрăм. Урлăшĕ те, тăршшĕ те 80 çухрăм вăрмана çитрĕм. Ун варринче 12 ылттăн кăшăлпа кăшăлланă юман куртăм,—ответлерĕ ывăлĕ.

— Э-э э,—тет ашшĕ,—эсĕ эпĕ çитнĕ çĕре каякан çул çинчи иккĕмĕш станцине анчах çитнĕ. Унтан та инçе каймалла,—тет.

Кĕçĕн ывăлĕ, Йăван ятли, итлесе тăрсан-тăрсан, тухрĕ те ашшĕне çапла каларĕ:

— Атте, эсĕ çитнĕ çĕре эпĕ çитетĕпех,—терĕ.

— Кайса пăх-ха, çитейĕн-и,—терĕ ашшĕ.

Йăван, пиччĕшĕсем пекех хатĕрленчĕ те, лаши çине утланса, çула тухрĕ. 3 уйăх карĕ. Пиччĕшĕсем çитнĕ икĕ вăрмана та çитрĕ. Юлашки вăрман урлă каçсан, Йăван пушă хире тухрĕ. Ку хирĕн вĕçĕ-хĕрри те курăнмасть. Ăçта ан пăх—унта хăйăр анчах сарăлса выртать. Кайсан-кайсан, Йăван çул хĕрринче пĕр ватă старик ларнине курать. Хăй ытла та ватăлса çитнĕ, сĕлехине юхтарса анчах ларать. Йăван ку старикрен йĕрĕннипе ним те калаçмарĕ, лач! сурса анчах иртсе кайрĕ.

Нумай та каймарĕ Йăван, тем шухăшласа чарăнса тăчĕ.

— Çук,—терĕ вăл,—эпĕ ку старикрен йĕрĕнсе сурса иртсе кайрăм та, апла лайăх пулмĕ. Вăл ватăлса çитнĕ вĕт, ман унран каçару ыйтас пулать,—тесе, старик патне калле таврăнчĕ.

— Ну, мучи, эпĕ санран йĕрĕнсе сурса иртрĕм те, эсĕ мана уншăн каçар, эпĕ йăнăшнă. Эсĕ хăçан та пулин мана çул çӳренĕ чух кирлĕ ăс-тăн вĕрентсе ярăн,—терĕ.

— Каçарасси каçарăп, анчах эсĕ ăçта каян-ха, ывăлăм?—тесе ыйтрĕ старик.

— Эпĕ пĕтĕм тĕнче тăрăх çаврăнма тухрăм. Атте çитнĕ çĕре çитмелле.

— Апла пулсан итле, ачам,—терĕ старик,—эпĕ çакăнта ĕнтĕ темиçе çул ларатăп, нимле те вилейместĕп, мана çĕр йышăнмасть. Эсĕ çӳресе çаврăнсан, мана валли Сарă кун çĕршывĕнчен алшăлли тата пĕр кĕленче тăрă шыв илсе килсен, вара эпĕ ыр вилĕмпех вилĕттĕм. Халĕ эпĕ сана çул çӳреме вĕрентсе яратăп. Эсĕ, кайсан-кайсан, пĕр ылттăн шăтăк тĕлне çитсе тăрăн. Çав шăтăка ан. Унта пĕр арча çакăнса тăрĕ. Çавна уç та унтан тĕрлĕ тĕслĕ апат-çимĕç тухĕ. Эсĕ вăл арчана хăвпа пĕрле ил. Унтан эсĕ çĕр айĕнчи Сарă кун çĕршывне тухăн. Çав çĕршывра лаша кĕтĕвĕ çӳрет. Çавăнтан санăн пĕр лашине сутан илес пулать. Лашасем унта нумай, çавсенчен пĕр лашине, çӳреннине, йĕнерчĕк вырăнче шурă паллă пуррине ил. Çав ĕлĕк

ăçу паттăрта çӳренĕ лаша пулать. Лашашăн çав кĕтĕве тытакан хуçине 100 тенкĕ укçа тӳлемелле. Кайса тӳлĕн те, сана хут çырса парĕ, вара çав хутпа кĕтӳ пăхакан старик патне пырăн. Вăл старик сана кирек хăш лашине суйласа илме хушĕ. Эсĕ çав çӳрен лашана тытма тăрăш. Вăл сана тапма та, çыртма та тăрĕ, анчах эс ан хăра, мĕн пулсан та тытса утлан,—тет.

Старик каласа пĕтерсен, Йăван малалла утрĕ. Кайсан-кайсан, пĕр ылттăн шăтăк тĕлне çитрĕ, çав шăтăкпа аяла анса карĕ. Çакăнса тăракан арчана тупрĕ, ăна уçса апат çирĕ. Унтан малалла кайса, Сарă кун çĕршывне тухрĕ. Кунта чăнах та çанталăк сап-сарă, тĕлĕнмелле илемлĕ. Улăхра ут кĕтĕвĕ çӳрет.

— Ку лашасене сутаççĕ-и?—тесе ыйтрĕ Йăван, кĕтӳ куралçи патне пырса.

— Сутать хуçа. 100 тенкĕ кайса тӳле те, хăш лашине илес тенĕ, çавна илсе кай,—терĕ кана хирĕç старик.

Йăван хуçине кайса укçа тӳлерĕ те лаша илме пычĕ. Вăл тӳрех çӳрен лашана тытма тăчĕ. Çӳрен лаши тыттарасшăн мар, хăмсарать, тапать. Çавах та Йăван, тăрмашсан-тăрмашсан, ăна çилхинчен çавăрса тытрĕ те утланса та ларчĕ. Лаши, урисене çĕре тĕкмесĕр, Йăвана çил пек вĕçтерсе илсе кайрĕ.

Кайсан-кайсан, вĕсем пĕр кӳлĕ хĕррине çитсе тухрĕç. Йăван лашине ĕшнене ячĕ те хăй пĕр йăвăç тĕмĕ айне канма выртрĕ. Нумай пулчĕ-и, сахал пулчĕ-и,—кӳлĕ хĕррине икĕ хуракăш вĕçсе килсе ларчĕç. Çунаттисене лăпăс-лăпăс тутарса, çĕр çине выртса йăванчĕç те калама çук чипер хĕрсем пулса тăчĕç. Хĕрсем çавăнтах кĕписене хывса пăрахрĕç те шыва кĕрсе кайрĕç. Унччен те пулмарĕ, виççĕмĕш акăш вĕçсе çитрĕ. Ку хăйĕн кĕпине Йăван выртакан тĕм çумнех хучĕ.

Икĕ хĕрĕ, маларах килнĕскерсем, виççĕмĕшне кĕтмесĕрех, шывран тухрĕç те, каллех акăшсем пулса, вĕçсе кайрĕç. Виççĕмĕш хĕрĕ пĕчченех шыва кĕрет. Çак вăхăтра Йăван тĕм хушшинчен йăпшăнса тухрĕ те унăн кĕпине пытарса хучĕ. Хĕр шывран тухрĕ. Пăхать—кĕпи çук. Тытăнчĕ хурланса йĕмешкĕн:

— Кам пытарса хунă-ши ман кĕпене? Вăл çын хамран кĕçĕн пулсан, ăна шăллăм тăвăттăм, аслă пулсан—пичче тăвăттăм, хампа тантăш пулсан—мăшăр тăвăттăм,—тет.

Йăван çапла каланине илтет те ун умне тухса та тăрать.

— Ну, ырă çын, эс мана хаяр вилĕмрен çăлтăн, çавăнпа эп сана хам мăшăрăм тăватăп. Анчах пирĕн мăшăрланасси çăмăлах пулмĕ. Пирĕн килте çав-çав кун вăйлă ĕçкĕ-çикĕ пулмалла. Çав ĕçкĕ-çике таçти çĕртен те пухăнаççĕ. Пире качча илме килеççĕ. Эпир кама юрататпăр—çавна пырса алă паратпăр. Çавăнпа та эсĕ унта пулма тăрăш. Халĕ эсĕ унччен атте патне кĕтӳçе кĕр,—терĕ хĕр. Унтан каллех хуракăш пулчĕ те вĕçсе карĕ.

Ку хĕр Сарă кун çĕршыв патшин кĕçĕн хĕрĕ пулнă мĕн.

Йăван патша патне кĕтӳçе кĕме карĕ. Ку çĕтĕк-çатăкскере патша тарçисем тӳрех тытса патша патне вĕлерттерме илсе карĕç.

— Ма тытса килтĕр?—тет Сарă кун патши.

— Сан патна кӗме тӑнӑшӑн,—теҫҫӗ лешсем.

— Эпӗ, ырӑ патшам, сан патна хаяр шухӑшпа мар, кӗтӳҫе кӗме килтӗм,—терӗ Йӑван Сарӑ кун патшине.

— Кӗтӳҫе кӗме килнӗ пулсан, мӗншӗн ӑна тивмелле, ан тив ман патра ӗҫлетӗр,—терӗ Сарӑ кун патши.

Ҫапла вара Йӑван патша патне вырнаҫрӗ. Йӑван кӗтӳсем пӑхса пурӑнать.

Акӑ Сарӑ кун патшин вӑйлӑ ӗҫкӗ тапранчӗ. Ӗҫке таҫтан та пухӑнчӗҫ. Ӗҫкелесен-ӗҫкелесен, хӗрӗсене ҫакӑнтах хӑйсене валли упӑшка суйлама хушрӗҫ. Аслӑ хӗрӗпе вӑталӑх хӗрӗ чи лайӑх тумланнӑ генералсене суйласа илчӗҫ. Юлашкинчен кӗҫӗн хӗрне черет ҫитрӗ. Ку пӑхкаласа ҫаврӑнчӗ те ҫапла каларӗ:

— Ман упӑшка пуласси кунта ҫук. Чӗнсе килӗр кӗтӳ пӑхакан Йӑвана,—терӗ.

Йӑвана чӗнсе килчӗҫ. Мӗн пур халӑх умӗнче патшан кӗҫӗн хӗрӗ Йӑвана пырса алӑ пачӗ те: „Акӑ ҫак манӑн упӑшка пуласси", терӗ. Йӑмӑкӗ ҫавнашкал ҫӗтӗк-ҫатӑка упӑшка тума йышӑннишӗн аппӑшӗсем ахӑлтатсах кулчӗҫ. Сарӑ кун патши питӗ хытӑ ҫилленсе ӳкрӗ. Тепӗр кунне кӗҫӗн хӗрӗпе Йӑвана усал мунчана хупса хучӗ.

Йӑван ҫак ҫӗршыва кӗмелли шӑтӑкра кӗмӗл арча ҫакӑнса тӑни ҫинчен аса илчӗ. Аса илчӗ те ҫак арчана илсе те килчӗ. Шак! шаклатать те, тем тӗслӗ апат-ҫимӗҫ, ӗҫмелли-ҫимелли тухса тулать. Сарӑ кун патшин апат-ҫимӗҫӗнчен темиҫе хут лайӑхрах. Халӗ Йӑван тӗлӗнмелле пурӑнма тытӑнчӗ. Мунча ӑшчиккине пӗтӗмпех ылттӑнласа лартрӗ, мунча ҫутӑлса анчах ларать.

Пӗрре, ир тӑрсан, Йӑван арӑмне калать:

— Эпӗ кеҫӗр тӗлӗк курнӑ. Сан аҫун маҫакӑшӗн сысна пур пек. Ҫав сысна пынӑ май сӑмсипе сухаласа, урисемпе тырӑ акса, хӳрипе сӳрелесе пырать пек. Мӗне пӗлтерет-ши ҫав тӗлӗк?—тет.

Арӑмӗ Йӑванӑн тӗлӗкне ашшӗне кайса каласа пачӗ. Лешсем тытӑнчӗҫ архивсене шырама. Пӗр пысӑк кӗнеке тупса пӑхаҫҫӗ те, чӑнах та ӗлӗк вал сысна пулнӑ. Халӗ ӑҫтине никам та пӗлмест. Сарӑ кун патши ҫав сыснана тупма пӗлтерет, уншӑн тем чухлӗ мул пама пулать. Икӗ кӗрӳшӗ сыснана шыраса тупма йышӑнса тухса каяҫҫӗ. Йӑван арӑмӗ кун ҫинчен упӑшкине каласа парать.

— Эй,—тет Йӑван,—вӗсем мар ӑна шыраса тупмаллисем,—тет.

Йӑван лашине чӗнсе илчӗ те, сыснана шырама тухса кайрӗ. Питӗ инҫене карӗҫ. Кайсан-кайсан, хай сыснана тупрӗҫ. Тытрӗҫ те килелле килеҫҫӗ. Киле ҫитиччен, ывӑннӑ май, пӗр хӑртна вут чӗртсе, канма ларчӗҫ. Йӑван сыснине ҫерем ҫине ячӗ. Ҫак хушӑра Сарӑ кун патшин икӗ кӗрӳшӗ сиксе тухрӗҫ.

— Акӑ хай сысна ҫӳрет! Ну, илсе каятпӑр,—теҫҫӗ.

— Ӑҫта илсе каятӑр?—тет Йӑван.

— Ой, хуҫи пур-ҫке кун!—теҫҫӗ лешсем.

— Эпӗ ун хуҫи,—тет Йӑван.

— Сут сыснуна, мӗнчул ыйтатӑн?—теҫҫӗ лешсем.

— Мĕн мĕнчулĕ. Эсир мана асăнмалăх хăвăрăн ура кача пӳрнисене татса парăр,—тет Йăван.

Лешсем ирĕксĕрех, ыратать пулин те, татса пачĕç. Йăван пӳрнисене тутăрпа чĕркесе чикрĕ. Сыснине парса ячĕ. Хăй ахалех киле таврăнчĕ.

Пурăнсан-пурăнсан, Йăван тата тĕлĕк тĕлленет. Ăна арăмне каласа парать:

— Эпĕ кĕçĕр тĕлĕк тĕллентĕм. Аçун маçакăшĕн сĕтлĕн-çăмахăн авăрса ларакан арман пур пек. Мĕне пĕлтерет-ши вăл тĕлĕк?—тет.

Арăмĕ Йăван курнă тĕлĕке ашшĕне каласа кăтартать. Архивсем ăшне шыраса пăхаççĕ те, чăнах та ун пек арман пулнине пĕлеççĕ.

— Кам çав армана шыраса тупма пултарать?—тесе ыйтать патша хăйĕн çывăх çыннисенчен.

— Эпир шыраса тупма мар, илсе те килетпĕр,—теççĕ аслă кĕрӳшĕсем.

Тепĕр кунне шырама тухса та каяççĕ.

Арăмĕ, килне пырсан, Йăвана калать:

— Эс тĕлĕкре курнă арман чăнахах пулнă. Ăна йыснасем шырама та тухса карĕç,—тет.

— Эй, вĕсем мар вăл армана тупмаллисем,—тет Йăван.

Унтан вал лашине чĕнсе илчĕ те армана шырама тухса карĕ. Пигĕ инçе карĕç вĕсем. Кайсан-кайсан, хай армана чанахах та тупрĕç. Киле килнĕ чух, пĕр хăртна вут чĕртсе канма ларчĕ. Кун патне патшан икĕ кĕрӳшĕ пырса тухрĕç.

— Ак хай арман,—тесе хĕпĕргесе карĕç, армана курсан.

— Мĕн кирлĕ сире?—тет Йăван.

— Ой, хуçи пур-çке кун?—теççĕ лешсем.

— Хуçи эпĕ,—тет Йăван.

— Сут арманна, миçе пин илетĕн?—теççĕ патша кĕрӳшĕсем.

— Мĕн мĕнчул илесси. Хăвăр кача пӳрнĕрсене касса парăр,—тет Йăван.

Лешсен ирĕксĕрех кача пӳрнисене касса памалла пулчĕ. Йăван кăсен пӳрнисене кĕсъине чĕркесе чикрĕ те арманне парса ячĕ. Хăй пушă алăпах киле таврăнчĕ.

Пурăнсан-пурăнсан, Йăван татах тĕлĕк тĕлленет. Тĕлĕке çинчен арăмне каласа кăтартать:

— Кĕçĕр эпĕ тата тепĕр тĕлĕк куртăм. Сан аçун маçакăшĕн ĕлĕк пĕр сехетре сывлăшра вĕçсе çĕр йĕри-тавра çаврăнакан виçĕ хура ăйăр пулнă. Мĕне пĕлтерет-ши çав тĕлĕк?—тет.

Арăмĕ Йăван курнă тĕлĕке ашшĕне каласа кăтартать. Лешсем тапратаççĕ шырама. Архивсене шырасан-шырасан, виçĕ ăйăр пулнине пĕлеççĕ.

— Кам шыраса тупма пултарать çав виçĕ ăйăра?—тет Сарă кун патши.

— Эпир шыраса тупма мар, тытсах килетпĕр,—теççĕ кăна кĕрӳшĕсем. Чăнах та шырама тухса каяççĕ.

Йăван арăмĕ кун çинчен Йăвана каласа парать.

— Вĕсем мар вăл ăйăрсене тупса килмеллисем,—тет Йăван кăна хирĕç. Унтан витене тухать те лашине чĕнет.

— Ăçта каймалла?—тет лаши.

— Пирĕн Сара кун патши маçакăшĕн пулнă виçĕ хура ăйăра шыраса тупса килмелле,—тет Йăван.

— Кайма ӳркенместĕп, анчах вĕсене тупса илсе килес çĕрте йывăрлăхсем нумай пулаççĕ. Çапах та эпир вĕсене епле те пулин тытса килме тăрăшăпăр. Вăл ăйăрсем тинĕс тĕпĕнче пурăнаççĕ. Çав тинĕс хĕррине çитсен, эпĕ шыва кĕрсе кайăп, эс çыран хĕррине тăрса юлса кĕтме тытăн. Малтанхи ăйăрне çăмăллăнах илсе тухма пулĕ, анчах иккĕмĕшпе виççĕмĕшне илсе тухма питĕ йывăр пулĕ, манăн такансем тухса утăнса кайĕç. Вара ун чух мана кĕтнипе кĕтменни пĕрех,—терĕ ăйăрĕ Йăвана. Унтан вĕсем çула тухрĕç те çил пек малалла вĕçтерчĕç. Кайсан-кайсан, тинĕс хĕррине çитрĕç.

— Ну, Йăван, эсĕ çакăнта тăрса юл. Эпĕ ăйăрсене пĕрерĕн-пĕрерĕн сĕтĕрсе тухăп. Как сĕтĕрсе тухсанах, эсĕ йĕплĕ туяпа икĕ хăлха хушшинчен мĕн ураран ӳкиччен хĕне,—терĕ ăйăр. Унтан хăй чашкăрса анчах шыва кĕрсе карĕ. Тинĕсĕ тĕлсĕр хумханма тытăнчĕ. Хумхатсан-хумхатсан, Йăван лаши пĕр ăйăрне сĕтĕрсе кăларчĕ. Кăларнă-кăларманах, Йăван йĕплĕ туя илчĕ те ăна çамкаран пĕр лăш кăтартмасăр хĕнеме пуçларĕ.

— Ытла хĕнесе ан пĕтер, эпĕ санăн пулатăп,—терĕ ăйăр. Вара Йăван хĕнеме пăрахрĕ.

Лаши каллех тинĕсе кĕрсе карĕ. Тем вăхăт иртсен, иккĕмĕшне сĕтĕрсе тухрĕ. Йăван кăна та хĕнесе хăйне парăнтарчĕ. Юлашкинчен лаша виççĕмĕшпе варçма тинĕсе кĕрсе карĕ. Пĕр çур сехет тинĕсе тем пек хумхатса тăчĕç. Лашан пĕр уринчи таканĕ тухса утăнса, çыран хĕррине пырса çапăнчĕ. Йăван çакна курсанах чĕтресе хăраса карĕ. Хăйĕн ăшĕнче: „Тухаймасть ĕнтĕ“, тесе шухăшласа илчĕ. Анчах та лаши çав самантрах шыври ăйăра сĕтĕрсе те тухрĕ. Тухсанах, ывăннипе хăй те чăсăлса выртрĕ. Йăван ăйăра хĕнерĕ-хĕнерĕ те, айăр: „Сан пулатăп, урăх мана ан хĕне“, тесен тин чарăнчĕ. Виçĕ ăйăрне те юпасенчен кăкарчĕ.

Кăшт тăрсан, Йăван ăйăрсене вĕçерчĕ те утланса вĕçтерчĕ анчах. Кайсан-кайсан, пĕр вăрман хăртнине канма чарăнчĕ. Ăйăрсене курăк çине ячĕ. Çак вăхăта каллех хайхи генералсем сиксе тухрĕç.

— Акă эпир ширанă ăйăрсем çӳреççĕ,—теççĕ.

— Мĕн кирлĕ сире?—тесе ыйтать Йăван.

— Сут пире ăйăрусене, мĕнчул ыйтатăн,—теççĕ кăсем.

— Мĕн мĕнчул илесси, эсир мана хăвăр çурăм çинчи тирсене пĕрер шит тăршшĕ сӳсе парăр,—тет Йăван.

Лешсен ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ. Йăван çĕççине кăларчĕ те иккĕшинне те пĕрер хăйă пек çурăм тирĕсене сӳсе илчĕ. Унтан ăйăрĕсене парса ячĕ. Хăй лаши çине утланса килне карĕ.

Халĕ ĕнтĕ Сарă кун патши хĕпĕртенипе çав тери вăйлă ĕçкĕ турĕ. Ку ĕçке ăнсăртран кĕтӳç Йăван та пырса кĕчĕ. Сарă кун патшин икĕ кĕрӳшĕ вĕçĕ-хĕррисĕр ырă пулса, патша умĕнче мухтанса анчах лараççĕ. Патши те питĕ савăннă.

Йăван тăчĕ те патша кĕрӳшĕсен аллинчи перчаткисене карт туртса хыврĕ.

— Пăх, Сарă кун патши, çаксен алли çине,—тет Йăван патшана.

— Сирĕн пӳрнĕрсене мĕн пулчĕ?—тесе ыйтать патша.

— Пуртăпа кастартăмăр,—теççĕ лешсем.

Йăван вĕсен пӳрнисене кăларса кăтартрĕ те: „Эсир манран çак пӳрнесене касса парса арман илтĕр, халĕ кунта ыр ятлă пулса мухтанса ларатăр“, терĕ. Унтан ура пӳрнисене кăларса кăтартрĕ, юлашкинчен çурăм тирĕсене сĕтел çине сарса хучĕ. „Ура пӳрнисене касса парса сысна илтĕр, çурăм тирне сӳсе парса ăйăр илтĕр“,—терĕ. Вара лешсем ним калама аптăраса кĕл пек кăвакарса кайрĕç.

Патша кĕрӳшĕсем улталанине пĕлсенех, кăсене виç хутлă çуртран чӳрече витĕр ывăттарчĕ.

— Мĕнпе тавтăвас сана, Йăван?—тесе ыйтать патша хăйĕн кĕçĕн кĕрӳшĕнчен.

— Мана ним те кирлĕ мар. Халĕ атьăр эсир ман пата. Эсĕ, Сарă кун патши, мана ним вырăнне те хумарăн. Ман пата пырса пăх,—терĕ ăна хирĕç Йăван. Патша хăйĕн хĕрĕпе кĕрӳшĕ епле пурăннине курма мунчана кайрĕ. Шала кĕрсенех, кунăн куç-пуçĕ пĕтĕмпе çутăлса карĕ. Йăван тем тĕрлĕ ĕçмелли-çимелли кăларса тултарчĕ. Çапла ĕçрĕç-çирĕç те саланчĕç.

Йăван тепĕр кунне виçĕ ăйăрне кӳлчĕ те лашине хыçалтан кăкарчĕ, арăмне урапи çине лартса, хăйĕн тăван çĕршывне кайма тухрĕ. Хăйпе пĕрле супăнь тата алшăлли илчĕ. Кайнă чух çул çинче ларакан старик патне çитрĕç. Ку старике супăньпе çуса, алшăллипе шăлса типĕтрĕç.

— Ну, спаççипă сире, ывăлăмсем. Халĕ ĕнтĕ мана, ват çынна, ыррăнах çĕр йышăнĕ, а эсир ĕмĕр телейлĕ пулăр,—тесе пиллесе ячĕ старик Йăвана.

Йăван ашшĕ патне çитрĕ. Кĕчĕ пӳрте. Алă пачĕ.

— Атте, эпĕ эсĕ пулнă çĕре пур çĕре те çитрĕм,—терĕ вăл ашшĕне.

— Пушă хир варринче кама куртăн?—тесе ыйтрĕ ашшĕ.

— Эп унта кĕмĕл пек сухаллă ватă çынна куртăм, унран пиллĕх илсе килтĕм,—терĕ Йăван.

— Ăслă тунă эсĕ, ывăлăм. Вăл сана пĕтĕм халăх ăсне пиллесе панă,—пĕлтерчĕ кăна ашшĕ.

Çак кунтан пуçласа Йăван чăнах та хăйĕн ĕмĕрне чи телейлĕ пурнăçпа пурăнса ирттерчĕ.

Ягункин ялĕнчи (Хĕрлĕ Чутай р.) Томаков Петр Ивановичран Федоров М. çырса илнĕ.

# КУÇПĂВАКАН

## I.

Ку ĕç ĕлĕкех, çĕршыва пит усал патша тытса тăнă вăхăтра пулнă. Пит усал, пит кутăн, çав тери хаяр пулна вал патша. Айăплă-и, айăпсăр-и çын, вăл ăна-кăна тиркесе тăман, тӳрех пуçĕсене кастарма е çакса вĕлерме хушнă. Пуринчен ытла рабочисемпе хресченсене хĕн пулнă вăл вăхăтра. Патша вĕсене пушшех хыт асаплантарнă.

Мĕншĕн çав териех асаплантарнă тетĕр-ха эсир? Паллах ĕнтĕ, хăранипе. Патша ĕçлекен халăха пусмăрласа, хĕн кăтартса пурăннă-çке-ха. Пурнăç начаррине пула, ĕçлекен халăх патшана курайми пулса çитнĕ. Патша, паллах ĕнтĕ, çакна пит аван пĕлсе тăнă. „Каплах пулсан, ку çĕр хурчĕсем хама та сирпĕтсе антарĕç“, тесе шухăшланă. Çак шухăш ăна канăç паман, вăл вара, хытă тарăхнипе, ĕçлекен халăха пушшех хытă асаплантара пуçланă. Çынна шăна вырăнне те хуман, чи хăрушă вилĕмпе вĕлернĕ.

Пĕрре çапла патша дворецĕ умĕнчен пĕр çын çĕлĕкне хывмасăр иртсе каять. Патша çакна курать те хăраса ӳкет. Ăçта та пулин восстани пуçарса яман-ши?..—тет. Тарçисене ярать те, хайхи çынна хăй патне çавăтса пыртарать, çынсем хăраса тăччăр тесе, çавăнтах асаплантарса вĕлерме хушать.

— Каçар, патша, тархасшăн, турă пул. Эпĕ айăплă мар, хама шеллемесен те, кайăк чĕпписем пек ачамсене шелле,—тесе йăлăнать хайхи çын патшаран.

Анчах патшан чул пек чĕрине вĕри куççулĕ те, чĕререн тарăлса тухакан хурлăхлă сасă та, нимĕн те хускатаймасть.

Вăл ăна икĕ уринчен çыхса чул юпа çумне кутăн çакса хума хушать. Тарçисем çакса хураççĕ те, сулла-сулла ярса, хайхи çынăн пуçне чул юпа çумне çапăнтараççĕ. Çын пуçĕ саланса кайиччenex çапла асаплантараççĕ. Çынни, паллах ĕнтĕ, вилет. Кам тӳсме пултартăр çав тери тискер асапа?..

Çапла тискерленнĕ патша. Сахал мар çынна асаплантарса вĕлерттернĕ.

Çак патшах тата хăйĕн пĕр тарçине шанми пула пуçланă, мĕншĕн тесен вăл çуксен хутне кĕнĕ, çынсене ахаль вĕлерттересшĕн пулман. Тарçи Никанор Никифăрч ятлă пулнă. Пĕр-пĕр сăлтав тупсанах, патша ăна вĕлерме хатĕрленсе тăнă.

## II.

Çак патшалăхрах тепĕр çын пурăннă. Вăл куç пăвма пит ăста пулнă. Ун чапĕ пĕтĕм тĕнчене сарăлнă. Çак куçпăвакан çын чипер калаçса тăнă çĕртех, калаçакан çыннипе тĕрлĕ мыскарасем туса илнĕ.

Ку ĕç, паллах ĕнтĕ, патша хăлхине кĕмесĕр юлма пултарайман. Çавăнпа вăл, хăйĕн шанчăкран тухнă тарçине сăнас май, пĕрре ăна хăй патне чĕнтерет те çапла калать:

— Кайса пӗл-ха, Никанор Никифӑрч, ҫав ҫын патне. Мӗнле ҫын вӑл, мӗн шухӑшпа ҫӳрет, ман ҫинчен начар шухӑшламасть-и, ман вырӑна хапсӑнмасть-и? Мӗн те пулин усал ӗҫ тӑвать пулсан, тӳрех сӑнчӑрласа тытса кил. Эпӗ ӑна хам вӗлерем. Тытса килмесен, ун вырӑнне хӑвна вӗлерӗп,—тет.

— Юрӗ,—тет ӑна хирӗҫ тарҫӑ.

Никанор Никифӑрч ҫынпа хирӗҫме юратман, пит аван ҫын пулнӑ. Вӑл куҫпӑвакана сӑнчӑрламасӑр, кӑмӑлпах илсе килме шут тытнӑ. Куҫпӑвакан ҫын ҫинчен калаҫнисене вӑл хӑй те пит тӗлӗнсе итленӗ. Чӑн малтан вӑл ӑна хупахра, ытти ҫынсемпе пӗрле ӗҫсе-ҫисе ларнӑ чухне, тӗл пулнӑ. Анчах вӑл ӑна палласа илеймен, вал куҫпӑвакан иккенне пӗлмен. Никанор Никифӑрч хӑйне валли ӗҫме-ҫиме илнӗ те ҫав ҫын ҫумне кӗрсе ларнӑ. Паллах ӗнтӗ, каярахпа сӑмах хушса калаҫасси те ҫавӑнтах пулнӑ.

Чип-чипер ҫисе ларнӑ хушӑрах, пӑхать Никанор Никифӑрч,—хӑй умӗнчи пуш эрех кӗленчи шывпа тулса ларнине курах каять. Ку ҫеҫ те мар-ха, кӗленчери шыв маччаналла фонтан пек сирпӗнме пуҫлать. Пурте шак хытса кайса, тӗлӗнсе тӑраҫҫӗ. Хӑшӗ тӗнче пӗтет пуль теҫҫӗ, хӑшӗсем турӑ хӑват кӑтартать, теҫҫӗ.

Пӗр чунавальник кӑна, ку ӗҫе пӗрре мар курнӑскер, пӑхса кулса тӑрать.

Шыв пӳрте тулсах пырать. Унччен те пулмасть, шыв ҫинче мӑшӑрӑн-мӑшӑрӑн кӑвакалсем ишсе ҫӳреме пуҫлаҫҫӗ, пуҫӗсене пӑркалаҫҫӗ, нарт! нарт! тесе кӑшкӑраҫҫӗ.

— Кӑвакал пуҫӗсене пӑрса татар та, парӑр кунта,—тет чунавальник.

Анчах халӑх итлемест:

— Турӑ панӑ япаласене мӗншӗн сана парас? Турӑ ҫимӗҫне хамӑр ҫисе курас!—теҫҫӗ.

Ҫак вӑхӑтра чунавальник куҫпӑвакана куҫ хӗсет; лешӗ те, юрать тенӗ пек, куҫне мӑч тутарать. Ҫынсем кӑвакалсен мӑйӗсене пӑра-пӑра татаҫҫӗ те турилккесем ҫине хураҫҫӗ.

Унччен те пулмасть, шыв пӗтет ларать, ҫынсем унчченхи вырӑнӗсенчех, сӗтелсем хушшинчех лараҫҫӗ; хӑшӗ кашӑкӗсене ҫӑвар патне илсе пынӑ, хӑшӗ турилккерен ӑсма анчах тытӑннӑ; кунсӑр пуҫне, кашнин умӗнчех турилккесем ҫинче, хӑйсен калушӗсем е путинккисем вырта параҫҫӗ, калушӗсемпе путинккисен пуҫӗсене пӑра-пӑра татнӑ. Ҫаксем ӗнтӗ „кӑвакалсем“ пулнӑ.

Никанор Никифӑрч тӗлӗннипе вырӑнӗнчен те хускалмасть, кашӑкне ҫӑвар патне илсе пынипех, ҫӑварне карнипех, шанк хытса кайнӑ та юпа пек хытса ларать. Унтан, вӑраннӑ пек пулать те, хӑйне хӑй ҫапла калать:

— Ку тем тесен те патша каланӑ ҫын. Ӑна сӑнчӑрпа мар, виҫӗ хут тимӗрпе тимӗрленӗ читлӗх ӑшне хупса хурсан та тытса чараяс ҫук,—тет.—Ҫавӑн пек ӑста ҫынна ӑҫтан патшана тытса парӑн?.. Шел-ҫке-ха... Ҫук. Вӑл патшана та парӑнас ҫук. Парӑнма мар, патшана та хӑй аттин пуҫне пӑрса таттарса, мӑшкӑласа хӑ-

варĕ. Çав кирлĕ-ха, тискер патшана,—тет вăл, малалла шухăшласа. Куçпăваканпа калаçса пăхать те, лешĕ патша патне пыма килĕшет.

III.

Патша çисе ларать. Çак вăхăтрах кухня алăкĕ уçăлать те, Никанор Никифăрч кĕрсе тăрать.

— Эсир калана çынна илсе килтĕм, ваше çиятĕлствă. Хăçан курнаçма шухăшлатар унпа?—тет Никанор.—Вăл ырă çын, анчах мана пит тĕлĕнтерчĕ,—тет, хăйĕн татăк пуçла путинккийĕ çине пăхса.

— Чĕнсе кĕрт ăна!—тет патша.

Никанор Никифăрч тĕлĕнсе каять: патша нихăçан та кухньăра çынсемпе курнăçман. Мĕншĕн-ха капла? Усал шухăш тытман-ши?

Анчах патша питĕ кăмăлсăр пулна; çитменнине тата, наянлăх çавăрса илнипе, вăл вырăнтан та хускаласшăн пулман. Çавăнпа вăл çиме те хăй ăссĕн çимен,—чурисем çаварĕнчен кашăкпа хыптарнă.

Çак вăхăтра куçпавакан кĕрет. Вăл кĕрсен, патшан наянĕ кăшт сирĕлнĕ пек пулать.

— Мĕн ятлă?—тесе ыйтать патша куçпăваканран.

— Эпĕ пысăк вĕреннĕ çын, Иван,—тет куçпăвакан.

Патша çакна илтет те куçпăвакана чей ĕçме чĕнет. Чей ĕçнĕ хушăра вăл пĕр-пĕр хăват курасса ĕмĕтленет. Анчах ун ĕмĕтленни ахалех пулать. Юлашкинчен вал чăтса лараймасть:

— Иван, эпĕ сана мĕншĕн чĕнтернине мантăн-им?—тет патша.

— Манман. Анчах кирек мĕнле мыскара тусан та, мана çилленмелле мар, тивмелле мар, тесе, хăвăртан хут çырса парăр. Унсăрăн килĕшместĕп,—тет ăна хирĕç Иван.

Патша хутпа кăранташ илет те чăр-чар çырса парать. Анчах Иван вырăнтан та хускалмасть, çаплах ĕçсе çиет. Патша тарăхса каять, Ивана çакса вĕлерес килсе каять унăн çапла хăтланнăшăн, çиленнипе, пĕтĕм пичĕ-куçĕ, сухалĕ, куçхаршийĕ сăмси патне пĕрĕнсе купалана пуçлать.

Унччен те пулмасть, патша куçне уçса хупма та ĕлкĕреймест, пÿрте чĕркуççи таран шыв тулса ларать; пăхать патша урамалла— урамра çав тери вăйлăн хумханса океан сарăлса выртать. Тĕлĕнсех каять патша, унтан хăраса ÿкет.

— Ох, тĕнче пĕтет! Ной тивлетне куратăп... Эп... эп... эпĕ иккен тĕнчери юлашки патша!—тет вăл.

Кухньăна шыв тулса ларнă. Ăçта каймалла?

— Çÿлти хута!—тет Иван.

Иккĕш те чупса улăхаççĕ çÿле. Анчах кунта та шыв хăпарнă. Патша, хăранипе, ним тума пĕлмест.

— Ах, турă! Мĕншĕн кун пек инкеке пирĕн çине ячĕ-ши?—тесе кăна кускаласа çÿрет.

Шывран тарса, вĕсем сĕтел çине хăпарса тăраççĕ. Кунта та шыв илет. Вĕсем вара виççĕмĕш хута хăпараççĕ. Анчах каллех шыв... Вара Иван патшана пÿрт тăррине хăпарма чĕнет. О! Ăçтан пухăннă кун чухлĕ шыв! Пÿрт тăррине те илет...

— Ох! Пӳрт тӑрри те ҫӑлаяс ҫук, турӑ пулӑшмасан,—тет патша хуйхӑллӑ сасӑпа.

— Астӑватӑн-и, патша? Мужикпе рабочи те ҫакӑн пекех: эс каҫарсан—чӗрӗ юлнӑ, каҫармасан, ҫӗр пулнӑ,—тет ӑна Иван.

Ах, мӗн тунӑ пулӗччӗ-ши патша ӗлӗкхи вӑхӑтра ку сӑмахсемшӗн! Анчах халь вӑл пусма хатӗрленӗ така пек ҫеҫ, мӗскӗнӗн пӑхса тӑрать. Хайӗн ӗлӗкхи кунӗсене, хӑй ҫӳллӗш ылттӑн купаласан та, асне илес килмест унӑн.

Пӳрт тӑррине шыв илесси аякра мар. Пурнӑҫ—ҫӳҫ пӗрчи ҫинче. Патша ним тӑваймасть. Сӑмсисенчен те чӗпӗтсе пӑхать.

— Тӗлӗкре мар-ши ку?—тет. Ҫук, ыратать. Аптранӑ енне пӳрт ҫийӗ тӑрӑх чупкалать. Ҫӳҫне-пуҫне турткалать. „Вилӗм! Вилӗм!"—пӑтранать ун пуҫӗнче. Ах, вилес килмест-ҫке унӑн.

Ҫак вӑхӑтра вӗсем патне шыв тӑрӑх кимӗ киле парать.

— Ой, ох! Ҫырлахах, турӑ, ҫырлахах! Эпӗ ҫапах пит ҫылӑхлӑ ҫын мар иккен,—тет патша, савӑнса кайса. Ӗлӗкхи кунӗсене пӗтӗмпех манать, мӗн вӑй ҫитнӗ таран пурнӑҫшӑн ҫапӑҫать. „Ах, пурнӑҫ, пурӑнасчӗ",—шухӑш ун пуҫӗнче.

Анчах Иван:

— Асаплантарса вӗлерекен ҫын та ҫапла пурнӑҫшӑн ҫапӑҫать, юлашки сывлӑшӗпе те пулин пурнӑҫран ярса тытма хӑтланать,—тесе астутарать.

Кимӗ ҫине иккӗшӗ те кӗрсе ларaҫҫӗ. Каяҫҫӗ вара кӑвак хумсем ҫийӗпе. Кунта тин патша астуса илет: вӗт вӑл аялти кӗпийӗмӗпех, ним ҫимелли те илмен. Ҫӑкӑрсӑр епле-ха? Шыв ӗҫме пикенет—тӑварлӑ.

— Мӗншӗн, Иван, кунти шыв тӑварлӑ?—тет вӑл тӗлӗнсе.

— Мӗншӗн тесен, вӑл шыв мар, эс юхтарнӑ ҫынсен куҫҫулӗ,—тет лешӗ.

— О, кун чухлӗ куҫҫуль курманччӗ нихӑҫан та!—тесе шухӑшлать вӑл.—Ҫапах та ку—пурнӑҫ мар,—тет вӑл каллех, ун-кун пӑхкаласа.

— Мӗнле-ха пӗр шывсӑр, ҫӑкӑрсӑр? Пит паха апатсем, тутлӑ шывсем пулсан, таса тумтирсем тӑхӑнмалла пулсан, пурнӑҫ теме юрать хӑть,—тет патша хӑй ӑссӗн.

— Санпа сан тарҫусемсӗр, тӗрлӗ улпут пуянсемсӗр, пупсемсӗр пуҫне пурте халь эпир пурӑнакан пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Санӑн вӗсен пурнӑҫне тутанса пӑхмаллах,—тесе хурать Иван.

Патша чӗнмест. Тӗлӗннипе ун пуҫӗ арман чулӗ пек ҫаврӑнать.

## IV.

Халлап халлапах ӗнтӗ. Патши сисмен те—вӗсем кимӗ ҫинче мар, лашапа пыраҫҫӗ. Иван та унпа пӗрлех.

Акӑ вӗсем хула патне ҫитсе пыраҫҫӗ. Вӗсен умӗнче пасар шавлать, кӗрлет. Хӗрлӗ,-шурӑ, кӑвак тутӑрсем, хура-шурӑ картуссем вӗркеҫҫӗ.

— Атя-ха, ҫакӑнта чарӑнар,—тет Иван.

Патша итлет. Вӑл айван сурӑх пекех пулса кайнӑ. Халӗ ӗнтӗ унӑн ӗлӗкхи хаярлӑхӗ ҫук. Нимӗн тума аптранипе, вӑл халӑха шеллеме,уншӑн тӑрӑшма сӑмах парса хурать.

Акӑ вӗсем пасар ӑшнелле кӗрсе кайрӗҫ. Аш сутакансен ретӗпе пыраҫҫӗ.

— Эпӗ киле чупса кайса киличчен, ман ашпа сутӑ ту-ха,—тет патшана пӗр аш сутаканӗ. Патша итлет. Вӑл ҫав ҫыннӑн шур шӑналӑкпа витнӗ ашӗсем патне тӑрса юлать.

Акӑ полицисем ашсене пӑхса ҫӳреҫҫӗ, тӗрӗслеҫҫӗ, патша патне ҫитрӗҫ.

— Мӗн сутатӑн?

— Аш...

Пӑхаҫҫӗ ашне—пӗтӗмпех этем ашӗ: пуҫӗсем, урисем...

— Ах, сволӑч!—тесе патшана ярса тытаҫҫӗ те илсе каяҫҫӗ. Патша, хӑй йӗри-тавра мӗн пулнине ӑнланмасӑр, тӗлӗннипе, Ивана шырать, анчах лешӗ курӑнмасть.

— Мӗншӗн-ха капла? Мӗн пулчӗ?—тесе шухӑшлать вӑл. Иван пулсан ӑнлантарӗччӗ, анчах ҫук. „Хам вӗлернӗ ҫынсен ашӗсем мар-ши кусем?“—тесе хӑех тавҫӑрса илет вӑл.

Акӑ ӑна пӗр тӗттӗм ҫурта илсе кӗчӗҫ. Асаплантараҫҫӗ. Ыйтаҫҫӗ:

— Мӗн тума вӗлертӗн улпутсене? Ҫын ашӗпе нумайранпа сутӑ туса пурӑнатӑн-и?

— Ашӗ хамӑн мар. Юлташ сутма парса хӑварчӗ. Эпӗ пӗлмен этем ашӗ иккенне.

— А-а-а-а! Пӗлмен! Акӑ, пӗлмен сана! Акӑ, пӗлмен! Акӑ!..—тесе хӗнеҫҫӗ.

Патша чунӗпе тархаслать. Ҫук, итлемеҫҫӗ.

— А-а! Эс ҫапла улпутсене пусса сутмалла-и? Навус, ҫул ҫинчи пылчӑк.

— Тавай, чул юпа ҫумне уринчен ҫыхса, ҫакса асаплантарса вӗлерес ӑна!—теҫҫӗ.

Мӗнле кӑна тархасламасть-ши патша:

— Турӑ ячӗпе ыйтатӑп, каҫарӑр. Хама шеллемесен те, ачамсене шеллӗр,—тет.

Ҫук, итлемеҫҫӗ. Патшана чул юпа патне сӗтӗреҫҫӗ. Вӑл макӑрать, тупа тӑвать. Итлемеҫҫӗ.

... Хӑй ҫакса вӗлернисене патша аса илет:—Ах, ухмах, мӗншӗн вӗлернӗ-ши?—тесе шухӑшлать.—Епле ҫынна шелле пӗлмен ун чухне?

Акӑ вӑл чул юпа кутӗнче.

— Эй, тӑвансем! Эпӗ вӗт сирӗн патшӑр. Мӗн хӑтланатӑр?—тет патша.

Анчах полицейскисемпе жандармсем ӑна пурӗ-пӗр палламаҫҫӗ.

— Улпут пусакан пире тӑван мар. Этем ашӗ сутакан—патша мар,—теҫҫӗ йӗри-тавра тӑракансем.

Патша ним тӑваймасть, ҫӳҫне-пуҫне турткалать, тархаслать, тупа тӑвать. Анчах ӗненмеҫҫӗ.

Акӑ ӑна ҫакма тытӑнаҫҫӗ, уринчен ҫыхаҫҫӗ. Патша макӑрать, тархаслать...

Ҫак вӑхӑтра Иван шӑп мыскарине пӗтерет. Патша хаш сывласа ярать. Пӑхать, хӑй килӗнчех, унччен ларнӑ ҫӗртех ҫисе ларать, Иван ӑна хирӗҫ ларать.

„Кашкăра мĕн чул çитерсен те, вăрмана пăхать“,—теççĕ. Патшан та çавăн пекех, тем чухлĕ асап курнă пулсан та, çынсене хĕрхенес шухăшĕ сасартăк пĕтсе ларать, ĕлĕкхи хаярлăхĕ таврăнать. Йĕри-тавра пăхать, пурте хăйĕнчен хăраса, чĕтресе тăнă пекех туйăнать. Вăл хăй влаçра иккенне аса илет. Хĕç туртса кăларса, Ивана касма пикенет, анчах леш хăй çырса панă хутне кăтартать те, патша калле чакать.

Иван тухса каять. Ун хыççăн Никанор Никифăрч.

Патша пушшех хаярланса каять, хĕçне каллĕ-маллĕ сулкалать:

— Çук, хам влаçа капла хăратнипех, çапăçусăр памастăп,— тет вăл.

Чăнах та, патшасем хăйсен влаçне çапăçмасăр парас çук. Влаçа нихăçан та кучченеç пек илмеççĕ, ăна çапăçса илеççĕ. Çавăнпа рабочисемпе хресченсем те патша хăйĕн влаçне ирĕклĕн парасса кĕтмен. Илнĕ пысăк рычаг... Янă ушкăнпа сулласа патшан дворецне йĕри-тавра хупласа тăракан сăнчăрсем çине...

Дворецран йĕпе вырăн та юлман. Сăнчăрĕ татăкăн-татăкăн сирпĕннĕ. Халь те çав сăнчăр татăкĕсене тупкалаççĕ. Çав сăнчăр татăкĕсем пире çĕнĕ пурнăç тума кансĕрлеççĕ.

Анчах вĕсене тимĕр шăпăрпа шăлсах тасатаççĕ.

Ку юмаха Ново-Малыклинский районĕнчи (Куйбышев облаçĕ) Анат Якушка ялĕнчи туллимар вăтам шкулра вĕренекен Васин Яков çырса янă.

# *ОКТЯБРЬ ХЫÇÇĂНХИ ФОЛЬКЛОР*

Октябрьти социализмла аслă революци хыççăн фольклор пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулма тытăнчĕç. Анчах вăл улшăнусем хăвăрт мар, еррипен пулса пыраççĕ. Нимĕнрен малтан фольклор произведенийĕсен тематики çĕнелме пуçлать. Юмахсене, юрăсемпе такмаксене, ваттисен сăмахĕсене çĕнĕ элементсем, совет саманинчи пурнăçăн явленийĕсемпе событийĕсем сăн-сăпатланса кĕреççĕ. Фольклорăн хăшпĕр уйрăмĕсем (сăмахран, такмаксем) ĕлĕкхинчен те ытларах аталанаççĕ, хăшпĕр уйрăмĕсем (сăмахран, йăлана кĕнĕ уяв юррисем, вĕрӳ-суру чĕлхисем т. ыт.) çухалса пыраççĕ.

Совет саманинчи чăваш фольклорĕнче чи пысăк вырăн йышăнса тăракан уйрăм—вăл такмаксем. Такмаксем, чĕрĕ те çăмăл формăллă пулнă пирки, пурнăçри кашни пысăк событие, кашни пысăк факта хирĕç сас параççĕ. Çакнашкалах совет фольклорĕнче тĕрлĕ юрăсен вырăнĕ те пĕчĕк мар. Ирĕклĕ саманара пурăнакан ĕçхалăхĕ хăйĕн телейлĕ пурнăçĕ çинчен çĕнĕ юрăсем хурать. Кунсăр пуçне авалхи юрăсен содержанине улăштарса çĕнетсе пырать. Çапла вара юрăсен ĕлĕкхи пуян формисемпе мелĕсем çĕнĕ пурнăçпа сĕткенленсе, çĕнĕ содержаниллĕ, çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ.

Традицине кĕрсе çирĕпленнĕ формăсемсĕр пуçне пирĕн вăхăтра халăх хушшинче пачах çĕнĕ формăллă произведенисем те çуралса тухаççĕ (сăмахран, аса-илӳсем, революци çулпуçĕсем çинчен каласа панисем т. ыт. те). Вĕсем халăх сăмахлăхĕн репертуарне çирĕппĕн кĕрсех çитеймен-ха, форми енчен те якалсах çитмен, çапах та вĕсем пирĕн куç умĕнчех аталанса пыраççĕ, çавăнпа та вĕсене фольклортан уйрăм картапа уйăрма нимĕнле сăлтав та çук.

Совет фольклорĕн тĕп уйрăмлăхĕ—вăл пурнăçпа çывăх тăни, хăй урлă пурнăçа тĕрĕс сăнласа пани. Ăна эпир çĕнĕ юмахсенче лайăх куратпăр. Вĕсенче ĕлĕкхи асамлă, фантазилле элементсем вырăнне реализм элеменчĕсем ытларах вырăн йышăнаççĕ.

Совет фольклорĕн иккĕмĕш уйрăмлăхĕ—хаваслăхпа савăнăçлăх. Çĕнĕ юрăсемпе такмаксенче, юмахсемпе халапсенче тата ытти произведенисенче хуйхă, пессимизм, куççуль пачах та çук теме пулать. Хăшпĕр юрăсенче (сăмахран, çулпуçсемпе халăх геройĕсем вилнĕ пирки хунă юрăсенче) хурлăхлă та йывăр

хуйхалла мотивсем тĕл пулаççĕ, вĕсем пĕтĕм халăх хуйхине, халăх хурлануне кăтартаççĕ.

Совет саманинчи фольклорăн юлашки уйрăмлăхĕ—вăл литературăна çывăх тăни, литературăпа фольклор хушшинчи уйрăмлăх пĕчĕкленсе пыни. Çĕнĕ юмахсен-халлапсен, юрăсен-сăвăсен ăстисем халăх умне калавçăсем пек çеç мар, авторсем пек те тухса тăраççĕ. Хăйсен произведенийĕсене туна чух вĕсем литературăри меслетсемпе те уса кураççĕ. Тепĕр енчен вĕсен произведенийĕсем халăх хушшине сăмахпа çеç мар, пичет урла та саралаççĕ (вырăссен—Ф. А. Конашков, М. С. Крюкова т. ыт., казахсен—Джамбул, чăвашсен — Н. Шелепи, Кашкăр Микули, М. Дьяконова т. ыт. те). Писательсемпе поэтсем те хăйсен произведенийĕсене çырна чух халăх творчествипе сарлакан уса кураççĕ.

## ЮМАХСЕМ

### ХĔВЕЛ

Пĕр колхозник пурăннă. Унăн виçĕ ывăл пулнă.

Пĕрре ашшĕ ывăлĕсене хăй патне чĕнет те çапла калать:

— Ну, ачамсем,—тет,—сирĕнтен хăшĕ те хăшĕ çут хĕвел патне малтан çитсе килĕ—манăн пиллĕхĕм çавна пулĕ,—тет.

Ывăлĕсем шухăша кайрĕç. Епле çитсе килĕн-ха ара никам çитсе курман хĕвел патне?

Шухăшласан-шухăшласан, аслă ывăлĕ калать:

— Çутă хĕвел сенкер пĕлĕт тӳпинче йăлкăшать. Эп ун патне самолетпала çитсе килĕп,—тет.

Вăталăххи калать:

— Çутă хĕвел аслă тинĕсрен тухать, аслă тинĕсе анса ларать. Эпĕ ун патне хурçă караппала çитĕп,—тет.

Кĕçĕнни калать:

— Çутă хĕвел пĕлĕтпе çĕр сыпăшнă вырăнтанах тухать. Эп ун патне колхоз урхамахĕ çине утлансах та вĕçтерсе çитĕп,—тет.

Çапла കаларĕç те старикĕн ывăлĕсем, виççĕшĕ виçĕ çĕрелле тухса кайрĕç: асли—самолетпа вĕçме, вăталăххи—караппа ишме, кĕçĕнни—колхоз урхамахĕпе ыткăнма.

Унччен пулчĕ-и, кунччен пулчĕ-и—вăхăт пайтах иртрĕ, колхозникăн ывăлĕсем пайтах çӳрерĕç, çут хĕвел патне çитсе килме ĕмĕтленсе. Асли кăвак пĕлĕт çинче ăмăрткайăк пек вĕçме вĕренчĕ, вăталăххи—хăйĕн хурçă карапĕпе акăш-макăш тăвăлсемпе урăм-сурăм хумсене парăнтаракан пулчĕ, кĕçĕнни, Энтри ятли, хура урхамах çине утланса, шавах хĕвелтухăçнелле ыткăнчĕ.

Халлап суять пуль те, анчах ку ĕç чăн пулнă. Асли, ашшĕн пиллĕхне илме ĕмĕтленсе, виççĕмĕш пĕлĕт тӳпине тухсан, ăна тĕменле вут-кайăк тĕл пулать те, чĕлхине кăларса, çапла ыйтать:

— Ăçта каятăн эс, Иван тус, шухă çунатсем çинче ярăнса?—тет.

— Çутă хĕвел патне çитсе килес теп, аттен пиллĕхне илме тивĕç пулас теп,—тавăрать Иван.

— Апла пулсан, санăн çиччĕмĕш пĕлĕт тӳпине тухас пулать, вара хĕвел патне çитмелли тупсăм хăех сан патна килĕ,—канаш парать кăна вут-кайăк. Иван итлет, çиччĕмĕш пĕлĕт тӳпине шăтарса тухать, çӳлте тем пысăкĕш хĕвел йăлкăшнине курать, унтан ниçта ларса канмасăр, виçĕ хутчен çĕр чăмăрĕ тавра вĕç-се çаврăнать те калла таврăнать.

Вăталăххи, Петĕр, тинĕс тăрăх шăп хĕвел тухакан вырăна çыв-харса пынă чух, хĕвел çулне çунатлă шывçĕленĕсем пӳлсе ху-нине курать. Çĕленсем наркăмăшлă сăннисене кăларнă та, пур-те карап енне чашкăрса килеççĕ. Петĕр хăйĕн карапне тӳрех вĕсем çине тытрĕ. Çĕленсем ăна пур енчен те сырса илчĕç, ти-нĕсе пăтратма, хӳрисемпе çапса, хурçă карапа тайкалантарма тытăнчĕç. Хаяр кĕрешӳ пуçланса кайрĕ. Çапăçсан-çапăçсан, çĕ-ленсен вăйĕсем кимĕлсе çитрĕç, Петĕр вĕсене веç хăйĕн хурçă карапĕ айне вăтăрса тăкрĕ. Вара Петĕр умне тем пысăкĕш çутă хĕвел ялкăшса тухрĕ.

Кĕçĕнни, Энтри ятли, хăйĕн хура урхамахĕпе пĕлĕтпе çĕр сыпăннă вырăнах çитрĕ. Кунта ăна хĕрлĕ çăлтăрлă этемсем тĕл пулчĕç.

— Ăçталла çул тытан, Энтри тус?—тесе ыйтаççĕ.

— Çут хĕвел патне çитсе килес теп, аттен пиллĕхне илме тивĕç пулас теп,—ответлет Энтри вĕсене хирĕç.

— Эпир çав хĕвеле сыхласа пурăнатпăр. Ун патне çитсе ку-рас килет пулсан, эс пирĕнпе пĕрле пул, ăна хупăрлакан хура пĕлĕтсене пирĕнпе пĕрлех хăваласа яр. Вара хĕвел санăн умна хăех ялкăшса тухĕ, теççĕ лешсем. Энтри килĕшрĕ, çăлтăрлă çынсемпе пĕрле хĕвелĕн çулне сыхлама тытăнчĕ.

Нумай иртрĕ-и, сахал иртрĕ-и вăхăт,—ун çинчен юмах шар-ламасть,—виçĕ тăван ашшĕ патне таврăнчĕç. Виççĕшин те кăк-рисем çинче çап-çут ылттан çăлтăрсем çунса тăраççĕ.

Ашшĕ ыйтать:

— Ну, ывăлăмсем, хăшăр çитсе килтĕр çут хĕвел патне?—тет.

Асли калать:

— Эп хурçă кайăк çине утланса, çĕр тавра виçĕ хутчен çав-рăнтăм, çиччĕмĕш пĕлĕт тӳпине шатарса тухрăм, çут хĕвел тем пысăкĕш ялкăшнине куртăм. Çавăншăн мана Сталин Кремĕле чĕнтерчĕ, кăкăр çине ылттăн çăлтăр çакса ячĕ,—тет.

Вăталăххи калать:

— Эп хамăн хурçă карапăмпа аслă тинĕсĕн чиккине çитрĕм, хĕвеле хупăрласа тăракан хаяр çĕленсене парăнтартăм, çут хĕвел тем пысăкĕш ялкăшнине куртăм. Çавăншăн мана Сталин Кремĕле чĕнтерчĕ, кăкăрăм çине ылттăн çăлтăр çакса ячĕ,—тет.

Кĕçĕнни, Энтри ятли, калать:

— Эп колхоз урхамахĕпе пĕлĕтпе çĕр сыпăшнă çĕре çитрĕм, хĕрле çăлтăрлă çынсемпе пĕрле хĕвелĕн кунçулне сыхласа пурăнтăм, ăна хупăрлакан хура пĕлĕтсене çапса салатрăм. Ça-вăншăн Сталин мана Кремĕле чĕнтерчĕ, кăкăрăм çине ылттăн çăлтăр çакса ячĕ,—тет.

Ашшӗ ывӑлӗсен сӑмахне итлесе пӗтерчӗ те ҫапла каларӗ:

— Питӗ шеп, ачасем. Пурте эсир аҫӑр сӑмахӗсене итлерӗр, хӗвеле шырарӑр, ун патне ҫитсе килтӗр. Анчах та пӗлӗтре ялкӑшакан хӗвелтен те ҫутӑрах ҫунса тӑракан хӗвелӗмӗр пирӗн— Иосиф Сталин. Эсир ун парнине тивӗҫ пултӑр пулсан, аҫӑр пиллӗхне те ӗмӗрлӗхех тивӗҫ пултӑр,—терӗ.

Юмах ҫӳрет ялсемпе хуласем тӑрӑх, старик пирӗн колхозра пурӑнать, унӑн еткер ывӑлӗсем тӑван ҫӗршывӑн чиккисене сыхлаҫҫӗ.

Эскетӗнри (Ҫӗмӗрле р. ЧАССР) 72 ҫулхи колхозник Храмов Василий Ефимович каласа панӑ тӑрӑх И. Тукташ ҫырса илнӗ.

## ТЕЛЕЙ

Авал та мар, халӗ те мар, пӗр пӗчӗк ялта пурӑннӑ, тет, пӗр карчӑкпа пӗр старик. Вӗсен виҫӗ ывӑл пулнӑ, тет.

Пурнӑҫӗ ку ҫемьен калама та ҫук йӑвӑр, чухӑн пулнӑ, иккен. Ҫавӑнпа та ашшӗ ывӑлӗсене пӗрре пухнӑ та ҫапла каланӑ:

— Виҫҫӗр те ялтан тухса кайӑр та, виҫӗ ҫулпа утӑр. Кам нумайрах ӗҫлесе тупӗ, ҫав хисеплӗ пулӗ, ҫав кунҫул курӗ,—тенӗ.

Чи кӗҫӗнни Энтри ятлӑ пулнӑ, тет. Энтри ялӗнчен тухсанах, пӗр ҫул юппине пырса ҫитнӗ.

Хӑш ҫулӗпе каясси ҫинчен Энтри чылай шухӑшласа тӑнӑ. Пӗр ҫулӗ ҫинҫе пулнӑ. Вӑл ҫул ҫинче ҫӑкӑр йывӑҫҫисем ӳснӗ, тет. Анчах йывӑҫҫисем йӗплӗ пулнӑ мӗн. Ҫавӑнпа та вӗсем ҫынна инкек патне астарса кайма кӑна илемлӗн ӳссе ларнӑ, иккен.

Тепӗр ҫулӗ сарлака пулнӑ. Унта ҫӑкӑр йывӑҫҫисем ӳсмен, парка вӑрман кашласа ларнӑ. Вӑрман ҫине хӗвел илемлӗн пӑхнӑ. Хӗвел ҫинче ӑмӑрткайӑк ҫутӑлса ларнӑ. Ҫак ҫулпа утнӑ, тет, вара Энтри.

Кайсан-кайсан, вӑрман хӗррине ҫитсе тӑнӑ Энтри. Ҫитнӗ те, чарӑнса, унталла-кунталла пӑхнӑ.

— Ӑҫта каятӑн, Энтри тусӑм?—тесе ыйтнӑ, тет, унтан хӗвел ҫинче ларакан ӑмӑрткайӑк.

— Телей шырама!—тавӑрнӑ, тет, Энтри.

Вара ӑмӑрткайӑк Энтрине хӑй патнерех чӗнсе илнӗ те ҫапла каланӑ:

— Телей ура айӗнче йӑваланса выртмасть, ӑна хӑвӑрӑн тупмалла. Акӑ ҫак туяна ил те эсӗ каялла кай. Ҫул ҫинче сана хӑрушӑ сӑнлӑ тискер упа тӗл пулӗ. Эсӗ ҫав упана ҫак туяпа ҫап та ун хырӑмне шӑтар. Вара сан умна ылттӑн сунтӑх тухса ӳкӗ. Сунтӑха пӗлсе уҫсан, унтан сан телейӳ сиксе тухӗ,—тенӗ, тет, ӑмӑрткайӑк.

Энтри ӑмӑрткайӑк каланӑ пек тунӑ. Сунтӑха уҫса пӑхнӑ та— ун ӑшӗнчен сыснапа сурӑх сиксе тухнӑ. Энтрийӗн пӗрремӗш телейӗ ҫакӑ пулнӑ мӗн.

Анчах Энтрийӗн татах та лайӑхрах пурӑнас килнӗ. Ҫавӑнпа вӑл татах телей шырама тухса утнӑ. Вӑрман хӗррине ҫитсен, каллех хӗвел тухнӑ. Хӗвел ҫинче каллех ҫав ӑмӑрткайӑк ларнӑ. Ӑмӑрткайӑк Энтрирен ыйтнӑ:

— Ăçта каятăн-ши эсĕ, Энтри тусăм?—тенĕ.

— Телей шырама каятăп,—тенĕ Энтри.

— Телей хăвăнтах, анчах эсĕ ăна кураймастăн,—тенĕ ăмăрткайăк.—Ак çак туяна ил те каялла кай. Çул çинче сана кашкăр тĕл пулĕ. Çав кашкăра туяпа çап та, хырăмне шăтар. Ун хырăмĕнчен ылттăн сунтăх тухса ӳкĕ. Çав сунтăхра сан телейӳ пулĕ. Анчах эсĕ ăна уçма пĕл.

Энтри ăмăрткайăк каланă пек тунă. Сунтăхне уçса пăхнă. Ун ăшĕнчен ĕне сиксе тухнă. Çакă вара Энтрийĕн иккĕмĕш телейĕ пулнă.

Кун хыççăн та Энтрин телей шырас шухăш пĕтмен. Вăл татах та лайăхрах пурăнасшăн пулнă. Çавăнпа вăл каллех çав çулпа çав вăрман патнелле тухса уттарнă. Каллех ăна çав ăмăрткайăк тел пулнă.

— Ăçта каятăн-ши каллех эсĕ, Энтри тусăм?—тесе ыйтнă ăмăрткайăк.

— Телей шыратăп!—тенĕ Энтри.

— Çак туяна ил те каялла кай. Çул çинче сана чее тилĕ хирĕç пулĕ. Эсĕ ăна туяпа çап та, хырăмне шăтар. Санăн умна каллех ылттăн сунтăх тухса ӳкĕ. Вăл сунтăха эсĕ уçса пăх та, никама та ан пар, ан çухат. Сунтăху пулсан, санăн пурнăçу та пулĕ, савăнăçлă пулăн,—тенĕ ăмăрткайăк.

Энтри ăмăрткайăк каланă пек тунă. Сунтăха уçса пăхнă та, ун ăшĕнчен çĕнĕ пысăк пӳртпе хуралтăсем тухса тăнă. Ампарта тулли тĕш-тырă чăштăртатнă. Картара тулли выльăх-чĕрлĕх тĕпĕртетнĕ. Пӳрчĕ çине: „Пуян та культурăллă пурăнакан колхозник Энтри Федăрч", тесе çырса çапнă пулнă.

Энтри Федăрч вăл—эпĕ. Ăмăрткайăк пана туя марксизм пулнă иккен. Упи, кашкăрĕ, тилли—тĕрлĕ вăхăтри класс ташманĕсем. Ылттăн сунтăхĕ—колхоз пулнă мĕн, ăмăрткайăкĕ—Сталин юлташ.

Свердловск облаçĕнчи Чернушка районĕнчи Сульмаш ялĕнчи колхозник Андрей Федоров каласа панă; В. Тоймак çырса илнĕ.

## ЧАПАЕВ ВИЛĔМĔ

*(Вырăс халăх юмахĕ)*

Таçти çĕрте, таçти патшалăхра, тĕрĕссипе каласан, шăп та шай эпир пурăнакан çĕршывра пурăннă, тет, пĕр хресчен. Ăна Иван тесе чĕннĕ, тет. Унăн виçĕ ывăл пулнă. Аслă ывăлĕ ашшĕ пекех Иван ятлă пулнă, вăталăххи—Петĕр, кĕçĕнни—Василий.

Пурăннă вĕсем питĕ начар, тискер кайăк тытмалли хатĕрĕсем те, пулă тытма каймалли кимĕсем те пулман вĕсен.

Çапла вара çак Иван ятлă хресчен пурăннă-пурăннă та чухăнлăхран тухаймасăрах вилсе кайнă.

Кунăн арăмĕ ачисемпе тăлăха тăрса юлчĕ. Ачисем çитĕнсе çитсен, вăрçă сиксе тухрĕ. Аслă ывăлĕсене вăрçа илсе кайрĕç, амăшĕ патне кĕçĕн ывăлĕ—Василийĕ кăна тăрса юлчĕ. Пурăнсан-

пурӑнсан, кӑна та вӑрҫа кайма черет ҫитрӗ. Ун чухне пурне те йӗркипех илсе пынӑ. Василий амӑшӗпе сывпуллашса уйӑрӑлчӗ те вӑрҫа тухса кайрӗ. Мӗскӗн амӑшӗ пӗр пӗчченех тӑрса юлчӗ.

Акӑ пырать Василий пӗр ялпала. Ку ялтан инҫетрех мар унӑн мӑнаккӑшӗ пурӑннӑ. Василий шуглать:

— Тавай-ха мӑнакка патне, кӗрсе сывпуллашса тухам, тен вӑрҫӑран тавӑрӑнаймӑп та,—тет.

Кӗчӗ.

— Сывӑ-и, мӑнакка?

— Сывах-ха, сывах, ывӑлӑм. Ӑҫта каятӑн?

— Вӑрҫа каятӑп-ха, мӑнаккам. Аслӑ пиччесем тахҫанах ҫапӑҫҫӗ ӗнтӗ, ну, манӑн та кайса ҫапӑҫас пулать.

Мӑнаккӑшӗ кӑна хирӗҫ ҫапла калать:

— Итле-ха, ывӑлӑм,—тет.—Эпӗ сана пӗр ҫӗрӗ парӑп. Вӑл ҫӗрӗ ман упӑшкамранах юлнӑскер. Вӑл ӑна туркӑ вӑрҫинчен илсе килчӗ. Вӑл ҫӗррӗн ҫав тери пысӑк асамлӑ вӑй пур. Ӑна тӑхӑнсан, сана ни пуля тивмест, ни хӗҫ витмест. Анчах та ҫӗррӗн вӑйӗ типӗ ҫӗртре чухне анчах хӑтарать, шывра вӑл самаях чакать,—ҫакна лайӑх асту,—тет.

Василий мӑнаккӑшне ҫӗрӗ панӑшӑн тавтурӗ те, унпала уйӑрӑлса, малалла тухса утрӗ. Акӑ ҫитрӗ вӑл призыва. Унтан ҫара илсе карӗҫ. Ҫитрӗ те вӑрҫӑ ӗҫне вӗренме тытӑнчӗ. Ҫав тери хӑвӑрт вӗренсе ҫитрӗ вӑл, ҫав тери вӑйлӑ та ӑслӑ салтак пулса тӑчӗ, пӗр сӑмахпа каласан—тӳрех вӑрҫа тухса карӗ. Вӑрҫӑра кӑна чӑнах та ниепле пуля та тивеймест.

Виҫӗ ҫул пурӑнчӗ Василий Иванович вӑрҫӑра. Унтан, Совет влаҫӗ пулса тӑрсан, килне тавӑрӑнчӗ. Хӑйсӗр пуҫне унӑн пӗр пиччӗшӗ те тавӑрӑнайман иккен, иккӗшӗ те вилсе юлнӑ. Василий Иванович килӗнче пурӑнкаларӗ-пурӑнкаларӗ те авланма шут тытрӗ. Хӑйсен ялӗнчи пӗр чухӑн хӗрне качча илчӗ, туй туса пачӗ. Тытӑнчӗ Василий Иванович арӑмӗпе пурӑнмашкӑн. Пурӑнсан-пурӑнсан, пӗр ҫултан-и, ик ҫултан-и унта, вӗсен икӗ ача ҫуралчӗ.

Пӗрре ҫапла Василий Иванович хыпар илет: генералсем Совет влаҫне пӗтерсе лартса, хӑйсен влаҫӗ туса хума шут тытнӑ тенине. Тарӑхсах каять Василий Иванович генералсем ҫине, вӗсем пӗтӗм ӗҫхалӑхне пӗтерсе тӑкма шутланӑшӑн. Шутларӗ-шутларӗ те ҫакӑн пек шут тытрӗ: „Тата тепӗр хут вӑрҫа каятӑп, хамӑн ҫӗршывӑма пӗтерме памастӑпах!"

Унтан амӑшне каларӗ:

— Ну, хаклӑ аннем, эп Совет влаҫне сыхлама тухса каятӑп,—терӗ.

Кӑна хирӗҫ амӑшӗ куҫҫуль витӗр ҫапла тавӑрса калать:

— Виҫӗ ывӑлччӗ манӑн, эсӗ кӑна тӑрса юлтӑн. Иккӗмӗш хут вӑрҫа тухса каятӑн пулсан, эсӗ те пуҫна ҫухатӑн,—тет.

— Ҫук, анне, эп каятӑпах,—тет ывӑлӗ.—Вилес-тӑвас пулсассӑн, ман пӗчӗк ачамсене ан пӑрах,—тет.

Амӑшӗпе тата арӑмӗпе уйӑрӑлчӗ те хай Василий, утне йӗнерлесе утланса, Хӗрлӗ Ҫара тухса вӗҫтерчӗ,

Çитрĕ совет çарĕсем патне, хĕрлĕ командирсем патне. Çĕлĕкне хывса, пуçне тайрĕ те çапла каларĕ:

— Сывă-и, совет хĕрлĕ командирĕсем? Эпĕ те Хĕрлĕ Çарта пулас тетĕп, хамăн тăван çĕршывăма пулăшас тетĕп, ĕçхалăхне ирĕке кăлармашкăн Колчакпа Деникина хăваласа ярас тетĕп,— тет.

Командирсем кăна калаççĕ:

— Сывлăх пултăр сана, паттăр яш! А кам пулатăн-ха эсĕ? Хушамату мĕнле санăн?—тесе ыйтаççĕ унран.

— Эп çав-çав ял çынни пулатăп, мана Василий Иванович тесе чĕнеççĕ, а хушаматăм—Чапаев.

Чапаева çавăнтах Хĕрлĕ Çар командирĕ туса хучĕç.

Нумай пулчĕ-и, сахал-и, юнлă çапăçу çитсе перĕнчĕ. Чапаев учĕ çине сиксе ларчĕ те пĕрех кăна ыткăнчĕ тăшмансем çине. Çавапа çулнă пек тăкма тытăнчĕ вăл тăшмансене. Колчаксене те çулать, деникинцăсене те ăшалантарать,ултă сехет хушши пĕр канмасăр турарĕ. Хĕçĕпе те касать, сăннипе те чикет, наганĕпе те перет. Пĕтĕм хир тăшмансен виллисемпе витĕнчĕ. Колчак ниепле те чăтса тăраймарĕ, хăйĕн юлашки салтакĕсемпе аяккалла пăрахса тарчĕ.

Хĕрлĕ Çар салтакĕсем Чапаев çинчен чап сарса та ячĕç:

— Вăт ку командир! Эпир Чапаевпа ăçта тенĕ унта каятпăр.

Пĕр эрне те иртеймерĕ. Колчак икĕ хут ытларах çар пухрĕ те каллех Хĕрлĕ Çара хирĕç тухрĕ. Сиксе ларчĕ Чапаев каллех учĕ çине, сиксе ларчĕ те тытăнчĕ тăшмансене хаяррăн турамашкăн: хĕçĕпе те касать, сăннипе те чикет, наганĕпе те перет. Пĕр талăк хушши çапла турарĕ вăл тăшмансене. Колчак çарне çуррине ытла тураса тăкрĕç, хăшне-пĕрне тыткăна илчĕç. Колчак хай аран-аран тарса хăтăлчĕ.

Çапăçу хыççăн кăштах канчĕç, çирĕç, ĕçрĕç. Унтан Чапаев Фрунзе юлташ патне кайрĕ.

Фрунзе калать кăна:

— Ну, Чапаев, çамрăк герой! Колчака тĕппипех çапса салатма сана халь пĕтĕм арми паратăп. Колчак каллех çар пухма тытăннă,—тет.

Акă çитрĕ Чапаев хăйĕн армийĕпеле Шурă Атăл хĕррине. Вырнаçтарчĕ хăйĕн çарне пĕр ял çывăхне, анчах колчаковецсем ăçта тăраççĕ, ăна пĕлмест. Мĕн пулсан, мĕн килсен те, пелесех пулать: ăçта Колчакăн штабĕ? Тăчĕ те хайхи Чапаев çапла калать хăйĕн çарне:

— А ну, маттурсем, кам пырать манпала пĕрле тăшман ăçта танине йĕрлесе тупма?—тет.

Ну, паллах, унпа пĕрле кайма килĕшекенсем нумай тупăнчĕç. Анчах вăл пĕр аллă çын, е çĕр çын-и унта, суйласа илчĕ те çула тухса кайрĕ. Кун каçаланах сулăннă пулнă иккен. Çул çинче кусем пĕр хĕрарăма хирĕç пулаççĕ.

— Эй, инке, ăçта каятăн?

— Эп хам упăшкама курма Хĕрлĕ Çара каятăп, командир

юлташ. Анчах çулран аташса кайрăм-ха акă, тата хырăм та выçа. Иккĕмĕш талăк утатăп ĕнтĕ, хам ăçта çитсе тухассине хам та пĕлместĕп.

— Ну, атя эппин пирĕнпеле, эпĕр сана çитерĕпĕр.

Чапаев çав хĕрарăма хăйсемпеле пĕрле илсе, тăраниччченех çитерме хушрĕ. Илчĕç хай хĕрарăма хăйсемпе пĕрле. Çитерчĕç, ĕçтерчĕç. Ку хĕрарăм поляк çынни пулнă иккен, ăна Колчак шпионка туса янă мĕн. Анчах та Чапаев ун çинчен нимĕн те пĕлмен.

Çитрĕç кусем пĕр яла. Ялĕ шăп та шай Шурă Атăл хĕрринче ларать. Мужиксем пĕтĕмпех каласа пачĕç колчаковецсем ăçта тăни çинчен: инçех те мар вăрман хыçĕнче, пĕр вунă çухрăмра иккен. Василий Иванович хăйĕн салтакĕсене калать:

— Çапла тăватпăр, ачсемĕр: раз каç пулса çитрĕ-тĕк, кунтах çывăрса çĕр каçăпăр, а ыран ирхине хамăр çара илсе килме каятпăр,—тет.

Тăратса тухрĕ Чапаев постсем, хăй канма выртрĕ. Пурте çывăрса карĕç. Василий Иванович хăй те çывăрса карĕ, пĕртенпĕр хурал кăна тăрса юлчĕ.

А поляк хĕрарăмĕ çывăрмасть, кĕтсе тăрать. Чапаев çывăрса каясса кĕтсе илчĕ те вĕçтере пачĕ хăвăртрах Колчак патне. Чупса çитрĕ те, Чапаев ăçта тăни çинчен, ун тĕп çарĕ хăйпеле пĕрле марри çинчен каласа пачĕ. Колчак урăм-сурам саванса кайса, хăйĕн генералĕсене çавăнтах приказ пачĕ: „Тытса килĕр Чапаева, чĕррĕн тытма май килмесен, виллине те пулин тупса килĕр!"—тет.

Пухрĕç генералсем хăйсен çарĕсене. Пухрĕç те виçĕ енчен çавăрса илчĕç Чапаева. Пострисалтаксене çĕрле пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтерчĕç, унтан шăп Чапаев ăшă ыйахпа çывăрнă вăхăтра тўрех вĕсем çине тапăнчĕç.

Сиксе тăчĕ Чапаев, анчах хăйне пур енчен те тăшмансем хупăрласа илнĕ.

— Тăрăр, юлташсем, хăвăртрах! Ултав!—тесе кăшкăрса ячĕ вăл.

— Ну, мĕн калаçасси пур ĕнтĕ, вĕсем унта нумай-нумай пĕр çĕр çын пулнă пулĕ те, а колчаковецсем темиçе пин çын вĕт. Хĕрлисем пўртсенчен пăшалсемпе хĕрўллĕн переççĕ, хăйсем патне ямаççĕ. Ак патрон пачах та сахал тăрса юлчĕ вĕсен. Вара Чапаев çапла приказ пачĕ:

— Чупăр, ачасем, Шурă Атăл хĕррине, кунта пурпĕр шăтарса тухайрас çук эпĕр. Шурă Атăл урлă каçсан, унта вара хамăр çар та инçе мар, вĕсемпе пĕрлешĕпĕр те каллех Колчак çине сиксе ларăпăр.

Тытăнчĕç чапаевецсем юханшыв урлă ишсе каçмашкăн. Курать Колчак—хĕрлисем шыва пыра-пыра сикеççĕ. Курать те кăшкăрать хăйĕн генералĕсене:

— Ан каçарăр вĕсене шыв урлă! Перĕр мĕн пур вăйпала! Чапаева алран вĕçертсен, вăл пире пурне те чĕррĕн хăварас çук!

Колчаковецсем пулемет ҫаварса лартрӗҫ те тытӑнчӗҫ шатӑртаттармашкӑн. Нумайччен ишрӗ Василий Иванович, анчах та ун аллине пуля тивсе амантрӗ (шывра леш асамлӑ ҫӗррин вӑйӗ пӗтрӗ ӗнтӗ). Пурӗпӗр Чапаев ишме чарӑнмасть. Йӗри-таврах пулясем шӑхӑраҫҫӗ, хӗрлисене темӗн чухлӗ вӗлерсе пӗтерчӗҫ. Колчак шавах кӑшкӑрса тӑрать:

— Чапаева персе вӗлерӗр, леш енне ишсе каҫма ан парӑр. Пурте ун ҫине тӗллесе перӗр!

Акӑ тата тепӗр пуля пырса тиврӗ Чапаева. Пуҫӗ шыва путма пуҫларӗ унӑн. Ҫапла вара Василий Чапаев пӗтӗмпех путса ҫухалчӗ. Ҫыран хӗррине ҫитесси те нумай юлманччӗ, хӗрлисен пулӑшӑвӗ те ҫитсе ӗлкӗрнӗччӗ ӗнтӗ, анчах пурӗпӗр ҫӑлӑнса юлаймарӗ шеремет...

Ҫитсе ҫапрӗҫ хӗрлисем колчаковецсемпе деникинецсем ҫине, вӗсене пуҫӗпелех аркатса тӑкрӗҫ, Совет ҫӗрӗ ҫинчен хӑваласа ячӗҫ тӑшмансене.

Чапа тухрӗ Василий Иванович Чапаевӑн ячӗ. Ӑна пирӗн ҫӗршывра пур ҫӗрте те хисеплеҫҫӗ.

„Творчество народов СССР' ятлӑ кӗнкерен илнӗ.
Карели АССР-че, Лоухский районра „Красный рыбак“ колхозри 54 ҫулхи колхозник Матвей Михайлович Коргуевран ҫырса илнӗ.

# ГРАЖДАН ВĂРÇИ ТАКМАКĔСЕМ

1.

Ула курак хӳресĕр,
Хӳресĕртен илемсĕр:
Спекулянтсем ĕмĕтсĕр,
Ĕмĕтсĕртен юрăхсăр.

Урам урлă каçнă чух
Пăхăр çĕрĕ тупрăмăр.
Пăхăр çĕрĕ тутăхнă,
Колчак çарĕ пăнтăхнă.

Шăкăр-шăкăр вут сыппи
Ĕне ури айĕнче:
Çартан тарнă дезертирĕн
Пичĕ çине суртăмăр.

Америка хулинче
Вильсон ларать мăртăхса.
Ан лар, Вильсон, хуйхăрса —
Колчак пирĕн алăра.

Урай хăми тӳп-тӳрĕ,
Маччана та юрăхлă.
Хĕрлĕ Çарти салтаксем
Сарă хĕре юрăхлă.

Ыраш капан тăррине
Çил çавăра пуçларĕ,
Деникина Хĕрлĕ Çар
Сирпĕнтере пуçларĕ.

Пилĕк тытса ташлама
Çут пиçихи пулинччĕ:
Ыталанса чуптума
Хĕрлĕ салтак пулинччĕ.

Тарăн çырма пуçĕнче
Вĕлтрен çилпе лăсканать.
Деникинпа Колчака
Хĕрлĕ салтак тустарать.

Хура лаша çилхине
Йĕс турапа тураççĕ,
Советсен Хĕрлĕ Çарне
Тĕнчипелех мухтаççĕ.

„Чăваш литератури антологийĕ", стр. 155—156. Шупашкар, 1935 ç.

2.

Уçăм çинчи пăрăва
Кашкăр тытни килĕшет.
Улпут çынни вилсессĕн,
Масар çийĕ килĕшет.

Хĕрлĕ-хĕрлĕ автана
Хĕртсе тăвăл çуратнă.
Сăмавар тĕс хаспадана
Аçа-çиçĕм аркатнă.

Патшан ылттăн каруни
Тăм пуçĕнчен вăрхăннă.
Хура халăх кăкăр тулли
Лăштах сывлăш çавăрнă.

Ку такмака 1936 çулта Чышма станцинче хĕрарăм пассажиртан Стихван Шавлы çырса илнĕ.

# КОЛХОЗ ЮРРИСЕМ

## ШУР ТУТĂР

Шур тутăр вĕçтертĕм хуратса,
Эп юрларăм сире юратса.

Сат янтăрать саркайăк сассипе,
Чун савăнать колхоз лайăххипе.

Ыр ут юртассине хам та пĕлеп,
Тилхепине карт-карт туртсассăн.
Колхоз лайăххине хам та пĕлеп,
Хамăр лайăх ĕçлесе пырсассăн.

Тупăлха та турта, турă лаша
Туртмассерен турти авăнать.
Хамăр тенĕ колхоз çыннисене
Курмассерен чунăм савăнать.

Чĕнтĕрлĕ те кĕпер, ай, çийĕнче
Ворошилов лашин йĕрĕсем пур.
Аттепеле анне чĕрки çинче
Çамрăк чухне таптана йĕрсем пур.

Тур ут юртать, юртать, ури шăвать
Чашлаттарса çумăр çунăран.
Пире ют патшасем, ай, курайманç
Хăйсенченех иртсе кайнăран.

Икĕ хура лаша пур çинче
Мĕн хуйхи пур аслă çул çинче?
Хамăр тăван колхоз пур çинче
Мĕн хуйхи пур вата пуç çинче?

Сирĕн кăмакăрсем шап-шурă мĕн,
Епле ăсти çавăрса тунă-ши?
Çакăях та Совет, ай, влаçне
Мĕнле ăсли шутласа кăларнă-ши?

Совет тенкелĕсем таянчăклă,
Епле ăсти çавăрса тунă-ши?
Çака колхозпалан ырлăх курма
Ленин епле ăсласа кăларнă-ши?

„Сталин“ колхоз членĕ 54 çулхи колхозник Касянов Сергей юрласа панă.

## И АТĂЛ ХĂВИ...

Акса ĕçĕм çырли тăвас пулсан,
Тавай пĕр ушкăнпа çырла тăвар.
И Атăл хăви яштака,
Çулçи çавракa...
Хамăр вăйпа телей тăвас пулсан,
Тавай пĕр колхозпа телей тăвар.
И Атăл хăви...
Ĕнтĕ ылттăнăм çук, кĕмĕлĕм çук,
Колхозран лайăххи ним те çук.
И Атăл хăви...
Сăкăтăм та урам(ĕ) аслă урам,—
Эпир утманнине кам утас?
И Атăл хăви...
Эпир колхоз туни пайтах пулать,—
Эпир савăнмасан, кам савăнас?
И Атăл хăви...

Сăкăт, Патăрьел р.; 1933 ç. В. П. Воробьев çырса илнĕ.

## ПУЯН, ПУЯН ТЕЕÇÇĔ

Хĕрлĕ хăмач тутрине (2 х.)
Ай-яй, эпĕ юратап, юратап.
Колхоз хирĕнче ĕçлеме
Ай-яй, эпĕ юратап, юратап.

Ула тутăр эп çыхрăм (2.),
Урам урлă эп каçрăм, эп каçрăм.
Çĕн пурнăçа эп куçрăм,
Йăвăрлăхран хăтăлтăм, хăтăлтăм.

Пуян, пуян тееççĕ,
Епле пуян пулас мар?
Эпир халĕ колхозра, колхозра.
Колхоз ĕçне саватпăр,
Ленин ятне манмастпăр, манмастпăр.

Пурнăç лайăх тееççĕ,
Епле лайăх пулас мар?
Эпир халĕ колхозра, колхозра.
Колхоз ĕçне саватпăр,
Ленин çулпе пыратпăр, пыратпăр.

Варасăр, Куславкка р.; 1933 ç. Г. Лисков çырса илнĕ.

## УЛМА ПИÇЕТ, ХĔРЕЛЕТ

Улма пиçет, хĕрелет
Кунсем ăшă вăхăтра,
Манăн чунăм хĕпĕртет
Колхоз ÿснĕ вăхăтра.

Улма йывăç авăнать
Улми йывăр пулнăран.
Манăн чунăм савăнать
Стахановка пулнăран.

Хĕрлĕ чие пахчине
Хăçан кĕрсе тухам-ши?
Колхоз матур каччине
Хăçан курса савам-ши?

Хутлам-хутлам тилхепи
Ут çиййĕнче пултăрччĕ.
Чун юратнă сар ачи
Стахановец пултăрччĕ.

Трактор анать çулпала
Вĕт тусана вĕçтерсе.
Колхоз хирне пăхăр-ха:
Епле ĕçлет тимлесе?

Туктамăш, Хĕрлĕ Чутай районе.
1935 ç. Г. Лисков çырса илнĕ.

## ЭП ШУР ТУТĂР ЮРАТАП

Эп шур тутăр юратап
Çÿçи пурçăн пулнăран.
Эп колхоза юратап
Тулли телей панăран.

Тăхăр пушăт çăпати
Калуш пур чух ытлашши.
Çĕнĕ пурнăç тунă чух
Пуппа кулак ытлашши.

Тĕмĕн-тĕмĕн хурлăхан
Авăк çилпе авăнать.
Çĕнĕ пурнăç тунă чух
Пирĕн чĕре савăнать.

Шуршăл, Сĕнтĕрвăрри р.; 1933 ç.
Г. Лисков çырса илнĕ.

## ТУСЯ ХĔРĔСЕМ

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Юр тытмашкăн!
Хăвăртрах, хăвăртрах,
Халех васкăр!

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Кĕл пуçтарма!
Хăвăртрах...

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Улма касма!
Хăвăртрах...

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Çум çумлама!
Хăвăртрах...

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Утă çулма!
Хăвăртрах...

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Тырă вырма!
Хăвăртрах...

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Авăн çапма!
Хăвăртрах...

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Тырă леçме!
Хăвăртрах...

Туся хĕрсем, колхоз хĕрсем,
Юрă юрлама!
Хăвăртрах...

Туся, Патăръел р.; 1933 ç.
В. Воробьев çырса илнĕ.

## ВĂРМАН УРЛĂ КАÇРĂМĂР

Вăрман урлă каçрăмăр, каçрăмăр,
Вăрман урлă каçрăмăр
Вĕрене çулçи çутипе, çутипе,
Вĕрене çулçи çутипе.

Хир-хир урлă килтĕмĕр
Сарă тулă пуссипе.

Хула витĕр тухрăмăр
Электрицă çутипе.

Çак колхоза кĕтĕмĕр
Ленин юлташ вĕрентнипе.
Тулли телей тупрăмăр
Сталин юлташ çулĕпе.

## АВĂТАТЬ КУККУК

Çурхи хĕвел, ай, ăшăтсан,
Çĕмĕрт çеçки çурăлсан,
Авăтать куккук,
Автăтать куккук,
Янăрать вăрман.

Пирĕн бригада хире тухсан,
Ĕç юррине тытăнсан,
Авăтать куккук...

Пирĕн бригада ĕçе тухсан,
Трактор ĕçе тытăнсан,
Авăтать куккук...

Пирĕн бригада канма ларсан,
Канăç юрри пуçласан,
Авăтать куккук...

Шупашкар р. 1933 ç.
Н. Айзман çырса илнĕ.

## ХУЛА ÇУЛНЕ ПĔЛНИПЕ

Хула çулне пĕлнипе
Эпĕ карăм хулана.
Ленин çулне пĕлнипе
Эпĕ кĕтĕм колхоза.

Çырма урлă вĕрлĕкĕ
Çырма урлă çул хучĕ,
Коллективлă пурнăçĕ
Чухăнлăхран хăтарчĕ.

Çерем çĕрне ватмашкăн
Тимĕр сӳре кирлĕ мĕн;
Тĕреклĕ колхоз тумашкăн
Ударниксем кирлĕ мĕн.

Пĕчĕкçеç те путени
Сарă тула юратать;
Пирĕн матур йĕкĕтсем
Колхоз ĕçне юратаç.

Патреккел, К. Елчĕк р.; 1933 ç.
В. Воробьев çырса илнĕ,

# ТАКМАКСЕМ

## КОЛХОЗ ТАКМАКĔСЕМ

Чуптармасăр пымашкăн
Кŷлнĕ учĕ начар мар;
Юрламасăр лармашкăн
Пирĕн колхоз начар мар.

Хурăн турта хуçăлчĕ,
Врене турта сыпăнчĕ.
Кив самана вырăнне
Çĕн самана пуçланчĕ.

Сар хĕвелĕ сар хĕр майлă
Кулать ăшă куллипе,
Кăмăл уçă, кăмăл лайăх
Пурнăç тулăх пулнипе.

Улăх ути ука пек те
Ирхи сывлăм шывĕпе.
Пирĕн ĕçсем ылттăн пек те
Хамăр тытса тунипе.

Тырă пиçсе çитнĕ чух та
Килес килмест уй-хиртен;
Ĕçсем лайăх пынă чух та
Каяс килмест ĕç панчен.

Куккук сасси илтĕнет
Хура вăрман варринче;
Савни сасси ян каять
Ударлă ĕç патĕнче.

Çĕрĕк, çĕрĕк çăпата
Сырас килмест тупата;
Наян-кахал каччăсене
Курас килмест тупата.

Урлă кĕлет, çи витти,
Çине пăх та ăшне кĕр.

Ай-хай, хамăр тантăшсем,
Ĕçне пăх та хĕрне ил.
Ĕçĕ пулсан ылтăн пек,
Хĕрĕ пулĕ пике пек,

Тăр пĕлĕтре тăрисем,
Кĕмĕл шăнкрав—юррисем.
Маттур колхоз хĕрĕсен
Ытарма çук ĕçĕсем.

Çĕнĕ пŷрт те таса пŷрт,
Электрицă ялтăрать.
Пике евĕр сарă хĕр
Юрла-юрла тĕр тăвать.

Чĕлтĕр сĕлĕ çийĕнче
Пукра пĕрчи ытлашши.
Çак каччăсем хушшинче
Кулак ачи ытлашши.

Суртламăттăм вăрлăха,
Сарă тулла саватăп;
Тухаймăттăм эп вăййа,—
Ударнике саватăп.

Хĕрĕх тантăш—хĕр тантăш
Хут вĕренме çŷретпĕр.
Хĕрĕх тантăш—хĕр тантăш
Шкул илемне кŷретпĕр.

Çŷл ту çинчен чул кустартăм
Чăлт-чалт юхан шыв çине.
Чĕрем çине ал пустартăм
Вулав çуртри ачине,

Шур çип кĕпи эп çĕлетрĕм
Клетке тăп-тăп тăмашкăн.
Яш пĕвĕме эп ӳстертĕм
Комсомола савмашкăн.

Хамăр çулнă çаранне
Паккусĕнчен паллатпăр;
Хамăр савнă каччине
„КИМ“ паллинчен паллатпар.

Кĕпер урлă каçнă чух
Кĕпер юлать янраса;
Эпир колхоз тунă чух
Кулак тăрать анраса.

Хăрăк юман хуйхăрать
Хайĕн кунĕ пĕтнĕшĕн;
Хурт-кăпшанкă хуйхăрать
Уйра йăран пĕтнĕшĕн.

Хĕллехи кун хуйхăллă
Çурхи кунсем çитнĕрен;
Сухапуçĕ хуйхăллă
Эпир трактор кӳлнĕрен.

Шурă чăлха, çĕнĕ пушмак,
Ан кĕр шыва, путатăн.
Ан кай, тăван, кулак хыççăн,
Ĕмĕр кĕлмĕç юлатăн.

„Чăваш литературин антологийĕ“, Шупашкар. 1935, стр. 162—169.

## ЗАЕМ ТАКМАКĔСЕМ

Хĕрлĕ-хĕрлĕ çырлине
Юрла-юрла татрăмăр.
Пятилетка заемне
Савăнсах çырăнтăмăр.

Ма юрлас мар юррине
Юрлас килнĕ вăхăтра?
Ма çырăнас мар заемне
Пуян та тулăх пурнăçра?

Сарă кайăк савăнать
Вăрман сăнĕ симĕсшĕн.
Манăн чунăм савăнать
Çĕнĕ заем тухнăшăн.

Атьăр татар çырлине,
Самай пиççе çитнине.
Атьăр çыранар заемне
Аллă тенкĕлĕххине.

Тулли пуçлă туллине
Тăкакласа вырас мар.
Пятилетка заемне
Çырăнмасăр юлас мар.

Хĕвел пăхна вăхăтра
Ахаль ларни килĕшмест.
Çак хаваслă пурнăçра
Заемсăр çын килĕшмест.

Сат пахчине эп кĕтĕм
Сар чечексем пуçтарма.
Çĕнĕ заем эп илтĕм
Хам пурнăçа юсама.

Мĕншĕн татас чечекне,
Тутла шăршă кĕмесен?
Мĕншĕн савас ачине,
Çĕнĕ заем илмесен?

Кăшаркасси, Çĕрпӳ р. ЧАССР. 1936 ç.
Ç. Матеш пухнă.

Ялсем витĕр, вăрман витĕр,
Йăмра витĕр хĕр курнать.
Хĕрĕ пулнă комсомолка,—
Çĕнĕ заем çырăнать.

Вăрман хĕрне ан кайăр,—
Сăпса йăва çавăрать.
Кулак хыççăн ан кайăр,—
Заем илме вăл чарать.

Çĕнĕ Аксу, Тутар респ. Çĕпрел р. 1936 ç.
Тахтаманова пухнă.

## ĂСАТУ ЮРРИ

Улма йывăç авăнать
Улми нумай пулнăран.
Çамрăк чунăм савăнать
Савни çара кайнăран.

Шăпчăк юрлать улăхра,
Сасси килет шыв тăрăх.
Хĕрлĕ Çарти тусăмран
Салам килет хут тăрăх.

Çуркуннехи вĕренен
Ĕмĕт çулçă сарасси,
Хĕрлĕ Çарти матурсен
Ĕмĕт—орден илесси.

К. Маклашкин, Сĕнтĕрвăрри районĕ.
А. Тогаев çырса илнĕ.

## ВАТТИСЕН СӐМАХХИСЕМ

Колхоз пӳлми—хӗлле те, ҫулла та иксӗлми.
Колхоз пӳлми—хӗлле те, ҫулла та тулли.
Колхоз лашине пушӑ кирлӗ мар.
Пуппа кулакӑн пӗр шухӑш (ӗмӗт).
Колхозра ватлӑх та, яшлӑх та пӗр,—пурте савӑнса ӗҫлетпӗр.
Лодырь пахчари мӗлке тӗшне те тӑмасть: никама та усӑ памасть.
Колхозшӑн пурлӑх—тӑшманшӑн хурлӑх.
Колхоз пурлӑхӗ—халӑх ырлӑхӗ; ӑна хаклас пулать, тӑшманран сыхлас пулать.
Еҫчен колхозникӑн кӗреки пушӑ мар.
Пирӗн пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул; ун ҫинче ҫӑкӑрӗ-тӑварӗ те, ӗҫки-ҫики те тулӑх.
Совет ҫӗрӗнчен асаплӑх инҫе.
Пӗччен хулӑ хуҫӑлать, нумай туратран тунӑ шӑпӑра хуҫма ҫук. Пирӗн колхоз та ҫавӑн пекех.
Сталин сӑмахӗ ылттӑн пек: нихӑҫан та кивелмест, яланах ҫап-ҫутӑ.
Эпир пурте яш чӗреллӗ—пурне те ӑшӑтать Сталин хӗвелӗ.
Пире тӑшман хӑруш мар,—сыхах тӑрать Хӗрлӗ Ҫар.

Вӑрнар районӗнче 1938 ҫ. Иван Ивник пухнӑ.

# ЛЕНИНПА СТАЛИН ÇИНЧЕН ХУНĂ ЮРĂСЕМПЕ ТАКМАКСЕМ

## АСЛĂ ЛЕНИН ÇУТИПЕ

Аслă Ленин çутипе
Телей çулне тупрăмăр.
Аслă Сталин чысĕпе
Пуян пурнăç турăмăр.

Шурă тинĕс леш енче
Шурă акăш йăви пур;
Пирĕн Совет çĕрĕнче
Чĕре тулли ырлăх пур.

Уçланкăри çеремре
Кĕрен пуçлă чечек пур.
Пирĕн аслă çĕршывра
Сталин панă телей пур.

Сикасси, Канаш р. 1939 ç. И. Пайташ пухнă.

## ÇӐЛĔ ТУСЕМ ÇИНЧЕ АХАХ ПĔРЧИ

Çулĕ тусем çинче ахах пĕрчи,
Ахах пĕрчи тавра хурăн çырли.
Хурăн çырли тути, ай, мĕн тути?
Сталин сăмахĕсем, ай, пыл тути.

Шурăмпуçпе пĕрле шăпчăк юрлать,
Ик çунатне çапса кĕвĕ хурать.
Шăпчăкранах эпир ăста пулар,
Сталин ятне савса юрă юрлар.

Ахахсемех хаклă, мерчен хаклă.
Вĕсенчен те хаклă, ай, мĕн хаклă?
Сталин сăмахĕсем, вĕрентнисем
Сӳнми çунса тăраç, ай, çав хаклă.

Чăваш халăхĕ Аслă Сталин патне янă çыруран.

## САВНИ ПАНĂ ПЕРЧЕТКЕ

Савни панă перчетке
Халь те арча тĕпĕнче;
Ленин çырнă сăмахсем
Халь те чĕре çумĕнче.

Çĕмĕрт çеçки çурăлсан
Вăрман витĕр курăнать;
Ленин çутнă çутăсем
Ĕмĕр сӳнми йăлкăшать.

Куккук сиксе авăтать,
Йĕлме йывăç авăнать;
Сталин аттене курсан,
Чĕрем тем пек савăнать.

Пурçăн тутăр пуçăмра,
Шурă тутăр аллăмра;
Ленин атте асăмра,
Сталин атте умăмра.

Эпĕ кайрăм вăрмана
Çеçке çурнă вăхăтра;
Пире Сталин ырлăх пачĕ
Эпĕр ӳснĕ вăхăтра.

Шур перчетке ăшĕнче
Кĕмĕл çĕрĕ çутти пур;
Куçа хупсан, куç умĕнче
Сталин атте сăнĕ пур.

Шурă çĕмĕрт хушшинче
Сар кайăксем юрлаççĕ;
Ленинпала Сталина
Пĕтĕм халăх мухтаççĕ.

Мана савни парне пачĕ
Шурă пурçăн тĕрĕпе;
Тĕрри çине çырса хунă:
„Ленин хушнă вĕренме!"

Акăш пулать, шывра пулать,
Шыв кукăринче пулать;
Сталин панă чаплă пурнăç
Совет çĕрĕнче пулать.

Лăпкă шурă пĕлĕтсем
Лăпкă çилпе шăваççĕ,
Сталин хушсан, йĕкĕтсем
Çĕр тавра та вĕçеççĕ.

Виçпӳрт-Шăмăршă ялĕнче (Шăмăршă р.) Зоя Бараевăран 1939 ç. Вл. Бараев çырса илнĕ.

## ÇЕРЕМ ÇИНЧИ ÇĔР ÇЫРЛИ

Çĕрем çинчи çĕр çырли,
Пĕр çупкăмĕ пĕр ывăç;
Сталин юлташ сăмаххи—
Пĕр сăмаххи çĕр ылттăн.

„Хĕрлĕ Сормова" колхоз. Сĕнтĕр р., ЧАССР. 1935 ç. А. Талвир çырса илнĕ.

## ÇЕРЕМ ÇИНЧИ ÇЫРЛИНЕ

Çерем çинчи çырлине
Пуçтар, савни, ытларах,
Аслă Сталин аттене
Мухтар, савни, ытларах.

Çĕнĕ Аксу, Çĕпрел р., Тутар р. 1936 ç. Тахтаманова çырса илнĕ.

## АКĂШ ĂÇТА

Акăш ăçта? – Атăлта,
Чĕппи ăçта?—тинĕсре;
Сталин атте Мускавра,
Сăмаххисем чĕрере.

Шурта тăр шыв çуталать,
Хур-кăвакал савăнать;
Сталин пире юрататъ,
Телейлĕ çул кăтартать.

Улăх курĕк ука пек,
Сар чечекĕ ылттăн пек.
Колхоз пурнăçĕ пыл пек,
Сталин атте хĕвел пек.

Сарă хĕвел ăшăтать,
Çутă тĕнче савăнать;
Аслă çулпуç Сталина
Пур ĕççынни ыр сунать.

Атнар, Хĕрлĕ Чутай р. 1936 ç. И. Семенов çырса илнĕ.

## ВĂРМАН УРЛĂ КАÇРĂМĂР

Вăрман урлă каçрăмăр, каçрăмăр,
Вăрман урлă каçрăмăр
Врене çулçи çутипе, çутипе,
Врене çулçи çутипе.
Çак колхоза кĕтĕмĕр, кĕтĕмĕр,
Çак колхоза кĕтĕмĕр
Ленин юлташ врентнипе, врентнипе,
Ленин юлташ врентнипе.
Çыр хĕрринчи çĕр çырли те,
Çыр хĕрринчи çĕр çырли
Пĕр çупкăмĕ пĕр ывăç,
Пĕр çупкăмĕ пĕр ывăç.
Ленин атте сăмаххи те,
Ленин атте сăмаххи
Пĕр сăмаххи пин ылттăн,
Пĕр сăмаххи пин ылттăн.

## ЧУЛПА ТУНĂ МĂН ÇУЛПА

Чулпа тунă мăн çулпа
Автобусĕ вĕçтерет,
Сталин пуян пурнăçпа
Пурăнмашкăн вĕрентет.

Ир те вĕл-вĕл, каç та вĕл-вĕл!
„Коммунарăн“ ялăвĕ.
Ир те асра, каç та асра
Сталин атте доклачĕ.

Юрататăп шур тутра,
Юратап çеçкеллине,
Юрататăп Сталинăн
Çĕнĕ Конституцине.

Чечек пуххи илемлĕ
Тĕрлĕ тĕслĕ пулнăран,
Конституци питĕ паха
Пур ӳсĕме çырнăран.

Савăт труби ялкăшать
Электрицă çутнăран,
Ударница савăнать
Хаклă преми панăран.

Мăйăр татрăм уртăнса,
Çулçи юлчĕ усăнса,
Эп ĕçлеме кайнă чухне
Лодырь юлчĕ çывăрса.

Шурă мамăк пĕлĕтсем
Тӳпе тăрăх шăваççĕ,
Сталин врентнĕ çамрăксем
Полюс тăрăх вĕçеççĕ.

Сăпаçипă куккукне
Çич çăмарта тунăшăн,
Сăпаçипă Сталина
Пире ертсе пынăшăн!

Ăхпуç ялĕнче (Бишбуляк районĕ, Пушкăрт респ.) Семенова Евдокияран тата Пăслăк ялĕнче Шувалова Лияран Н. Ф. Данилов çырса илнĕ.

## ЧĂВАШ ФОЛЬКЛОРĔ ÇИНЧЕН ÇЫРНĂ ПАЛЛĂРАХ ЛИТЕРАТУРА

**Ашмарин Н. И.** Сборник чувашских песен, записанных в губерниях: Казанской, Симбирской и Уфимской. Казань, 1900.

**Ашмарин Н. И.** Ваттисем калана сăмахсем. Шупашкар, 1925.

**Ашмарин Н. И.** Очерк народной поэзии у чувашей. „Этнографическое обозрение“ № 2—3, 1892.

Budenz J. Kĕt csuvas mese. Nyk XVI, 1880.

**Вишневский В.** О религиозных поверьях чуваш. Казань, 1846.

**Иванов А.** Характер чувашских языческих молитвословий и наговоров. Москва, 1900.

**Магницкий В.** Материалы к объяснению старой чувашской веры. Собраны в некоторых местностях Казанской губернии. Казань, 1881.

**Мальхов.** Симбирские чуваши и поэзия их. Казань, 1887.

**Мошков В. А.** Музыка чувашских песен и мелодия чувашских песен. „Известия общества археологии, истории и этнографии“, том XI.

**Михайлов С. М.** Чувашские разговоры и сказки. Казань; 1853.

Mêszaros G. Csuvas nêpkoltesi gyüitemeny I. A csuvas ösvallas emlêkei. Budapest, 1909. II. Kozmondasok, talalosmondasok, dalok mesèk, 1912.

**Михайлов С. М.** Чувашская свадьба. Казань, 1852.

**Никитин И. Д.** (Юрка). Песни чуваш Ядринского и соседних уездов. „Известия общества археологии, истории и этнографии“. Том XXIV.

**„Наши достижения“** № 4, 1937. Сказки, рисующие прежнюю, тяжелую жизнь чувашей и теперешнюю счастливую.

**Орлов.** Обычаи у чуваш. Симбирск. 1857.

**Никитина П.** Сборник песен, употребляемых простонародьем. Казань, 1900.

Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним. Симбирск, 1908.

**Пазухин П. В.** Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним. Симбирск, 1914.

**Павлов Ф. П.** Чуваши и их песенное и музыкальное творчество. Чебоксары, 1927.

**Павлов Ф. П.** О музыке чуваш—статья в чувашском настольном календаре. Чебоксары, 1923.

**Павлов Ф П.** Ача-пăча сасси. Сборник детских песен. Чебоксары, 1921.

**Павлов Ф. П.** Сăрнай. Шупашкар, 1924.

**Прокопьев К.** Брак у чуваш. Казань, 1903.

**Рекеев А.** Из чувашских преданий и верований. Казань, 1898.

**Риттих А. Ф.** Материалы для этнографии России. Казанская губерния. Казань, 1870.

**Сбоев В.** Исследования об инородцах Казанской губернии. Заметки о чувашах. Казань, 1865.

**Федоров Г. Ф.** 146 песен, записанных от Г. Ф. Федорова. Москва—Чебоксары, 1934.

**Фукс А. А.** Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии. Казань, 1840.

**Юркин И. Н.** Чувашские песни. „Известия общества археологии, истории и этнографии". Том XIII.

**Юркин И. Н.** Чувашские национальные пляски. „Известия общества археологии, истории и этнографии." Том XIV.

**Чувашские сказки.** Москва. Государственное издательство „Художественная литература", 1937.

**Чăваш юмахĕсем.** Хусан, 1919.

**Чăваш юмахĕсем.** Шупашкар, 1924. (М. Трубина пуçтарнă).

ТУПМАЛЛИ

Стр.


Чăваш фольклорĕпе унăн историйĕ çинчен (умсăмах) . . . . 5
Аслă çынсем фольклор çинчен . . . . . . . . . . . . . . 26
**ОКТЯБРЬЧЧЕНХИ ФОЛЬКЛОР** . . . . . . . . . . 29
**Ĕç юррисем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Сăвай çапакансен юрри . . . . . . . . . . . . . . 32
Кĕпер хывакансен юрри . . . . . . . . . . . . . . —
Канат юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Нимене чĕнмелли юрă . . . . . . . . . . . . . . 33
Чăпта çапакансен юрри . . . . . . . . . . . . . . —
Пир çапакансен юрри . . . . . . . . . . . . . . . —
**Вĕрӳ-суру чĕлхисем** . . . . . . . . . . . . . . . 34
Хаяр чĕлхи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Усал чĕлхи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 35
Вăрах хаяр хĕн чĕлхи . . . . . . . . . . . . . . . —
Пуç çаваран чĕлхе . . . . . . . . . . . . . . . . 36
**Йăлана кĕнĕ уяв юррисем** . . . . . . . . . . . . 37
Сурхури юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Хĕр сăри юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Хĕр сăри такмакĕсем . . . . . . . . . . . . . . . 39
Ташă такмакĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 40
Çăварни юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Улах юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41
Сĕрен юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 43
Пире сăра памасан . . . . . . . . . . . . . . . . —
Сĕрен такмакĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Упи каçман çырминчен . . . . . . . . . . . . . . 44
Чӳк юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Пумилкке юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . 45
**Çурхи уяв юррисем** . . . . . . . . . . . . . . . 47
Аллюли, паллюлли . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çынсем ешĕл хурăн, ай, касаççĕ . . . . . . . . . . —
Кăвак сăрлă кăрильца . . . . . . . . . . . . . . . 48
Пятиялин патрашки . . . . . . . . . . . . . . . . —
И тарăн вар . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Шур-шур тăрăх . . . . . . . . . . . . . . . . . . 49
Каллĕ-маллĕ каçмине . . . . . . . . . . . . . . . —
Виръял хирне вир акрăм . . . . . . . . . . . . . . —
Аппалюк . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 50
Леш айккинче мăн çĕр пур . . . . . . . . . . . . . —

**Авалхи туй йӗркисемпе туй юррисем** . . . . . . . . . . . . . 51
Авалхи чӑваш туйӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Мӑнкӗрӳ такмакӗ . . . . . . . . . . . . . . . 68
Кӗрнӳкерсен юррисем . . . . . . . . . . . . . . 74
Ай-хай, Алтатти . . . . . . . . . . . . . . . . . 76
Хӗрҫумӗсен юррисем . . . . . . . . . . . . . . . —
Туй халӑх юррисем . . . . . . . . . . . . . . . 77
Хӗр йӗнисем . . . . . . . . . . . . . . . . . 78
**Сутмалли юмахсем** . . . . . . . . . . . . . . . . . 82
**Преданисем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 86
Вӗреҫӗлене пӑшалпа пени . . . . . . . . . . . . . —
Суккӑр хвери . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 87
Хӗрт-суртсем йӗрни . . . . . . . . . . . . . . . 88
Арҫурисем ҫинчен . . . . . . . . . . . . . . . . . —
**Легендӑсем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 90
Чӗкеҫ хӳри мӗншӗн икӗ юплӗ пулнӑ . . . . . . . —
Сывлӑм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 91
Сӑвӑр халлапӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 92
**Историри паллӑ ҫынсем ҫинчен ҫӳрекен хыпарсем** . . . . . . 94
Хуран кукли . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Пугачев ҫинчен . . . . . . . . . . . . . . . . . . 95
Йӑван уйӗ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Турхан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
**Кӗреке юррисем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . 97
Ака-суха юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . 98
Ҫӗрпӳел юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . . 99
Элшел юррисем . . . . . . . . . . . . . . . . . 101
Чулҫырмасен юррисем . . . . . . . . . . . . . . 110
**Хӑна юррисем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 112
Атӑлпа тинӗс хушшинче . . . . . . . . . . . . . —
Атте пахчи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 113
Шӑнкӑрттӑм, шӑнкӑрттӑм . . . . . . . . . . . . . —
Пирӗн мӗнпе мухтанас . . . . . . . . . . . . . . 114
Чун хурланнӑ вӑхӑт . . . . . . . . . . . . . . . —
Ӑрӑскалӑм ҫук . . . . . . . . . . . . . . . . . 115
Ҫинҫе пилӗк ҫӳрен лаши . . . . . . . . . . . . . —
Ҫарансемех тӑрӑх . . . . . . . . . . . . . . . . —
Хусантан тухакан . . . . . . . . . . . . . . . . 116
Эпир пурмис пулас ҫук . . . . . . . . . . . . . . —
Хуҫи калать . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Хура вӑрман хыҫне шур юр ҫунӑ . . . . . . . . 117
И чупрӑм та хӑпартӑм ҫӳл ту ҫине . . . . . . . —
**Удел хресченӗсен юррисем** . . . . . . . . . . . . . 118
Удел тырри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Удельнийӑн кантурне . . . . . . . . . . . . . . . —
Удельнийӑн уҫӑмӗ . . . . . . . . . . . . . . . . 119
Кӑвакарчӑн чӗппи те . . . . . . . . . . . . . . . —
**Ҫӗнӗ ҫӗре каякансен юррисем** . . . . . . . . . . . 120
Атьӑр, каяр Сибире . . . . . . . . . . . . . . . —

Ирĕксĕрех каяс пулать . . . . . . . . . . . . . . . . 121
Сибир çулĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 122
Айтăрах, каяр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
**Шӳтлĕ юрăсем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 123
Утмăл пĕрчĕ урпа акрăм . . . . . . . . . . . . . . 123
Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ . . . . . . . . . . . . . . . 124
Пуçтартăм, пуçтартăм . . . . . . . . . . . . . . . —
Кантăр ани пуçĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . —
**Салтак юррисем** . . . . . . . . . . . . . . . . . 126
Хурăн та тункати . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Леш аякки ешĕл, ай, курăнать . . . . . . . . . . . —
Мĕн аслати авăтать . . . . . . . . . . . . . . . . 127
Кăçал салтак . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 128
Шурă патшан шурă лаши . . . . . . . . . . . . . . —
Эх, салтаксем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 129
Резань хирĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çиччĕпеле эп карăм . . . . . . . . . . . . . . . . 130
Лапсăркка та юман . . . . . . . . . . . . . . . . —
Патшапала патша . . . . . . . . . . . . . . . . . 131
Салтак арăм юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Чупрăмах та . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
**1905 çулхи юрăсем** . . . . . . . . . . . . . . . 133
Йăлтăр-йăлтăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çерем пăсаççĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Раççей . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 134
Рабочисен юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . 135
Тĕрме юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Катăргăна янă çын юрри . . . . . . . . . . . . . . —
Бурлаксен юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . 137
**Сăпка юррисемпе ача-пăча сăввисем** . . . . . . . 139
Чакак . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Чи-чи кăсия . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Тĕкĕлту . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 140
Пӳрнеске . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Утрăм, утрăм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Кăркулькка . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 141
Шăши ăçта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Мулкач . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 142
**Ваттисен сăмахĕсем** . . . . . . . . . . . . . . . 143
**Юмахсем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 147
Тилĕпе ула-такка . . . . . . . . . . . . . . . . . 148
Ухмах Йăван . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 150
Тăрна тус . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 154
Ылттăн сумккă . . . . . . . . . . . . . . . . . . 157
Нуша . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 159
Пуянпа чухăн . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 161
Чее кĕрӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 165
Ултавçă ача çинчен . . . . . . . . . . . . . . . . —
Пуяна улталани . . . . . . . . . . . . . . . . . . 166

Ялампи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 167
Чукмар пуç . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 169
Капулкка . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 170
Сарă кун çĕршывĕнче . . . . . . . . . . . . . . . 172
Куçпăвакан . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 179
**ОКТЯБРЬ ХЫÇÇĂНХИ ФОЛЬКЛОР** . . . . . . . . . . . 185
**Юмахсем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 189
Хĕвел . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Телей . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 191
Чапаев вилĕмĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 192
**Граждан вăрçи такмакĕсем** . . . . . . . . . . . . 197
**Колхоз юррисем** . . . . . . . . . . . . . . . . . 198
Шур тутăр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
И Атăл хăви . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 199
Пуян, пуян теесçĕ . . . . . . . . . . . . . . . . —
Улма пиçет, хĕрелет . . . . . . . . . . . . . . . 200
Эп шур тутăр юратап . . . . . . . . . . . . . . . —
Туся хĕрĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Вăрман урлă каçрăмăр . . . . . . . . . . . . . . 201
Авăтать куккук . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Хула çулне пĕлнипе . . . . . . . . . . . . . . . —
**Такмаксем** . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 202
Колхоз такмакĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . —
Заем такмакĕсем . . . . . . . . . . . . . . . . . 203
Ăсату юрри . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 204
**Ваттисен сăмаххисем** . . . . . . . . . . . . . . . 205
**Ленинпа Сталин çинчен хунă юрăсемпе такмаксем** . . . . . 206
Аслă Ленин çутипе . . . . . . . . . . . . . . . . —
Çӳлĕ тусем çинче ахах пĕрчи . . . . . . . . . . . —
Савни панă перчетке . . . . . . . . . . . . . . . 207
Çерем çинчи çĕр çырли . . . . . . . . . . . . . . —
Çерем çинчи çырлине . . . . . . . . . . . . . . . —
Акăш ăçта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 208
Вăрман урлă каçрăмăр . . . . . . . . . . . . . . —
Чулпа тунă мăн çулпа . . . . . . . . . . . . . . —
**Чăваш фольклорĕ çинчен çырнă паллăрах литература** . . . . 210

Библиотека партийкабинета
№ 10783
Чебоксарского ГК ВКП(б)

Редактор СТИХВАН ШАВЛЫ.

НТ2609. Подписано к печати 14/III 1941 г. Заказ № 96.
Количество печ. знаков в 1 п. л. 47328. Тираж 5000 экз. Объем 13,5 печ. л.

Типография № 2 Управления Издательств и Полиграфии при СНК ЧАССР,
гор. Алатырь.

Цена 5 р.

ЧУВАШСКИЙ
ФОЛЬКЛОР

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
ЧЕБОКСАРЫ ◆ 1941